К 76.12
Д 18
Ч-38636

Обязат. экз.

РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН
ВĔРЕНТӲ ТАТА НАУКА МИНИСТЕРСТВИ

И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чӑваш патшалӑх университечĕ

А. П. ДАНИЛОВ
И. Я. ТЕНЮШЕВ

# ЧӐВАШ ПУБЛИЦИСТИКИПЕ ЖУРНАЛИСТИКИН АТАЛАНУ ТАПХӐРĔСЕМ

Шупашкар 2004

Национальная библиотека ЧР
4-038636

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М т. 3 50 1990 г.т. 5000

К-76.12
Д 18

РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĚН
ВĚРЕНТŸ ТАТА НАУКА МИНИСТЕРСТВИ

И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ

А. П. ДАНИЛОВ
И. Я. ТЕНЮШЕВ

# ЧĂВАШ ПУБЛИЦИСТИКИПЕ ЖУРНАЛИСТИКИН АТАЛАНУ ТАПХĂРĔСЕМ

Шупашкар 2004

ББК Ч 612
Д 33

**Данилов А.П., Тенюшев И.Я.**
**Д 33** Этапы развития чувашской публицистики и журналистики: Учеб. пособие. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2004. 232 с.

ISBN 5-7677-0770-7

Рассмотрены этапы развития чувашской публицистики и журналистики. Основное внимание уделено анализу творчества первых чувашских публицистов Охадера Томеева, Ермея Рожанского, Спиридона Михайлова, Николая Золотницкого, Ивана Яковлева и др. В книге приведены образцы чувашской печатной публицистики начальных этапов ее развития и становления.

Для студентов I-IV курсов факультета журналистики.

Утверждено Редакционно-издательским советом университета в качестве учебного пособия.

ч-38636

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ПРОВЕРЕНО
21 ... 5 ИЮН

ББК Ч 612
ISBN 5-7677-0770-7
© Данилов А.П., Тенюшев И.Я., 2004

# ЧĂВАШ ПУБЛИЦИСТИКИПЕ ЖУРНАЛИСТИКИ АТАЛАНĂВĔН ÇУЛ-ЙĔРĔ

### /Пĕтĕмĕшле пăхса тухни/

"Журналистика" тата "публицистика" – пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ терминсем мар. Пĕрремĕш термин палăртнă вăхăтра (кашни кун, эрнере е уйăхра пĕрре) тухса тăракан пичет продукцине, урăхла каласан, хаçат-журнала пĕлтерет. Çавăнпа пĕрлех ку термин обществăпа политика ĕçĕ-хĕлĕн тĕсне, тĕрĕсрех профессие палăртать. Журналист паян кирлĕ паха социаллă информаци пухса, тишкерсе пĕтĕмлетет, ăна пичет, телевидени, радио, кино урлă тата ытти майсемпе халăх хушшине сарать. Журналистика массăллă пропагандăпа агитацин çивĕч хатĕрĕсенчен пĕри пулса тăрать. Унсăр пуçне журналистика – ăслăлăх дисциплини, вĕренӳ предмечĕ.

Публицистика – журналист çырнă произведенисем. Илемлĕ тата ăслăлăх литературипе пĕрле публицистика литературăн тĕп тĕсĕсенчен пĕри пулса тăрать. Публицистика – хальхи пурнăç историйĕ, хальхи самана таппи. Ăна публицист кĕрешĕве хутшăнакансене усă кӳмелле çырать.

Публицистикăра чăнлăхăн обществăшăн пĕлтерĕшлĕ факчĕсемпе пулăмĕсене тата вĕсемпе çыхăннă лару-тăрăва документ тĕрĕслĕхĕпе çырса кăтартаççĕ. Çакна халăхăн, унăн организацийĕсен ĕçри хастарлăхне ӳстерес, сахалрах вăй хурса ытларах усă кӳрес тĕллевпе тăваççĕ. Публицистика хăйĕн умĕнчи тĕллеве ырă тĕслĕхсене кăтартнипе, чăрмавсемпе çитменлĕхсене тăрă шыв çине кăларнипе пурнăçа кĕртет. Вăл ĕç çыннисене хăйсен иксĕлми вăйне шанса тăма вĕрентет, пуçарулăха вăратать, хастарлă ĕçлеме хавхалантарать

Çапла вара, пăхса тухнă терминсем иккĕшĕ те тĕрлĕ ăнлавсене палăртаççĕ. Çавăнпа пĕрлех вĕсене пĕрлештерекенни те пур: икĕ сăмахĕ те периодика пичечĕпе, урăхла каласан, хаçат - журналпа çыхăннă. Журналистика историйĕ вара периодика пичечĕ, публицистика епле аталаннине тĕпчет.

Журналистика историне тишкернĕ май «вырăс публицистики урăх халăх çинчен» тата «наци публицистики», уйрăммăн илсен, «вырăс публицистики чăвашсем çинчен» тата «чăваш публицистики» ăнлавсене тĕл пулатăн. Вĕсене мĕнле уйрăмлăхсем тăрăх палăртмалла? Ку ыйту çине татăклă хурав çук-ха.

Чăвашсен обществăлла-политикăлла пурнăçĕ çинчен вырăс автор тăван чĕлхипе çырса хăй халăхĕн прессинче пичетлесен, ку, паллах, «вы-

рăс публицистики чăвашсем ҫинчен» пулать; тăван халăхăн паянхи ĕҫĕ-хĕлĕ ҫинчен чăвашсем ашшĕ-амăшĕн чĕлхипе ҫырса, хăйсен хаҫатĕнче ҫаптарса кăларсан, ҫакна вара "чăваш публицистики" темелле. Анчах ку шухăшсем хальхи вăхăтри публицистика тĕлĕшпе кăна тĕрĕс. Вырăс мар халăхсен иртнĕ саманари публицистикин малтанхи тапхăрĕсем пирки вара ҫакна калаймăн. Сăлтавĕ паллă: вĕсен патша саманинче нумай-нумай ҫулсем наци пресси ҫеҫ мар, ҫырулăх та пулман. Сăмахран, чăваш халăхĕн чĕлхе уйрăмлăхĕсене тĕплĕн шута илсе тунă ҫĕнĕ ҫырулăхне 1871 ҫулта ҫеҫ пуҫарса янă, унăн пĕрремĕш хаҫачĕ вара 1906 ҫулта тин кун ҫути курнă, анчах вăл та ҫулталăк ҫурра яхăн кăна тухса тăнă.

Наци публицистикин те хăйевĕрлĕхĕсем пур. Вăл нацин обществăлла-политикăлла пурнăҫне ҫутатать, унăн интересĕсене хӳтĕлет. Ку уйрăмах публицистика содержанийĕпе, унăн тĕллевĕсемпе, кам майлă пулнипе ҫыхăннă. Наци публицистикин произведенийĕсене наци ывăл-хĕрĕ е унпа пĕрле пĕрешкел ĕмĕт-тĕллевпе пурăнакансем ҫыраҫҫĕ. Кунта автор кам пулни, унăн кăмăлĕ-туртăмĕ ҫинчен сăмах пырать. Наци публицистикин хăйĕн форми пур, унăн произведенийĕсене ҫав наци чĕлхипе ҫырмалла, вĕсене пичетлеме хăйĕн пресса пулмалла.

Тăван чĕлхепе тухса тăракан хаҫат-журнал пулман пирки патша саманинче пĕр халăха тепĕр халăх прессипе усă курма тивнĕ. Чăвашсене, сăмахран, вырăс периодикинче пичетленме май тупăннă. Ҫавăнпа та иртнĕ саманари публицистика хăш нацин пулнине палăртнă малтанхи икĕ уйрăмлăха – содержани тĕллевне тата авторĕ камне, кăмăл-туртăмне тĕп вырăна хумалла. Форми пирки калас пулсан, вăл урăх тĕрлĕ те пулма пултарнă. Наци пресси ҫукран чăваш публицистикине вырăсла ҫырса пичетленĕ. Тĕслĕхрен, Спиридон Михайлов чăваша та тăван чĕлхепе мар, вырăсла ҫырма тивнĕ.

Чăвашсем ҫинчен XIX ĕмĕрте ҫырнă вырăс публицисчĕсене пĕр-пĕрне хирĕҫле икĕ ушкăна уйăрма пулать. Пĕрремĕш ушкăнĕ - хут варалама пĕлекен пархатарсăрсем, ĕҫчен чăваш халăхĕ ҫинчен элеклесе, консервативлă тата реакциллĕ корреспонденцисемпе статьясем пичетленĕ; теприсем вара – таса кăмăллă, мал ĕмĕтлĕ публицистсем, ҫавнашкал элеке тăрă шыв ҫине кăларас, чăваш халăхне хӳтĕлес тĕллевпе ҫырнă.

Патша тытăмĕ майлисем унăн колониллĕ политикине тата пуҫ пулса тăракан классен интересĕсене хӳтĕленĕ; вырăс мар халăхсене мĕнле май килнĕ, ҫапла хурланă. Вĕсене ĕненес пулсан, чăвашсем– мĕскĕн те тăрлавсăр ҫынсем, ҫуралассах кахал ҫуралаҫҫĕ, чĕрчунран уйрăлса тăманпа пĕрех. Ҫавнашкал ирсĕр шухăшпа ҫырса кăларнисем шутĕнче – «Хусан, Чĕмпĕр, Оренбург тата ытти кĕпĕрнесенче пурăнакан чăвашсен хыпарĕсем» ятлă вĕҫне ҫитермен статья.[1]

«Статьяри тĕслĕхсем, илсе кăтартнисем тата ытти тăрăх, ку статьяна пуп таврашĕ çырнă тесе шутлама пулать», - сăлтавсăр мар çак шухăш патне пырса тухнă П.Г.Григорьев тĕпчевçĕ.[2] Г.Б. Матвеев вара çапла çырать: «Н.В. Никольский шучĕпе, «...Чăвашсен хыпарĕсем» авторĕ – Урхас Кушкă (халĕ Сĕнтĕрвăрри районĕ) пупĕ И.С. Протопопов».[3] Маларах каланине кăштах тӳрлетмелли пур. "... Чăвашсен хыпарĕсем" пасквиль авторĕ И.С. мар, А.С. (Александр Степанович) Протопопов. Хусан университечĕн адъюнкт – профессорĕ В.А. Сбоев, писатель тата этнограф, ун çинчен "Казанские губернские ведомости" хаçат редакторне янă улттăмĕш çырура" çапла хушса калать. " 1843 çулта Александр Степанович Протопоповăн " Краткое описание суеверий чуваш" хайлавĕ çапăнса тухать, – Вĕтĕ мар саспаллисемпе пĕр хĕсмесĕр пичетленĕ 24 тăвăр страницăллă пĕчĕк çеç çӳхе кĕнеке мĕн тери усăлли каламасăрах паллă".[4]

Эппин ку кĕнеке харрине Василий Афанасьевич та мухтамасть. Протопопов кунта та, 1829 çулти пекех, ĕçчен чăваш халăхне тем - тем каласа хурлать.

Пасквиль авторĕн сăмахĕсем тăрăх, чăвашсем – «пур енчен те мĕскĕн халăх».[5] Чи малтанах чăваш «сăн-сăпачĕпе телейлĕ» теме çук, унăн пичĕ «илемсĕр те тăрлавсăр», «кăмăлĕ именчĕк». «Чăвашсем, - çырать малалла элекçĕ, - чи чухăн чĕлхепе калаçаççĕ. Ку чĕлхере сăмах тĕпĕсен шучĕ пине çити-çитми кăна...».[6] Чăвашсен пурнăç йĕрки ытла та тĕлĕнмелле имĕш; «латсăр шухăшласа кăларнă турăсене, ухмахла чӳк туса, парне кӳреççĕ».[7] Чăвашăн сăн-сăпатне, кăмăлне, чĕлхине тата пурнăç йĕркине хурласа тăкни çитмест çав пупа, унăн ăс-тăн тĕлĕшĕнчи пултарулăхне те чакарать. Вăл çирĕплетнĕ тăрăх, чăвашсем «ăнланулăх енĕпе ытла та тăмсай, ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен катăк», çак сăлтавпа «çутçанталăкăн çӳлти сыпăкĕнчи этемлĕхе юравли нимĕн те пама пултараймаççĕ».[8] Автор чăвашсене курайманни, хисепе хуманни, вĕсем çине великодержавлă йĕрĕнӳпе пăхни уççăнах палăрса тăрать.

Реакционерăн хаяр элекне прогрессивлă публицистсем асăрхамасăр ирттерсе яман. «Казанский вестник» журналта 1829 çулта пичетленнĕ «...Чăвашсен хыпарĕсем» статья пирки асăрхаттарнисем» рецензире паллă мар автор пасквилянта çивĕччĕн критиклет.[9] Рецензент малтан чăвашсен йăли-йĕркипе пурнăçне ăшă кăмăлпа çырса кăтартать. Вăл çакна ĕнентерет: чăвашсем – ултавсăр çынсем, хуçалăха тытса пыма лайăх пĕлеççĕ, килен-каяна тараватt кĕтсе илеççĕ, «ялта пурăнакан кирек камшăн та паха тĕслĕх пулса тăраççĕ». Чăваш пурнăçне автор кăштах хитрелетни те пур: вĕсем тулăх пурнăçпа пурăнаççĕ имĕш; тырри çителĕклĕ, ытлашшине пристаньсенче сутаççĕ, «вĕсем хушшинче кĕлмĕçсем çукпа пĕрех».

Рецензент шутланă тăрăх, чăвашсем вырăс хресченĕсенчен те лайăх-

рах пурӑнаҫҫӗ. Чӑваш «ялӗсем – пӗр вырӑна пуҫтарнӑ темиҫе хутор е темиҫе ҫурт; ун вырӑнне вара ҫавӑн пек тасалӑхпа уҫӑ сывлӑш вырӑс хресченӗн килкартинче тупма йывӑр. Хуралтисем пӑхма хитре мар, анчах илемлӗ ҫурт-йӗрпе капӑр тавралӑх хулара кӑна кирлӗ, ял ҫыннине усӑ курма меллӗ пултӑр; чӑвашӑн вара кирек мӗн те алӑ айӗнче; ҫурчӗпе анкарти те, ампарӗсем те»[10]. «Асӑрхаттарнисем» авторӗ, иккӗлентермен аргументсене никӗсе хурса, хӑюллӑ пӗтӗмлетӳсем патне пырса тухать: «...Чӑвашсен хыпарӗсем» ку халӑх ҫинчен хаяр сатирӑна малалла тӑсни пулать, ку вӑл вырӑнсӑр ҫеҫ те мар, этемӗн тата христианинӑн кӑмӑлтуйӑмне килӗшми ниме юрӑхсӑр ӗҫ, нихӑш писатель те унашкал хӑтланмалла мар», чӑвашсем «кирек хӑш халӑх та пулакан ҫурма тискер тапхӑртан тахҫанах иртсе кайнӑ». Чӑваш халӑхӗ «ҫыравҫӑ пек хисепленине мар, урӑхрах тимлӗхе тивӗҫлӗ»[12].

Рецензент ҫапла шутлать: халӑхсен кӑлтӑкӗсемпе ҫитменлӗхӗсем ҫинчен ҫырнӑ чухне вӗсем мӗнрен килнине те палӑртмалла. «Эхер ҫыравҫӑ хӑйӗн статйине чӑвашсем ҫавнашкал тискер те нӗрсӗр пулнин сӑлтавӗсене шыранипе тата вӗсене мӗнле майпа этеме ҫавӑрмалли майсене кӑтартнипе пуянлатнӑ пулсан, - ӳпкелет рецензент автора, - хӑшне-пӗрне ним шарламасӑрах ирттереттӗмӗр ӗнтӗ»[13]. Патша Раҫҫейӗнче вырӑс мар халӑхсен экономикӑпа культура тӗлӗшӗнчи аталанӑвӗ чӑнах та аялти шайра тӑнӑ, мӗншӗн тесен вӗсене аталанма патша пусмӑрӗпе крепостла йӗркесем чӑрмантарнӑ. Анчах рецензент та ҫакна уҫса параймасть.

Рецензи – вӗҫленмен произведенисем шутӗнче, апла пулин те пасквилянт элекӗсене тӗпӗ-йӗрӗпех тӑрӑ шыв ҫине кӑларать. Эппин, рецензи хӑйӗн умӗнчи тӗллеве ӑнӑҫлӑ пурнӑҫланӑ пӗтӗмлӗхлӗ произведени пулса тӑрать. Унӑн никӗсӗнче – полемика, рецензент тӗллевӗ – пасквилянта питлесе намӑслантарасси. Произведени текстӗнче чӗлхене вӑйлатмалли литература меслечӗсене – риторика ыйтӑвне, анлӑ танлаштарӑва тата ыттисене те куратпӑр. Автор вӗсемпе уйрӑмшарӑн та, пӗрлештерсе те усӑ курать. Акӑ тӗслӗх: «Нивушлӗ ҫыравҫӑ чӑваш хушшинче пӑсӑк ҫынсем кӑна курнӑ? Чӑвашсем пурте тӑмсай та нӗрсӗр тесе ҫырни тӗрӗс пулсан, кам та пулин вырӑссем ҫинчен вӗсем пурте хитре сӑн-сӑпатлӑ тата ӑс-тӑн енӗпе тӗлӗнмелле пултаруллӑ тесе ҫырни те тӗрӗсех пулать»[14]. Вулакан ку татӑкра риторика ыйтӑвне те, анлӑ танлаштарӑва та асӑрхать.

Рецензентшӑн ирони те ют мар. «Хӑй ҫырса кӑтартнинче Шапп господин пек хӑтланмасть-ши вӑл, - тӑрӑхланӑ пасквилянтран рецензире, - ҫавскер, кӗрӗксемпе пӗркенсе тата каретӑран сӑмсине вырӑс сиввине кӑтартма хӑймасӑр, Раҫҫей тӑрӑх хӗл варринче сиккипе иртсе каять те вырӑс патшалӑхӗ талккӑшпех пушӑ хир тесе шутлама тытӑнать»[15].

Куратпӑр: пӑхса тухнӑ произведени хӑйӗн содержанийӗпе, пӗтӗмлетӗ-

вĕсемпе тата стилĕпе этнографи материалĕн калăпне шăнăçмасть. Вăл «хальхи самана историйĕпе» çыхăннă, кунта унăн çивĕч ыйтăвĕсемпе пулăмĕсем çинчен сăмах пырать. Апла пулсан, ку произведени литературăн публицистика текен ушкăнне кĕрет. Жанрĕ те вăл публицистика произведени пулни çинчен калать.

Рецензи авторĕ - вырăс ученăйĕ П.А.Аноров тесе шутлаççĕ. Çак шухăша хăй вăхăтĕнче К.Ф.Фукс каланă[16]. Пирĕн вăхăтри Г.Б. Матвеев тĕпчевçĕ те çавнах çирĕплетет: «Çак рецензи содержанийĕ, шухăшĕсен йĕрки П.А.Аноровăн ĕçне питĕ çывăх»[17]. Кунта вăл çырнă «Чăвашсен йăлисемпе ĕненĕвĕсем» статйи пирки сăмах пырать[18]. «Вырăнти халăх пурнăçĕпе интересленекенĕсенчен пĕри – вырăс интеллигенцийĕн малта пыракан çынни П.А. Аноров чăвашсен этнографине çырса кăтартни халăха хисепе хунипе, ăна тĕрĕс тĕпчеме тăрăшнипе палăрса тăрать»[19].

Иккĕленмелли çук, «Казанский вестник» журналта 1829 çулта пичетленнĕ «...Чăвашсен хыпарĕсем» статья пирки асăрхаттарнисем» - вырăс публицисчĕ чăвашсем çинчен вырăс прессинче пичетленĕ произведени. Вăл чăвашсем çинчен çырнă вырăс публицистики шутне кĕрет. Ăна журнал авторне кăтартмасăр, редакци статйи пек пичетленĕ. Çакă вара автор шухăшĕсене редакци ырланине кăтартать.

Александра Фукс сăвăçă Хусанти «Заволжский муравей» журналта 1834 çулта 1-6, 8-11 номерсенче «Хусантан Шупашкара кайни» ятпа çырусем пичетлесе кăларать, каярахпа вĕсене уйрăм кĕнекен çаптарать[20].

Александра Андреевна Фукс-Апехтина (1805-1853) Чăваш тăрăхĕнче Шупашкар уесĕнчи Вырăс Салинче (халĕ Куславкка районĕ) дворян çемйинче çуралса ӳснĕ[21], Çĕрпӳре тата Шупашкарта пурăннă. Тăван вырăнсене тата асăннă хуласене вăл кайран та килсе çӳренĕ. Чăвашсемпе марисен пурнăçне, йăли-йĕркине Александра Андреевна мĕн çамрăкранах сăнанă, тĕпчес тĕллевпе ялсем тăрăх ятарласа çӳренĕ. Кĕнекин икĕ пайне те вăл хăй мĕн курни-илтнине, пĕлнине никĕсе хурса çырнă. Ку кĕнеке автор упăшкине янă çырусенчен тата паллă ученăй-краевед К.Ф. Фукс профессор (1776-1846) арăмне çырса янă ответсенчен тăрать. Ырă кăмăллă, йăваш чăвашсем хăйне килĕшнине палăртать Александра Андреевна.

Вулакансене чăвашсемпе марисен этнографийĕпе тата фольклорĕпе паллаштарса Александра Фукс пысăк ĕç тунă. «А.А.Фукс сăвăç ятне, - палăртать хальхи вăхăтри тĕпчевçĕ В.П.Никитин, - революцичченхи чăваш литературин историйĕнче малтанхи этнографсемпе фольклористсен - Д.П.Ознобишин, В.А.Сбоев, В.П.Вишневский ячĕсемпе юнашар çыраççĕ. Пуян кил-йышра пурăннăскер, А.Фукс хăй класĕн тĕнчекурăмĕнчен тухайман, ĕçхалăх пурнăçне пур енлĕн те тĕплĕн çырса кăтартайман.

Апла пулин те, ун ячӗ пирӗн халӑх литературипе этнографийӗнче паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать»[22].

Ҫав вӑхӑтра периодика пичетне пынӑ нумай-нумай ҫырусенче Александра Фукс ӗҫне ырланине куратпӑр. Хӑшӗ-пӗринче автор тунӑ йӑнӑшсене кӑтартни те пур. Акӑ Ҫӗрпӳ уесӗнчи Г.Сигов автор А.А.Фуксӑн «Хусантан Шупашкара кайни» статйи пирки асӑрхаттарнисене «Заволжский муравей» журнал редакцине ярса парать[23]. «Эсир кӑларакан журнала хам илсе тӑман пирки, - ҫырать рецензент, – мана унпа пӗр тус пулӑшнипе паллашма тӳр килчӗ. Чӑвашсен пурнӑҫне ҫырса кӑтартнинче тӗрӗсмарлӑхсем асӑрхарӑм; паллах, унашкалли автор чӑваш чӗлхине тата ку халӑх йӑла-йӗркине пӗлсе ҫитерменнипе, урӑх ҫынсем каласа панипе ҫырнӑран пулнӑ[24].

Ку рецензире пысӑк пӗлтерӗшли - автор Александра Фукспа пуҫарнӑ полемика. Этнограф ӗнентернӗ тӑрӑх, пӗтӗмлетӳллӗ шухӑшлав енӗпе чӑваш пултарулӑхӗ питӗ пӗчӗк. Ку ыйтупа Г.Сигов пачах урӑхла шутлать. Ыйтӑва лайӑх пӗлсе, вӑл сӑвӑҫпа тӗплӗ-йӗрлӗ, ӗнентерӳллӗ аргументсем илсе кӑтартса тавлашать. Малтан рецензент чӑвашсен Европӑри пек вӗренӳ ҫеҫ мар, хӑйсен саспаллийӗсемпе ҫырулӑхӗ те ҫуккине палӑртать. Апла пулин те, ку халӑхӑн астрономи, физика тата ботаника пур. «Ку халӑх...ҫав предметсемпе пӗлӳ кулленхи пурнӑҫра, ҫутҫанталӑка пӗрмай сӑнаса тупать. Ӑна-кӑна пайтах курнӑ стариксем вӑхӑт, сывлӑш тата ҫанталӑк епле улшӑнасса нумай чухне малтанах тӗрӗс каласа параҫҫӗ. Эпӗ асӑрханӑ тӑрӑх, мӗн пуласси ҫинчен вӗсем ҫӑлтӑрсем кусни, пӗлӗтсем унталла е кунталла шуни, вӗҫен кайӑксем кӑшкӑрни е вӗҫни тата ытти тӑрӑх каласа систереҫҫӗ»[25].

Чӑвашсем ботаникӑна та лайӑх пӗлеҫҫӗ, мӗн пӗлнипе пурнӑҫра усӑ кураҫҫӗ. Хӗрарӑмсем пайтах курӑк пахалӑхне ӑнкараҫҫӗ, вӗсем пулӑшнипе тӗрлӗ чир-чӗртен сывалаҫҫӗ, «хӑйсемех килти выльӑха тата кайӑккӗшӗке сиплеҫҫӗ». Курӑкранах сӑрӑ хатӗрлеҫҫӗ, унпа килте тӗртнӗ пиравӑр, ҫӑм, ҫип, тӑла пӗветеҫҫӗ. Александра Фукс шухӑшлав енӗпе чӑваша катӑка хуни тӗрӗс маррине автор ҫӳлерехри тата ытти фактсемпе ярӑҫҫӑн кӑтартать.

Сӑмахсене халӑх епле калать, ҫапла ҫыртарасшӑн Г.Сигов. Вӑл асӑрхаттарнӑ тӑрӑх, хӗрарӑмсем пуҫа «хишпу» мар, «хошпу», хӗрсем «тухъя» мар, «тохъя» тӑхӑнаҫҫӗ. Куратпӑр ӗнтӗ, унӑн тӳрлетӗвӗсем хӑй пурӑнакан вырӑнти чӑвашсем епле калаҫнипе ҫыхӑннӑ. Кунсӑр пуҫне, рецензент уйӑхсен ячӗсене тӳрлетет тата хушса ҫырать, вӗсене ӑнлантарассине ҫав вӑхӑтра ял хуҫалӑхӗнче мӗнле ӗҫсем тунипе ҫыхӑнтарать.

Рецензи содержанийӗ тӑрӑх пӑхсан, унӑн авторӗ - питӗ нумай вуланӑ ӑнкаруллӑ ҫын; вӑл чӑвашсем хушшинче пурӑнать, вӗсен чӗлхине, пур-

наç условийĕсемпе йăли-йĕркине лайăх пĕлет. Пуринчен те пахи - автор чăваш халăх хутне кĕрет. Рецензийĕн çак пахалăхĕсем, ăна вырăсла çырса вырăс прессинче пичетленине пăхмасăр, чăваш публицистикин произведенийĕ теме май параççĕ. Ăна эпир чăваш публицистикин малтанхи чĕкеçĕ тесе шутлатпăр.

Анчах, халăхра каланă пек, пĕр чĕкеç вĕçсе килнипех çуркунне пулмасть-ха. «А.А. Фуксăн «Хусантан Шупашкара кайни» статйи пирки Çĕрпӳ уесĕнче пурăнакан çын асăрхаттарнисем» йышши произведенисем чăваш публицистикипе журналистики историйĕ умĕнхи тапхăра кĕреççĕ. Историйĕ каярахпа - публицистика çулĕ çине Спиридон Михайлов, Николай Золотницкий, Иван Яковлев тата ыттисем тухсан пуçланать. Вĕсем унччենхи авторсем пек пĕрер произведени çырса пичетленипе лăпланса лармаççĕ, ку ĕçе хастарлă кӳлĕнеççĕ.

Раççейре ылханлă патшан тискер тарçисем наукăна, литературăпа искусствăна аталантарма пур майсемпе те чăрмантарнă. Халăха тĕттĕмлĕхпе тĕшмĕшлĕхре тытма тăрăшнă, çакна пула ĕнтĕ ĕççыннисен массисем культура ырлăхĕсемпе усă курайман.

Вырăс мар халăхсен шăпи уйрăмах йывăр пулнă. Çав халăхсем тĕлĕшпе патша тытăмĕн политики, помещиксемпе буржуази политики акă мĕнле пулнă: вĕсем хушшинче патшалăх тытăмĕн тĕввисене пуçĕпех пĕтерсе пымалла, культурине аталанма памалла мар, чĕлхине хĕсĕрлемелле, вĕсене тĕттĕмлĕхре усрамалла, юлашкинчен тата пурне те вырăса çаврăмалла. Çакнашкал политика ку халăхсем аталанаймасăр пурăнасси, политика енчен кая тăрса юласси патне илсе пынă.

Авал чăваш халăхĕн шăпи шăпах çавăн пек пулнă. Финсен паллă ученăйĕ, Гельсингфорсри университет профессорĕ Альквист Август Энгельберт (1826-1899), XX ĕмĕр варринче Атăл тăрăхĕнчи тата Урал çумĕнчи халăхсем хушшинче виçĕ çул филологи тĕпчевĕсем тунă хыççăн акă мĕнле шухăшсем патне пырса тухать: «Чăваш чĕлхи питĕ ыррăн янăрать, унăн сăмах çаврăнăшĕсем тĕлĕнмелле тĕрĕс тата тарăн шухăшлă... Анчах эпир чăваш чĕлхине телейлĕ пуласлăх кĕтет тесе калама пултараймастпăр... Чăваш чĕлхи пĕр-пĕр вăхăтра йăлтах пĕтсе ларма пултарать. Чăваш литератури, чăвашла вĕрентесси, ку чĕлхепе патшалăх тата суд ĕçĕсене тăвасси пирки калаçмалли те çук, ун çинчен ĕмĕтленни кăлăхах»[26].

Чăвашсене тăван чĕлхепе кĕнекесем, хаçат-журнал кăларттарман. Çавна пула чăваш публицистикипе журналистики аталанăвĕн çулĕ-йĕрĕ асаплă пулнă. Çапах, ӳсес курăк чул хушшинчен те тухать тенĕ пек, иртнĕ ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче чăваш публицистикин черченкĕ хунавĕсем ункун палăрма пуçлаççĕ. Тăван çырулăх, наци литератури чĕлхи тата периодика пичечĕ пулманран ун чухне чăваш халăхĕ хушшинчен уйрăм публи-

цистсем çеç тухма пултарнă. Пичетлеме май пултăр тесе, вĕсене вырăсла çырма тивнĕ. Çавна май пирĕн публицистика чăвашсен çĕнĕ çырулăхне туса йĕркеличченех тымар яма тытăннă.

Раççей XIX ĕмĕрти утмăлмĕш çулсенче пĕрремĕш хут революци ларутăрăвĕ патне пырса тухать. Хресченсем крепостла йĕркепе помещиксене пăхăнса тăрассине пăрахăçласси çинчен патша 1861 çулхи февралĕн 19-мĕшĕнче ирĕксĕрех манифест кăларать. Крепостла правăна пăрахăçлани тĕрлĕ чинлине, пĕтĕм ирĕклĕх юхăмĕн тата, уйрăммăн илсен, цензурăсăр, демократиллĕ пичетĕн массăллă тĕп деятельне вăрататъ. Раççейре ирĕклĕхшĕн пынă кĕрешĕвĕн иккĕмĕш тапхăрĕ - тĕрлĕ чинлисен е буржуаллă-демократиллĕ тапхăр пуçланать. «Ирĕклĕх идейисем чăваш халăх массисем хушшине те пырса кĕреççĕ, вĕсем хушшинчен хăйсен культура вăйĕсене ура çине тăратаççĕ, халăх пурнăçĕпе тата унăн ĕçĕ-хĕлĕпе тачă çыхăннă наци интеллигенцине ӳсме пулăшаççĕ»[27]. Çав интеллигенци шутĕнчен чылайăшĕ тĕттĕм халăх шăпине çăмăллатас ĕмĕтлĕ, çырас пултарулăхлă. Вĕсенчен пĕрисем (С.М.Михайлов, И.Я.Яковлев, А.В.Рекеев, Н.М.Охотников) чăвашран тухнă, теприсем (Н.И.Золотницкий, В.К.Магницкий) - чăваш халăхĕ хушшинче çитĕннĕ вырăссем. Чăваш публицистики никĕсĕн малтанхи кирпĕчĕсене çак çынсем хунă та ĕнтĕ. Публицистикăпа журналистикăна аталантарма вĕсем çул уçнă.

Чăвашсем хушшинче 1850 çулта вулама-çырма пĕлекенсем пин çын пуçне вуниккĕ çеç пулнă. Хастар просветительсем И.Н.Ульяновпа И.Я.Яковлев пĕрле тăрăшса чăваш ачисем валли шкулсем уçсан, ялсенче хаçат-журнал вулама пĕлекенсем ӳссе çитĕнеççĕ. Вулакансем тупăнни те хăй майĕпе тăван публицистикăна чĕрĕ сывлăш кĕртме пулăшать.

Чăваш публицистикин çулне Раççейри общество шухăшлавĕн мал ĕмĕтлĕ идейисем тата прогрессивлă вырăс публицистики çутатса тăнă. Чăвашсен пирвайхи публицисчĕсем хăйсен пултарулăхĕн малтанхи утăмĕсене вырăс публицистика ӳсĕмĕн никĕсĕ çинче тунă. Вăл витĕм кӳнипе XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çуррипче чăваш публицистики хăйĕн умне халăха çутта кăларассине йĕркелес, унăн культурине аталантарас, пурнăçне çăмăллатас тĕллев кăларса тăратать.

Чăвашсен малтанхи публицисчĕсене прогрессивлă вырăс интеллигенцийĕ тăванла пулăшать. Çакна нумай-нумай тĕслĕх яр уççăн çирĕплетет. С.М.Михайловăн пирвайхи произведенийĕсене пичете хатĕрлесе пама «Казанские губернские ведомости» хаçат редакторĕсем А.И.Артемьев (1820-1874), И.Н.Березин (1818-1896) пулăшаççĕ. Чăваш публицистне ăс паракансен шутĕнче тата паллă ученăя П С.Савельева (1814-1859) асăнмалла. Чĕмпĕрти гимнази преподавателĕ, «Симбирские губернские ведомости» хаçат редакторĕ М.В.Арнольдов çамрăк И.Я. Яковлева вĕренме кĕме

те, периодика пичетӗнче малтанхи утӑмсем тума та пулӑшать.

Вырӑс журналистикин историйӗ Раççейре ирӗклӗхшӗн пынӑ кӗрешӗвӗн виçӗ тапхӑрӗпе тачӑ çыхӑннӑ. Çав тапхӑрсемпе килӗшӳллӗн, дворянсен тапхӑрӗнчи журналистикӑна, тӗрлӗ чинлисен е буржуаллӑ демократи пресс сине, юлашкинчен, пролетари пичетне палӑртаççӗ.

Чӑваш публицистикипе журналистикин историне ӑслӑлӑх енчен никӗсс лесе тапхӑрсем çине уйӑрни курӑнсах каймасть-ха. Çакӑ паллӑ: вырӑс тата чӑваш журналистикин аталану тапхӑрӗсем пӗрешкел мар, вӑхӑт тӗлӗшӗнчен те тӗл килмеççӗ. Чӑваш пичечӗ урӑхларах çулпа аталаннӑ. Патша Раççейӗнче вырӑс мар халӑхсене пичет енӗпе те хӗсӗрленӗ. Вырӑс пресси XVIII ӗмӗр пуçламӑшӗнче тымарланать; чӑваш публицистики вара çӗр аллӑ çултан кӑна, XIX ӗмӗр варринче, çуралать. Общество аталанӑвӗн историлле условийӗсене кура вырӑс ирӗклӗх юхӑмӗн пуçӗнче пӗрремӗш тапхӑрта дворянсен йӑхӗнчи çынсем тӑнӑ. Чӑваш халӑхӗн нушисене палӑртма малтанхи просветительсен пысӑк мар ушкӑнне тивнӗ. Вӗсем хресченсем (С.М.Михайлов) тата кӗçӗн чинлӑ интеллигенци хушшинчен (Н.И.Золотницкий) тухнӑ. Вырӑссен пӗрремӗш хаçатне «Ведомости» ятпа 1702 çулхи декабрӗн 17-мӗшӗнче кӑларма тытӑннӑ. Правительство политикине ӑнлантарас, общество шухӑш-кӑмӑлне хӑй майлӑ çавӑрас, çарпа вӑрçӑ ӗçӗсем çинчен каласа парас, Раççейпе урӑх çӗр-шывсенчи хыпарсене пӗлтерсе тӑрас тӗллевпе ку хаçата Пӗрремӗш Петӗр патша пуçарса янӑ. Чӑваш публицистикипе журналистики халӑха хӳтӗлекен, ун майлӑ тӑракан сасӑ пулса çуралать. Чӑвашсен пӗрремӗш публицисчӗсем хӑйсен произведенийӗсене вырӑс прессинче пичетленӗ. Чӑваш пресси вырӑссен пӗрремӗш революцийӗччченех хунав ярайман.

Ӑнланмалла ӗнтӗ, чӑваш публицистикипе журналистики аталанӑвӗн çулне ӑслӑлӑхпа никӗслесе тапхӑрлассине чӑваш халӑхӗн ирӗклӗхшӗн пынӑ кӗрешӗвӗпе тӳрремӗн çыхӑнтарса тумалла.

Ӑнланмалла ӗнтӗ, вырӑс журналистикин историйӗ çӗр-шывра ирӗклӗхшӗн пынӑ кӗрешӳпе тачӑ çыхӑннӑ. В.И.Ленин «Раççейри рабочисен пичечӗн иртнӗ кун-çулӗнчен» статьяра ку историе виçӗ тапхӑра пайлать: дворянсен тапхӑрӗ, тӗрлӗ чинлисен е буржуаллӑ-демократиллӗ тапхӑр, пролетари пичечӗн тапхӑрӗ[28]. Анчах кунта 1825 çулччченхи, урӑхла каласан, дворянсен кӗрешӗвӗччченхи прессӑпа публицистикӑна шута илмен.

Чӑваш журналистики аталанӑвӗн çул-йӗрне тапхӑрлассин ӑслӑлӑх никӗсӗсене туса хатӗрлени курӑнсах каймасть-ха. Хӑш-пӗр тӗпчевçӗсем чӑваш журналистики историйӗн тапхӑрӗсене вырӑс ирӗклӗх юхӑмӗн калӑпӗсем хушшине хӗстерсе хурасшӑн, анчах апла туни чӑваш журналистики урӑхларах çулсемпе аталаннӑран вырнаçуллах мар. Чӑваш халӑхӗн об-

ществăлла пурнăçĕ хăй еккипе пынă, çутă пурнăçпа ирĕклĕхшĕн вăл объективлă условисене кура май пур таран хăй пĕлнĕ пек кĕрешнĕ.

Чăвашсенчен ытларахăшĕ пайтах вăхăт утельни хресченсен шутĕнче тăнă. Ку тăрăхра дворянсен сийĕ хунасах каяйман, ирĕклĕх юхăмĕн пуçĕнче тăракан вăй пулма пултарайман. Вырăс патшалăхĕнче Чăваш тăрăхĕ нумай-нумай çулсем хушши хевтесĕр аграрлă хушăм шутланнă, унта промышленность аталанса вăй илеймен, ал ăсталăхпа вăрман касса сутассинчен çӳлерех çĕкленеймен. Эппин кунта ирĕклĕх юхăмĕ пуçĕнче тăма пултаракан пĕтĕçӳллĕ рабочи класс пулман.

Чăваш халăхĕ умĕнче аталану тĕлĕшпе юлса пырассине пĕтерес тĕллев тăнă: экономикăпа ăс-тăн культурине çĕклемелле, патриархаллă пурнăç йĕркинчен хăтăлмалла, пурлăх-ырлăх енĕпе пурнăç шайне хăпартмалла. Çак тĕллевсене пурнăçлассишĕн пархатарлă ĕçе кӳлĕннĕ те ĕнтĕ май пур таран чăваш çутлăхçисем. Халăхăн обществăлла пурнăçĕнче çутлăх юхăмĕн вăйĕ самаях вăйлăн курăнса тăнă.

Çӳлерехре каланине шута хурсан, чăваш публицистикипе журналистики аталанăвĕн историне тăван тăрăхра çутлăх юхăмĕ епле аталаннин никĕсĕ çинче тапхăрламалла. Пирĕн шутпа, чăваш публицистикипе пресси аталанăвĕнче ултă тапхăр уçăмлăн курăнса тăраççĕ.

1.Чăваш çутлăх юхăмĕ умĕнхи е пуçламăш тапхăрти публицистика (1728-1768).

2.Чăваш çутлăх юхăмĕ çуралнă тапхăрти публицистика (1768-1867).

3.Чăваш çутлăх юхăмĕ вăйлăн сарăлнă тапхăрти публицистика (1867-1904).

4.Революциллĕ-демократиллĕ кĕрешӳ вăйланнă тапхăрти журналистика (1905-1916).

5.Пролетари пресси çуралнин тата влаçра пĕр парти тытăмĕ хуçаланнин тапхăрĕнчи пичет органĕсем (1917-1990).

6. Рынок экономики тапхăрĕнчи журналистика (1991 çултанпа). Нумай партиллĕ демократиллĕ власть тытăмĕн пичет органĕсем çуралса вăй илеççĕ.

Ултă тапхăртан малтанхи виçĕ тапхăрĕнче чăвашсен публицистика çеç пулнă, чăваш пресси çуралайман. Чăваш публицисчĕсем вырăс периодика пичетĕнче хăйсен сассине панă.

Чăвашсен пĕрремĕш хаçачĕ тăваттăмĕш тапхăрта кăна тухма пуçлать. Тулли пĕлтерĕшпе каласан, чăн-чăн чăваш журналистики çак тапхăрта çуралать.

Чăваш çутлăх юхăмĕ умĕнхи тапхăрта халлĕхе Охатер Томеева кăна куратпăр. Вăл тӳрери уйрăм пуçлăхсемпе ялти куштансен пусмăрне хирĕç тăрать, чăвашсене Христос тĕнне йышăнтарас ĕçри киревсĕрлĕхсене уçса парать.

# ЧӐВАШ ПУБЛИЦИСТИКИ ИСТОРИЙӖН ПУҪЛАМӐШ ТАПХӐРӖ

## Охатер Томеев - чӑваш публицистикин малтанхи чӗкеҫӗ

Чӑваш тӑрӑхӗн обществӑпа политика пурнӑҫӗнче Охатер Томеев XVIII ӗмӗрӗн иккӗмӗш чӗрӗкӗнче палӑрнӑ. Чӑваш публицистикин малтанхи утӑмӗсене шӑпах вӑл тунӑ. Чӑвашсен кӗске энциклопедийӗнче ун ҫинчен ҫапла каланӑ: «Охатер Томеев (Шупашкар уесӗнчи Питтукассинчен, пурнӑҫ ҫулӗсем паллӑ мар) - чӑваш хресченӗ, 1730-40 ҫулсенче чӑвашсен обществӑпа политика пурнӑҫӗнчи паллӑ ӗҫтеш, тӑван халӑх ҫыннисене чиновниксен, помещиксен тата купцасен киревсӗрлӗхӗсенчен хӳтӗленӗ. 1740-мӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнче Шупашкар уесӗнче Христос тӗнне ирӗксӗрлесе йышӑнтарассине хирӗҫ кӗрешӗве ертсе пынӑ. 1744 ҫулхи августра Синода хут ҫырса панӑ, унта ҫапла тума ыйтнӑ: ирӗксӗрлесе тӗне кӗртессине чармалла, уесра вайпут вырӑнне виҫӗ ҫынна, ҫав шутра Томеева кӗртсе, автономлӑ уйрӑм орган туса хумалла, ку орган хресченсене «кӳрентерӳсенчен тата хырҫӑран» хӳтӗлемелле, уес тилхепине тытса пымалла тата Христос тӗнне ирӗклӗн тӑван чӗлхепе йышӑнтармалла. 1744 ҫулхи сентябрьте ӑна айӑплав органӗсем шырама тытӑннӑ. В.Д.Димитриев»[29].

Ҫак хастар ҫын чӑваш княҫӗ Томей ҫемйинче ҫуралса ӳснӗ. Ку княҫ ирӗклӗхе кӑмӑлланӑ, никама та пӑхӑнман, никама та пуҫ ҫапма ҫӳремен. Хӑй мӗнле ахӑр саманара пурӑннине питӗ лайӑх ӑнланнӑ, ҫавӑнпа тавҫӑруллӑ та ӑслӑ ывӑлне Охатера хӑйне кирлӗ пек воспитани парса ӳстернӗ. Охатер Томеев хӑй те, мӑшӑрӗ Олена Ишмурзина та вырӑсла лайӑх пӗлнӗ. Кунашкалли ун чухне сайра тӗл пулнӑ. Охатер Раҫҫей патшалӑхӗн саккунӗсене те аван пӗлнӗ.

Хальхи вӑхӑтри тӗпчевҫӗ Петр Николаевич Андреев (Сера Пети) хастар чӑваш ҫинчен ҫапла ҫырать: «Патша лартнӑ пуҫлӑхсене тата вӗсене евитлесе тӑракан чӑвашсене хирӗҫ, вырӑнти халӑха ирӗксӗрлесе Христос тӗнне йышӑнтарассине хирӗҫ вӑл нумай ҫул хушши кӗрешнӗ. Теветкел те хӑраманскер пӑлхавсем, ҫав шутра Шупашкарта та ҫӗкленӗ, ӑна тыта-тыта хупнӑ, тарнӑ, пытанса пурӑннӑ. Вӑл Емельян Пугачев ҫарне Атӑл хӗрринче кӗтсе илнӗ, Иккӗмӗш Кӗтерне патшана хирӗҫ ҫӗкленнӗ казаксен аслӑ пӑлхавҫин пӗр генералӗ пулса тӑни ҫинчен сӑмах ҫӳрет... Вӑл май пур таран чӑваш халӑхӗ майлӑ тӑнӑ»[30]. П.Н.Андреев ӗнентернӗ тӑрӑх, О. Томеев Иккӗмӗш Кӗтерне

патшана пĕрре çеç мар сĕнӳсем панă, хӳтĕлеме хистенĕ.

Иккĕленмелли çук, О. Томеев халăхăн шиксĕр хӳтĕлевçи пулнине тĕпчевçĕ тĕрĕсех палăртнă, анчах вăл 1773-1775 çулсенчи хресчен вăрçине хутшăнни, Иккĕмĕш Кĕтерне патшипе çыхăнни ĕнентерӳллĕ мар. Тĕпчевсенче кăтартнă тăрăх Охатер çут тĕнчерен 1749 çулта уйрăлса кайнă. П.Н. Андреев çырнă тăрăх, Охатер - XVIII ĕмĕр вĕçĕнчи ĕçтеш. Фактсем вăл çак ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче халăха хӳтĕленине кăтартаççĕ. Е.И.Пугачева пăлхавçă вырăнне хунипе те килĕшес килмест. Вăл хресчен вăрçин чаплă ертӳçи пулнă-çке.

В.Г.Родионов тĕпчевçĕ çакна асăрханă: «О.Томеевăн ячĕ документсенче чи малтан 1728 çулта тĕл пулать; ун чухне вăл Шупашкарти вайпут кантурне хăйĕн ялĕнчи пĕр хресчен ыттисен çĕрĕсене вăйпа туртса илни çинчен çырса парать. Çав хутран О. Томеев тĕрĕслĕхшĕн кĕрешекен çын пулнине пĕлме пулать»[31].

Вайпута панă хута «Ют анасене туртса илме юрать-и?» (Допустим ли захват чужих наделов?) ят пани тĕрĕсех пулать, ахăр. Автор ку çырура хăйĕн ăруран пыракан çĕрĕсене тавăрса пама ыйтать. Унăн ыйтăвне вайпут кантурĕнче тивĕçтермеççĕ, унăн пĕтĕм пурлăхĕ Ерас Олдеев (Ераска) княç аллине куçнă тесе ĕнентереççĕ. Çакăн сăлтавĕсем паллă: пĕр енчен, Томей княç йăхĕнчен мăшкăлласа кулаççĕ; тепĕр енчен, Ерас Олдеева кӳрентересшĕн пулман. Ку княç тӳрерисене хирĕç каймасть, вĕсем мĕн хушнă пек тăвать.

«Ют анасене туртса илме юрать-и?» çыру - чăваш публицистикин пĕрремĕш произведенийĕ.

Питтукасси ялĕн пултаруллă чăвашне таврари ялсенче те хастар та паттăр кĕрешӳçĕ тесе шутланă, нумай ыйтупа ун патне çӳренĕ. О. Томеев 1731 çулта Шупашкарти вайпут кантурне тепĕр хут çитерет, ăна «Явап тыттармалла» ят пама пулать. Кунта вăл Шуртан вулăсĕнчи Килтеш хресченĕсен ячĕпе виççĕре яхăн теçеттин çарана юрăхсăра кăларнăшăн явап тыттарма ыйтать. Çакнашкал хӳтĕлев пачах шӳт мар. Вайпут кантурĕ пăшăрханса ӳкет. Хресченсемпе Охатер хушшинчи туслăха хавшатма тем те тума пуçлаççĕ кантуртисем. Вĕсем ĕçе кутăн май çавăрса хураççĕ те Охатера хăйне айăпламалли нехек шырама пикенеççĕ. Килтешсен суд пошлинине Охатера тӳлемелле тăваççĕ.

Вăтам Атăл тăрăхĕнчи халăхсен, çав шутра чăвашсен пурнăçĕнче 1740-мĕш çултанпа пысăк улшăнусем пулса иртеççĕ: патша указĕпе вĕсене вăйпах вырăс тĕнне йышăнтарма тытăнаççĕ. Вырăнти халăх чиркӳ пусмăрне лекет. Чăн ĕнтĕ, çĕнĕ тĕне йышăнакансене çăмăллăхсем панă пек тунă: хырçă-марçăран тата салтака илсе кайиччен

виçĕ çуллăха хăтарнă, хĕрес парнеленĕ. Çак тăкаксем пĕтĕмпех тĕне кĕме тытăнса тăракансем çине куçнă. Чăваш хресченĕсенчен пухнă хырçă укçипе чиркӳсем лартнă. Пупсем кĕлĕсемпе ӳкĕтсене славян е вырăс чĕлхипе кăна ирттернĕ.

Чăваш хресченĕсем çĕнĕ тĕне куçма килĕшмеççĕ, пăлхавсем çĕклеççĕ. 1744 çулта Кăкшăм вулăсĕнчи чăвашсем Охатер Томеев ертсе пынипе Шупашкара килеççĕ те Архангел чиркĕвне тата вайпута пулăшакан Иван Старухин çуртне хупăрласа илеççĕ. Вайпут пăлхава пуçаракана О.Томеева тытса хупма хушать, ку тарса çухалать.

Охатер Томеев чĕннипе Шупашкар уесĕнчи мĕнпур вулăсĕсенчен суйланă çынсем, тĕпрен илсен, ял старостисем, 1744 çулти нарăс уйăхĕнче çĕнĕ тĕн пирки сӳтсе явма пухăнаççĕ. Пурĕ 88 делегат пуçтарăннă, ыйтăва тĕплĕн сӳтсе явнă, Мускава хут леçме виçĕ çынна, çав шутра Охатер Томеева суйланă. Ăна Мускава пĕчченех кайма тивнĕ. Вăл Мускавра Синода Елизавета Петровна ячĕпе «Тĕне вăйпа ан кĕртчĕр» çырăва парать.

Ку çырăва вулăссен делегачĕсем хушнипе Охатер Томеев (Ухатер Тойметьев) хăй тĕллĕн кайран, ахăртнех, Мускавра çырнă. Делегатсен пухăвĕ нарăс уйăхĕнче пулнă, хута утă уйăхĕнче çырнă тесе кăтартнă. Синода вара çурла уйăхĕн 8-мĕшĕнче панă. Ăна О.Томеев пĕччененех çырни пĕрремĕш абзацран тата çыру вĕçĕнче алă пуснинчен паллă.

Тарăн шухăшлă çак произведени вăрăмах та мар, ăна пĕтĕмпе илсе кăтартар.

## ТĔНЕ ВĂЙПА АН КĔРТЧĔР

Хусан кĕпĕрнинчи Сĕве провинцине кĕрекен Шупашкар уесĕнче пурăнакан мĕнпур чăваш хушнипе Питтукасси чăвашĕ Охатер Томеев Сирĕн Император Хисеплĕхĕнчен Елизавета Петровнăран çаксене ыйтать.

Сĕвери крешĕн кантурĕ те, ытти тĕрлĕ тӳре-шара та пире виçесĕр кӳрентерни тата юра ертни çинчен тĕплĕн çырса кăтартма май та çук. Çавăнпа та мана, маларах ятăма асăннăскере, православи тĕнне кунтах, Мускаврах кĕртме, тата Шупашкар уесĕнчи мĕнпур чăваша - вĕсем вара аллă пинтен кая мар - тĕне кĕртесси çинчен Хăвăрăн Император Хисеплĕхĕрĕн указне Сĕвери крешĕн кантурĕ урлă мар, уйрăммăн яма хушăсăрччĕ. Мана вара килĕме ярăсăрччĕ, манпа пĕрле килĕмрисемпе тăванăмсене те, Шупашкар уесĕнчи мĕнпур чăваша тĕне кĕртме, çавăнпа пĕрлех Хăвăрăн Император Хисеплĕхĕрĕн пирĕнтен илекен хырăçа йĕркеллĕн пухма тата пире тĕрлĕ

кӳрентерекенсенчен хӳтӗлеме Мускаврa пурӑнакан Григориӑ Вихарева та ярӑсӑрччӗ. Приказ ӗҫӗнче унӑн алли ҫаврӑнать, хӑй те ӗҫе алхапӑл, тӳре-шара ӗҫне пултарать. Пирӗн патӑрта крешӗн ӗҫӗсене туса пыма вара Хусан кӗпӗрнин кӗнцелерҫине Илья Бельские лартӑсӑрччӗ, мӗншӗн тесен вӑл чӑваш чӗлхине питех те аван пӗлет. Чӑвашсене тӗне кӗртес ӗҫе мана та хутшӑнтарӑсӑрччӗ: эпӗ вырӑс чӗлхине чылайранпа пӗлетӗп; тӑван чӗлхе урлӑ вара тӗне кӗме килӗшекенсене Христос тӗнӗн йӑлисене тӗрӗсрех уяса пурӑнма вӗрентейӗп, тӗне кӗресшӗн пулманнисене ӑшӑ сӑмахпа ӳкӗте кӗртсе ҫавӑрма пултарайӑп.

Уесри чӑваш ялӗсенче ӑнӑҫлӑ вырӑн суйласа, виҫӗ чиркӳ лартма хушӑсӑрччӗ: Сирӗн Император Хисеплӗхӗрӗн Пирӗштисен ячӗпе, патша ывӑлӗ Петр Федорович ячӗпе тата Христос чӗрӗлнӗ ятпа; крешӗн чӑвашсене кирлӗ вӑхӑтра мӑнастирсене вырнаҫтарма ирӗк парӑсӑрччӗ...

Тӗне кӗртме тата ытти маларах асӑннӑ ӗҫсене тума хушса, Сирӗн Император Хисеплӗхӗрӗн указне кӑларсӑрччӗ, Сӗвери крешӗн кантурне вара Шупашкар уесӗнчи чӑвашсене тӗне ӳлӗмрен вӑйпа кӗртме чарма хушӑсӑрччӗ.

**1744, утӑ уйӑхӗ, Мускав** **Охатер Томеев**

Ку ҫырура ҫак ыйтусене хускатнӑ:

1 Сӗвери крешӗн кантурӗ халӑха пусмӑрлать, тӗрлӗ тӳлевсемпе чухӑна ертет. Ҫавӑнпа Шупашкар уесӗнчи чӑвашсене тӗне кӗртес ӗҫе ҫав кантур урлӑ тумалла мар. Ҫыру хучӗ авторне Охатер Томеева Мускаврах тӗне кӗртмелле.

2.Халӑх хушшинче ӳкӗтлевҫӗсем пулма чӑвашла пӗлекенсене уйӑрмалла. Ҫав шута Мускаври Григорий Вихарева, Хусанти Илья Бельские тата Охатер Томеева хӑйне кӗртмелле.

3.Шупашкар уесӗнче виҫӗ чиркӳ туса лартмалла, чӑвашсене мӑнастирсенче вырнаҫма ирӗк памалла.

Охатер Томеев шутланӑ тӑрӑх, Христос тӗнӗ чӑваш патне тӑван чӗлхе урлӑ ҫитмелле. Ҫакна вӑл тӳре-шара тиекӗсенчен нумай маларах туйса илнӗ.

Йывӑр пулнӑ чӑваш халӑхӗн шӑпи. Еврей тӗнне уякан хасарсенчен хӑтӑлас шутпа вӗсем мӑсӑльман тӗнне кӗрсе пӑхаҫҫӗ, тутарланасран хӑраса киремет тӗнне те манмаҫҫӗ. Хусан халӑхӗ чечекленнӗ тапхӑрта чӑвашсене ялӗ-ялӗпе ислам тӗнне кӗртеҫҫӗ, тутарлатаҫҫӗ. Ҫакӑнтан хӑранӑ чӑваш хӑйӗн ҫӑлӑнӑҫне вырӑссен аслӑ ӗмпӗвӗнче курать, унӑн ҫарне Хусана илме пулӑшать, анчах чӑвашӑн кунта та кун ҫути ҫук иккен. Тутарӗ те юнать, хӑйне сутнӑшӑн каҫармасть, вырӑсӗ те шантарнӑ ырлӑх вырӑнне хурлӑха

кĕртет, тулăхлă çĕрĕсене туртса илет, чиркÿсем лартать, улпутсемпе тиексене иртĕхтерет. Тутарпа кайсан тутара тухмалла, вырăспа кайсан тăван тĕне улăштармалла. Мĕн тăвас мĕскĕн чăвашăн? Шăпах çак ыйтăва хускатнă та ĕнтĕ О. Томеев.

Вырăссене, вĕсен тĕнне хирĕç кайни ырă патне илсе çитерменнине лайăх чухлать автор. Вăл вырăс тĕнне хирĕç тени тĕрĕсех мар, çак тĕне ирĕксĕрлемесĕр, мирлĕ майпа, тăван чĕлхе урлă йышăнтарасшăн пулнă вăл чăвашсене. «Тĕне вăйпа ан кĕртчĕр» çыру чăвашсен вырăссемпе туслашас кăмăл пуррине пĕлтернĕ. Анчах çакна ăнланнă-и-ха Синод? Çук çав. О.Томеев çырăвĕ тăрăх вăл икĕ питлĕ, фарисейла йышăну тăвать. Ку йышăнура О.Томеев çырăвĕпе килĕшенçи тунă Синод, çав вăхăтрах хăйне кирлĕ пек йĕркесем çирĕплетет, çырури чи кирлĕ вырăнсене сиктере-сиктере асăнмасăр хăварать.

Сахал сăмахпах нумай шухăш калама пултарнă автор - çакă произведенин тĕп пахалăхĕ. Вăл хускатнă ыйтусем халăх пурнăçĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кунта пĕр вăхăтрах халăхăн нуши-тертне те, унăн шухăш-кăмăлне те, чăвашсене урăх тĕне кĕртмелли çулсене те, çĕнĕ чиркÿсем лартассине те, чăвашсене мăнастирсенче вырнаçтарассине те çутатнă. Императрицăна йăпăлтатса çырнă сăмахсем те вырăн тупнă унта.

Çырура О.Томеев чăваш халăхĕн XVIII ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринчи пурнăçне анлăн ÿкерсе кăтартнă. Вырăс тĕнне ытти халăхсене вăйпа йышăнтарнине автор татăклăн сивлет, вак халăхсене хисепе хумасăр хĕсĕрленине хăюллăн хирĕç тăрать, ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăхшăн кĕрешес туртăма палăртать.

В.Г.Родионов çирĕплетсе каланă тăрăх, «тĕне вăйпа кĕртнине хирĕç тăни халăх хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешĕве çĕкленнипе пĕрешкел. Çавăнпа та О.Томеева вăл наци пусмăрне хирĕç тăнă хастар чăваш тесе калама хăюллăнах пултаратпăр».[31]

О.Томеевăн çырас пултарулăхĕ çÿллĕ шайра тăнă. Хăйĕн çырăвне вăл императрица вуласа тухма тивĕçлĕ шайра çырать, шухăшне калама кирлĕ сăмахсем тупать. Аса илтерер-ха унăн пуçламăшне: «Хусан кĕпĕрнинчи Сĕве провинцине кĕрекен Шупашкар уесĕнче пурăнакан мĕнпур чăваш хушнипе Питтукасси чăвашĕ Сирĕн Император Хисеплĕхĕнчен Елизавета Петровнăран çаксене ыйтать...» Куратпăр, тархасласа ыйтмалли хут (прошени) йĕркисене пăхăнса хайлать автор хăйĕн çырăвне.

Йăпăлтатса тархасламалли сăмахсемпе майсем те тупнă автор. Çакна виççĕмĕш сăпатра ĕмĕт формине лартнă глаголсем те çирĕплетеççĕ: хушăсăрччĕ, ярăсăрччĕ, парăсăрччĕ... Хăйне Мускаврах тĕне кĕртсе килне яма тархаслать, чăваш ялĕсенче виçĕ чиркÿ лартма ирĕк ыйтать. Эппин вăл православи майлă çын. Çакăнпа пĕрлех автор йăпăлтатуллă сăмахсем

Ч-38636



Национальная библиотека
Чувашской
Республики

хушшине халăх нуши-терчĕ çинчен тĕрĕс те йĕплĕ сăмахсем кĕртсе лартать: "Сĕвери крешĕн кантурĕ те, ытти тĕрлĕ тӳре-шара та пире виçесĕр кӳрентерни тата юра ертни çинчен тĕплĕн çырса кăтартма май та çук". «Сĕвери крешĕн кантурне... Шупашкар уесĕнчи чăвашсене ӳлĕмрен вăйпа тĕне кĕртмешкĕн чарма хушăсăрччĕ».

Эпистолярин çак пысăк мар произведенийĕнче публицистика хĕрӳлĕхне куратпăр.

Тĕпчевçĕсем «Тĕне вăйпа ан кĕртчĕр» çырăвăн тепĕр пысăк пĕлтерĕшне асăрхамаççĕ. Раççейре чăвашсем хута пĕлмен, тĕне кĕмен, тĕшмĕшлĕхрен хăтăлман вак-тĕвек халăх шутланнă. Хăшĕ-пĕри ку халăх пурри-çуккине те пĕлмен, ун çинчен илтмен те. Çак лару-тăрура О. Томеев хăюллăн хăйĕн сассине парать - чăваш та çут тĕнчере пуррине кăтартать.

Публицист ăс-хакăлĕн тĕллевĕсене малалла тăсакансем - Е. Рожанский, С. Михайлов, Н. Золотницкий, И. Яковлев - çакна ăнланаççĕ: вырăс тĕнĕ тата чиркĕвĕ урлă чăваш хутла вĕренме, кĕнекеллĕ-шкуллă пулма пултарать, çак ырлăхсем халăхшăн çунакан интеллигенцие чăмăртанма май кӳреççĕ. Ку шухăшсен малтанхи тĕввине шăпах О. Томеев салтса ярать.

Охатер Томеев XVIII ĕмĕрĕн иккĕмĕш чĕрĕкĕнче обществăпа политика ĕçне хутшăннă чăвашсенчен чи харсăрри тесен те йăнăш пулмасть. Хăйĕн кĕрешĕвĕнче вăл тĕплĕн шухăшласа çырнă хутсемпе - чăваш публицистикин малтанхи произведенийĕсемпе усă курать. «Ют анасене туртса илме юрать-и?», «Явап тыттармалла!» тата «Тĕне вăйпа ан кĕртчĕр» çырусем чăннипех те чăваш публицистикин малтанхи чĕкеçĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсенче халăх пурнăçĕн обществăпа политика ыйтăвĕсем тавра сăмах пырать. Эппин, литературăн публицистика текен тĕсĕ çутатакан ыйтусене хускатать. Чăн ĕнтĕ, вĕсем хăй вăхăтĕнче пичетре тухман, çакна тума май та пулман. Пĕрремĕшĕнчен, ун чухне чăваш хăйĕн пресси пирки ĕмĕтленме те пултарайман. Иккĕмĕшĕнчен, тӳре-шарана хирĕçле çивĕч шăллă хайлавсене цензура та пăвса хуратчех. Çапах ку хайлавсем халăх хушшине сăмах вĕççĕн сарăлнă-сарăлнах, авторĕн сумне-чапне ӳстернĕ, ăна кĕрешӳре пулăшас туйăм çуратнă. Асăннă произведенисем автор çеç мар, пĕтĕм чăваш халăхĕ ун чухне политикăпа социаллă пурнăçа ăнланас енĕпе, тавракурăмĕпе чылай çӳлте тăнине кăтартаççĕ.

Çапла вара О.Томеевăн виçĕ çырăвне, «Ют анасене туртса илме юрать-и?», «Явап тыттармалла» тата «Тĕне вăйпа ан кĕртчĕр» ятлăскерсене, пăхса тухрăмăр. Вĕсене виççĕшне те халăх пурнăçĕн çивĕч ыйтăвĕсемпе çырнă. Виççĕшĕ те халăх хушшине сарăлнă. Эппин публицистика произведенийĕсем шутне кĕреççĕ.

Мĕн вăл публицистика? С.И.Ожеговпа Н.Ю.Шведова çапла ăнлантараççĕ: «Публицистика - ку чухнехи обществăпа политика, обществăн хальхи пур-

нăçĕн актуаллă ыйтăвĕсем тăрăх çырнă литература».[32]

Публицистикăлла шухăшсене поэзире те палăртма пулать. Пĕлетпĕр, О.Томеев чăвашла, вырăсла сăвăсем те çырнă. «Чăнлăх тĕнчи тумалла» сăввăн Юхма Мишши куçарнă йĕркисене илер:

Кăкшăм шывĕ - тăрă шыв,
Шăнкăр-шăнкăр вăл юхать.
Чăваш чунĕ - таса чун,
Ним айăпсăртан çунать.[33]

Арманта та пурнăç çук,
Вăрманта та пурнăç çук.
Халь ăçта кайса, чăваш,
Тупăн эс хăвна юлташ?

Шăнкăр шывра пулă çук,
Атма лартни усăсăр.
Вайпутсенче чăнлăх çук,
Пуçа тайни усăсăр.

Патша лартнă пуçлăхсенчен ыррине кĕтмелли çук - çапла каласшăн автор. Эппин мĕн тумалла?

Алла çутă хĕç тытмалла,
Вăрçă хирне тухмалла.
Тăшман пуçне касмалла,
Чăнлăх тĕнчи тумалла.

Автор тăван халăх нушара пурăннине, тӳре-шара хĕсĕрленине, тĕрĕслĕхпе чăнлăха кĕрешӳре кăна тупма пултарнине сăнарлăн кăтартнă. Унăн сăввисем чăваш халăх юррисене аса илтереççĕ. Вĕсене пуян чĕлхепе çырнă, танлаштарусемпе, эпитетсемпе, илемлĕхĕн ытти мелĕсемпе усă курса калăпланă.

О.Томеев çырăвĕсемпе сăввисене вуланă май вăл пултаруллă публицист, ăста сăвăç пулни куç умне уçăмлăн курăнать. Чăвашран тухнă, обществăпа политика ĕçне хастар хутшăннă О.Томеев ячĕ тăван халăх асĕнче чăннипех те яланлăхах сыхланса юлма тивĕçлĕ. Тăван халăх публицистикин пĕрремĕш чĕкеçĕ чăваш та çут тĕнчере пуррине, вăл хӳтĕлеве тивĕçлине хăюллăн пĕлтерет. Охатер Томеева чăваш культурин патриархĕ И.Я.Яковлев пуçарнă ĕçсен малтанхи йĕрне хывакан тесе шутлама май пур.

# ЧĂВАШ ÇУТЛĂХ ЮХĂМĚ ÇУРАЛНĂ ТАПХĂРТИ ПУБЛИЦИСТИКА

## Чăвашсен пěррремěш çутлăхçи Ермей Рожанский çырнă публицистика произведенийěсем

Ун çинчен «Чăвашсен кěске энциклопедийěнче» В.Г.Родионов тěпчевçě çапла çырнă: «Рожанский Ермей Иванович (1741 - паллă мар - Кăрмăш хулинче пуп çемйинче çуралнă) - ăсчах-лингвист, тăлмач, очерксен авторě. Чулхулари тěн семинарийěнче вěреннě. Кăрмăш тата Етěрне уесěсенчи чăвашсем ыйтнипе 1765 çулта ăна «чăваш чěлхин ўкěтлевçи» туса хураççě. Рожанский - «Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка» (1769) кěнекен пěр авторě. Вăлах «Словарь языков разных народов . » кěнеке (1785) тата XVIII ěмěрти ытти лингвистика ěçěсен авторě. Кириллица никěсě çинче чăваш çырулăхне туса хурассишěн тăрăшать (1769). Чăвашла пěрремěш кěнеке «Кěске катехизис» пичетлесе кăларать (СПб., 1800).

Рожанский Чулхулари куçару-лингвистика шкулěн пуçěнче тăрать, Атăл тăрăхěнчи халăхсен çутлăхçисен В.Пуцек-Григоровичăн (Вениамин епископ), Д.Семенов-Рудневăн (Дамаскин епископ) çывăх пулăшаканě пулнă, Ф.Прокоповичăн тата М.Ломоносовăн çутлăх идейисене ырланă. Литературăри ěçěнче очерк тата ода жанрсемпе палăрнă. Ывăлне Григорие çутлăх идейисем майлă воспитани панă, ывăлě чăваш чěлхи учебникě авторěсенчен пěри пулса тăнă (1791).[34]

Чăваш Республикинчи обществăлла вăйсем 1991 çулта чăвашсен малтанхи çутлăхçи тата публицисчě Ермей Рожанский çуралнăранпа 250 çул тултарнине паллă турěç. Тěнпе çыхăнман хушамачě - Иванов. Н.В.Никольский «Христианство среди чуваш Среднего Поволжья в XVI-XVIII веках» (1912) ěçěнче ăна Ермий Иванов тесе асăнать. Император ячěпе çырнă ыйту хучěсене Герасим Иванов тесе алă пусать.

Мěншěн ăна чăвашсен малтанхи çутлăхçисенчен пěри тесе шутлатпăр-ха?

Пирěн шутпа, чăваш çутлăх юхăмě шăпах унăн пархатарлă ěçěхěлěнчен пуçланать. Пěрремěшěнчен, вăл Дмитрий Дамаскин епископпа пěрле Чулхулари тěн семинарийěнче тăлмачсен шкулне йěркелет. Текстсене вырăсларан чăвашла унпа пěрле ывăлě Григорий Рожанский, Иван Русановский тата Иван Татинский семинаристсем куçарнă. Ермей Рожанский хăй 1788 çулта «Краткий катехизис» кěнекене чăвашла куçарать, ку кěнеке 1800 çулта кун çути курать. Çак кăларăм

чăвашсен çырулăх культурине паха палăк пулса кĕрет. Ăна 600 экземпляр пичетленĕ, çав шутран 5 экземплярне Синодпа Ăслăлăх Академийĕн библиотекине панă, 20 экземплярне уйрăм çынсене парнеленĕ, 575 экземпляр чăвашсем пурăнакан прихутсем валли уйăрнă. Ермей Рожанский вырăс букварĕнчен те текстсем куçарнă.

Иккĕмĕшĕнчен, вăл «Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка» кĕнекен пĕр авторĕ. Ăна Вениамин Пуцек-Григорович епископ ертсе пынипе хатĕрленĕ. Е. Рожанский тăван чĕлхен уйрăмлăхĕсем çинчен калакан пайне çырнă. Ку кĕнекен словарьне тума чăвашла пĕлекен пупсене хутшăнтарнă. Кĕнекене Ăслăлăх академийĕ йышăннă тăрăх 1769 çулта 600 экземпляр тиражпа пичетлесе кăларнă.

Виççĕмĕшĕнчен, Дамаскин епископ ертсе пынипе вăл 1785 çулта «Словарь языков разных народов, в Нижегородской епархии обитающих, именно: россиян, татар, чуваш, мордва и черемис» ятпа кĕнеке хатĕрлет. Çак словаре 12 пин чăваш сăмахĕ кĕртнĕ. Е. Рожанский чăваш сăмахĕсене пухас ĕçе семинаристсене тата ывăлне Григорие явăçтарнă, словарĕн чăваш тата тутар лексикипе çыхăннă пайĕсене редакциленĕ, хушăмсем кĕртнĕ.

Тăваттăмĕшĕнчен, Ермей Рожанский - чăваш публицистикипе этнографин малтанхи произведенийĕсен авторĕ. Çав шутра «Урмай ялĕнчи пăтăрмах» (Волнения урмаевцев, 1768), «Чăвашсем çинчен» этнографипе публицистика очеркĕ (О чувашах, живущих в Нижегородской епархии, 1785), «I Павăл патша Чулхулана пынă ятпа чăвашла калама çырнă сăмах» (Речь для приветствия на чувашском языке Павла I при посещении им Нижнего Новгорода, 1797).

Çапла ĕнтĕ, Ермей Рожанский хăй вăхăтĕнче ăста тăлмач, пултаруллă лингвист, этнограф тата публицист пулнă.

Ырми-канми ĕçĕпе чăваш халăхĕ хушшине анлăн пĕлӳ сарнă, вырăс тĕнне сарассишĕн вăй хуни урлă тăван халăх культурине çĕклессишĕн тăрăшнă, мĕншĕн тесен ку тĕн киремете пуç çапассинчен чылай çӳлерех шайра тăнă. Вăл хутшăннипе кăларнă кĕнекесене чăвашсем пурăнакан уессенче сарнă, чиркӳ прихучĕсем тăрăх валеçнĕ, вулама-çырма пĕлекен чăвашсене панă. Çав кĕнекесемпе Хусанти тата Чулхулари тĕн семинарийĕсенче, тĕн ӳкĕтлевçисем, ялсенчи пупсем тата чиркĕвĕн ытти çыннисем усă курнă. Эппин Е. Рожанский чăваш çутлăх юхăмне пуçарса яраканĕ пулнă. Çапла ĕнтĕ, тĕн ыйтăвĕпе ĕçленисĕр пуçне Ермей Рожанский халăха çутта кăларас тесе те тăрăшнă.

Вăл Чулхулапа Улатăр епископне Феофана çырнă çырусем сыхланса юлнă. Кăрмăшпа Етĕрне уесĕсенчи крешĕн чăвашсен ячĕпе 1764 çулта çырнă çырура Ермей Иванов тияккăна ӳкĕтлевçĕ пулма уйăрса

лартма ыйтаççӗ. Вӗсен шучӗпе ӳкӗтлевçӗн чиркӳ йӑли-йӗркине ӑнлантармалла, чӑвашсене хӳтӗлекен пулса тӑмалла. Тепӗр çул «Халӑх хаярланса ан кайтӑр» ятпа паллӑ çырура тӗн ӳкӗтлевçи ӗçӗнчи йывӑрлӑхсем пирки сӑмах пырать. Ку çырусем иккӗшӗ те публицистика картне лараймаççӗ, эпистоляри литератури шайӗнчен иртеймеççӗ.

Е. Рожанский публицистикин пӗрремӗш произведенийӗ - «Урмай ялӗнчи пӑтӑрмах» тӗрленчӗк. Ку ӗнтӗ илемлӗ публицистика жанрӗ пулать. Ӗç-пуç Кӑрмӑш уесӗнчи Элӗк салине çывӑх Урмай ялӗнче вырсарни кун пулса иртет. Паллӑ, Христос тӗнне йышӑниччен чӑвашсен уяв кунӗ эрне кун шутланнӑ. Çӗнӗ тӗн ӳкӗтлевçисем, пупсем вырсарни куна (вырӑс эрне кунне) ӗçлемелле мар кун тесе шутлаççӗ. Урмайсем вара çак кун уя ӗçе тухнӑ. «Ӳлӗмрен капла япала урӑх ан пултӑр тесе, эпӗ урмайсене вӗсем кӑлӑхах çапла хӑтланнине ӗнентерме тата намӑслантарма ӿайсем патнех кайса килес терӗм. Хампа пӗрле эпӗ Элӗкри икӗ пупа, Василий Степанов тиеккӗне, Михаил Степанов тиечука тата малтан янӑ çынсене илсе кайрӑм», - çырать публицист.

Урмайсем Элӗк чиркӗвӗнче ӗçлекенсем çине сиксе ӳкеççӗ, мӗн ӗç пур сирӗн ют прихутра тесе, вӗсене тӳпелеме пуçӑнаççӗ. «Сирӗн чиркӗвӗрсен уявӗсем нумай пулӗç, вӗсене уя-уя, кайран пирӗн мӗн, хамӑрӑн тислӗке çисе пурӑнмалла-и? Акӑ пуççене касма хушӑр, - эпир сире итлемен те, итлес те çук!» - тесе кӑшкӑраççӗ.

Автор тӗрленчӗкре чӑваш ялӗн пурнӑçӗ çинчен каласа парать, Урмай хресченӗсем хӑйсене вырсарни кун ӗçлеме чӑрмантарнӑшӑн тӗн ӳкӗтлевçине те, Элӗк пупӗсене те хирӗç тӑнине кӑтартать.

Тӗрленчӗк - пӗр-пӗр пулӑма е ӗçе пысӑк мар ӳкерчӗк урлӑ кӑтартса паракан кӗске произведени. Ӑна илемлӗх мелӗсемпе усӑ курса çыраççӗ. Вӑл репортажпа очерка çывӑх. Çавӑн пек çырнӑ та ӗнтӗ Е. Рожанский публицистикӑн çак произведенине. Тӗрленчӗкре чӑваш хресченӗсем таса чунлӑ, çирӗп кӑмӑллӑ, хӑюллӑ пулни курӑнать. Вӗсем çӗнӗ тӗне килӗштермеççӗ, çакна тӳррӗн пӗлтереççӗ. Çакӑнпа пӗрлех Урмай ялӗнчи хресченсем - питӗ ӗçчен çынсем. Лайӑх ӑнланаççӗ: пурнӑç ырлӑхне хастарлӑ ӗç кӳрет. Çавӑнпа кӳренеççӗ те ӗçлеме чӑрмантаракансене. Чӑваш ӳкӗтлевçи ӗçчен хресченсене татӑклӑн хирӗç тӑма, вӗсене айӑпласа явап тыттарма шутламасть - каялла çаврӑнса саланалла çул тытать. Унран Элӗк чиркӳçисем те юлмаççӗ. Çакӑнтан Е.Рожанский ӳкӗтлевçӗ çеç мар, хӳтӗлевçӗ те пулни курӑнать.

Ермей Рожанский çырнӑ тепӗр произведени - «Чӑвашсем çинчен» этнографипе публицистика очеркӗ. Ӑна Дамаскин епископ сӗннипе çырнӑ, вырӑсла-тутарла-чӑвашла-ирçелле-марилле словарьте умсӑмах вырӑнне вырнаçтарнӑ. Ку произведенире автор тӑван халӑхӑн пурнӑç-

не, йăли-йĕркине тĕплĕн çырса кăтартнă. Унта киремете пуç çапнин йĕркисене, чăвашсем мĕнлерех кĕлĕсем каланине, выльăх пусса турăсене парне кӳнине, вилнисене епле пытарнине тата пумĕлкке йĕркисене тĕпĕ-йĕрĕпе çутатнă.

Тĕрĕс палăртать автор: чăвашсем пĕр турра çеç мар, темиçе турра ĕненнĕ. «Вĕсем тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕрен турра асăнаççĕ, туррисене çапла-çапла ятпа чĕнеççĕ: Мăн турă, Мăн турă амăш, Турă, Турă Амăш, Пӳлĕхçĕ турă, Хĕрлĕ çыр, Çĕр амăшĕ, Çĕр ашшĕ», - çырать Е. Рожанский. Çак турăсем пĕр пусăмра, пĕр шайра мар. Аслисем те, кĕçĕннисем те пур. Тĕп турăсем - Мăн турă, Мăн турă амăш тата Турă, Турă амăш. Вĕсем çут çанталăка çуратаканĕсем, этеме тăваканĕсем. Эппин çут тĕнчене вĕсем пултарнă, вĕсемех пăхса тăраççĕ.

Чăвашсем тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕ турра пуç çапаççĕ, тĕрлĕ турăран ырлăх кĕтеççĕ. «Тĕрлĕрен çимĕç турринчен Хĕрлĕ çыртан çĕр çинче ӳсекен тĕрлĕ çимĕçе çил-тăвăлтан тата ытти çĕмĕрекен усал вăйран сыхласа усрама тархаслаççĕ: «Хĕрлĕ çыр, усра пирĕн тырра, пур çĕртен тухнă япаласене: пăрпа, çилпе, пур усаллăхпа ан çĕмĕрсе яр, пире тĕпех ан ту». Чăваш ăс-хакăлĕ пурнăç ыйтăвĕсемпе тачă çыхăнса тăнă, çавăнпа кĕллисене те кулленхи ĕç-хĕлпе, яланхи хуйхă-суйхăпа çыхăнтарнă.

Тăван халăхран тухса çав хушăрах ĕçлекен чăваш унăн пурнăçне, авалтан пыракан йăли-йĕркине лайăх пĕлет, çавăнпа хускатнă ыйтусене тĕрĕс те витĕмлĕ çутатать. Очеркра вăл хăй мĕн курни-илтнине, сăнавĕсене пĕтĕмлетет.

Чăвашсем ку вăхăтра çĕр ĕçĕпе тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе пурăнаççĕ-мĕн. Çакă вĕсен кĕллисенче те уçăмлăн палăрать: «Çĕр ашшĕ, Çĕр амăшĕ! Çирĕплетсемĕр çĕре: халăхпа выльăха мĕн-мĕн кирлĕ, пурне те çитĕнтерме вăй парăр».

Очеркра турăсен ячĕсене вырăсла та, чăвашла та асăннă. Кĕлĕсене те икĕ чĕлхепе илсе кăтартнă:

Небесный боже! и небесного бога матерь! просветите всех людей, очистите воздух, излейте во-время дождь и обогатите нас, наших скотов и прочих животных всяким изобилием.

Пӳлĕхçĕ торă! пӳлĕхçĕ амăшĕ! Çутолтарсамăр пур халăхсама, тасатсамăр çот çанталăка, йохтарсамăр хиселлĕ çомăр, пойтарсамăр перя перĕн выльăх-чĕрлĕсама, пор ырлăхпа.

Чăвашсен кĕллисене халăх диалекчĕпе çырнă, вырăс транскрипцийĕпе пичетленĕ, çапах вĕсем халăх ăнланмалла пулса тухнă.

Мĕнле тĕллевпе çырнă-ха автор ку очерка? Мĕншĕн-ха ăна пилĕк чĕлхепе хатĕрленĕ словаре вырнаçтарнă? Вăл О.Т.Томеев пекех тă-

ван халăхĕ çинчен çутă тĕнчене, пĕтĕм Раççее пĕлтерес тĕллев лартать хăйĕн умне. Унăн пуян чĕлхе пур. Ку чĕлхере сăмах шучĕ вуникĕ пинрен те иртет. Чăваш халăхĕ питĕ ĕçчен, унăн шухăшĕ-ĕмĕчĕ кулленхи ĕç-хĕлпе çыхăннă. Ĕçе тытăнас умĕн вăхăта сая ямаççĕ, кĕлĕ вырăнне «пĕсмелле» тесе çеç калаççĕ. «Кĕлет тулли тырă пар. Карта тулли вырьăх пар. Лашама, ĕнеме, сурăхăма хунаттар», - ыйтаççĕ вĕсем турăран яланхи кĕлĕре.

Ку халăх пултарусăр мар, кĕсле калама та, юрлама та пĕлет, тăван-пĕтене пысăк хисепе хурать. Пĕри-пĕри вилсен, ăна кил-йышĕ, тăванĕ-хурăнташĕ, кӳрши-арши çирĕпе кĕнĕ йĕркепе чыслăн пытараççĕ. Кайран та вĕсенчен пурте хăйсем астунă таран вилнĕ çын мĕнле пурăнса иртернине, унăн кăмăлĕ епле пулнине, хăйне епле тыткаланине тата ыттине те аса илсе калаçаççĕ. Сăпайлă чăваш халăхĕн пурнăçне, унăн йăли-йĕркине автор тиркесе мар, сумлăн çырса кăтартать, ыттисене те ку халăха хисеплеме чĕнет. Çакăнпа ку произведение этнографипе публицистика очеркĕсен шутне кĕртетпĕр

Е. Рожанскин тепĕр хайлавĕ - «I Павăл Чулхулана килнĕ ятпа чăвашла калама çырнă сăмах». Вăл малтанхи хут 1797 çулта Мускавра пичетленнĕ. Хайлава кун çути кăтартнă кĕнеке ячĕ çапла: «Всерадостное торжество, которым благочестившего... императора Павла первого, посвященном миропомазании и короновании на всероссийский престол, совершимся в 5 день апреля 1797 г., всемилостивейше посещающего Нижний Новгород благоговейнейше приветствует Нижегородская семинария мая ... дня 1797 года».

Ку произведение пĕтĕмĕшпех илсе кăтартар.

## I Павăл Чулхулана килнĕ ятпа чăвашла калама çырнă сăмах /Речь для приветствия на чувашском языке Павла I при посещении им Нижнего Новгорода/

Санăн çак Чулхулана савса килни каламалла мар хĕпĕртеттерчĕ пире. Чиперрĕн курăнать хĕвел çути, нумай çумăр çуса чарăнсассăн. Лайăхăн туйăнать пăхма ашшĕне ывăлĕсем çине, хăçан вĕсем уйрăмăн нумай çӳресе каллех таврăнса, пĕр-пĕрне курсан питĕ хĕпĕртеççĕ. Унтан та ытларах эпир халь сана курсан хĕпĕртетпĕр. Эсĕ, пысăк ĕмпӳлĕх, пире хĕвел çут тĕнчене ăшăтнă пек, хăвăн хитре, тӳрĕ чурусене ăшăтатăн, чĕртетĕн, ăслă тăватăн çынсене, пур çынна, пĕрне те хăвармасăр варлă пăхатăн. Эсĕ, хăвăн хитре пурнăçна нимĕн вырăнне картмасăр, сăвап туса çӳретĕн çынсене, самай ашшĕн куçĕпеле пăхатăн хуласене, саласене, ялсене. Мĕскерле пурĕ çакă хĕпĕртеттерет пирĕн варсене - тупаймастăпăр çитес сăмах каласа кăтартмашкăн.

Мĕн парăпăр сана, сăваплă патша, пире ати пек пăхнăшăн? Урăх нимĕн çук, анчах вар патĕнчи ывăлăн пекки кăмăлне сана пирĕн кăтартма кирлĕ.

Илсем, сăваплă ĕмпӳлĕх, çак вар пеккине пиртен, сана каласа кăтартнине. Мул пирĕн сана кирлĕ мар.

**1797.**

Хайлава 205 çул çул каялла çырнă. Ун чухне чăвашсен ятарлă çырулăх пулман, литература чĕлхи йĕркеленмен. Пурпĕрех вăл чăвашăн сĕткенлĕ чĕлхипе çырнă риторика произведенийĕ - çав вăхăталли капăр чĕлхеллĕ панегирик пек вуланать. Текстра вырăс чĕлхин майлашăвĕсене питĕ меллĕн кĕрте-кĕрте лартнă та, çакă автор шухăшне ăнкарма кансĕрлемест.

Автор I Павăл патшана тивĕçне кура мар пысăка хурать. Хăй ăна мĕнлерех курас килнĕ, çапларах кăтартать. Ун умĕнче чуралла йăпăлтатать. Произведенин хăй евĕрлĕхĕ, унăн пуян чĕлхи автор пĕлĕвĕпе те, ăсталăхĕпе те çӳлти шайра тăнине кăтартаççĕ. Хайлавăн уйрăм вырăнĕсене илсе тишкерер.

Чиперрĕн корнать хĕвел çутти, нăмай çомăр çуса чарăнсассăн. Лайăхăн тойнать пăхма ашшĕ [не] ывăлсам çине, хăнча вăлсам ойрăмăн нăмай çӳресе каллех таврăнса пĕр-пĕрне корсан питĕ хĕпĕртеççĕ. Онтан та ытларах эпĕр халь сана корсан хĕпĕртетпĕр.

## Ирĕклĕн вырăсла куçарни:

Красивым кажется солнечный свет после обильного дождя. Приятно смотреть отцу на сыновей, когда после долгой разлуки встречаются вновь и очень радуются. Сильнее этого мы радуемся при встрече с тобой.

Куратпăр, илсе кăтартнă вырăн ăста çырнă анлă танлаштару пулса тăрать. Автор гиперболăпа та усă курать.

Эсĕ, пысăк ĕмпӳлĕх, пире, хĕвел çут тĕнчене [ăшăтнă пек], санăн хитре тӳрĕ чорасене ăштатăн, чĕртетĕн, ăслă тăватăн.

Ты, великий император, нас [согреваешь] как солнце весь мир, своих честных преданных рабов ободряешь, вдохновляешь, учишь быть разумным.

Вăт мĕнле пулмалла иккен патша! Саламлă сăмах мехелĕ, илемлĕх мелĕсемпе усă курни, шухăша ятарласах вăйлатса калани хайлавăн пахалăхне палăртмаллах ӳстерессĕ, унăн вăйĕпе витĕмлĕхне пысăклатаççĕ.

Ку произведенин жанрне литераторсем ода тесе хаклаççĕ. Чăнах та ода – историн пĕр-пĕр пулăмне е чапа тухнă паттăра мухтаса çырнă сăвă. Ку одăна прозăпа публицистсем усă куракан илемлĕх мелĕсем никĕсĕ çинче çырнă. Эппин ку произведени публицистикăна та çывăх Ахальтен мар ĕнтĕ хăш-пĕр тĕпчевçĕсем ăна саламлă уçă çыру тесе хаклаççĕ, публицистика произведенийĕ шутне кĕртеççĕ.

Пĕтĕмлетсе каласан, Е.И.Рожанский çырнă «Урмай ялĕнчи пăтăрмах», «Чăвашсем çинчен» тата «I Павăл Чулхулана килнĕ ятпа чăвашла калама çырнă сăмах» хайлавсем чăваш çутлăх юхăмĕн малашнехи тапхăрĕнчи публицистика чĕкеçĕсем кăна. Нацин чăн-чăн публицистикине малтанхи çыравçăсем никĕслеççĕ. Чăн ĕнтĕ, каярахпа, тепĕр икĕ çултан, тĕрĕсрех 1799 çулта, Е.И.Рожанский Хĕрлĕ Чутай ялĕнчи тĕне кĕнĕ Герасим Иванов ячĕпе I Павăла икĕ хутчен прошенисем çырать, хресченсем хăйсем туса лартнă виçĕ шыв арманĕшĕн хырçăран хăтарма тархаслать. Çак документсем те автор анлă пĕлӳллĕ тата пултаруллă пулнине кăтартаççĕ, анчах вĕсем публицистика шайĕнче мар, эпистоляри литературин палăкĕсем çеç.

Вырăс çутлăхĕн тĕллевĕсем публицист ĕçне-хĕлне пысăк витĕм кӳнĕ. Ун чухнехи çутлăхçăсем тĕттĕм халăха çутта кăларма, обществăри пусмăрпа чухăнлăха пĕтерме ĕмĕтленнĕ, çак ĕçре патша пулăшасса шаннă. Асăннă тĕллевсем тӳре-шарана пачах килĕшмен. Çавна май ун чухнехи çутлăхçăсен шăпи йывăр та тумхахлă пулнă. Мăшăрĕ вăхăтсăр çĕре кĕнĕрен пилĕк ача пăхса çитĕнтересси Ермей Рожанский умне пысăк йывăрлăхсем кăларса тăратнă. Ăна шалу вăхăтра памасăр тарăхтарнă, ытти енĕпе те хĕсĕрленĕ, пурнăç çулĕ хурлăхлăн вĕçленесси патне илсе пынă.

В.Г.Родионов тĕпчевçĕ публицистăн тĕрлĕ енлĕ пархатарлă ĕçнехĕлне çапла хаклать: «Е.И.Рожанский – чăваш публицистикине тата илемлĕ литературине никĕслекенĕ. Вăл –чăваш кĕнекин аслашшĕ, вăл –И.Я.Яковлев вĕçлесе çитернĕ ĕçсене пуçлаканĕ, чи малтанхи çул-йĕре хываканĕ. Е.И.Рожанскин пĕтĕм пурнăçĕ халăхăмăрăн телейĕпе терчĕ хушшинче иртнĕ».[34]

Ермей Иванович Рожанский тăван халăх культурин аталанăвĕнче манăçми тарăн йĕрсем хăварнă, çавăнпа ăна чăвашсем чыслăн асра тытаççĕ.

# СПИРИДОН МИХАЙЛОВ-ЯНТУШ - ЧĂВАШ ПУБЛИЦИСТИКИНЕ ПУÇАРСА ЯРАКАНĔ

Раççейре Пĕрремĕш Николайпа (1825-1855) Иккĕмĕш Александр (1855-1881) патшара ларнă çулсенче пурăннă Спиридон Михайлов. Ку вăхăт çĕр- шыв историйĕнче çав тери тĕттĕм те тискер самана пулнă. Ун чухне крепостла йĕркесем хуçаланнă. Патша правительстви халăх хушшинчи мĕнпур çĕнĕ шухăшсене путарса пынă, революцилле çамрăксен ушкăнĕсене арката-арката тăкнă. Ку тапхăрта çĕр-шывра Аракчеев режимĕ алхаснă, пурнăçра мал ĕмĕтли мĕн пур, çавна хирĕç реакци хаяр кĕрешӳ пуçарнă.

Çав вăхăт пирки В.Д.Димитриев профессор çапла çырать: «Крепостла пусмăр патшалăх хресченĕсем çине вăйлăрах та вăйлăрах пуснă. Ятран пуçтаракан хырçăпа оброка пĕрмаях ӳстернĕ. Хырçă-марçă енĕпе татайман парăм çав тери пысăкланса кайнă. Чиновниксем чăваш тата мари хресченĕсем хушшинче хаяррăн та тискеррĕн киревсĕрлĕхсем тăвассин вĕçĕ-хĕрри те пулман».[36]

Хресченсем патша пусмăрĕпе чиновниксен тискерлĕхне хирĕç хăюллăн тăнă. 1841 çулта Етĕрне, Чикме, Çĕрпӳ тата Шупашкар уесĕсенчи хресченсем хушшинче пăлханусем пуçланнă. Тепĕр çул Шурча вăрçи тапранать. Унта Чикмепе Етĕрне уесĕсенчи чăваш тата мари хресченĕсем 10 пин çын ытла хутшăнаççĕ. Вĕсене пусарма 600 салтак яраççĕ. Хресченсен кĕрешĕвне тискеррĕн путарса лартаççĕ.

Çав саманари тискерлĕхсене Спиридон Михайлов курни-илтни тăрăх çеç мар пĕлнĕ. Службăри ĕçне кура, тепĕр чухне унăн çав тискерлĕхсене тӳреммĕн хутшăнма та тивнĕ. Сăмахран, Шурча вăрçине хутшăннă чăвашсене суд туса айăпланă чухне Михайлов тăлмач пулнă. Суд таврашĕнче 20 çул ĕçлесе, тĕрлĕ йышши чиновниксемпе пуянсем хура халăха мĕн-мĕн тĕрлĕ хĕсĕрленине, улталанине, законсене пăснине публицист чылай курнă.

Патшапа унăн чиновникĕсем вырăс мар халăхсене, çав шутра чăвашсене те, тĕттĕмлĕхпе тĕшмĕшлĕхре тытма тăрăшнă. 1831 çулта пĕр жандарм хăйĕн пуçлăхне çапла пĕлтернĕ: «Пур вăхăтри сăнавсенчен те çакă курăнать: тĕттĕм халăха пăхăнтарса тăрасси мĕн чул та пулин чăн-чăн пĕлӳ илнĕ халăха пăхăнтарассинчен чылай ансатрах... Çакна асра тытса, чăвашсен пуçлăхĕсем тĕттĕмлĕхе малалла сарассишĕн пур майпа та тăрăшаççĕ».[37]

Ахальтен мар ĕнтĕ чăвашсем валли шкулсемпе училищĕсем уçман, пуррисенче те вырăсла вĕрентнĕ.

Спиридон Михайлович Михайлов-Янтуш (1821-1861) Чикме уесĕнчи Юнкăпуçра (халĕ Муркаш районĕ) хресчен çемйинче çуралнă. Ку килйышра тăхăр ача - ултă ывăл, виçĕ хĕр ӳснĕ. Вĕсене тăрантарса усрама, пурнăçа йӳнеçтерсе пыма çăмăл пулман ашшĕне. Спиридон çамрăклах хут вĕренме тăрăшнă. Юнкăпуçĕнче те, таврари ялсенче те шкул çукран ăна ашшĕ пĕлĕшĕ - Чикмери пĕр хуçа патне илсе кайнă. Ун патĕнче пурăнакан тăлăх арăм А.Дворникова чăваш ачине Спиридона чиркӳ кĕнекисем вулама вĕрентнĕ. Тăрăшуллă çамрăка малалла хăй тĕллĕн вĕренме тивнĕ. Вăл кĕнекесем, хаçат-журнал нумай вуланă 1839 çулта Михайлова уесри земски канцелярине писаре пулăшакан пулма илнĕ. Тепĕр çултан ăна земски суд тăлмачне лартнă. Кунта вăл 20 çул ĕçленĕ.

Спиридон Михайлов публицистика, илемлĕ литература произведенийĕсем тата ăслăлăх ĕçĕсем пайтах çырнă. Уйрăм çаптарса кĕнекен унăн «О музыке чуваш» (1852), «Чувашские разговоры и сказки» (1853), «Капустки, простонародные игры в Козьмодемьянском уезде» (1855) тата «О ярмарках в Козьмодемьянском уезде в 1856 году и о ценах на привозные товары в г. Козьмодемьянске» (1857) пичетленсе тухнă.

С.М.Михайловăн службăри, историпе этнографири тата литературăри ĕçне-хĕлне хăй пурăннă вăхăтрах пысăка хурса хакланă. Ăна 1854 çулта Вырăс географи обществин член-сотрудникне, 1856 çулта вара Хусанти статистика комитечĕн член-корреспондентне йышăнаççĕ. Спиридон Михайлович икĕ кĕмĕл медаль илме тивĕçлĕ пулать. Пĕрремĕшне «Чикмери земски судра чăваш чĕлхин тимлĕ тăлмачи пулнăшăн» 1859 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнче панă. Çав çулхи декабрĕн 16-мĕшĕнче Вырăс географи обществи пултаруллă чăваша «Хусан кĕпĕрнинчи чăвашсем тата Чикме уесĕнчи вырăссем çинчен этнографи тата статистика енĕпе нумай çулсем хушши... паха хыпарсем ярса тăнăшăн» тепĕр кĕмĕл медальпе наградăланă[38].

Чăваш халăх культурин историйĕнче Михайлов паллă вырăн йышăнать. Унăн пултарулăхĕ çинчен литература чухăн теме çук. «С.М. Михайлов халăха çутта кăларас енĕпе ĕçлени тата унăн педагогикăлла идейисем» темăпа Д.Е.Егоров тĕпчевçĕ кандидат диссертацине хӳтĕленĕ. «Чăвашсен пирвайхи писателĕ, просветителĕ, историкĕ» тесе шутлать ăна диссертаци авторĕ[39]. М.В.Румянцев та Спиридон Михайлов «чăвашсен малтанхи историкĕ, писателĕ тата этнографĕ» пулнине палăртать[40].

Тĕпчевçĕсем темшĕн Михайлов чăвашсен пĕрремĕш публицисчĕ пулнине манса хăвараççĕ. Чи малтан çакна Н.П. Петров асăрхать: «Литературăпа публицистика ĕçне С. Михайлов 1851 çулта тытăннă. 1852 çулта «Казанские губернские ведомости» ятлă хаçатра пĕрремĕш

очеркĕ, Шалти ĕçсен министерствин журналĕнче «Чăваш эпĕр полтă-мăр» сăвви пичетленсе тухнă», - çырать вăл[41].

Тĕрĕссипе, «Чăваш эпĕр полтăмăр» сăвă авторĕ Максим Федоров шут-ланать. Вăл XX ĕмĕр варринче пурăннă. 1836-1838 çулсенче Чĕмпĕр кĕпĕрнинче Кăрмăш уесĕнчи Штанашра вулăс тиекĕнче ĕçленĕ. 1838 çулта Улатăр вулăсĕн приказне куçнă[42].

Пĕрремĕш публицист тата писатель С.М.Михайлов Юнкă ялĕнче мар, Юнкăпуçĕнче çуралнă, малтанхи произведенийĕ жанрĕпе очерк мар, ста-тья. Çапах Михайлов публицист пулнине палăртни питĕ тĕрĕс. В.Я.Канюков тишкернĕ тăрăх, Спиридон Михайлов «пуçарнисем вунтăххăрмĕш ĕмĕрти литературăра публицистикăн халăх енне туртăнас сулăмне çирĕп-летме пулăшнă»[43]. Уçăмлах мар, анчах апла каланинче тĕрĕслĕх пур.

Михайлов пултарулăхĕ чăваш публицистикин малтанхи утăмĕсемпе тачă çыхăннă. Ăна тăван халăхăн малтанхи публицисчĕ, чăваш публицис-тикине пуçарса яраканĕ тесе шутлаççĕ. А.А.Фукс - «Записки о чувашах и черемисах Казанской губернии» (1840), В.И.Лебедев - «Чувашские преда-ния» (1848), В.А.Сбоев - «Исследования об инородцах Казанской губер-нии, ч. 1. Заметки о чувашах» (1851) произведенисем çырса пичетлеççĕ. Вĕсем пурте чăвашсем çинчен вырăсла çырнă этнографи ĕçĕсем шутла-наççĕ, апла пулсан, ăслăлăх литературине кĕреççĕ. Тĕпчевçĕсем чăваш этнографи науки никĕсне малтанхи кирпĕчсем хунине ырламалла, анчах хăйсен произведенийĕсене пусмăр тӳсекен чăваш халăхне хӳтĕлесе мар, патша тытăмĕн официаллă политики майлă çырнă. Асăннă тĕпчевçĕсем чăвашран тухнă çынсем мар. Çитменнине, ку авторсем чăвашсене мĕскĕн халăх вырăнне хунине, вĕсенчен тăрăхласа çырнине те асăнмасăр иртме çук.

Спиридон Михайлов чăвашран тухнă, тăван халăх хушшинче ӳснĕ, çак халăх пурăнакан кĕпĕрнере ĕçленĕ. Вăл тăван халăха хӳтĕлес, пулăшас, унăн пурнăçне çăмăллатас тĕллевпе çырнă. Чăвашсем çинчен вĕсен ин-ココтересĕсене мала хурса çырни унччен пулманпа пĕрех. Хăйĕн чылай про-изведенийĕсенче автор чăваш халăхĕн пурнăçне çутатать, обществăпа политикăн çивĕч ыйтăвĕсене хускатать. Çак паха енсем Михайлова чă-вашсен пирвайхи публицисчĕ туса хураççĕ.

Патша тарçисем чăваш халăхĕн çырулăхне аталанма чăрмантарнă. Тĕн кĕнекисене сăмахран сăмах куçарса, вырăс алфавичĕн никĕсĕ çинче пи-четлекеленĕ, анчах халăх вĕсене вуламан та, ăнланман та. Çавăнпа ĕнтĕ Михайлов хăйĕн произведенийĕсене вырăсла çырнă.

Спиридон Михайлова çамрăклах публицистикăпа тĕпчев ĕçĕ илĕртнĕ. Çак çул çине вăл истори темипе тухнă. «Пайтах вăхăт материалсем пух-рăм, тинех вара 1851 çул вĕçĕнче «Патшамăр Павел Петрович ĕмпӳ аслă

княҫсемпе Александр Павловичпа тата Константин Павловичпа пĕрл Чикме хулине килсе курни ҫинчен повесть» ҫыртăм, ăна «Казанские гу бернские ведомости» хаҫатра 1852 ҫулта иккĕмĕш номерте пичетлерĕм» - аса илет вăл каярахпа[44]. Автор хаҫатри материал вĕҫне «Чикмери земс ки судри чăваш чĕлхин штатри тăлмачи Спиридон Михайлов» тесе ал пусать.

«Каласа пама пуҫăниччен малтан Чикме хули ҫинчен кĕскен пĕлтерн ытлашши пулмĕ тесе шутлатăп». - ҫапла пуҫланă произведение. Унт ҫырнă тăрăх, хулара тĕрлĕ сий ҫыннисем пурăннă. Вĕсем хушшинче стрелецсем, патша службинче сум илнисем - уйрăм кил хуҫисем (одно дворецсем) тата ытти ҫынсем, гражданисем текеннисем. Уйрăм кил хуҫи сем привилегиллĕ сий тĕшши пулса тăнă, пайтах ҫăмăллăхсемпе усă кур нă. «Ытти ҫынсем» шутне халăх массисем кĕнĕ.

Автор авалхи ҫинчен хăй пурăнакан вăхăтпа ҫыхăнтарса ҫырать: «Урам сем кирлĕ таран анлăланчĕҫ тата ҫип ҫапнă пек тӳрĕленчĕҫ, халĕ вара хула пуҫлăхĕ тăрăшнипе ҫуртсене тĕрĕс лартнăран татах та илемле неҫҫĕ[45].

Статьяран ҫакна пĕлетпĕр: «... ҫармăссем Раҫҫее пăхăнса тăма шут тытнă», урăхла каласан, Вырăс патшалăхĕнче пулма хăйсем кăмăл тунă». Ҫармăссем тесе вара маларахри ҫыравҫăсем марисемпе чăвашсене шут ланă. «...Вĕсемпе пĕрле ку тăрăхра вырăссем те пурăнма пуҫланă: ял сенче пурăнакансен йышĕ ӳссен, пĕрремĕш перепись вăхăтĕнче Чикме уесне туса хураҫҫĕ»[46].

Статьяри ҫӳлерех илсе кăтартнă вырăнсем хăйсен пĕлтерĕшĕпе пуб лицистикăна ҫывăх. Тăван халăх пирки шухăша кайни, социаллă пурнăҫ ыйтăвĕсене ăнкарма тăрăшни, авалхине хăй вăхăчĕпе ҫыхăнтарни публи цистика тĕллевĕсене татах та ҫывăхрах. Унти тапăра[47] «хутран-ситрен чă ваш хĕрĕ ҫармăс маттурĕпе, ҫармăс хĕрĕ чăваш маттурĕпе ĕмĕрхи юман айĕнче ыталанса ларнине курма пулать...»[48]. «...Ку тăрăхра ҫармăс арăмĕ - чăваш, чăваш арăмĕ - ҫармăс, ҫавна май пĕр ялтах икĕ чĕлхепе калаҫни не илтетĕн»[49]. Уяв пасарне вырăссем те пыраҫҫĕ. Автор ҫакăншăн хĕпĕртет, мĕншĕн тесен «вырăссемпе явăҫни питĕ усăллă»: чăвашсемпе ҫармăс сем вырăссен ырă йăли-йĕркине йышăнаҫҫĕ. Уесри пултăран пасарне ҫырса кăтартакан произведени халăхсене туслă пурăнма, малта пыракан вырăс культурине йышăнма чĕнет.

Спиридон Михайлов публицистикин тематики анлă. Ҫутлăхшăн кĕрешнĕ май вăл чи малтанах патша чиновникĕсене ку халăха хут вĕрентме кирли не ĕнентересшĕн. Ҫавăнпа публицист чылай произведенисенче, ҫав шут ра «Хам ҫинчен» очеркра та чăвашсем тĕттĕм те тĕшмĕш пулнине ятарла са палăртать. «Пĕррехинче, хĕлле, - аса илет вăл ача чухнехине, - атте

чикме хулине Михеев купса патне кайма пуҫтаранначчĕ: эпĕ куҫа мăчлаттарса тăмарăм, мана хăйпе пĕрле хулана вĕренме илсе кайтăр тесе, куççульпех йĕрмĕшме пуçларăм. Атте эпĕ ыйтнине пурнăçлама шут тытрĕ, мана хăйпе пĕрле илчĕ, анчах çурма çултан, ĕç ăнас çук тесе, каялла киле таврăнчĕ: ун çулĕ урлă хăлат вĕçсе каçрĕ. Чăвашсен тĕшмĕшĕ тăвăх, ку вĕçен кайăк çула татни пачах ырра мар»[50].

Вырăссен паллă сăвăçи тата этнографĕ А.А.Фукс чăвашсем культура енĕпе юлса пынине вĕсен ăс-тăнĕ аталанайманнипе ăнлантарнă пулсан[51], С.М. Михайлов вара çав сăлтава тĕттĕмлĕхре тата хут пĕлменнинче шырать. Тĕп сăлтавĕ халăх социаллă тата наци пусмăрĕнче пулнине чăваш публицисчĕ ăнланайман.

Михайлов халăх хушшинчи тĕттĕмлĕхпе тĕшмĕшлĕх пăлăрăмĕсене шута илнипе çырлахмасть, тĕшмĕшлĕх тыткăнне лекекенсенчен çивĕччĕн тăрăхласа кулать, киремете пуç çапакансем асамлă вăйсене ĕненни ытла та тăрлавсăр пулнине кăтартать. Çак темăпа çырнă произведенисенчен пĕри - «Шупашкар çыннисем - сыснана явап тыттаракансем». Ячĕ айне «Халăх легенди» тенĕ пулин те, жанрĕпе вăл - сатира заметки. Чăн ĕнтĕ, ăна халăхра çӳрекен халап никĕсĕ çинче çырнă: «Хула тăрăх çакнашкал хавха çӳренĕ: Чебоксарка юхан шыв урлă хывнă кĕпер айĕнчен ылмашмăш сысна сиксе тухать те иртен-çӳрене кашнинех тĕрлĕ пакăçпа тарăхтарма тытăнать[52]. Çак хавхана ĕненни мыскара кăтартать те ĕнтĕ хула çыннисене пĕррехинче. Селиванов çĕр улпучĕн сысни кĕпер айĕнчен тухнине курсан, ку ылмашмăш тесе, полици çуртне хăваласа кĕртеççĕ те ăна çĕр улпучĕн тарçисем шыраса киличченех хĕнеççĕ. «Çав сысна хăйсен господинĕн пулнине ĕнентерме ăна улпут тарçисем хула çыннисемпе пĕрле килне хăваласа каяççĕ, тискеррĕн хĕненине тӳссе ирттернĕ сысна хӳтлĕхе хăйĕн çурисем патне кĕрет, лешсем амăшне нăриклетсе кĕтсе илеççĕ теваскасах сĕт ĕмме пуçĕсене чикеççĕ. Хула çыннисем çакна курсан тин ку ылмашмăш мар, чăннипех сысна пулнине ĕненеççĕ[53]. Акă мĕнешкел кулăшла пăтăрмаха кĕртсе ӳкерме пултарать тĕшмĕшлĕх. Сатира заметкин тĕллевĕ уçăмлă: çынсене айванлăхпа тĕшмĕшлĕхрен хăтăлма кулăш вăйĕпе пулăшмалла.

Малтанхи вăхăтра чăваша çутта кăларас юхăм пуçĕнче С.М.Михайлов тăрать. Çав енĕпе хăйĕн шухăшĕсене вăл «Ялсенчи прихут училищисем тата вырăс мар халăхсен ачисем унта епле вĕренни çинчен» (1857) статьяра уçăмлăн каласа панă. Хăй вăхăтĕнче автор ăна Вырăс географи обществине тăратнă, вăл вара Халăх çут ĕç министерствине ярса панă, алçырăвĕ унта çухалнă.

Публицист-просветитель шутланă тăрăх, чăваш ачисене прихут училищисенче вĕрентнин тĕллевĕ çапла: «Халăх хушшинче хут пĕлекенсен

шутне ӳстермелле, арҫын ачасенчен ҫивӗчреххисене вулӑсри тата ялти тиеке лартмалла»[54]. Автора акӑ мӗн пӑшӑрхантарать: «вулӑсри тиеке тухакансем вырӑс мар ачасем хушшинче питӗ сайра, хӑшпӗр уессенче унашкаллисем пачах та ҫук...»[55]. Михайлов шучӗпе, чӑвашран тухнӑ вырӑнти чиновниксем тӑван халӑх пурнӑҫне хӑш енчен те пулин ҫӑмӑллатма пултарӗччӗҫ.

Унсӑр пуҫне, шкул ачисене «ӑстӑн тата йӑла-йӗрке» енӗпе ырра вӗрентмелле. Ку ӗнтӗ Христос тӗнӗ майлӑ воспитани парассине пӗлтернӗ. «... Вулама тата ҫырма хӑнӑхтарнисӗр пуҫне, - сӗннӗ вӑл, - Христос тӗнне лайӑхрах пӗлччӗр тесе, чиркӳ правилисене ӑнлантармалла»[56]. Ҫапла майпа Михайлов чӑвашсене киремете пуҫ ҫапассин тӗшмӗшлӗхӗнчен хӑтарасшӑн, вӗсем хушшинче православи ӗненӗвӗпе йӑли-йӗркине сарасшӑн. Просветитель тӗнчекурӑмӗн чухӑнлӑхӗ ӑна Христос тӗнӗ те тӗшмӗшлӗх системиех, унӑн ҫӳлерехре тӑракан форми ҫеҫ пулнине, вӑл эксплуататорсем пуҫ пулса тӑрассине хӳтӗленине ӑнланса илме чӑрмантарнӑ.

Михайлов шкул программине наукӑсене вӗрентессине кӗртме ӗмӗтленет. Чиркӳллӗ икӗ ялта тӗп училищӗсем уҫма сӗнсе, вӑл ҫапла ҫырать: «Ҫав тӗп училищӗсенче наукӑсем вӗрентессине ытти прихут училищисенчи пек мар, анлӑрах туса пыма май килӗччӗ»[57]. Чӑн ӗнтӗ, автор алҫырӑвӗнчи ҫак йӗркесене кайран чӗрет, анчах шкулта ӑслӑлӑх никӗсӗсене вӗрентес шухӑшӗ улшӑнмасӑр юлать. Прихут училищинче вӗрентме пур ҫӗрте те тенӗ пекех пупа уйӑраҫҫӗ. Анчах пуп вӗренткеленипе ачасем кирлӗ таран пӗлӳ илеймеҫҫӗ; «прихутра ытти ӗҫ те тупӑнсах пынӑран, унӑн шкулта вӗрентме вӑхӑт та юлмасть»[58]. Шкулсенче пӑхмасӑр калама вӗренесси пуҫ пулса тӑрать, мӗншӗн тесен пупсенчен нумайӑшӗ ачасен тӑван чӗлхине пӗлмеҫҫӗ.

Михайлов шучӗпе, преподаватель пулма класран уйӑлмасӑр ӗҫлеме пултаракансене лартмалла. Вӗсем чиркӳре ӗҫлемен ҫынсем пулмалла, вырӑс мар ачасене тӑван чӗлхепе вӗрентме тытӑнмалла, унтан вырӑс чӗлхи ҫине куҫмалла[59]. Автор вулӑс тата округ управленийӗсенчи киревсӗр йӑла-йӗркене аса илтерет. Пултаруллӑ арҫын ачасене канцеляри ӗҫне вӗренме унта яраҫҫӗ. Вӗсене ҫыруҫӑ пулма хӑнӑхтарас вырӑнне тиексем тата аслӑрах вырӑнтисем ытларах хӑйсен килӗнче ӗҫлеттереҫҫӗ. Кунтах ачасен пуҫлӑхсем хӑйсене ытла та нӗрсӗр тытнине курма тивет, ҫавна пула ачасем те йӑла-йӗрке тӗлӗшӗнчен пӑсӑлаҫҫӗ.

Кам шкулта вӗренме кӑмӑл тӑвать, ҫавна суйласа илме сӗнет Михайлов. Сӑлтавӗ паллӑ: ирӗксӗрлесе вӗрентни кирлӗ пек усӑ памасть.»Чӑвашсен пурнӑҫне епле йӗркелесе пымалла» алҫырӑвӗнче те (1856) Михайлов ҫав шухӑшах калать. Вӗренекенсем суйласа илесси ҫӑмӑл ӗҫ мар: «вӗрентме шутламан ҫемьесенчи ачасене шкула ҫӳретме тӑрӑшаҫҫӗ, хӑй-

çен ирĕкĕпе хутла вĕренме кăмăллакансене усси çук тесе пăрса хăварăççĕ»[60]. Вĕренесшĕн çунакан çамрăк хăй тĕллĕн хатĕрленсе те пысăк ӳсĕмсем тума пултарнин тĕслĕхне автор хăйĕн автобиографийĕнчен илет.

Ку алçырăвĕнче те вĕрентекенсене ӳпкелесе каланă сăмахсем пур. Вĕсенчен чылайăшĕ «ачасене кирлĕ пек вĕрентмеççĕ, теприсем класа йăхра пĕрре те пырса курмаççĕ, училище алăкĕсене çăрапах питĕрсе илеççĕ. Тӳрех калар, унашкаллисем шалу илме çеç вĕрентекенсен шутĕнче тăраççĕ...»[61].

Халăха хутла вĕрентес ĕçре чăрмав кӳрекен чиновниксене Михайлов хăюллăн критиклене. «Çирĕплетсех калама пултаратăп, - çырнă вăл, - тиексемпе старшинасем тата чиркӳре ĕçлекенсенчен хăшĕ-пĕри чăвашсене çутта кăларассишĕн тăрăшас вырăнне авалтан килекен тĕттĕмлĕхрех усрасшăн, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех вĕренсе пĕлӳ илнĕ чăвашсем хăйсене харам пырланса пурăнма тата ытти енĕпе чăрмантарасран шикленеççĕ»[62].

Этнограф пулнă май Михайлов чăваш халăхĕн пурнăç йĕркипе культурине анлăн çутатать, вырăс тата мари халăхĕсен пурнăç йĕркине те манса хăвармасть. Унăн произведенийĕсем тăрăх эпир çав халăхсен хуçалăхри ĕçĕсем, йăли-йĕрки, уявĕсемпе вăййисем, кĕвĕ-çеммипе музыки, фольклорĕ епле пулнине куратпăр. Публицист халăх ĕçĕ-хĕлĕпе йăли-йĕрки, унăн культури пĕрмаях улшăнса пынине, пĕр халăх культури тепĕр халăх культурине мĕнле витĕм кӳнине тĕпчет, вырăс культури чăваш тата мари культурине аталанма пулăшнине çырса кăтартать. Чăвашпа мари тĕнчине вулакансем умне пуринчен малтан тĕрĕс те анлăн кăларса тăратать.

Тăван халăхĕн XIX ĕмĕрти пурнăçне Михайлов «Чăвашсен кĕске этнографийĕ» статьяра тĕплĕн çутатать. Ку произведени 1853 çулта «Казанские губернские ведомости» хаçатра тата çав çулхинех уйрăм кĕнекен пичетленнĕ. Автор унта чăваш мĕн пĕчĕкренех ĕçе хăнăхнине палăртать. «Кĕнчеле арлакан хĕрарăмсем çук кил-йышсенче хĕрачасен ĕçĕсене те арçын ачасемех тăваççĕ. Вĕсем çичĕ çултан пуçласа вунă çула çитиччен амăшне кĕнчеле арлама пулăшаççĕ. Çак алă ĕçĕпе эпĕ хам та атте-анне килĕнчен тухса каяс умĕнхи çул пайтах аппалантăм. Кĕркуннерен пуçласа çăварниччен пĕччен тăхăр хутăр арларăм»[63].

Чăваш ачи-пăчин ĕçĕ-хĕлĕ çинчен статьяра тĕплĕн каласа панă. Хирти ĕç вăхăтĕнче чăвашсем пĕчĕк ачасене, çав шутра кăкăр ĕмекеннисене те, хăйсемпе пĕрле илсе каяççĕ, çичĕ-сакăр çултисем «кил пăхма» юлаççĕ. Çав хушăрах хур-кăвакала çитереççĕ, тĕк пуçтараççĕ, кĕтӳрен килекен выльăх-чĕрлĕхе кĕтсе илсе, килкартине хăваласа кĕртеççĕ. «Вуннă тултарсан, арçын ачасем çăпата тума тата сӳрене çӳреме пуçлаççĕ, вунтăваттăра-вунпиллĕкре, уйрăмах çемьере ĕçлекенни пулмасан, сухана та

каяççĕ. Хĕлле çавнашкал ачасем вăрмантан вутă турттараççĕ, выльăх пăхаççĕ, пĕр сăмахпа каласан, килти пĕтĕм ĕçе тăваççĕ; хăшĕ-пĕри пушă вăхăтра танатапа мулкач тытма çӳрет, сутлăх пĕкĕ авать, çунашка ăсталать, вунсаккăрта вара чăн-чăн ĕç çынни пулса тăрать. Мăн çул тăрăхĕнче пурăнаканнисем ямшăка çӳреççĕ. Атăл хĕрринчисем пулă тытаççĕ; чухăннисем бурлака каяççĕ... Чикме уесĕнчи çул çитнĕ чăвашсем урапа, çуна тата кĕсле тума ăста» [64].

Хĕрачасем те ĕççĕр лармаççĕ. Вуникке çитнĕ хĕрачасем амăшне алĕçĕ тума пулăшаççĕ, кĕпе çухависем тĕрлеççĕ, вунпиллĕк тултарсан вара пир тĕртме те хăнăхаççĕ [65]

Кăнтăрла ĕçлени çитмест, çĕрле те хуçалăхшăн тăрăшмалла чăвашăн. «Çуллахи каçсенче арçын ачасем час-часах ут кĕтеççĕ, вĕсене ура айĕнчи апатпа тăрантараççĕ; камăн ывăл çук, ут кĕтĕвĕ патне ашшĕ хăй тухать е хĕрĕсене кăларать» [66].

Çурт-йĕр лартма, çĕрĕç тума чăвашсем вырăссенчен вĕренеççĕ... Тырра вырăссем пекех акаççĕ... Вырăссем пекех, чăвашсем тырра çурлапа выраççĕ...» [67]. «Утă çавапа çулаççĕ, çависене, вырăссем пекех, хăйăрпа хутăш сăмаланă лапаткасемпе хăйраççĕ» [68].

Ĕç майне ытти халăхсенчен те вĕренеççĕ чăвашсем. Тĕслĕхрен, йĕтем çинче тырра, тутарсем евĕр, авăн юпи тавра сарса хурса типĕтеççĕ. Йăлайĕркере те тутарсен витĕмĕ туйăнать. Ĕлĕкрех чăвашсенчен нумайăшĕ, тутарсем пек, çӳçне хыртарнă е шакла кастарнă. Çавăн пекех автор тури чăвашсем черемисла тумланнине курать. Çапах та чăваш вырăс халăхĕн йăли-йĕркине, унăн тумтирне ытларах килĕштерет. Вырăс тĕнне йышăннă хыççăн çакă уйрăмах вăйлăн палăрма пуçлать: вырăс халăхĕн пурнăç йĕркине чăвашсем хапăл туса йышăнаççĕ.

Чăвашсем ытти халăхсенчен пĕртте катăк маррине кăтартасси публицистăн паха тĕллевĕ пулнă. Ку темăпа çырнисен шутĕнче малтанах «Чăваш музыки çинчен» статьяна (1852) асăнмалла. Унта полемикăллă туйăм палăрать: автор такампа хĕрсех тавлашать тейĕн. Чăнах та, вăл вăхăтра час-часах çапла каланине илтме пулнă: чăвашсем музыкăна юратмаççĕ тата ăнланмаççĕ пулать; вĕсен музыка инструменчĕсем те, ятарлă юрăсем те çук имĕш. Çакнашкал элеке Михайлов хăюллăн тăрă шыв çине кăларать, çĕнĕ шухăшсем калать.

Тăван халăхĕпе мăнаçланса, публицист чăваш музыки, музыка хатĕрĕсем çинчен çĕкленӳллĕ кăмăлпа çырать. «Вĕсен шăпăрĕ (сăрнайĕ) çинчен, - вулатпăр статьяра, - нумай каласа тăма кирлĕ мар пек: ăна кирек кам та пĕлет, анчах çакна палăртса хăварам: ку чи авалхи инструмент. Шăпăрçă хурлăхлă кĕвĕ калама тытăнсан, хĕрсем хăйсен тунсăхлакан савнийĕсене аса илеççĕ те чĕрисем ыратма пуçлаççĕ...» [69].

Чăвашсем хушшинче шăпăрпа пĕрлех кĕсле пысăк хисепре. Кĕслепе «шăппăнрах янăракан кĕвĕ» калама лайăх. Пачах хут пĕлмен чăвашсем те кĕсле калама пултараççĕ. Чикме уесĕнчи чăвашсем питĕ чаплă кĕслесем тума пĕлеççĕ, «вĕсене ялта туса хатĕрленĕ япаласен выставкине тăратма та намăс мар». Унсăр пуçне, чăвашсен сĕрме купăс та, балалайка та пур. Вĕсем вырăс кĕввине те часах ăса хывса калама вĕренеççĕ. Чăвашсем вырăс культурине йышăнни автора чунтан хĕпĕртеттерет. Çавăнпа пĕрлех вăл чăваш музыки вырăссене килĕшнине курать. «Кунта, Чикмере, - палăртса хăварать Михайлов, - халĕ ĕнтĕ хĕрсен улахĕсенче балалайка каланине е çавăн евĕр урăх музыкăна илтме çук, кĕсле хитре кĕвĕсем шăрантарать. Кĕсле кам калать тесе шутлатăр эсир? Нивушлĕ вырăс? Çук, кĕсле каласа, сар хĕр чунне чăваш каччи хĕпĕртеттерет» [70]. Автор çапла каласшăн: чăвашсен музыка та, музыка инструменчĕсем те пур. Ку халăх музыкине ытти халăхсем те кăмăлласçĕ пулсан, вĕсене тиркени пачах вырăнсăр.

Чăвашсем музыкăна юратнине Михайлов витĕмлĕ кăтартать. Ялти шăпăрçă ăçта та пулин каймалла пулсан, шăпăрне те хăйпе пĕрле илсе каять. Бурлака кайма тӳр килсен, баржа çинче ĕçрен пушаннă вăхăтра вара юлташĕсене тĕрлĕрен кĕвĕ итлеттерет. Баржа е карап Атăл тăрăх тăван ялсен тĕлĕнчен иртсе пырать пулсан, шăпăрçă чи çӳллĕ мачта тăррине улăхса ларать те чĕринчен тухакан кĕвве шăрантарма тытăнать. «Хăй вара шутлать: вăл шăпăр каланине Атăлăн чăнкă çыранĕсем хĕрринче хĕрсем кăмăлласа итлеççĕ; тепĕр тесен, унашкалли чăнахах пулать: хĕрсем хăйсен Орфейне тăранайми пăхса. хурлăхлăн ăсатаççĕ; каччă хăйсем патне таврăнмасран, ăна аслă Атăл хумĕсем çăтса ярасран шикленеççĕ; вăл чухăннишĕн, бурлака кайса çавнашкал йывăр ĕçе кӳлĕнмелле пулса тухнăшăн кулянаççĕ...» [71].

Чăваш кĕввин хӳхĕмлĕхне, шăпăрçă пултарулăхне кăтартма автор статьяна лирикăлла пăрăну (лирическое отступление) кĕртет. Тĕпчевçĕ тăван халăхне юратни ку произведенире яр-уççăн курăнса тăрать. Çакна «Чăвашсен кĕске этнографийĕ» статьяра та куратпăр. Унта Михайлов çакăн пек пĕтĕмлетӳ патне пырса тухать: «Паллă, чăвашсем тутарсенчен япăхрах пурăнаççĕ, тутарсен хăйсен çырулăхĕ пур; анчах эпĕ вĕсем маларах епле пурăннине пĕлместĕп: çырулăхне, хăйсем калашле, ĕне çисе янă, хальхи чăвашсенчен лайăхрах-и е япăхрах-и? Тепĕр тесен, тĕрĕссине калам: Хусана парăнтаричченех хăйсен арăмĕсене тутарсем чăвашран илнĕ, урăхла каласан, чăваш хĕрĕсемпе мăшăрланнă, вĕсем патне пурăнма куçни те пулнă...» [72].

«Кĕпĕрнери урăх халăх çыннисем Хусанта Державин палăкĕ умĕнче» очеркăн тупсăмĕ - тăван халăх çинчен ырă сăмах каланинче. «...Вĕренес

енĕпе халичченех чи кая тăрса юлнисен шутĕнчи чăвашсем те пĕлесшĕн çунаççĕ, ырă кăмăла вĕреннĕ çынсенчен кая мар хаклаççĕ, хăпартлануллă шухăшсене те чиперех ăнланаççĕ; çакна ĕнентерме акă мĕн каласа парам», - çырать публицист» [73]. Вăл виçĕ чăваша - пĕр старике тата икĕ çамрăка - Хусан хулине кăтартса çӳрет. Халиччен унта пулманскерсем, виççĕшĕ те хулапа кăсăклансах паллашаççĕ. Вырăс поэчĕ Г.Р. Державин (1743-1816) çинчен каласа панине вĕсем уйрăмах тимлĕн итлеççĕ. Поэт ячĕпе лартнă палăкран уйрăлса кайнă чухне чи кĕçĕнни чăтаймасть, макăрса ярать. «Сыва бол пирень Хозанды асла син! Аб сана инде корымыб» («Прости, наш казанский великий человек! Я тебя уже не увижу!») - тет вăл [74]. Автор очеркри эпизодсене пурне те хăй маларах каланă шухăша çирĕплетес тĕллевпе йĕркеленĕ.

Тăван халăхĕ пирки элеклени Михайлова уйрăмах тарăхтарать, элекçĕ кам пулнине пăхмасăрах, вăл ăна хирĕç хăюллăн тăрать. «Ку халăх çинчен, - çырать вăл «Чăвашсен пурнăçне епле йĕркелесе пымалла» статьяра, - тахçанах пĕр япăх хыпар сарăлнă: тăшманне типшар кăтартас тесе, чăваш ун картишĕнче çакăнса вилет имĕш. Çакăн пирки каламалли çук мар. Эпĕ чăвашсем хушшинче вăтăр çула яхăн ĕçлетĕп, пурнăçне çын хăй татнине те куркалама тӳр килет. Çавăн сăлтавне чăвашсен йăли-йĕрки çинчен çыракан авторсенчен пĕри те тĕрĕс кăтартман; те вулакансене култарма, те чăваш улпучĕсене хӳтĕлеме вĕсем ку халăх çинчен суйса çырнă...» [75].

Малалла Михайлов Хусан кĕпĕрнинче 1843-1850 çулсенче миçе чăваш тата мĕнле сăлтавсемпе хăй çине алă хунине кăтартать. Сакăр çул хушшинче 42 çын хăй пурнăçне хăй татнă, çав шутран 39-шĕ çакăнса вилнĕ. Сăлтавĕсем паллă: пурнăç хĕсĕкки, пуçлăхсем хĕсĕрлени е хăратни, хуйхă-суйхă, чир-чĕр асаплантарни т. ыт.те

Анчах буржуаллă социологсемпе этнографсем те, писательсем те çын хăй алă хунин сăлтавĕсене шыраса чăрманман, хăйсене майлă сăлтавсемпе ăнлантарнă. Хусан поэтесси А. Фукс тата В. Сбоев этнограф та çак çул çине тăнă [76].

Михайлов çак элеке тăрă шыв çине кăларать, шухăшне тĕслĕхсемпе çирĕплетет. Акă пĕррехинче вулăс пуçлăхĕ пĕр чăвашăнне 18 тенкĕлĕх тумтир туртса илнĕ. Кӳреннĕ чăваш ун пирки хулана кайса каласа панă. Çакна пĕлсен, вулăс пуçлăхĕ «пархатарсăр» чăваш çинчен çăхав çырать. Хайхи чăваша суда чĕннĕ те хытă хĕненĕ. Çак мăшкăла чăтаймасăр, чăваш килне таврăнсанах çакăнса вилнĕ. Паллах, кунта нимĕнле «типшар» та çук.

Чăваш хресченĕн йывăр пурнăçне, унăн тертне-нушине çутатма Ми-

кайлов «Чикме уесĕнчи Ишек ялĕнче» статьяра (1857) тивĕçлĕ сăрă-сем тупнă. «Вырăнĕ ту-сăртлăран, сывлăшĕ япăхран, кивелсе çитнĕ тăпрана удобренисемпе тĕплĕн çемçетменнине пула кунта тырă, уй-рăмах çуртри час-часах япăх пулать. Кĕтÿ çÿретмелли пусăсем хĕсĕккипе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси те аялти пусăмра» [77]. Патшалăха хырçă-марçă тÿлеме укçа-тенкĕ ниçтан тупăнмасть, çавăнпа пурте, «стариксемпе кĕçĕн çулхи ачасемсĕр пуçне», бурлака каяççĕ. «Ĕçе кĕрĕшнисем, хуçаран сататкă илсен, патшалăха пĕрремĕш çурçул-шăн тÿлеççĕ; промышленноçпа кĕрмешекенсем валли Атăл леш енчи вăрманта вутă хатĕрлесен, иккĕмĕш çурçулшăн парса татаççĕ» [78]. Лаша çук çынсене пушшех кансĕр: вĕсем е арман хуçисем патĕнче тарçăра çÿреççĕ, е Шупашкар хулинче ĕçлеççĕ. «Ватăлса çитнисемпе уксах-чăлах, сĕм-тăлăх ачасем хăйсен чапа тухнă чиркĕвĕ патĕнче çĕтĕк-çатăк тумпа кунĕ-кунĕпех кĕшĕлтетеççĕ, турра кĕлтăвакансем хуш-шинче ыйткаласа çÿреççĕ. Вырсарни кун тата ытти уявсенче чиркÿ умĕнче çăкăр татăкĕ ыйтса тăракан тĕрлĕ çулхи арçынсемпе хĕра-рămсен шучĕ 25-рен те иртет...» [79]. Выçă тертленсе пурăнма тивнĕрен Ишек чăвашĕсенчен нумайăшĕ Оренбург кĕпĕрнине яланлăха куçа-куçа кайнă.

Чăваш халăхне тÿре-шара пусмăрланине публицист «Хваттер ху-çипе калаçни» (1859) çулçÿрев очеркĕнче витĕмлĕ сăнлать. Вулăс пуçĕпе тиексем чăвашсене епле хĕсĕрлени, улталанине карчăк ка-ласа пани урлă кăтартать вăл. «Клавапа тиексем кунта хресченсене акăш-макăш хăратса пĕтерчĕç. Мĕн чухлĕ укçа пуçтармарĕç пулĕ вĕсем кунти халăхран, темиçе пин те пулĕ», - пĕлтерет публициста карчăк» [80]. Лешсем чăнах та пуçтахлансах кайнă. Яшсене салтака илесрен хăва-ранçи пулса, хăшĕнчен 10 тенкĕ, хăшĕнчен 20, хăшĕнчен 30, хăшĕн-чен 50, теприсенчен 100 тенке çитиех улталаса илнĕ. «Клава ломбар-да (банка) темиçе пин тенкĕ укçа кайса хывнă».

Çитменнине, çавнашкал ултавçă пуçлăх пĕрре кăна мар иккен. Кар-чăк чунтан тарăхса çапла калать: «Ку чух чăвашсем хушшинче пур çĕрте те çавăн йышши, чĕрĕ çынтан тирне сĕвме пултаракан клавасе-не лартса пĕтерне. Мĕскĕн чăвашсене вĕсенчен кун çук» [81].

Тÿре-шарасăр пуçне, вăрман улпучĕ те чухăнсене çын вырăнне ху-масть. Вăл темĕн чухлĕ вĕшле йытă усрать, вĕсемпе сурăхсене ту-латтарать. Чухăна вутăлăх пĕр турат та памасть. Пуянраххисем ăна укçа та, сĕлĕ те леçе-леçе параççĕ. Взятка паракансене чармасть вăл. Хысна вăрманĕсене купсасем пĕтерни карчăк кăмăлне хуçать, анчах «вăрман улпучĕсем вĕсене пĕртте чармаççĕ».

Пуçлăхсем халăха улталаса пуяççĕ - çакăн пек «Хваттер хуçипе

калаçни» очеркăн тĕп шухăшĕ. Унта тӳре-шара ĕç çыннисене хăратса пурăннине, вĕсенчен юлашки укçи-тенкине сăптăрса илнине кăтартса панă, ултавçăсемпе взяточниксене ватă çын сăмахĕсемпе питленĕ.

Михайлов хăйĕн произведенийĕсенче чăваш хресченĕсем пуп таврашĕсемпе кĕрешнине çырса кăтартать. «...Çĕнĕ тĕне кĕртсен, - çырать вăл «Чикме уесĕнчи Ишек ялĕ» статьяра, - чăвашсем тек-текех калла-малла шухăшланă, пупсем енне вĕсен чунĕ туртман: çапла 1774 çулта, Пугачев пăтравĕ вăхăтĕнче, Ишек чăвашĕсем Иоанн Филиппов пупа вĕлерме шут тытаççĕ, анчах лешĕ усал шухăш тытнисен аллинчен вĕçерĕнет: вилес умĕн, кĕпе-йĕм улăштарса тăхăнма тесе, хăйне темиçе минутлăха килне яма ирĕк ыйтса илет те Чамăш çумĕнчи ун чухне самаях чăтлăх пулнă ката вăрмана тарса пытанать»[82].

«Пăкачав çинчен аса илни» статьяра та (1860) чăвашсем пупсене хăйсен тăшманĕ вырăнне хунине яр-уççăн куратпăр. «Пугачев вăр-хурахĕсен ушкăнĕн вырăс мар улуссенчи» [83] тĕп усал ĕçĕ православи пупĕсене пĕтернинче. Нумаях пулмасть туса лартнă пысăк мар йывăç чиркӳсене çаратнă, хăшĕ-пĕрисене çунтарса янă, пупсене хăйсене çака-çака вĕлернĕ, çурчĕсенче мĕн пуррине вăрласа тухнă», - палăртать публицист çав статьяра [84]. Чăвашсем православи пупĕсене курайманнин сăлтавĕ паллă: вĕсем халăха нимĕнле усă та кӳмен, çав вăхăтрах хресченрен турă ячĕпе темĕн те пĕр сăптăра-сăптăра илнĕ.

Чăваш хресченĕсене тӳре-шара, улпутсем, пуп таврашĕсем пусмăрланипе пĕрлех, хулари сутăçсемпе усламçăсем пĕр вăтанмасăр улталаççĕ. «Чăвашсем хулана, калăпăр– Шупашкара, тырă сутма пыраççĕ» - илсе кăтартать тĕслĕх публицист. - Хулана кĕнĕ çĕрте ялтан килекен чăвашсене хуçасемпе купсасен ятарласа янă приказчикĕсем кĕтсе илеççĕ. Вĕсем йăпăлтатса калаççĕ: «Пирĕн хуçа сире тырăшăн кашни пăт пуçне пилĕкшер пус хаклăрах тӳлет, апат çитерсе чей ĕçтерет», - теççĕ. Чăвашсем ĕненеççĕ, приказчикпа пĕрле хуçа ампарĕсем патне каяççĕ. Çитсенех тырра турттарма тытăнаççĕ... Кунта вара инкек сиксе тухать: пĕрин пĕр пăт, теприн вăтăр кĕренке, виççĕмĕшĕн икĕ пăт катăкрах тухать [85]. Тырă виçине чакарни çитмест-ха, хуçа хресченсене пасар хакĕнчен вунă пус катăкрах тӳлет. Вĕсене апат та çитермеççĕ, чей те ĕçтермеççĕ. Усламçă çуркунне, тырра хакла сутса, килте ларнă çĕртех укça çапать. Статьяра автор усламçăсен çăткăнлăхне питлени те пур: «Пирĕн шухăшпа, - çырать вăл, - капла хăтланни питĕ лайăх мар. Ку вăл пăтранчăк кӳлĕре пулă тытнă пек пулса тухать. Тĕпленрех шутласа пăхсан, çакă вăл тӳрĕ кăмăллă кашни çынна тарăхтармалла» [86].

Публицистикăри ĕçĕ-хĕлĕн юлашки тапхăрĕнче Михайлов мул хуçисем ĕç халăхне ним хĕрхенмесĕр пусмăрланине, ун шучĕпе пуйнăçемĕн

пуйса пынине кĕретĕнех питлет. «Кашни класăн мĕнпе те пулин мăнаçланмалли пур, - çырать публицист «Чикме хыпарĕсем» корреспонденцире, - бурлак вара, юнлă тар юхтарса, миçе пус та пулин тупма аякри çула тухнипе мухтаннă. Ун чухне хакла кĕрĕшнĕ. Сăмахран, Самартан Рыбинска çити лайăх бурлаксем 43 тенкĕ таран кĕмĕл укçа илнĕ, халĕ вара хăйсен апачĕпе те 15 тенкĕрен ытла илеймеççĕ, эппин, хырçă-марçă тӳлеме сататка çеç 5 тенкĕ таран кĕмĕл укçа каять, ытти укçи çинипех пĕтет»[87]. Кимĕ-баржа хуçисем вара енчĕк тулли укçапа таврăнаççĕ, хĕл каçа ĕçсе-çисе савăнаççĕ.

Чее те çăткăн хуçасем укçана çав тери хапсăнаççĕ, хăйсен тупăшне ӳстерессишĕн тем тума та хатĕр. Çакна публицист «Чикмерен пĕлтереççĕ» корреспонденцире уçăмлăн кăтартнă. «Юханшывсем ăшăхланнăран иртнĕ навигацире хатĕрленĕ чылай йывăç антараймасăр юлчĕ... Çав йывăç пĕтĕмпех харама каять, мĕншĕн тесен вăл хăйăрпа е юшкăнпа хупланнă. Çакă самаях пысăк тăкак кӳнĕрен, хăш-пĕр купсасем рабочисемпе сутлашма хăтланаççĕ, вĕсене йывăçа вăхăтра юхтарман тесе айăплаççĕ, тăкака рабочисене саплаштарма вĕсен килĕнче мĕн пур пеккине шута илеççĕ. Шыв ăшăхланнăшăн рабочисем айăплă-ши вара..[88]. Куратпăр, автор пусмăр тӳсекен рабочисене хӳтĕлет, сăхă мул хуçисене питлет.

Халăх пусмăра хирĕç, ирĕклĕхшĕн кĕрешнине пичетре ырласа çырса кăтартма Спиридон Михайлов вăхăтĕнче май пулман, çапах та вăл çак тĕллеве ăнăçлăн пурнăçлама пултарнă. Е.И.Пугачев ертсе пынипе 1773-1775 çулсенче пулса иртнĕ хресчен вăрçи çинчен публицист никама та сиен кӳми шанчăклă аса илӳ евĕр çырнă. Çак произведени çиелтен пăхма çеç кĕрешĕве тухнă халăх майлă мар пек.

«Пăкачав çинчен аса илни» статьяна çырас шухăш автор пуçĕнче А.С. Пушкинăн «История Пугачевского бунта» произведенине вуланă хыççăн çуралнă. Михайлов кунта Пушкинăн шухăшĕсемпе усă курнă, унăн произведенийĕнчен цитата та илнĕ: «Бибиков Хусана (1773 çулта) декабрĕн 25-мĕшĕнче пырса çитет. Хулара вăл губернатора та, аслă чиновниксене те тупаймасть. Дворянсемпе купсасенчен нумайăшĕ хăрушă мар кĕпĕрнесене тухса тарнă. Брант Чикмере пулнă...» [89].

Фон-Брант генерал-аншеф, ун чухне Хусан губернаторĕ, Е.И.Пугачев çарĕсем çывхарнине сиссе, Чикмене тухса каять. Ытти аслă чиновниксем те, дворянсемпе купсасем те таркăнсем пулса тăнă. Çакă, пĕр енчен, патша тарçисен шиклĕ кунсем пулнине кăтартать; тепĕр енчен патшан кĕпĕрнери тарçисем пурте тарса саланни кĕрешĕве çĕкленнĕ халăх вăйĕ пысăкки çинчен калать.

Пушкин çырни çумне Михайлов çапла хушса хурать: «Мĕн тунă вăл [Брант] Чикмере - паллă мар. Чикмери ватă çынсем каланă тăрăх, Пуга-

чев хăйĕн вăрă-хурах ушкăнĕпе Царевококшайскран тапранса тухса Чикменелле çул тытсан, унти вайпут [90] Чулхула кĕпĕрнинчи Васильсурск хулинче хӳтлĕх тупма хăтланать, анчах Чикмере пурăнакансем ăна çула тухсанах каялла тавăраççĕ [91].

Хресчен вăрçине халăх йышлă хутшăннă. «Ту çи çармăссемпе чăвашсен пĕр пайне Пугачевчен 25 çул маларах кăна Христос тĕнне йышăнтарнă, теприсем çаплах киремете пуç çапнă, вĕсем пурте суя патша çумне хапăл туса йышлăн çыпăçнă...» [92]. Хресчен вăрçине хутшăннисем Кашмашра пуçтарăннă, унтан Чикме, Шупашкар, Çĕрпӳ тата Етĕрне хулисем çине тапăнма шутланă.

Çавăн пекех автор чăвашсемпе çармăссем Пугачева тата унăн çарне ăшшăн кĕтсе илни çинчен калать. Вĕсен ялĕсенче пăлхава хутшăннисен пурнăçĕ «пыл та çу пулнă», вĕсене мĕн кирлине пĕтĕмпех тупса панă. Пуянрах чăвашсем вĕсене, çăкăр-тăварпа кĕтсе илнисĕр пуçне, укçа парса та пулăшнă. «Пĕр чăваш 1838 çулта мана пысăк çăка чашăк кăтартрĕ,- аса илет автор, - аслашшĕ çав чашăкпа туллиех Пугачева кĕмĕл укçа панă. Унпа-кунпа кăсăкланакан чиновник ку чашăка ман умрах туянасшăн пулчĕ, анчах лешĕ сутма килĕшмерĕ, мĕншĕн тесен, чăвашсен шучĕпе, авалхи япаласем асамлă, çавăнпа вĕсене упраса усраççĕ» [93]. Унсăр пуçне, чăваш çăка чашăка упрани Пугачева сума суса асрах тытнине те пĕлтерет. Чăвашсемпе çармăссем çул хисепне «Пугачев пăлхавĕнчен» шутласа пыраççĕ. Стариксем хăйсем миçерине, пĕр-пĕр япала хăçан пулнине хресчен вăрçипе çыхăнтарса палăртаççĕ.

Патша самодержавийĕ хресчен вăрçине хаяррăн путарнă. Çав вăрçа хутшăннисене тыта-тыта хупнă, асаплантарса вĕлернĕ. Пĕрисене чăпăрккапа е саламатпа чунĕ тухса кайиччен çаптарнă, теприсене каштаран çакнă. Пăлхавçăсене Етĕрнере епле асаплантарнине автор пĕр старик каласа пани тăрăх çырса кăтартать. Унта вĕсене «тĕтĕмлĕ пӳртсене хупа-хупа лартнă, выçă тăратнă, пуç хĕрлĕ çакнă, аллисене тата пуçĕсене пăрнă, çурăм çине тăвар сапса тата сурансем çине эрех тăкса, пĕр хĕрхенмесĕр саламатпа хĕненĕ» [94].

Автор кăмăлĕ пусмăра хирĕç кĕрешекен халăх енче. Статьяна вăл истори тĕрĕслĕхĕн никĕсĕ çинче çырнă. Е.И.Пугачев отрячĕ Атăл урлă ăçта каçнине çеç тĕрĕсех кăтартайман. Унăн отрячĕ юханшыв урлă Сĕнтĕрвăрринчен анатарах, Нерядово ялĕ тĕлĕнче, каçать» [95].

Чăваш хресченĕсене патша чиновникĕсен тата пуп таврашĕсен пусмăрĕнчен хăтарас ыйту та шухăшлаттарнă публициста. «Чăвашсен пурнăçне епле йĕркелесе пымалла» статьяра палăртнă тăрăх, патшан вырăнти чиновникĕсем, тиексемпе старшинасем пĕрремĕш пусмăрçăсем пулса тăраççĕ, аскăнланса иртĕхеççĕ», çакна пула çынсем умĕнче «шан-

чăкран пачах тухаççĕ». Халăх вĕсене хăйĕн тăшманĕсем тесе шутлать. Çавăн пекех чăвашсем хăйсен пупĕсене çичĕ ют вырăнне хураççĕ, «калаçма пĕлекен сурăхсемпе ăс-хакăл тĕлĕшĕнчи кĕтӳçсем хушшинче нимĕнле ырă туртăм та çук». Чăвашсен шучĕпе, «чиркӳсемпе пупсем халăха хĕсĕрлеме кăна кирлĕ» [96].

Анчах публицист халăх инкекĕн тĕп сăлтавĕ пусмăрла патша тытăмĕнче пулнине курмасть. Вăл патша правительстви вырăс мар халăхсене хӳтĕлессе, хресченсене усăллă хушăсем кăларасса шанса тăрать. Автор шухăшĕпе, чăвашсене тӳре-шара ним йĕркесĕр тытса тăрать, правительствăн ырă тĕллевлĕ хушăвĕсемпе халăха сиен кӳмелле усă курать [97].

Михайлов политикăпа социаллă пурнăç ыйтăвĕсем çине епле пăхнин тупсăмĕ çавăн пек. Чăваш хресченĕсене пусмăртан тата тĕрлĕ хĕсĕрлӳрен хăтармалли программăна та вăл çав шухăшсене никĕсе хурса тунă. Программăра малти вырăнта акă мĕн тăрать: «пуçлăхсемпе тиексем пулма лайăх çынсене суйламалла, вĕсем йĕрке-тирпей енĕпе хальхи вăхăтра çав ĕçре ларакансенчен ытларахăшĕ пек пăсăк пулмалла мар» [98]. Вырăнти пуçлăхсем хресченсене хĕсни, кашни утăмрах улталани пулмалла мар; халăх хушшинче хăйсене ăслă-тăнлă тытмалла, «ырă тĕслĕх кăтартмалла».

Михайлов пусмăрçăсемпе пусмăр тӳсекенсене пăрмаях курса тăрать. Пĕрремĕшĕсене вăл «çывăх çынсен шучĕпе пурăнакан тата вĕсене улталакан куштансемпе элекçĕсем», теприсене вара чухăн çынсем шутне кĕртет. Публицист чухăннисене пулăшас тĕллевпе «магазинсенчен кивçен тырă тата çирĕплетнĕ йĕрке тăрăх укçа пама» сĕнет, «куштансемпе элекçĕсенчен... общество майĕпен-майĕпенех тасалса пымалла», анчах мĕнле майпа - ун çинчен публицист нимех те каламасть. Ку унăн тĕнче курăмĕ хĕсĕкрен, вăл класс кĕрешĕвĕн задачисене ăнланайманнинчен килет.

Вырăс мар халăхсемпе аслă вырăс халăхĕ хушшинчи туслăха çирĕплетессине С.М.Михайлов пысăка хунă. Ку темăпа çырнă произведенисенчен паллăраххи - «Чикме уесĕнче купăста тӳни» очерк (1854). Унта вырăс çамрăкĕсен кĕрхи уявне кăтартнă. Уй-хир ĕçĕсене тирпейленĕ хыççăн вырăс хĕрĕсем пĕр-пĕр киле купăста тӳме пухăнаççĕ, яра куна юрла-юрла ĕçлеççĕ. Каçпа хĕрсем патне пĕрин хыççăн тепри каччăсем пухăнаççĕ. Кĕрекери сĕтел çине апат-çимĕç тухса ларать. Хĕрсемпе каччăсем пĕр-пĕринпе шăкăлтатса калаçса, хăналанса савăнаççĕ. Вĕсем хушшинче чăваш йĕкĕчĕсем те пур. Çав йĕкĕтсене ятарласа хăнана чĕннĕ, мĕншĕн тесен вĕсем кĕсле е тăмра калама ăста. Чăваш йĕкĕчĕсене вырăс пикисем çавăнпа кăмăлласçĕ.

Икĕ халăх - вырăспа чăваш - çамрăкĕсем ваййа-уява пĕрле ирттерни, чăваш йĕкĕчĕсем вырăс хĕрĕсене качча илни автор кăмăлне килнĕ. Икĕ халăх пĕр-пĕрне хисеплени ăна чăннипех савăнтарнă. Очерк вулакана акă мĕнле шухăш патне илсе пырать: «Вырăс пикисем чăваш йĕкĕчĕсем çине çавăн пек ăшă кăмăлпа пăхнине курсан, ирĕксĕрех шухăша каятăн: вăхăт иртнĕçемĕн чăвашсем Руçпе тачăрах та тачăрах пĕрлешĕç» [99]. Куратпăр ĕнтĕ, публицист шухăшĕсем патша правительствин ирĕксĕрлесе вырăслатас политикипе пачах çыхăнман. Вăл икĕ халăха пурнăç малалла пынă çемĕн ирĕклĕ майпа çывăхлатасшăн. Çакă пĕр-пĕрин культура элеменчĕсене йышăнни, уявсене пĕрле ирттерни, икĕ халăх ывăлхĕрĕ мăшăрланни урлă пулса пырать.

Пĕтĕмĕшле илсен, асăннă произведенисем чăвашсем ăслă, йĕркеллĕ çынсем пулни çинчен калаççĕ. С.М. Михайловăн тĕрлĕ енлĕ пултарулăхĕ те тăван халăха лайăх енчен кăтартать. «Чăвашран тухнă çын, аслă вĕренӳ заведенийĕсенче вĕренменскер, мĕн те пулин усăлли çырма пултарать-ши вара?» - иккĕленнĕ Чикме куштанĕсем. Вĕсене публицист çапла хуравлать: «Вырăс сăмахлăхĕн патриархĕ Михайло Васильевич Ломоносов та пулăç ывăлĕ кăна пулнă... Çакна асра тытса, эпĕ Ломоносов ури айĕнчи тăпра кăна пулам - пуçланă ĕçе пăрахмастăпах...»[100] Чăнах та, Михайлов хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕпе, пултарулăхĕпе тăван халăх культурин аталанăвĕнче тарăн йĕр хăварнă, хресчен çемйинчен тухса хăй тĕллĕн хут вĕреннĕ чăваш çав вăхăтри çынсене ăслăлăх енĕпе те, литературăра та ăнăçлă ĕçлеме пултарнипе тĕлĕнтернĕ.

Чăваш публицистикипе наукин пионерĕ С.М.Михайлов чăваш халапĕсене тишкерсе пĕтĕмлетнин паха опытне паллă тĕпчевçĕ В.Д.Димитриев пысăка хурса хаклать. «Çакна палăртни вырăнлă: чăваш халăхĕ монголсемпе тутарсен феодалĕсен пусмăрне хирĕç кĕрешни, чăвашсем Раççей йышне хăйсен ирĕкĕпе кĕни, С.Т.Разин тата Е.И.Пугачев ертсе пынипе халăх юхăмĕсене активлă хутшăнни çинчен С.М.Михайловпа Н.В.Никольский халăх халапĕсен никĕсĕ çинче çирĕплетсе каланисем революцичченхи аслă держава майлă официаллă дворянла-буржуалла историографи сассипе пачах ĕнерĕнмеççĕ, мĕншĕн тесен çав историографи пусмăр тӳсекен национальноçсене историе кĕми категори, тесе шутланă, халăх массисен историри пĕлтерĕшне йышăнман» [101].

Чăвашсен ятарласа хатĕрленĕ çырулăх пулман пирки С.М.Михайлова хăйĕн произведенийĕсене вырăсла çырма тивнĕ. «Диалогĕсем çеç унăн чăвашла... Вĕсене чăваш литературинче драмăллă произведенисен малтанхи опычĕсем темелле»[102]. Автор шухăшне персонажсен калаçăвĕ урлă кăтартасси Михайлов публицистикин курăмлă уйрăмлăхĕ пулса тăрать. Акă, «Хваттер хуçипе калаçни» çулçӳрев очеркне те вăл диалог

калăпĕпе çырнă. Кунта авторпа пĕр карчăк хушшинчи калаçăва илсе кăтартнă.

Персонаж сăмахĕсене автор час-часах чăвашла çырать, юнашар вырăсла куçарса парать. Тепĕр майлă - малтан вырăсла, унтан чăвашла панине курма пулать. Тĕслĕхсем: 1. «Эбирь пичень тобас сиок шта мискерле мыскаразам бор», т.е. «Нам одним не найти, где есть чудеса». 2. «Пойдемте-ка, товарищи, со мною: я вам покажу еще одно чудо из чудес!» - Айдыр халь, йолташсам, манынбала, абэ сэря кудардам тода перя мыскараран мыскара!» [103]. Çапла тунипе автор пĕр-пĕр персонажăн хăйне уйрăм чĕлхине кăтартнипе пĕрлех вырăс вулакана чăваш чĕлхи янăравлăхĕпе паллаштарать.

Михайлов публицистики жанрсемпе пуян. Унăн произведенийĕсем шутĕнче сатира заметки те («Шупашкар çыннисем - сыснана явап тыттаракансем»), корреспонденци те («Чикмерен пĕлтереççĕ», «Чикме хыпарĕсем»), статья та («Чăваш улпучĕсем», «Ялсенчи прихут училищисем тата вырăс мар халăхсен ачисем унта епле вĕренни çинчен»), очерк та («Чикме уесĕнче купăста тӳни», «Хваттер хуçипе калаçни», «Чикме уесĕнчи пултăран пасарĕ») пуррине куратпăр. Персонажсене е чăнлăх пулăмĕсене витĕмлĕ кăтартма Михайлов час-часах контраст параллелизмĕпе усă курать. Сăмахран, «Чăваш улпучĕсем» статйине вăл халăх çине икĕ тĕрлĕ пăхакан икĕ чиновника юнашар тăратни çинче никĕсленĕ. Пĕри – земство сучĕн заседателĕ Петр Федоров (Охвер), тепри - вулăс пуçĕ Сергей Афанасьев (Серкуш). Пĕрремĕшĕ халăх интересĕсене хӳтĕленĕ, тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн ăна аслисем сăхман парнеленĕ; иккĕмĕшĕ хăйĕн пуçлăхĕсем валли халăхран контрибуци пуçтарнă, «хăйĕн пӳрни вара хăй еннеллех кукăрăлнă, пăтранчăк шывра пулă тытма пĕлнĕ Серкуш, çапла майпа пуйнăçемĕн пуйса пынă» [104].

Раççейĕн икĕ патшин кăмăлĕ ик тĕрлĕ пулнине те Михайлов «Император Чикме хулине килсе курни» статьяра çав меслетпех кăтартать. Пĕрремĕш Павел император, Хусаналла çул тытнă май, Чикмере 1798 çулти май уйăхĕнче чарăннă. Хула ăна, патшана, тивĕçлĕ чыспа кĕтсе илнĕ. Иккĕмĕш Екатеринăн та Атăл тăрăх Хусаналла Чикме тĕлĕнчен иртмелле пулнă. Хула çыннисем ăна чыслăн кĕтсе илме ятарласа вăхăтлăх кермен туса лартнă, анчах мăнаçлă хĕрарăм-патша Чикмере чарăнма шутламасть, «хăйĕн галери çинчех ... хуларан виç çухрăм тăварах каçхи апат çисе унтах çывăрма кăмăл тăвать... Илтсеччĕ эпĕ, Чикмери стариксем «турă евĕр Фелица» вĕсен хулине çитсе курманшăн пăшăрханса калаçатчĕç», - палăртать автор [105].

«Чикме уесĕнчи Ишек ялĕ» статьяра автор контраст параллелизмĕн ӳкерчĕкĕсене халăха хут вĕрентме пачах тăрăшманнине кăтартас тĕллев-

пе тăвать. Ялта пуп таврашне шутласа та кăларайман: «1803 çултанпа кунта благочиннăй пулнă, 1820 çулта протоиерей выранне те панă, çакă вара 1832 çулччен тăсăлнă. Унтанпа чин илмен виçĕ пуп икĕ тиечукпа тата 4 причетникпа пĕрле тăрса юлнă. Юлашкинчен, ял прихучĕсен штатне çирĕплетсен, икĕ пуппа пĕр тиечука тата икĕ причетника хăварнă; пуп таврашĕсен шучĕ хальхи вăхăтра та çавăн чухлех, тăлăх арăмсемпе тата ыттисемпе пĕрле 25 кил таран пуçтарăнать...» [106]. Ялта темиçе чиркÿ, шкул вара пачах çук. «Иртнĕ вăхăтра, - палăртать автор, - Ишекре урăх халăх ачисем вĕренмелли прихут училищи пурччĕ; анчах шел пулин те, халĕ вăл хупă, çав вăхăтрах ытти ялсенче: Шурчара, Илье пушлăхĕнче, Кашмашра та Чермышевăра çавăн пек училищĕсем паянччен пур» [107]. Контрастлă ÿкерчĕксем урлă Михайлов вулакана çакăн пек шухăш патне илсе пырать: «Училище ку ялта та пулмаллах» [108].

Пĕрешкел пулăмсене юнашар тăратса танлаштарни те контраст параллелизмне çывăх, анчах вĕсем хушшинче уйрăмлăх та пур. Пĕринче хирĕçле персонажсемпе пулăмсем çинчен сăмах пырать, тепринче вара пĕр пек пĕлтерĕшлисене урăх тĕллевпе юнашар тăратаççĕ: хире-хирĕçле уйрăмлăхсене кăтартма мар, вĕсем пĕр-пĕринчен хăш енĕпе çывăххине палăртма. Акă автор чăвашсемпе çармăссен çурхи уявне - пултăран пасарне - тутарсен çав вăхăтри сабанĕпе е сабантуйĕпе, «плуг праçникĕпе» танлаштарать[109]. Халăхсен çак икĕ уявĕ те çураки умĕн пулать. Вĕсене иккĕшне те «питĕ чаплăн ирттереççĕ». Тĕрлĕ халăхăн пĕрешкел уявсем пулнине палăртниех вĕсене пĕр пек карта лартать, çавăнпа пĕрлех çывăхлатма та пулăшать.

Михайлов хăйĕн произведенийĕсене ăста çырнă сăнлăхлă пейзажсемпе пуянлатать. Çавăн пек ÿкерчĕксенчен пĕрне илер: «Ишек сывлăшĕ ту çинчи евĕр, питĕ таса та ырă, ăна çÿллĕ хуралт та пÿлсе тăмасть. Пылчăк кунта нихçан та пулмасть темелле. Укăлча йĕри-таврах, çавăн пекех пасар лаптăкĕнче те симĕс курăк ешерет, çак яла уйрăмах вăл илем кÿрет.Ункă шывĕ ял çумĕпех çĕрĕ туса çаврăнать, арман патĕнче вара тем анлăш сарăлса кайнă, пĕве тавра ик енчен те хăва тĕмĕсем лартса тухнă. Унта хурсемпе кăвакалсем кĕтÿпе ишсе çÿреççĕ, вĕсенчен нумайăшĕ чăвашсен, юратаççĕ вĕсем кайăк-кĕшĕк ĕрчетме. Юхан шыв леш енче симĕс улăх тăсăлать, çуркунне вăл шыв айне пулать; лерелле вара, сăрт тÿпемĕсем çинче, чăваш ялĕсем хушшинче, кăпăшка анасем сарăлса выртаççĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, кунти вырăн питĕ илемлĕ. Шупашкарпа Çĕрпÿ ун яхăнне те пыраймаççĕ, çавăнпа ку вырăн чăваш чĕлхине тĕпчеме урăх çĕр-шывран килнĕ çынсене тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтернĕ» [110]. Çакна палăртса хăвармалла: Ми-

хайлов хӑй куҫӗпе мӗн курнине ҫырса кӑтартнӑ, ҫакӑ вара тӑван тавралӑхӑн ытарайми ӳкерчӗкӗсене ӗнентерӳллӗ тума май панӑ.

Публицист персонажсене кашнинех хӑйӗн чӗлхипе калаҫтарать. Анатри чӑвашпа тури чӑваш калаҫӑвӗнчи уйрӑмлӑхсене те вӑл лайӑх пӗлнӗ. Ун диалогӗнче анатри чӑвашпа тури чӑваш акӑ мӗнле пуплеҫҫӗ:

«Анатри. Ҫтисам эсӗ?

Вирeяль. Контисамах.

А. Хӑш ялӗнче пурнатӑн?

В. Ҫаккӑнтинченех, ак манӑн кил-ҫорт, коратни?

А. Куратӑп, хӑна киле яратна эсӗ?

В. Ойрӑх ҫӗрте топмастӑн полсан, хам пата, эппин, кӗрех»[111].

Публицист Чикме таврашӗнчи вырӑс халӑх чӗлхине тӗрӗс сӑнлать. Сӑмахран, «Хваттер хуҫипе калаҫни» очерка илер:

« - Нет, батюшка, здесь больно застращали головы и писаря мужиков-ту и сколько собрали денег-ту, кажись, большие тысячи».

«- Так-ту так... родимый, да есть у меня зять в крестьянах. Он стоит на очереди»[112].

Халӑх калаҫӑвне тӗрӗс кӑтартни произведение палӑрмаллах пуянлатать, унӑн витӗмлӗхӗпе ӗнентерӳлӗхне ӳстерет. Автор пӗлсе усӑ курнӑ ӑсларӑшсемпе каларӑшсем, ҫунатлӑ сӑмахсем вара произведение илемлӗхпе уҫӑмлӑх кӳреҫҫӗ. «Какая собака на хвост навязала вам о рекрутстве?», «Не вдавайся в обман: на то щука в море, чтобы карась не дремал», «Ныне в чувашах все такие головы поделаны, чтобы с живого шкуру драть», «Они хитры на злые выдумки» («Разговор на постоялом дворе»), «Не пустишь душу в ад, не будешь богат», «Долго вострила на них зубы», «Знал свою вину, как кошка чье мясо съела». «Деньги и камень долбят» («Злополучный сын») - акӑ халӑх сӑмахлӑхӗпе автор тӗллевлӗ усӑ курнин тӗслӗхӗсем.

Публицистикӑпа ӑслӑлӑх ӗҫӗ-хӗлӗ Михайлова ҫырлахтарнӑ ҫеҫ мар, савӑнтарнӑ та, мӗншӗн тесен хӑйӗн ӗҫӗ халӑха усӑ кӳнине вӑл лайӑх ӑнланнӑ. «Пӗр суйласа илнӗ ҫулпа эпӗ мӗн виличченех утма хатӗр... Чун-чӗрене тепӗр май ҫавӑрма кая юлнӑ ӗнтӗ, ҫитменнине тата, пурнӑҫ тӗллевӗсене улӑштарни кирлех та мар, мӗншӗн тесен пӗр миллион чӑвашпа ҫармӑсран Раҫҫейре халлӗхе эпӗ пӗрремӗш писатель. Пурне те усӑ кӳме вӗсенчен те кам та пулин ҫырмаллах», - пӗлтерет вӑл хӑйӗн ырӑ шухӑшӗсене М П. Погодина 1860 ҫулхи сентябрӗн 5-мӗшӗнче янӑ ҫырура [113].

С.М.Михайловӑн публицистика произведенийӗсем, пичетленнисем те, алҫырӑвӗ халлӗн ҫӳренисем те, вулакансене палӑрмаллах витӗм кӳнӗ, халӗ те хӑйсен хакне ҫухатман. П.Г.Григорьев историк: «Михай-

лов сĕнĕвĕсем «пушхирти пĕччен сасă» евĕрлĕ, шкулсенче кивĕ меслетсемпех вĕрентнĕ», - тесе кăлăхах ӳпкелешнĕ [114].

Иккĕленмелли çук, хастар та хăюллă публицистăн чĕререн тухакан сăмахĕсем тĕлсĕр-йĕрсĕр çухалман. Вĕсем Раççейĕн мал ĕмĕтлĕ ывăлĕсемпе хĕрĕсене вырăс мар халăхсен шăпине çăмăллатассишĕн, чухăнсен пурнăçне лайăхлатассишĕн, халăха хутла вĕрентессишĕн тăрăшма чĕннĕ, вулакансен ăс-хакăлĕнче ырă шухăшсемпе паха тĕллевсем çуратнă. Унсăр пуçне, Михайлов публицистики вырăс, чăваш тата мари халăхĕсен историйĕпе экономикине, культурипе этнографине тĕпчеме пулăшакан фактсемпе пуян, çавăнпа вăл тĕпчевçĕсене паян кун та хăй патне туртать.

Публицистăн творчествăлла ĕçĕ пирĕн вăхăтри вулаканшăн та хăйĕн пĕлтерĕшне çухатман. Унăн произведенийĕсем тăван халăхăн XIX ĕмĕр варринчи пурнăçне пĕлмелли паха çăлкуç пулса тăраççĕ, çавăнпа пĕрлех ырă йăла-йĕркене хисеплеме, халăхшăн чунтан тăрăшма, тӳрĕ кăмăллă та хастар пулма хистеççĕ.

Спиридон Михайлов публицистика ĕçĕнче 10 çул вăй хунă (1851-1860 çç ). 1861 çулхи январьте çĕре кĕнĕ. Çак тапхăрта «Казанские губернские ведомости», «Русский дневник», «Русский инвалид» хаçатсенче тата «Москвитянин» журналта 34 произведени пичетлесе кăларнă, ик теçеткене яхăн алçырăвĕ хăварнă. Çапла вара, вăл кĕске ĕмĕрĕнче çырнă произведенисен шучĕ пĕтĕмпе аллăран та иртет.

Политикăлла тавра курăмĕпе Михайлов çутлăхшăн кĕрешекен çын пулнă. Ун чухнехи хресченсем пекех, вăл патша пулăшасса шаннă. Халăх япăх пурăннин тĕп сăлтавĕ феодалла-крепостла строй тата монархи пулнине вăл ăнланман. Публицист шучĕпе, халăх япăх пурăнни унăн тĕттĕмлĕхĕнчен, тӳре-шара çăткăнлăхĕпе тискерлĕхĕнчен килнĕ. Çавăнпа Михайлов халăха çутта кăларассине, тӳрешарана хутла вĕреннĕ тӳрĕ кăмăллă чăвашсенчен лартассине тĕп вырăна хунă. Халăх тĕшмĕшлĕхрен хăтăлтăр тесен, чăвашсен те, марисен те Христос тĕнне йышăнмалла, чиркӳсенче проповедьсене тăван чĕлхепе каламалла. Шкулсенче малтан чăвашла вĕрентмелле, унтан вырăс чĕлхи çине куçмалла. Халăх училищисен тĕп задачи - тӳре-шара ĕçне тума чăвашсене вĕрентсе хатĕрлесси. Кунсăр пуçне, халăха хăйне те вулама, çырма вĕрентмелле, тенĕ вăл. Çапла ĕнтĕ, Михайлов хăй вăхăтĕнче мал шухăшлă çын пулнине пĕлтерет. Унăн çутлăх программинче демократиллĕ туртăмсем палăраççĕ.

# НИКОЛАЙ ЗОЛОТНИЦКИЙ ЧӐВАШСЕНЕ ТАТА ВЫРӐС МАР ЫТТИ ХАЛӐХСЕНЕ ХУТЛА ВĔРЕНТМЕЛЛИ МАЙСЕМ ҪИНЧЕН

Чӑваш халӑх культурине аталантарма XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш ҫурринче вырӑс интеллигенцийĕ сахал мар вӑй хунӑ. Вĕсен шутне Николай Иванович Золотницкий (1829-1880) те кĕрет. Вӑл Хусан кĕпĕрнинчи Шупашкар уесĕнче Урхас Кушкӑра (халĕ Сĕнтĕрвӑрри районĕ) ҫуралнӑ. Ашшĕ унӑн вырӑс пулнӑ. Вӑл чӑваш ялĕнче пупра ĕҫленĕ. Ҫавна май пулас публицист чӑвашсем хушшинче ӳснĕ, вĕсен чĕлхине лайӑх пĕлсе ҫитнĕ. Шупашкарти тĕн училищинчен вĕренсе тухсан, Хусанти тĕн семинарине вĕренме кĕнĕ, анчах пуп пуласси ун кӑмӑлне кайман. Куккӑшĕ В.А. Сбоев сĕннипе вӑл семинарире вĕренме пӑрахнӑ та Хусан университетне историпе филологи факультетне куҫнӑ. Ҫакӑнта унӑн Атӑл тӑрӑхĕнчи вырӑс мар халӑхсен пурнӑҫне лайӑхрах пĕлес, вĕсене ҫутта тухма пулӑшас туртӑм ҫуралнӑ.

Золотницкий университетран 1851 ҫулта вĕренсе тухнӑ, ун хыҫҫӑн хысна пурлӑхĕн Хусанти тата Вяткӑри палатисенче ĕҫленĕ. Вӑл пуҫарнипе Вятка хулинче алӑпа ҫырса «Чĕнмен хӑна» («Незваный гость») ятпа кулӑшла хаҫат кӑларма пуҫлаҫҫĕ, анчах вӑл икĕ номертен ытла тухайман. 1860 ҫулта Золотницкие «Вятские губернские ведомости» хаҫат редакторне илеҫҫĕ. Хаҫатра ĕҫленĕ май унӑн журналистикӑри пултарулӑхĕ те ӳссе пырать.

Сывлӑхĕ начарланнӑран тата чӑвашсем хушшинче пурӑнас килнĕрен Золотницкий 1865 ҫулта Урхас Кушкӑна таврӑнать, литература енĕпе ĕҫлет. «Чуваш кнеге» тата «Солдалык кнеге» ҫырать. Пĕрремĕшне чӑвашсен малтанхи букварĕ, иккĕмĕшне - пĕрремĕш календарĕ темелле.

Золотницкий 1867-1872 ҫулсенче Хусан вĕренӳ округĕнчи чӑваш шкулĕсен инспекторĕнче ĕҫлет, халӑха хутла вĕрентессишĕн тӑрӑшать. Ӑна тивĕҫлипех чӑваш чĕлхи наукин никĕсне хываканĕ теҫҫĕ. Ку енĕпе унӑн чи пысӑк ĕҫĕ «Сӑмах тĕпĕсен чӑвашла-вырӑсла словарĕ» («Корневой чувашско-русский словарь, сравненный с языками и наречиями разных народов тюрского, финского и других племен» (1875) шутланать. Ӑна автор вунӑ ҫула яхӑн ҫырнӑ. Ӑслӑлӑхри пархатарлӑ ĕҫĕшĕн ӑна Вырӑс географи обществи 1879 ҫулта чи чаплӑ награда - Пысӑк Ылтӑн медаль панӑ.

Елабугӑран 40 ҫухрӑмра, Шур Атӑл (Кама) хĕрринчи Икское-Устье ялĕнче 1858 ҫулта прихут училищи уҫсан, Н.И.Золотницкий пичетлес шутпа пĕрремĕш хут корреспонденци ҫырнӑ. Вӑл «Елабуга хули тата Икское-Устье ялĕнчи Николаевски прихут училищи» ятпа «Вятские губернские ведомости» хаҫатра 1860 ҫулти ноябрĕн 26-мĕшĕнче тухнӑ» [114]. Ҫĕнĕ учи-

лищĕре 30 арçын ача вĕренме пуçланă. Училище çуртне туса лартма тата ăна тытса тăма çав ял çынни Е.Емельянов купса укçа панă. «...Училище ĕçĕ ăнăçса пытăр, вăл таврари общество çине ырă витĕм кӳтĕр, ку заведение никĕслекенĕн чаплă ĕмĕчĕсем йăлтах пурнăçа кĕччĕр»,- çырать автор корреспонденцире. Халăха вĕрентме çĕнĕ училищĕсем уçни ăна савăнтарать, çавăн пек училищĕсем вăл ытти çĕрте те уçасшăн.

Çак корреспонденцирех Золотницкий халăха çутта кăларнин тĕллевĕсене епле ăнланнине куратпăр. Асăннă ялти хресченсем харсăр та паттăр, çав вăхăтрах час-часах йĕркесĕр ĕçсе иртĕхеççĕ. Хутла вĕрентнин вара «вĕсем хушшинче православи тĕнне çирĕплетме, ырă йĕрке-тирпей тата лайăх йĕркеленĕ пурнăç ăнлавĕсене аталантарса çĕнетме май парать».

Золотницкий арçынсене çеç мар, хĕрарăмсене те хутла вĕрентесшĕн. «Вяткăри хĕрарăмсен прихут училищи çинчен темиçе сăмах» корреспонденцире вăл асăннă училищĕне çирĕплетме хистет[115]. Автор шухăшĕ çапла: «Хĕрарăмсен училищин усси пысăк, унăн тытăмĕ ансат, тăкаксем пысăк мар; çавна курса, ахăртнех, ытти хуласенче те хĕрарăм училищисем тăхтаса тăмасăрах уçĕç». Ку училищĕсенче Золотницкий «мĕнпур сийри тата чи чухăн» хĕр ачасене пуçламăш пĕлӳ тӳлевсĕр парасшăн.

Публицист чухăн çемьерисем те хутла вĕренесшĕн пулнине курать. Училищĕне уçсанах, унта 20 хĕр ача çӳренĕ, икĕ уйăхран ку хисеп хĕрĕх пиллĕке çитнĕ. Анчах, хулара мĕн чухлĕ халăх пурăннипе танлаштарсан, вĕренекенсен шучĕ сахал пулнине асăрхаттарать Золотницкий. «Вĕренни кирлине ăнланса çитерейменни, ун пирки иккĕленесси иртсе пырать; вĕренесси уйрăм çынсен çеç мар, общество туртăмĕ пула пуçларĕ; халĕ ĕнтĕ «вĕренни - çутталла тухни пулнине вулама-çырма пĕлменни те ăнкарать е туять; çут ĕçĕ питĕ кирлĕ сăваплă ĕç пулни халăх хушшинче чăна тухать», – палăртать Николай Иванович.

Анчах кĕпĕрнери нумай ялти хресченсем, уйрăмах вырăс мар халăхсем черемиссем, вотяксем, пермяксем, хутла вĕреннин уссине ăнланайманха. Хĕр ачасене шкула пачах çӳретесшĕн мар. Публицист «Уйрăм çынсем Вятка кĕпĕрнинче уçнă шкулсем çинчен» статьяра хресченсем шкула мĕншĕн шанманни сăлтавĕсене яр-уççăн кăтартать [116]. Пĕрремĕш сăлтавĕ - вĕренме кирлине тата унăн уссине ăнланманнинче. Вĕренни ял пурнăçне улшăнусем кӳнине хресчен курмасть-ха. Иккĕмĕшĕ – хут пĕлекен çын килти хуçалăхра ĕçлеме пăрахасран шикленнинче. Хресчен шкула хисеплеме пуçлатăр тесен, унта илнĕ пĕлĕвĕпе пурнăçра усă курмалла тăвас пулать. «Апла тумашкăн шкулта вĕрентесси кĕнекери сăмахсене – уроксене ним ăнланмасăрах-пăхмасăр калама вĕреннинче мар, мĕн вĕреннине ăнланнинче тата ачасен ăнкарăвне аталантарнинче пулмалла». Аворăн тĕрĕс йĕрпе

пыракан шухăшĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пĕтĕмлетӳ тума май парать: «Вырăс мар халăхсене илсен, вĕсем хутла вĕренесси çине тӳртĕн пăхни тăван чĕлхепе шкул чĕлхи уйрăмминчен килет; тӳррипе каласан, эпир этемлех мар тăватпăр: вотяк е черемис ачине вырăс букварĕ вĕренме лартатпăр та ăна ют чĕлхепе кĕлĕсем, катехизис, истори тата ыттине те пĕрехмай калаттаратпăр. Çапла шутлатпăр: вулама, çырма, шутлама тата ыттине те тăван чĕлхепе вĕренсен кăна вырăс мар çыншăн усăллă пулма пултарать...». Автор калаçма кăна вырăсла вĕрентесшĕн, ку тĕллеве пурнăçлама эрнере икĕ кун вĕренни те çителĕклĕ. Вотякла ăнланса вулама хăнăхсан тата вырăс чĕлхипе паллашсан, вотяк хăех вырăс кĕнекине тытать, ун çине йĕрĕнсе пăхма пăрахать. Паллах, малтан вырăс мар халăхсен чĕлхипе учебниксемпе кĕнекесем кăларас пулать.

Золотницкий хресченсен ачисене çеç мар, çамрăк рабочисемпе ал ăстисене те хутла вĕрентесшĕн, çак тĕллеве пурнăçа кĕртмелли майсем шырать.

Ун пек майсенчен пĕри – хуласенче вырсарни кунхи шкулсем уçасси. «Вяткăри вырсарни кунхи шкул пĕрремĕш çур çулта» статьяра автор рабочисемпе алăстисен вĕренĕвне йĕркеленине хĕрӳллĕн ырлать, ку ĕçе чăрмав кӳрекен хуçасене сивлет [117].

Шкулта вулама, çырма тата шутлама вĕрентнипе пĕрлех, Золотницкий ал ĕçĕ тума та хăнăхтарасшăн. «Институтран е пансионатран чи лайăх аттестат тата парнесем илсе вĕренсе тухакансем хушшинче çипуç касса çĕлеме мар, йĕп çăрхине çип витĕрме пĕлменнисем те пур», – пăшăрханать вăл [118]. Ал ĕçне вĕрентес енĕпе Макарьево ялĕнчи шкулта ырă пуçару тунă. «Кунта халлĕхе чăлха кăна çыхаççĕ, малашне вара хресчене пурнăçра хăш ал ĕçĕ кирлĕ, çавсене пурне те тума хăнăхтармалла; ашшĕ-амăшĕ кăмăлласан, хулари ал ĕçне те, сăмахран, кофта тавраш çыхма, тĕрлеме вĕрентмелле» [119].

Кунтах автор тепĕр паха шухăш калать: ашшĕ-амăшне шкула чĕнни питĕ вырăнлă. Ку вăл, пĕр енчен, шкулта ачасем мĕн тунине пĕлме май парать; тепĕр енчен, вĕреннин уссине кăтартать.

Золотницкий ачасене çаптарнине, хĕненине хирĕç тăнă. Пĕр ачана учитель тискеррĕн хĕненине çырса кăтартнă хыççăн публицист çапла калать: «... Тав турра, çавнашкал вăхăтсем иртрĕç, ун пек учительсем вилсе пĕтнĕ, çĕнĕрен çуралмĕç...» [120]. Çавăн пекех «Макарьево ялĕнче уйрăм çын уçнă шкул» корреспонденцире те Золотницкий ӳт-пĕве ыраттаракан наказани парассине хирĕç пулни курăнать. «Айăпа кĕнисене наказани парасси пирки ыйтсан, сумлă вĕрентӳçĕ çапла хуравларĕ: ӳт-пĕве ыраттаракан наказани пама шутламастпăр; ачалла ашкăнакансене йĕркеллĕ тата асăрханулла пулмалли пирки асăрхаттаратпăр; хăйне хăй епле тыткаламалли

йĕркесене пăссан, ăнланулăх енĕпе хĕсетпĕр, намăслантаратпăр, ӳкĕнтеретпĕр; эхер, кирлех пулсан, шкултан кăларса яратпăр», – илсе кăтартать автор пĕр учитель сăмахĕсене [121]. Ку учителе автор шăп та лăп хăйĕн шухăшĕсене калаттарать.

Рабочисемпе ал ăстисен пурнăçĕ йывăррине Золотницкий «Вяткăри вырсарни кунхи шкул пĕрремĕш çур çулта» статьяра уçăмлăн кăтартать, анчах класс кĕрешĕвне асăрхамасть, пур сийсене те килĕштерсе пурăнма чĕнет. «Сийсем хушшинчи кăмăлламанлăх тата тĕрлĕ сийри хăрарăмсем пĕрне-пĕри кирлĕ пек хисеплеменни – вырăс общество пурнăçĕнчи пăшăрхантаракан пулăмсенчен пĕри; пуп таврашĕсен, купсасен, чиновниксен, мещенсен тата ыттисен пулас арăмĕсене пĕрле вĕрентни общество пурнăçĕнчи çав киревсĕрлĕхе йăлтах пĕтермесен те чакарма пултарать», – палăртать вăл «Слободари хĕрарăмсен 2-мĕш разрядлă училищин 1861-62 вĕренӳ çулĕнчи отчечĕ пирки темиçе сăмах» корреспонденцире [122].

Николай Золотницкин публицистикăри пултарулăхĕнче калăпăшĕпе чылаях пысăк «Чăваша хутла вĕрентмелли майсем çинчен» статья паллă вырăн йышăнать [123]. Ăна хаçатра та, уйрăм кĕнекен те пичетлесе кăларнă. Кунта автора акă мĕн пăшăрхантарать: «чăвашсене тата вырăс мар ытти халăхсене Христос тĕнне йышăнтарасси... кирлĕ пек пулса пымасть», «вырăс мар халăхсем валли уçнă училищĕсем вĕсен ăс-тăнĕпе йăла-йĕрке шайне кирлĕ таран хăпартаймарĕç». Çапла вара, «вырăс мар халăхсене вырăса çавăрма, тĕн тата йăла-йĕрке енĕпе вĕрентме урăх майсемпе усă курас пулать».

Автор çакна аса илтерет: пилĕк çул каялла «Вятка кĕпĕрнинче уйрăм çынсем уçнă шкулсем çинчен» статьяра вăл вырăс мар халăхсене хутла вĕрентмелли меслет пирки хăйĕн шухăшне каланăччĕ [124]. Чăнах та, Золотницкий «Чăваша хутла вĕрентмелли майсем çинчен» статьяра маларах пичетленĕ статьясенчи шухăшсене тарăнлатать, малалла аталантарать. Çакăнпа пĕрлех ку статьяпа маларахрисем хушшинче уйрăмлăх та пур: малтан çырнисенче вырăс мар халăхсене хутла вĕрентесси çинчен пĕтĕмĕшле каланă, ку статйине вара чăвашсене хутла вĕрентес ыйтупа ятарласа çырнă. Автор хăй шухăшĕсене пурнăçа кĕртме тытăнни, чăваш ачисене малтанласа вĕрентмелли учебниксем хатĕрлеме пуçăнни çинчен вулакансене хĕпĕртесе пĕлтерет.

Вырăс мар халăхсене вырăслатассипе хутла вĕрентесси тачă çыхăннине палăртать публицист. Халăхсене çутта кăларас, çĕнĕ училищĕсем уçас, унта вĕренме тата вĕрентме çынсем тупас, пысăкрах усă кӳрекен меслетсем шырас задачăсем кăларса тăрататъ. Вырăс мар халăхсене вырăслатас тата вĕсене çутта кăларас ĕçре Золотницкий вырăс чĕлхине

пысăк вырăна хурать. Ун шучĕпе, «урăх халăх çыннисене тата урăх тĕн тытакансене вырăсла лайăх пĕлсен кăна вулăс правленийĕсемпе земство управисен тата ытти учреждениесен членĕсем пулма суйламалла, урăх халăх прихучĕсенче пуп таврашĕсем вырăнне тата учителе вырăсла пĕлсен кăна лартма юрать».

Çапах та, тăсать Золотницкий хăй шухăшне малалла, «национальноçсем çывăхланасси, унтан пĕрлешесси, тĕпрен илсен, ĕненӳсен пĕрлĕхĕнчен килет». «Национальноçсем пĕрлешни» унăн ăнланăвĕнче урăх халăхсем вырăсланассине пĕлтерет. Çак ĕçре чи çирĕппи вырăнне тĕп ĕненĕвне хурса, акă мĕнле пĕтĕмлетӳ тăвать: «Пĕтĕмĕшпе илсен, ку тăрăхри урăх халăхсем вырăссемпе тачă пĕрлешчĕр тесен, вĕсем вырăс чĕлхине пĕлни кăна сахал, Христос тĕнĕ туйăмĕпе пурăнмалла».

«Урăх халăхсене вырăса çавăрмалли» иккĕмĕш çул вăл, Золотницкий шутланă тăрăх, вырăссем йăла-йĕрке енĕпе ытти халăхсенчен çӳлерехре тăнине ăнлантарни пулать. Ку çул ăнăçлăх кӳтĕр тесен, вырăс халăхĕн урăх халăхсене çывăх тăракан сийĕсене тĕрĕс вĕрентсе, ăс-хакăл тата йăла-йĕрке енĕпе ӳсме пулăшмалла.

Публицист çакна палăртать: çĕнĕ училищĕсем уçма мар, пуррисене тытса тăма та укçа-тенкĕ çук. «Çĕнĕ училищĕсем уçас вырăнне хăш- пĕр вырăнта вĕсене тытса тăма тата вĕрентекене тӳлеме укçа çук пирки пуррисене те хупма тивет», – ӳпкелешет вăл, анчах патша правительствине халăха хутла вĕрентес ĕç валли укçа-тенкĕ уйăрса пама хистес вырăнне пуп таврашĕсене шкулта тӳлевсĕр ĕçлеме ӳкĕтлет. Вĕрентекенсем пирки ыйтăва вăл çапла татса парасшăн.

Статьяра автор вырăс мар халăхсен ачисем шкула мĕншĕн çӳресшĕн пулманнине питĕ тĕплĕн тишкерет: «Кирек мĕнле ĕçпе кĕрмешме те, ун валли мĕн те пулин уйăрма та, – палăртать вăл, – çав ĕç уссине курса тăмалла е вăл çынна савăнтармалла. Вырăс мар халăхсене иртнĕ вăхăтра хутла епле вĕрентни те, халь мĕнле вĕрентни те вĕсене пачах çырлахтармасть. Мĕне тата мĕн тума вĕренеççĕ ачасем – çакна ашшĕ-амăшĕ ăнланмасть...» Çавăнпа ĕнтĕ хут вĕренесси рекрут пуçтарасси пекех йывăр тивĕç пулса тăрать. Анчах этем хăй кăмăлласа тăвакан ĕçре те ирĕксĕрленине чăтма пултараймасть. Эппин, çын ирĕксĕрлемесĕр, хăй ирĕкĕпе вĕрентĕр, ун чухне шкулта вĕренесси йывăр тивĕç пулма пăрахать.

Вырăс мар халăхсем шкултан писнин сăлтавĕсене публицист тĕрĕс кăтартать. Тĕп сăлтавĕ – вĕрентӳ меслетĕнче. Ачасене вĕсем пĕлменăнланман вырăс чĕлхипе вĕрентеççĕ, çавăнпа вĕренӳ ним шухăшламасăр, пачах ăнланмасăр тумалли ĕçе куçать. Чăваш ачине вырăс букварĕ тыттарни, кĕлĕ сăмахĕсене ют чĕлхепе пăхмасăр калама вĕрентни, катехизис, истори тата ытти çинчен ăнланма çук чĕлхепе каласа пани – çынна

кăлăхах асаплантарни çеç. Шкул чĕлхи ачасене пĕлӳ илме май памасть, çавна пула унта мĕн вĕрентнипе çемьере, кулленхи ĕçре, пурнăçра усă курма пултараймаççĕ.

Çак инкекрен хăтăлма автор витĕмлĕ меслет сĕнет: ачасене малтанласа тăван чĕлхепе вĕрентмелле. Амăшĕн чĕлхипе усă курни вĕрентессин пĕрремĕш тĕллевне пурнăçлама – «ачасен шухăшлав вăйĕсене вăратма, çав вăйсене тивĕçлĕ çулпа яма» май парать. Ача тăван чĕлхепе шухăшлать, каласса та шухăшĕсене тăван чĕлхепе калать. Чăваш ачине хут вырăсла вĕрентсен, унăн шухăшĕ хăй тĕллĕн аталанасси сӳнсе ларать. «Училищĕсенче чăваш ачисене малтанласа тăван чĕлхепе вĕрентмелле туни, урăхла каласан, вĕсене амăшĕн чĕлхипе ăнланмалла вĕрентме пуçлани, – çырать Золотницкий, – чи малтанах ашшĕ-амăшне вĕренӳ уссине ăнланма тата ун уссине, мĕнлерех калас, сĕртĕнсе пăхма май парать, çавăнпа пĕрлех вĕренекенсем пĕлӳ илессине çăмăллатать, хут вĕренсе ăс-тăна аталантарни мĕн тери пахине кил-йышра сăнанă тăрăх, вырăс мар халăхсене хут вĕрентессинчен пăрăнма пăрахтармалли, вĕренес кăмăл çуратмалли тата вĕренекенсем шыраса тупас ыйтăва татса памалли пĕртен-пĕр çул пулса тăрать».

Шухăшсене çирĕплетме автор тĕслĕхсем илсе кăтартать. Чăваш ачисене 15 çула яхăн вĕрентекен пуп каласа пани интереслĕ: «Ман прихутра хут пĕлекенсем пайтах, анчах кĕнеке тăрăх вуланине пĕри те ăнлантарса параймасть; эпир (вĕрентекенсем) тахçанах чăвашла вĕрентме тытăнмалла, ун чухне вара экзаменаторсем чĕлхене пĕлмен пирки ачасем еплерех вĕреннине тĕрĕслеймен пулĕччĕç...».

Урăх халăх ачисене вырăсла вĕрентме йывăррине тата усăсăррине нумайăшĕ ăнланнă. Сăмахран, шыв турттаракан Ефим пичче, вуламаçырма вырăсла вĕренсе терт курнăскер, çапла шухăшлать: «...Чăваш вырăсла пĕрех вырăс пек вĕренме пултараймасть; ăна вĕрентесси те çав тери кансĕр, вĕренесси те калама çук йывăр».

Золотницкий чăваш чĕлхине уйрăм предмет вырăнне вĕрентмелле тесе каламан. Ун шухăшĕпе, ачасен тăван чĕлхипе пуçламăш тапхăрта – вулама, çырма, шутлама вĕрентнĕ чухне çеç усă курмалла. Анчах ун чухне çак сĕнĕве те хирĕç тăнă, тăван чĕлхепе вĕрентни урăх халăхсене вырăслатас тĕллеве пурнăçлама чăрмантарать тенĕ. Золотницкий вырăс мар халăхсене хисеплени, хӳтĕлени тата шкулта малтанхи тапхăрта ачасен тăван чĕлхипе усă курмалла тени иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче малалла пысăк утăм туни пулнă. Вăл ачасен тăван чĕлхине хӳтĕлесе калани вырăссен паллă падагогĕ-демокрачĕ К.Д.Ушинский (1824-1870/71) каланипе пĕр килсе тухать. «Тăван сăмах» (1864) кĕнеке-

ре Ушинский ача-пӑчан тӑван чӗлхине «тӗлӗнмелле педагогпа» танлаштарать.

«Чӑваша хутла вӗрентмелли майсем ҫинчен» статьяра авторӑн урӑх халӑхсене вырӑслатас тата миссионерла туртӑмсем ытти статьярисенчен те вӑйлӑрах палӑраҫҫӗ. «Халӑх чӗлхипе малтанласа вӗрентни урӑх халӑхсене вырӑслатма пӗртте чӑрмантармасть, пачах урӑхла, май пур таран, хӑвӑртрах вырӑслатма пулӑшакан витӗмлӗ меслет пулса тӑрать», – ҫырать вӑл. Урӑх халӑхсене вырӑса ҫавӑрма шутланин сӑлтавне Золотницкий вӗсен ҫырулӑх ҫуккипе ӑнлантарнӑ.

В.К.Магницкий «Чӑваш кӗнеки» ятпа Хусанта рецензи ҫырса кӑларать[125]. Унта вӑл Н.И.Золотницкий хатӗрлесе пичетленӗ кӗнекене ырлать, ҫавӑнпа пӗрлех рецензент чӑваш шкулӗсем валли «Малтанхи кӗнекесем» кӑларни вӗсем малалла чӑвашла кӗнекесем тӑрӑх вӗренессине пӗлтерменнишӗн, чӑвашсем хӑйсем валли ҫавӑн пек кӗнекесем хатӗрлесе кӑларайманнишӗн пӑшӑрханать. Апла пулсан, Магницкий чӑваш литературине аталантарас шухӑшлӑ.

Ку ыйтупа Золотницкий шухӑшӗсем урӑхла пулнӑ. Рецензента вӑл асӑннӑ хаҫатрах хивре сӑмахпа хуравлать: «Эпир ҫапла шутлатпӑр. чӑвашсен хӑйсен литератури пулманни... вырӑс православишӗн тӑрӑшакансене ҫав урӑх халӑха хӑвӑртрах ҫутта кӑларма тата вырӑса ҫавӑрма пулӑшать, ҫак тӗллевсене пурнӑҫлама кирлӗ кӗнекесене чӑвашсем хӑйсем ҫырса кӑларайман; кирлине кӗретӗнех курса, эпир православие шанчӑклӑрах сарас тата вырӑсла вулама-ҫырма вӗрентессине ҫӑмӑллатас тӗллевпе, малтан вӗренмелли учебниксене вырӑнти халӑх чӗлхипе кӑларма тӑрӑшатпӑр (вӗсене вырӑс саспаллисемпе ҫыратпӑр), анчах кам та пулин ҫав урӑх йӑхсем валли халӑх литератури тума шут тытсан, вӑл кирек кам пултӑр, чи малтан ӑна хирӗҫ тӑратпӑр, ҫавнашкал хӑтланӑва кирек епле пулсан та путлантаратпӑрах [126].

Патша тарҫисем вырӑс мар халӑхсен шкулӗсенче тӑван чӗлхепе вӗрентессине хирӗҫ тӑнӑ, ҫав халӑхсен чӗлхипе кӗнекесем куҫарса кӑларма чарнӑ. XIX ӗмӗрӗн 60-мӗш ҫулӗсенче ҫав шухӑша Пӑва уесӗнчи училищӗсен совечӗн председателӗ А.И.Баратынский пичетре пӗр пытармасӑрах калать. «Пӑва уесӗнчи ют йӑхсен пуҫламӑш училищисене лайӑхлатасси ҫинчен» статьяра вӑл тӑван чӗлхене шкула кӗме ҫул уҫасшӑн тӑрӑшакансене сиенлӗ ӗҫ тӑвакансем вырӑнне хурать» [127].

Хаҫат редакцийӗ те ҫав автор майлах ҫаптарать. «Тӳррипе каласан, эпир Золотницкий шухӑшӗпе пачах килӗшместпӗр, пурнӑҫ хӑйне унталла та кунталла сӗтӗрнӗ ҫӗртех вӑл чӑваш калаҫӑвӗпе унӑн пурнӑҫ-

не чӗлхе хайламалӑхах пӗлсе ҫитнине те, чиркӳ кӗнекисене ҫав чӗлхене тӗрӗс куҫарма пултарнине те ӗненсех пӗтерейместпӗр; ҫитменнине тата, пӗлекенсем каланӑ тӑрӑх, ку калаҫура пӗтӗмлетӳллӗ ӑнлавсене палӑртакан сӑмахсем ҫук. Ҫак пӗтӗм ӗҫ мӗн тума кирлӗ-ха? Золотницкий г-н чӑваш калаҫӑвне тӗпӗ-йӗрӗпе пӗлнине ӗнентерме пулсан кӑна;- ку ӗҫрен урӑхла усӑ кӗтместпӗр эпир», – тенӗ хаҫатӑн ҫав номерӗнчи ум статьяра.

Ку хаҫата ӗненес пулсан, чӑваш халӑхӗн ҫыру чӗлхи мар, калаҫу чӗлхи те ҫук. Ӑна хайламалла иккен. Ҫавӑнпа ку чӗлхепе шкулта вӗрентесси, кӗнекесем куҫарса кӑларасси пирки калаҫма та кирлӗ мар имӗш. Чӑваш халӑхӗ хӑй вара йӑлтах урӑхла шухӑшланӑ. Пӑва уесӗнчи Ҫӗнӗ Йӗлмелти хресчен ывӑлӗ Степан Иванов Пасарлӑ Упи ялӗнчи училищӗне ҫур ҫул кӑна ҫӳренӗ, ҫав хушӑра азбукӑна ӑнкарма ҫеҫ пуҫланӑ. Анчах вӑл ӑна та, кӑна та пӗлесшӗн ҫуннӑ. Хӑй тӗллӗнех вырӑсла калаҫма вӗреннӗ. Тӑван ялӗнче ун чухлӗ кӗнеке вуланӑ ҫын пулман. Хӑй тӗллӗн вӗренсех вӑл утельни приказӗн писарьне, унтан Чӗмпӗрти утельни кантурӗн писарьне тухнӑ. Каярахпа ӑна утельни кантурӗнчи столоначальника пулӑшаканӗ вырӑнне те шанса панӑ. Ӑна земски управа членне тата училище совечӗн членне суйланӑ.

С.И.Иванов 1867 ҫулти июлӗн 11-мӗшӗнче Н.И.Золотницкие ҫапла ҫырса янӑ: «Ырӑ ҫыннӑмӑр Николай Иванович. Эсир парса хӑварнӑ «По вопросу о способах образования чуваш» брошюрӑна тата «Солдалык кнеге» календаре эпӗ питӗ кӑмӑлласа вуларӑм, Сире чӗререн тав туни ҫинчен пӗлтерме васкатӑп. Эпӗ Сирӗн шухӑшӑра хамӑн нумай юлташсене каласа патӑм тата хут пӗлмен хӑш-пӗр чӑвашсене «Солдылык кнеге» календарьте мӗн ҫырнине вуласа кӑтартрӑм, кашнинчех ырласа каланине илтрӗм. Кашниех Сирӗн шухӑша тӗрӗс тесе шутлать тата часрах пурнӑҫа кӗртесшӗн» [128].

Ҫапла ӗнтӗ, Н.И.Золотницкин ҫутӗҫӗнчи тӗллевӗсене чӑвашсем ырлани С.И.Иванов ҫырӑвӗнчен яр-уҫҫӑн курӑнать. Халӑх хӑйӗн чӗлхине хисеплеттересшӗн, тӑван чӗлхепе ҫырнӑ кӗнекесем вуласшӑн, вӗсем тӑрӑх вӗренесшӗн. Сӑмах май каласан, Степан Иванов тӑван чӗлхе пӗлтерӗшне «Пӑва уесӗнчи хресченсен хут вӗренме кӑмӑл пулманнин сӑлтавӗсем тата вӗсене пӗтермелли майсем» статьяра тата «Современный листок» ум статйи пирки хресчен ҫырнӑ заметкӑра» ӗнентерӳллӗ тӗслӗхсемпе уҫса панӑ, Н.И.Золотницкий вырӑс мар халӑхсене тӑван чӗлхепе вӗрентме тӑрӑшнине тата чӑвашла кӗнекесем кӑларнине ырланӑ [129].

Педагогика литературинче Вӑтам Атӑл тӑрӑхӗнчи вырӑс мар халӑхсене хут вӗрентес йӗркене Н.И.Ильминский пуҫарса янӑ тени ытларах палӑрать [130].

Тĕрĕссипе илсен, Н.И.Золотницкин «Вятка кĕпĕрнинче уйрăм çынсем уçнă шкулсем çинчен» статйи 1861 çулта пичетленнĕ [131]. Вырăс мар халăхсене тăван чĕлхепе вĕрентме кирлине вăл чи малтан çак статьяра калать. Н.И.Ильминский вара çапла тума пичетре каярахпа, 1863 çулта, «Урăх халăхсене хăйсен тăван чĕлхине куçарнă кĕнекесемпе вĕрентесси çинчен» статьяра сĕнет [132].

Николай Золотницкий Раççейре ирĕклĕхшĕн пынă кĕрешĕвĕн иккĕмĕш тапхăрĕнче - революциллĕ демократсен юхăмĕ вăй илнĕ вăхăтра ĕçлесе пурăннă. Вĕсем халăха нушаллă пурнăçран, тĕттĕмлĕхрен хăтарассишĕн кĕрешнĕ. Ку юхăмăн пуçĕнче Н.Г.Чернышевский (1828-1889) тата Н А.Добролюбов (1836-1861) пулнă. Тӳрех каламалла, Золотницкий революцилле шухăшсенчен аякра тăнă, апла пулин те, халăха тĕттĕмлĕхрен хăтарас, ăна çутта кăларас ĕçе хастарлă хутшăннă. Вăл уйрăмах Атăл тăрăхĕнчи вырăс мар халăхсен пурнăçне çăмăллатасшăн тăрăшнă. Çакна унăн публицистики уçăмлăн çирĕплетет.

Золотницкин эпир пăхса тухнă произведенийĕсем çут ĕç ыйтăвĕсемпе çырнă публицистика шутне кĕреççĕ. Вăл кашни материалах пресса валли тĕплĕн хатĕрленсе çырать. Сăмахран,»Уйрăм çынсем Вятка кĕпĕрнинче уçнă шкулсем çинчен» статьяна çыриччен ку ыйтупа маларах мĕн пичетленине тимлĕн пăхса тухать, хăйĕн шухăшĕсене çирĕплетме «Русский вестник» журналти «Хресченсене вĕрентесси» тата «Вятские губернские ведомости» хаçатри «Вятка кĕпĕрнинчи Пермяксем çинчен кĕскен çырнисем» статьясенчен цитатăсем илет [133].

Кирек хăш материалта та Золотницкий фактсемпе пулăмсене тĕпĕ-йĕрĕпе тишкерет, вĕсем хушшинчи сăлтав çыхăнăвĕсене палăртать. Акă, Вяткăра вырсарни кунхи шкула çӳрекенсем йышлă мар. Мĕнрен килет-ши çакă? Пĕрремĕшĕ – вырсарни кун тата тĕн праçникĕсенче вĕренни те, вĕрентни те çылăх имĕш. Публицист çакăнпа килĕшмест, хирĕçлемелли сăлтавĕсене те тупать: Христос тĕнĕпе йĕрке-тирпей никĕсĕсем тăрăх, вĕренме кирек хăçан та юрать, ытти кун рабочисемпе алăстисем яланах ĕçре. Вырсарни кунхи шкулта вĕренекенсен шучĕ пĕчĕк пулнин тепĕр сăлтавĕ вăл – занятисем ирттерме вăхăт сахал уйăрнинче... Çапах тĕп сăлтав урăххинче – хуçасем хăйсем патĕнче ĕçлекенсене шкула çӳреме чараççĕ.

Çапла вара, публицист фактсемпе пулăмсене тата вĕсемпе çыхăннă лару-тăрăва тĕплĕн тишкерет. Унăн корреспонденцийĕсемпе статйисенче критика чылаях паллă вырăн йышăнать. Вăл хăй вăхăтĕнчи социаллă танмарлăхпа пусмăра курмасть мар. Акă, «Вяткăри вырсарни кунхи шкул пĕрремĕш çур çулта» статьяра Золотницкий ал ăсталăха

вĕренекенсем праçник кунĕ те вăхăтпа хăйсене кирлĕ пек усă курма пултарайманнине палăртать. Пĕрисене мастерскойра дневальнăя лартаççĕ, теприсене килте пулăшма хăвараççĕ, виççĕмĕшсене праçник кунĕсенче те тӳлемесĕр ĕçлеттереççĕ. Çавăншăн публицист хуçасене сивлет, анчах тӳрĕ çивĕч сăмахпа мар, систерсе, вăлтса каласа.

Акă пĕр тĕслĕх: «... Хуçасем арçын ачасене шкула мĕн пирки яманнине пĕлес килет: вĕренекенсем хăйсенчен ăслăрах пуласран е теплерен Ал ăстисен Уставне вуласран шикленеççĕ-ши, кирлĕ чухне пуçлăхсене çăхав çырса парасран хăраççĕ-ши (сăмахпа калани нимех те мар, ун çине ал сулма та пулать); тен, ĕç укçине чакарса панине асăрхамасăр хăварттарасшăн е вĕренекенсем, шкула 5-6 хут кайса, унта çепĕç пупленĕрен хăйсене хĕненине тӳсейми пуласси, е мĕн те пулин урăххи пăшăрхантарать-ши? анчах халлĕхе пĕлместпĕр - çавăнпа калама та кирлĕ мар, пĕлсен вара калăпăр [134]. Çапла йăвашлатать сивлекен сăмахсене автор.

Пĕтĕмĕшле илсен, Золотницкий хăй вăхăчĕшĕн мал туртăмлă публицист пулнă, пичетри сассипе телейсĕр шăпаллă вырăс мар халăхсене хӳтĕленĕ. Вулакансене вăл «урăх халăх çынни те çынах» пулнине ĕнентерет[135]. Унăн тĕп тĕллевĕ – вырăс мар халăхсене, çав шутра чăвашсене те, хутла вĕрентесси. Çутлăхшăн кĕрешекен публицист ачасене малтанхи вăхăтра тăван чĕлхепе вĕрентесси пирки çĕнĕ сăмах калать. Публицистика ĕçĕ Золотницкие çут ĕç задачисене татса пама пулăшнă. Унăн çут ĕçĕпе публицистикăри пултарулăхĕ пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă, пĕри теприне пулăшнă, иккĕшĕ пĕрле чăваш культурине малалла аталантарма май панă.

Чăваш çутлăх юхăмĕн пуçламăш тапхăрĕнчи публицистика пирки пĕтĕмлетсе каласан, çакна палăртса хăвармалла: ун чухнехи публицистсем хăйсем умне лартнă тĕллевсем пысăках пулайман. Çутлăхшăн кĕрешекенсен пĕрремĕш ăрăвĕ халăх тертленсе пурăннин сăлтавне тĕттĕмлĕхпе тĕшмĕшлĕхре курнă, çавăнпа хут вĕрентессине тата пĕлӳ сарассине хăйĕн тĕп тĕллевĕ тесе шутланă. Чăваш публицистикин малтанхи калчисем питĕ йывăр шăтса тухаççĕ, мĕншĕн тесен ку халăхăн ун чухне пресса мар, ятарлă çырулăх та пулман.

Пирвайхи чăваш публицисчĕсем прогрессивлă вырăс журналисчĕсем пулăшнипе кăна пичетре хăйсен сассине пама пултарнă. Вĕсене вырăс журналисчĕсем çырма вĕрентнĕ, хăйсен прессинче пичетлеме май туса панă. Чăваш публицистики хăйĕн аталанăвĕнче вырăс общество шухăшлавĕн мал ĕмĕтлĕ туртăмĕсен йĕрĕпе пынă, вырăс публицистики ӳсĕмĕн никĕсĕ çинче аталаннă.

# ЧĂВАШ ПУБЛИЦИСТИКИНЧЕ ÇУТЛĂХПА ДЕМОКРАТИ ТУРТĂМĔ ВĂЙЛАННИ /1867 - XIX ĔМĔР ВĔÇĔ/

## Чăвашсене наци çулĕпе аталантармалли программа И.Я.Яковлевăн публицистикăри пултарулăхĕнче

В.И.Ленин, РКП(б) Х съездĕнче ЦКК членне суйланă Т.С. Кривов чăваш пулнине тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннине пĕлсен [136] унпа калаçнă чухне ку шкула никĕсленĕ И.Я.Яковлев çинчен çапла калать: «Паттăр чун-чĕреллĕ çав çын. Мĕнле йывăрлăхсенче тăван халăхне аллă çул çутталла туртнă!» [137].

Чăваш халăхне çутта кăларассишĕн ырми-канми кĕрешнĕ паттăр – И.Я. Яковлев (1848-1930) нумай енлĕ ĕçĕ-хĕлĕпе хăй вăхăтĕнчи çынсене теç мар, пире те тĕлĕнтерет, савăнтарать. Чаплă педагог пулнипе пĕрлех вăл шкулта вĕренмелли кĕнекесем çырса кăларнă, халăх юрри-сăввисене, юмах-халапĕсене пухнă, ача-пăча валли кĕске калавсем хайланă, вырăсларан чăвашла куçарнă, кунсăр пуçне хаçат-журналта публицистика произведенийĕсем пайтах пичетленĕ.

Иван Яковлевич Яковлев Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва уесĕнче Кăнна Кушкинче (халĕ Тутар АССРĕнчи Теччĕ районĕ) чухăн хресчен çемйинче çуралнă, çуралсан темиçе кунранах сĕм-тăлăха тăрса юлнă. Ăна Пахом Кириллов хресчен усрава илет, ырă кăмăллă ашшĕ ывăлне пулать. Севастопольте хӳтĕлесе паттăра тухнăскер, усрав ывăлне хуçалăха юрăхлă çын тума тăрăшать, ачаранах ĕçе хăнăхтарать. Çиччĕре-саккăртах Иван сӳрене , сухана та çӳрет, вырма та хăнăхать, çăпата хуçма вĕренет.

Иван 1856-1860-мĕш çулсенче Пăрăнтăкри удел училищинче вĕренет. Лайăх вĕреннĕрен ăна Чĕмпĕре, арçын гимназийĕ çумĕнче çĕнĕрен йĕркеленĕ çĕрвиçевçисемпе таксаторсен класне яраççĕ. Тăвата çултан вăл хăй тĕллĕн ĕçлекен çĕр виçевçи пулса тăрать. Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи ялсем тăрăх çĕр виçсе çӳреме тытăнать. 1867 çулта гимназин V класне кĕрсе, 1870 çулта унтан ылтăн медальпе вĕренсе тухать. Çав çулхинех Яковлев Хусан университетне вĕренме каять. Унта вĕреннĕ вăхăтра чăвашсен çĕнĕ çырулăхне пуçарса ярас ĕмĕтне пурнăçа кĕртет. 1871 çулта чăваш алфавичĕ тăвать. Çав алфавитпа усă курса, чăвашла букварь пичетлесе кăларать. Ку кĕнеке часах пур шкулсене те çитет. Çавăн тăрăх ачасем тăван чĕлхепе вĕренеççĕ. Хусан университетĕнчен Яковлев 1875 çулта вĕренсе тухать, ăна Хусан вĕренӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторне лартаççĕ. Вăл малашнехи пĕтĕм кун-çулне чăвашсене çутта кăларас, тăван

халăх культурине хăпартас тата унăн пурнăçне çăмăллатас ĕçе панă
И.Я.Яковлев тăрăшнипе чăваш шкулĕсем нумай уçнă, вĕсенче ĕçлеме
Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче учительсем хатĕрленĕ. Çак ĕçре ăна И.Н
Ульянов педагог-демократ тăванла пулăшнă.

Яковлев халăхшăн тăрăшни патша самодержавине килĕшмен. Округри чăваш шкулĕсен инспекторĕн должноçне 1903 çулта пĕтернĕ. Яковлев Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн инспекторĕнче çеç юлнă. Тем тери йывăр пулин те, вăл хăйĕн пархатарлă ĕçне пăрахман. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче Яковлев 1922 çулччен ĕçленĕ, кайран Мускавра пурăннă, унтах 1930 çулта вилнĕ.

Феодализм йĕрки йăшни, капитализм аталанма тытăнни Раççейре XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче уйрăмах вăйлă палăрать. Унпа пĕрлех революцилле рабочи класăн йышĕ ӳсет. Пусмăрлă пурнăç ĕçхалăхне вăйлăрах та вăйлăрах тарăхтарать. Хресчен пăлхавĕсен хисепĕ çулсерен хушăнать. Патша правительстви халăх вăй илсе пурнăç йĕркисене хăйне майлă улăштарма тытăнасран хăраса ӳкет; çĕр-шывра пуç пулса тăрассине хăй аллинчен вĕçертес мар тесе, ирĕксĕрех хăй ăссĕн улшăнусем тума тытăнать. 1861 çулхи февралĕн 19-мĕшĕнче крепостла правăна пăрахăçласси çинчен манифест кăлараççĕ. Манифест хресченсене çĕр улпучĕсене тӳррĕн пăхăнса тăрассинчен хăтарать. Хыснана пăхăнса тăнă хресченсене, çав шутра чăваш хресченĕсене те, хăшпĕр çăмăллăхсем парам пекки тăвать.

Çак реформа хыççăн çĕр-шывра халăха хут вĕрентес енĕпе те хăшпĕр улшăнусем пулса иртеççĕ. «Пуçламăш училищĕсен йĕркисене» туса хатĕрлеççĕ [138]. Çĕнĕ йĕрке прихутри тата миссионерла шкулсемпе пĕрлех чиркӳпе çыхăнманнисене те уçма ирĕк панă. 1870 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче «Ют йăхсене хут вĕрентмелли майсен правилисене» йышăнаççĕ[139]. Ун тăрăх вырăс мар халăх ачисем валли уçнă шкулсен кĕçĕн класĕсенче тăван чĕлхепе вĕренме ирĕк параççĕ.

Çакăнпа пĕрлех патша правительстви вырăс мар халăх ачисем самодержавие хирĕç пыракансем пуласран питĕ хăранă. Çавăнпа вăл вырăс мар шкулсене хăйĕн аллинче çирĕп тытнă. «Ют халăхсем» валли чиркӳсем уçнă, тĕн кĕнекисем ытларах кăларма пикеннĕ. Тĕн вĕрентĕвне сарас тĕллевпе тăван чĕлхепе вĕрентме те ирĕк панă. Чăрмавсем пысăк пулнă пулин те, тăван чĕлхепе усă курма ирĕк пани чăваш çырулăхĕпе илемлĕ литературине тата публицистикине аталанма çул уçнă.

Яковлев ача-пăча валли кĕске калавсем çырнă, вырăсларан чăвашла куçарнă. Унăн произведенийĕсемпе куçарăвĕсем «Букварь для чуваш» кĕнекере пичетленсе пынă. Чăваш ачисен букварĕ 1872-1919 çул-

сенче 33 кӑларӑмпа тухнӑ. Унта «Автан», «Арман туни», «Чакак» калавсем, «Сармантей» юмах тата ытти произведенисем те пичетленнӗ. И. Яковлевӑн ача-пӑча калавӗсем сюжечӗпе тата темипе Л. Толстой, К. Ушинский, И. Крылов произведенийӗсене ҫывӑх тӑраҫҫӗ. Вӗсем ӗҫе юратма, аслисене хисеплеме, тавҫӑруллӑ пулма вӗрентеҫҫӗ, ачасен пӗлӗвне ӳстереҫҫӗ, тавра курӑмне сараҫҫӗ.

Яковлевӑн илемлӗ литературӑри ӗҫӗ чӑваш ачисем валли букварь, шкулта тата килте вуламалли кӗнекесем кӑларассипе ҫыхӑннӑ пулсан, тӑван халӑх шӑпи пирки пӑшӑрханни, ӑна ҫутта кӑларассишӑн тата культурине ӳстерессишӗн тӑрӑшни унӑн публицистикине ҫуратнӑ. Прессӑра вӑл гимназие кӗрес умӗн пичетленме пуҫлать. Пирвайхи произведенийӗ – «Чӑваш уявӗ учӳк»[140].

Яковлев периодика пичетне хутшӑнасси ҫав вӑхӑтра «Симбирские губернские ведомости» тата «Справочный листок г. Казани» хаҫатсенче чӑвашсен пурнӑҫне тата йӑли-йӗркине пӑсса кӑтартакан статьясем ҫапӑнса тухнинчен килнӗ. Тӗслӗхрен, А.Пантусов «Кӑрмӑш уесӗнчи чӑвашсен тӗшмӗшлӗхӗ» статья пичетленӗ [141].

Унта вӑл чӑвашсене ӗненмелле мар мӗскӗн те тӑрлавсӑр туса кӑтартнӑ. Яковлев хӑй В Магницкий «Чӑвашсем ҫӗнӗ ҫула (сурхурие) уявлани» статйине асӑнать [142], ӑна хирӗҫлесе каламаллисем пуррине палӑртать. «Казанский справочный листок» хаҫатра, – ҫырать вӑл, – эпир чӑваш уявӗ сурхури ҫинчен ҫырса кӑтартнине вуларӑмӑр... Пирӗн шутпа, ҫав статья авторӗ сурхури уявне ытла та пысӑка хурать [143].

Чӑваш халӑхӗ епле, ӑна ҫав халлӗн кӑтартмалла пулнӑ вулакансене. Ҫак тӗллеве пурнӑҫа кӗртет те ӗнтӗ Яковлев асӑннӑ очеркра. Ку произведенире хӗрӳллӗ полемика пытанса тӑрать. Учӳк халӑх йӑлийӗркине ҫирӗппӗн кӗнӗ питӗ чаплӑ уяв пулнине кӑтартнӑ унта. «Ӗмӗрсем хушши ирттерекен ҫак калама ҫук лайӑх уяв киремете пуҫ ҫапас йӑларан тӑрса юлнӑ, вӑл тӗрӗс-тӗкел сыхланнипе чӑваш чӑнласах мухтанать...» – пӗлтерет Яковлев очерк пуҫламӑшӗнчех.

Уявӑн тӗнпе ҫыхӑнман енне – тӗрлӗ вӑйӑсене, вӑй тата ҫивӗчлӗх енӗпе ӑмӑртнине автор уйрӑмах илемлӗ ҫырса кӑтартать. Чӑвашсен икӗ уявне – сурхурипе учӳка – танлаштарни вулас кӑмӑла ӳстерет. Сурхури – яш-кӗрӗмӗн хӗллехи уявӗ. Ун чухне юмӑҫ пӑхасси те пулать. «Пирӗн шутпа, сурхури тӗнпе пачах ҫыхӑнмасть. Ку вӑл тыр-пул епле пуласси ҫинчен юмӑҫ пӑхса тавҫӑрас шутпа авалтанпах ирттерекен йӑла кӑна. Тепӗр тесен, чӑвашсем ташласа савӑнма пухӑнас йӑлана та сурхури теҫҫӗ», – ҫырать автор. Вӑл малалла ҫапла тӑсать: «Ӑнланмалла ӗнтӗ, сурхурие уявлани, эпир ҫак сӑмахпа усӑ курма килӗшетпӗр пулин те, нимӗнле усӑ та кӳмест: ни тӗн енӗпе, ни общество

пурнӑҫӗнче». Яковлев-этнограф кунта тӗрӗссине калать: сурхури вӑхӑтӗнче парне кӳмеҫҫӗ, кӗлтумаҫҫӗ, общество совечӗсене пухмаҫҫӗ.

Ку уяв ҫӗр ӗҫӗпе выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессине хӳтӗлекен турӑсене пуҫ ҫапнӑ май пуҫланса кайнӑ. Юмӑҫ пӑхасси те асамлӑ вӑйсене ӗненнипе ҫыхӑннӑ. Ҫав вӑйсене этем ӑнланма пултараймасть имӗш. Вӗсен тӗллевӗсене юмӑҫ пӑхса кӑна пӗлме пулать тесе шутланӑ. Ҫавнашкал тӗшмӗшлӗх акӑ мӗн патне илсе пынӑ: тертленсе пурӑнакан ҫынсем пурнӑҫӑн хуҫи хӑйсем пулнине туйма пӑрахнӑ. Юмӑҫ пӑхассипе ҫыхӑннӑ сурхури праҫникӗ обществӑна чӑнах та усӑ кӳмен. Ҫапла ӑнланмалла Яковлевӑн маларах илсе кӑтартнӑ шухӑшне.

Учӳк пачах урӑхла уяв шутланнӑ. Вӑл чӑвашсен пурнӑҫӗпе те, вӗсем киремете пуҫ ҫапассипе те тачӑ ҫыхӑннӑ. Чӑваш ӑна «питӗ пысӑка хурать», «ку уявра чӑваш нацийӗн мӗнпур уйрӑмлӑхӗсем, киремете пуҫ ҫапасси тата общество пурнӑҫӗн пӗтӗм никӗсӗсем туллин палӑраҫҫӗ». Учӳка уйри ӗҫсем умӗн ирттернӗ. Кунта хресченсем пӗрле ӗҫлесси, пӗрпӗрне пулӑшасси ҫинчен калаҫса татӑлнӑ. Чухӑнсем вара хулӑн енчӗклисем патӗнче тарҫӑра ӗҫлеме кӗрӗшнӗ.

Уяв ӳкерчӗкӗсене репортаж калӑпӗпе туса, эпизодсен чӗрӗлӗхӗпе автор вулакан тимлӗхне тыткӑнлать. «Вӑкӑр е ӗне пӗҫерме кӑвайт хураҫҫӗ... – ҫырать Яковлев. – Парне кӳмелли аш янӑ хурансем айӗнче вут ҫӗрӗпех ҫунать; парнене ҫӗрӗпех тенӗ пек пӗҫереҫҫӗ; ҫав вӑхӑтра кашниех хӑй пӗлнӗ пек савӑнать: хӗрсемпе каччӑсем ташлаҫҫӗ, юрлаҫҫӗ; пур ҫӗрте те шӑв-шав тата кулни илтӗнсе тӑрать; яш-кӗрӗм вӑй виҫет: кӗрешеҫҫӗ. Стариксем хӑйсене тӑнлӑ-пуҫлӑрах тытаҫҫӗ: ушкӑнӑн-ушкӑнӑн пухӑнса ларнӑ та, сӑра ӗҫкелесе, хӑйсен ӗҫне-хӗлне сӳтсе яваҫҫӗ».

Паллах, очеркӑн тӗп пӗлтерӗшӗ халӑх уявне илемлӗ ҫырса кӑтартнинче мар. Унӑн пӗлтерӗшӗ мӗн тери пысӑккине тата ҫав вӑхӑтшӑн мӗн тери кирлине уҫҫӑн ӑнланма чӑвашсем нумай вӑхӑт мӗнле условисенче пурӑннине лайӑх пӗлмелле. Вӗсен шӑпи питӗ йывӑр пулнӑ. Патша правительстви Атӑл тӑрӑхӗнчи халӑхсене, ҫав шутра чӑвашсене те, вырӑслатас политика тытса пынӑ, ирӗксӗрлесех Христос тӗнне йышӑнтарнӑ. Очеркран эпир Яковлев ҫав тӗн ҫине епле пӑхасси ку вӑхӑт тӗлне ҫирӗпленсех ҫитейменнине куратпӑр. Киремете пуҫ ҫапас йӑла-йӗркене вӑл ӑшшӑн ҫырса кӑтартать, ҫав йӑла-йӗрке тарӑн тымарсем янине палӑртать. Ун шучӗпе, ку авалхи йӑла-йӗркене ирӗксӗрлесе пӑрахтарни вырӑнлӑ мар.

«Чӑваш уявӗ учӳк» очеркра Яковлев тӑван халӑх пурнӑҫне, культурине, йӑли-йӗркине сӑнавлӑ куҫпа тишкерет, ҫав вӑхӑтрах ун майлӑ пуласшӑн. Ку произведени пӗлтерӗшӗ тата акӑ мӗнре: ӑна автор Чӗмпӗрте чӑваш шкулӗ уҫма хатӗрленнӗ вӑхӑтра ҫырнӑ. Унӑн тӗллевӗ – вулакан-

ра чăваш халăхне пулăшас туйăм вăратасси. Хулари прогрессивлă интеллигенци пулăшнипе çав шкул тепĕр çур çултан уçăлнă.

Яковлев 1867 çулхи майăн 13-мĕшĕнче «Симбирские губернские ведомости» хаçатра Золотницкий хатĕрлесе Хусанта кăларнă чăвашла пĕрремĕш календарь пирки рецензи пичетлет. Малтан рецензент кăларăмра мĕн пуррипе паллаштарать, «ăна-кăна пĕлсех кайман тата сахал вĕреннĕ чăваш халăхĕшĕн» календарь усăллине палăртать, унăн çитменлĕхĕсене те кăтартать. «Унăн авторĕ, - çырать Яковлев, - чăваш тавра курăмне шута илмест: çынсем пĕлсех кайман фактсене ăнлантарса памасть, çавăнпа вулакан хăшне-пĕрне ăнкараймасть; чăваш чĕлхишĕн ют сăмах çаврăнăшĕсемпе усă курать; пĕлекен ăнлавсене палăртма тивĕçлĕ сăмахсем тупаймасть, «çакна пула шухăш пĕлтерĕшĕ йăлтах пăсăлать».

Рецензент тата çакна палăртать: чăваш чĕлхинчи хăйне уйрăм сасăсене те Золотницкий вырăс саспаллийĕсемпе паллă тăвать. Ку, паллах, ăнăçлах мар. Яковлев вырăс графики никĕсĕ çинче чăваш алфавичĕ тăвас шухăша çак рецензире пуçласа калать: «Эпĕ çапла шутлатăп: чăваш чĕлхинчи сасăсене палăртма ятарласа хăш-пĕр паллăсем йышăнни кирлĕ, вĕсемсĕр май килмест, чăваш чĕлхинчи хăш-пĕр сасăсене вырăс саспаллийĕсем тĕрĕс палăртаймаççĕ». Çапла ĕнтĕ, рецензент чăвашсен пĕрремĕш календарĕ çине критик куçĕпе пăхать, кĕнекесене халăх ăнланмалла хатĕрлесе кăларма сĕнет, тăван халăх çырулăхне çĕнĕлле йĕркелесе ямаллине палăртать.

Çырма пуçлакан авторăн пĕрремĕш рецензийĕ пирки тĕплĕнрех чарăнса тăнин тепĕр сăлтавĕ акă мĕнре: çак рецензи анлă сарăлнă пĕр шухăш тĕрĕс маррине кăтартать. Шкулсенче ачасене тăван чĕлхепе вĕрентессине хирĕç Яковлев статья пичетлесе кăларнă имĕш. Тĕслĕхрен, Н.И. Ильминский хăй вăхăтĕнче çапла çырнă: «... Вăл [И.Я. Яковлев] хăйĕн тăван чĕлхи майлă пулманнине эпир çакăнтан куратпăр: 1868 çулта вăл шкулсенче чăваш чĕлхипе вĕрентессине хирĕç статья çырнă, ăна çав вăхăтрах «Симбирские губернские ведомости» хаçатра пичетлесе кăларнă» [144].

Ильминский хыççăнхи тĕпчевçĕсем те çавнах калаççĕ. Юлашки вăхăтри шыравсем çакна кăтартрĕç: ун пек статья пачах пулман иккен [145]. Пулма та пултарайман: хăйĕн пĕрремĕш рецензийĕнчех Яковлев тăван чĕлхене, тăван çырулăха аталантарассишĕн тăрăшни курăнать.

Иван Яковлевăн публицистикăри ĕçĕ-хĕлĕ 1867 çулта пуçланнă та 1922 çулччен пынă. Тăван халăх историйĕ тата публицист тĕнчекурăмĕ епле аталанса пынине никĕсе хурсан, унăн пултарулăхĕнче тăватă уçăмлă тапхăр куратпăр: 1. Пултарулăх çулĕн пуçламăш тапхăрĕ (1867-1875 çç.) 2. Чăвашсене наци çулĕпе аталантармалли программа туса хатĕрленĕ тапхăр (1875-1894 çç ). 3. Чăваш шкулĕпе пичете хĕсĕрлесси вăйланнă çул-

сенчи публицистика (1894-1917 çç.). 4. Совет влаçĕ çулĕсенчи пултарулăхĕ (1917-1922 çç.).

Пултарулăх çулĕн пуçламăш тапхăрĕнче Яковлев маларах асăннă «Чăваш уявĕ учӳк» очеркпа «Çулталăк кĕнеки» рецензисĕр пуçне ытти произведенисем те чылай çырать. Çав шутра «Театр витĕмлĕхĕ» (1870), «Тĕттĕм халăхăн кивĕ йăлисемпе тĕшмĕшлĕхĕ» (хăçан çырни паллă мар), «Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн малтанхи утăмĕсем» (1870), «Шкул-çемье тата унăн нушисем» (1870), «Çырăва вĕренме тытăнакана» (1872) произведенисене асăнмалла. Çак произведенисем авторăн тĕнче курăмĕ епле çирĕпленнине сăнама май параççĕ. Пуçламăш тапхăрта çырнисенчен чылайăшĕ халăха çутта кăларас задачăсемпе тачă çыхăнман, анчах вĕсенче пуринче те халăх хутне кĕни, ăна тĕттĕмлĕхпе тĕшмĕшлĕхрен хăтарасшăн пулни яр-уççăн палăрать.

Малтанхи произведенийĕсене Яковлев вырăсла çырать. Тăван чĕлхепе çырма пуçлассси чăваш ачисем валли букварь тата шкулта вуламалли кĕнекесем хатĕрлесе кăларассипе çыхăннă. Ку ĕçе вăл иртнĕ ĕмĕрĕн çитмĕлмĕш çулĕсен пуçламăшĕнче тытăннă. Пичетри малтанхи произведенийĕсенче Яковлев тĕттĕмлĕхре пурăнакан ĕçчен чăваш халăхĕ çинчен прогрессивлă вырăс интеллигенцине каласа парасшăн пулнă. Унăн пулăшу ыйтас кăмăл палăрать. Малалла вăл Чĕмпĕрте чăмăртаннă чăваш шкулне официаллă йĕркепе йышăнтарасси, ăна аталантарма укçа-тенкĕ тупасси пирки шухăшлать.

Яковлевăн илемлĕ литературăпа публицистикăри ĕçĕ-хĕлĕ тематика енчен нумай тĕрлĕ пулнипе палăрса тăрать. Унăн пултарулăхĕ аталанасси историпе этнографи очеркĕнчен тытăнса чăвашсен çĕнĕ шкулĕн нушисем çинчен çырнă çырусем-статьясем таранах, çутçанталăкпа ял пурнăçĕнчен илнĕ кĕске тĕрленчĕксенчен çынсен йăла-йĕркери çитменлĕхĕсене кăтартакан кулăшла калавсем патнех çитет.

Чăвашсене наци çулĕпе аталантармалли программа туса хатĕрленĕ тапхăрта (1875-1893) Яковлевăн публицистикăри пултарулăхĕ çĕнĕ пусăма çĕкленет. Хусан вĕренӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторне лартнă май Яковлев умĕнчи тĕллевсем анлăланаççĕ. Пуçламăш тапхăрта вăл халăха çутта кăларассин задачисене пурнăçлама çирĕп никĕс хывнă. Сăмахран, Чĕмпĕрти шкулта чăваш учителĕсем хатĕрлессине пуçарса янă. Малашнехи тапхăрта вара педагог тăван халăх валли çĕнĕ шкулсем уçасшăн, чăваш хĕрарăмĕсене вĕрентессине йĕркелесшĕн. Хăйĕн программин малтанхи ӳкерчĕкне «Хусан вĕренӳ округĕнчи чăвашсене хут вĕрентессине аталантармалли сĕнӳсем» докладлă çырура парать[146]. Кунта автор чăвашсем валли çĕнĕ шкулсем уçас тата пуррисене вăй илме пулăшас ыйтусене хускатать. «Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çумĕнче хĕрарăм училищине йĕркелени» статьяра чăваш хĕрарăмĕсене те

вĕрентме кирлине фактсемпе çирĕплетсе ĕнентерет[147]. Ку вăл Яковлевăн тĕп хулара пичетленсе тухнă пĕрремĕш статйи пулнă. Çав çулах унăн «Чĕмпĕрти чăваш учителĕсен шкулĕ тата ун çумĕнчи хĕрарăм училищи» ятлă статйи миссионерсен обществин кăларăмĕнче çапăнса тухать[148]. Хĕрарăмсене вĕрентес ыйтупа Яковлев пичетре каланă сăмахсем кăлăхах пулман, прогрессивлă общественноçа халăха хутла вĕрентессин çĕнĕ задачисем çине тимлĕх уйăрма хистенĕ.

Кулленхи ĕçре пиçĕхнĕ май Яковлев чăваш çутлăх юхăмĕн никĕсĕсене хывать, çав никĕссене вăл Атăл тăрăхĕнчи вырăс мар ытти халăхсемшĕн те юравлă хатĕрлет. Çут ĕç ыйтăвĕсене татса парассишĕн тăрăшнипе пĕрлех Яковлева чăвашсен йывăр шăпи ытларах та ытларах шухăшлаттарать, тăван халăха наци çулĕпе аталантармалли программа туса хатĕрлеме хистет. Çак тапхăрта автор пичетлекен материалсен содержанийĕ тарăнланать, вĕсен форми пуянланать.

Хăйĕн обществăлла-гражданла ĕçне-хĕлне тата илемлĕ литературăпа публицистикăри пултарулăхне Яковлев чăвашсене наци çулĕпе аталантарас тĕллеве пурнăçлама панă: «халăх массисен мĕштĕркке те тĕттĕм вăйĕсем хушшине çутă кĕртмелле тата культура сармалла»[149], ар çынсене тата хĕрарăмсене хут вĕрентессине кашни ялтах йĕркелесе ямалла, тăван халăхăн наци ăнланулăхне вăратмалла, ăна майĕпен-майĕпенех вырăс культури тата тĕнчери малта пыракан культура шайне çĕклемелле, хресчен хуçалăхне агротехника вĕрентнĕ пек тытса пымалла, пĕтĕм ĕç халăхĕн пурнăçне лайăхлатма тăрăшмалла.

Кăткăс лару-тăрура ĕçлеме тивнĕ Яковлева. Халăха хут вĕрентессине анлăрах та анлăрах сарса пынă май консервативлă чиновниксемпе пуп таврашĕсем ун çине вĕçĕмсĕр тапăнма тытăнаççĕ. Вăл туса хатĕрленĕ чăваш алфавитне тиркеççĕ, куçарнă кĕнекесен пахалăхĕ пирки чăркăшаççĕ, шкулта ачасене тăван чĕлхепе вĕрентнине хирĕç тăраççĕ т. ыт. те. Çак тапхăр вĕçĕнче ăна «хăй ирĕккĕн хăтланать, службăра тивĕççĕр ĕçсем тăвать» тесе айăплама пăхаççĕ.

Яковлевăн публицистикăри пултарулăхĕн виççĕмĕш тапхăрĕнче (1894-1917) Яковлев çине пушшех вăйлă тапăнма пуçлаççĕ. Реакцилле-бюрократла чиновниксемпе пуп таврашĕсем чăваш шкулĕпе чăваш пичетне тĕрлĕ енчен хĕсеççĕ. Педагог-публицист ятне ирсĕр элекпе варалама хăтланаççĕ, ăна политика енĕпе шанчăксăра кăларасшăн тăрăшаççĕ. Çав тĕллевпе çырса кăларать те ĕнтĕ С.П.Яковицкий «Ют халăхсем валли земствăсем уçнă шкулсем çинчен земство пуçлăхĕн заметки» статйине кĕпĕрнери официаллă пичетре»[150]

Хăйĕн пурнăç ĕçĕ çине тапăнакансене хирĕç Яковлев полемика статйисемпе ответлет. Унăн публицистикăри пултарулăхĕн виççĕмĕш тапхăрĕ çавăн йышши произведенисемпе пуян. Вĕсенчен пĕри - «Вырăс мар ха-

лăхсен земствăсенчи шкулĕсем çинчен земство пуçлăхĕ С.Я. çырнă заметка пирки»[151]. Публициста хăй пирки суя сăмахсем сарни мар, нимрен ытла чăваш шкулĕн интересĕсене ним вырăнне те хуманни тарăхтарать. Халăха хут вĕрентес ĕçри опычĕпе усă курса тавлашать автор элекçĕпе, çавăнпа унăн шухăшĕсем витĕмлĕ те ĕнентерӳллĕ. Вирлĕ хурав Яковицкие кăштах тăна кĕртнĕ пек пулать. Çакна унăн иккĕмĕш статйи кăтартать[152]. Унта вăл ытлах чăрсăрланайман.

Чĕмпĕр архиерейĕ Никандр хăйпе пĕр шутлă Сергей (А.Титов) иеромонахпа пĕрле 1899 çулта Яковлев çинчен синода çăхав çырса янă. Çав çулхи ноябрьте-декабрьте ку çăхава, статья пек туса, «Миссионерское обозрение» журналта «Вăтам Атăл тăрăхĕнчи ют халăхсем хушшинче чиркӳпе прихут тата шкул ĕçне лайăхрах та тĕллевлĕрех йĕркелес ыйту тавра» ятпа пичетлесе кăларнă[153]. Çав çăхавçăсен элекне тата суя сăмахĕсене Яковлев «Атăл тăрăхĕнчи урăх халăхсем хушшинчи ĕç пирки» памфлетра тăрă шыв çине кăларать[154].

Ку произведение программăллă теме пулать, мĕншĕн тесен халăха вĕрентес ĕç çине автор хăй епле пăхнине унта туллин кăтартнă. «Ют халăхсен миссийĕ», «ют халăхсен ыйтăвĕ» ăнлавсене вăл йăлтах урăхла пĕлтерĕшсем панă. Эхер патша тарçисем вырăс мар халăхсене ирĕксĕрлесех вырăслатассишĕн çине тăрса кĕрешнĕ пулсан, Яковлев вара çавна хирĕç «ăс-тăн енĕпе вырăслатас» программа кăларса тăратнă. Çак программăн тĕп тĕллевĕ «урăх халăхсене вырăс халăхĕпе ăс-тăн енчен пĕрлештерессипе тата пĕрремĕшсене иккĕмĕшĕн шайне çĕклесси» пулнă. Ку вăл темиçе халăхран пĕр халăх тăвассине мар, урăх халăхсен культурине вырăс культури таран çĕклессине, çакна пĕрешкел тĕн - православи никĕсĕ çинче тата аслă халăх чĕлхине пĕлни урлă тăвассине пĕлтернĕ.

«Атăл тăрăхĕнчи урăх халăхсем хушшинчи ĕç пирки» памфлет Яковлевăн пысăк калăплă чи лайăх произведенийĕ шутланать. Ăна вăл хăйĕн пултарулăхĕн аталанăвĕ çӳллĕ шая çитнĕ тапхăрта çырнă. Памфлетра унăн таланчĕн уйрăмлăхĕсем, полемика тăвассин хăй евĕрлĕхĕ уçăмлăн палăраççĕ.

«Хусан вĕренӳ округĕн управленийĕ çумĕнчи урăх халăх шкулĕсен округри инспекторĕсен должноçĕсем çинчен» статйине те (1905) Яковлев полемика туртăмĕпе çырнă[155]. Патша правительствин канцелярийĕсенче çак должноçсене питĕ вăрттăн пĕтерсе хураççĕ, ун çинчен пачах кĕтмен çĕртен пĕлтереççĕ. Çапла туни влаçра тăракансем вырăс мар халăхсене çутта кăларакансен ĕçне-хĕлне шанманнине, вак халăхсене хутла вĕрентессишĕн пулманнине кăтартать. Реакционерсем чăваш шкулĕсем çине хаярлансах тапăнаççĕ, тăван чĕлхене ытларах та ытларах

ĕсеҫҫĕ. Вĕсен ҫавнашкал хăтланăвне Яковлев хăйĕн статйинче тăтăклăн сивлет, урăх халăхсене те хут вĕрентмелле текен шухăша ҫирĕплетет.

Вырăссен пĕрремĕш революцийĕ хыҫҫăнхи хаяр реакци условийĕсенче халăха хут вĕрентес ĕҫе официаллă политика идейисемпе шанчăклă никĕслени кирлĕ пулнă. Ҫакна шута илсе, хăй уҫнă вĕренӳ заведенийĕ 40 ҫул тултарнă май Яковлев 1908 ҫулта «Чĕмпĕрти чăваш учителĕсен шкулĕн кĕске очеркĕ» брошюра пичетлесе кăларать.[156] Унта автор Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ умĕнче виҫĕ тĕп тĕллев тăни ҫинчен ҫырать. Пĕрремĕш тĕллев - «вырăс мар халăхăн аталану ҫулĕ Христос тĕнĕ вĕрентĕвне йышăнасси патне илсе пымалла». Чăвашсен киремете пуҫ ҫапас авалхи йăли XIX ĕмĕрĕн юлашки чĕрĕкĕнче пĕтсе пынине Яковлев курнă. Ун вырăнне монотеизм (пĕр турра ҫеҫ ĕненесси) йышăнмалла пулнă. Вăл вăхăтра чăваш ялĕсенче виҫĕ тĕрлĕ тĕн - Христоспа Магомет тĕнĕ тата киремете пуҫ ҫапасси кĕрешнĕ. Яковлев Христос тĕнне суйласа илнĕ, мĕншĕн тесен вырăс халăхĕн ытларахăшĕ ҫак тĕне ĕненнĕ.

Чăвашсене вырăссемпе ҫывăхлатса пĕрлештересси иккĕмĕш тĕллев пулнă. Публицист икĕ халăх интересĕсем тачă ҫыхăннине, вырăс халăхне чаплă пуласлăх кĕтнине ҫирĕп шанса тăни ҫуратнă ку тĕллеве. XVI ĕмĕрте чăвашсем вырăс патшалăхĕпе ирĕксĕрленĕрен мар, хăйсен кăмăлĕпе пĕрлешнĕ. Чăваш тăрăхĕнче наци ыйтăвĕ империя туртса илсе пĕрлештернĕ тата вăйпа пăхăнтарнă ытти хăш-пĕр халăхăнни пек мар, урăхларах тăнă. Чăваш халăхĕ нимрен малтан хăй юлса пынине пĕтермелле – ăс-тăн культурине ҫĕклемелле, авалхи йăла-йĕркерен хăтăлмалла, хуҫалăха тытса пырас шая хăпартмалла, халăх пурнăҫне лайăхлатмалла. Чăвашсем умĕнче хăйне уйрăм патшалăх туса хурас тĕллев тăман. Яковлев ҫирĕплетнĕ тăрăх, вырăс халăхĕ - тĕнчери калама ҫук пысăк кӳлепе; унпа танлаштарсан, Атăл тăрăхĕнчи урăх халăхсем - пĕчĕк кĕлеткесем кăна. Вырăс халăхĕ - ытти халăхсен шанчăклă тусĕ, вăл хăй хыҫҫăн ыттисене те ертсе пырать. Публицист ҫапла шутлать: вырăс халăхĕн хуйхипе савăнăҫĕ - вĕсен хуйхипе савăнăҫĕ, унăн пуласлăхĕ - вĕсен пуласлăхĕ, унăн телейĕ - вĕсен телейĕ пулса тăмалла.

Вĕрентӳ ĕҫĕнче ачасен тăван чĕлхипе усă курасси - виҫҫĕмĕш тĕллев. Тăван чĕлхе пулăшнипе кăна ачасене ăнăҫлă вĕрентме, воспитани пама май пур. Тăван чĕлхепе хăйне евĕр культурăна аталантарма пулать.

Ҫӳлерехре асăннă виҫĕ тĕллев – вырăс культури ҫумне явăҫас тĕллевпе чăвашсем Христос тĕнне йышăнни, вĕсене вырăссемпе тата ытти халăхсемпе туслă пурăнма воспитани пани, шкулта тăван чĕлхепе усă курни – Яковлев ҫут ĕҫĕ ҫине епле пăхнине кăтартаҫҫĕ.

Яковлев пултарулăхăн виҫҫĕмĕш тапхăрĕ чи вăрăмми, чи йывăрри, ҫавăнпа пĕрлех чи тухăҫли пулнă. Вăл 23 ҫула тăсăлнă. Идея тĕлĕшĕнчи тăшманĕсемпе тавлашнă май педагог паха произведенисем, обществăл-

ла пĕлтерĕшлĕ çырусем çырнă. Вĕсенче автор ирĕксĕрлесе вырăслатас патша политики юравлă маррине кăтартать, вырăс мар халăхсене хут вĕрентмеллине çирĕплетет, ку ыйту çине тӳнтерле пăхакансене тăрă шыв çине кăларать, пуп таврашĕсем шкула пĕтĕмпех хăйсен аллине çавăрса илесшĕн пулнине хирĕç тăрать. Ку тапхăрта унăн пултарулăхĕнче полемика статйи тĕп вырăн йышăнать, ку жанр ăна идея тĕлĕшĕнчи тăшмансемпе кĕрешме пулăшать. Çак тапхăртах вăл «Чĕмпĕрти чăваш учителĕсен шкулĕнчи ял хуçалăх фермин 1912 çулхи ĕçĕ-хĕлĕ çинчен отчет», «Вăрçă тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ», ытти брошюрăсем пичетлесе кăларать. Чăваш хресченĕ питĕ чухăн пурăннине кăтартнăран тата çавнашкал ытти сăлтавсене пула ферма çинчен çырнă отчета вĕренӳ округĕн пуçлăхĕсем халăх хушшине сарма чарăççĕ. Пичетленĕ кĕнекене пĕр экземпляр хăварми Хусана ярса пама тивет.

Публицистикăпа илемлĕ литературăри пултарулăхĕн юлашки тапхăрĕнче (1917-1922) Яковлев хăйĕн çур ĕмĕр пынă ĕçне-хĕлне пĕтĕмлетет. Чаплă чăваш педагогĕн çут ĕçĕнчи ӳсĕмĕсене Совет влаçĕ çирĕплетет, вĕсене малалла аталантарма анлă çул уçса парать. Çакă вара Яковлева çĕнĕ вăйхăват хушать, унăн литературăри активлăхĕ ӳсет. Октябрь революцийĕ хыççăн В.И.Ленина виçĕ çыру, “Ульяновсен çемйи çинчен аса илни”, “Николай Иванович Ильминский” тата “Манăн пурнăçăм” мемуарсем çырать. Çав мемуарсене Чăваш кĕнеке издательстви 1982 тата 1983 çулсенче “Воспоминания” ятпа икĕ хутчен пичетлесе кăларчĕ. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн ректорĕ Л.П.Кураков академик тăрăшнипе çак кĕнеке 1997 çулта Мускавра туллин пичетленчĕ. Ку тапхăрта çырнă произведенисем хушшинче “В.И. Ленина - ăнлантаруллă çыру” (1919) уйрăмах палăрса тăрать. Ăна халăха çутта кăларас енĕпе педагог хăй мĕн туни çинчен çырнă отчет темелле. Çавăнпа пĕрлех ку произведени обществăпа политика ыйтăвĕсем çине автор епле пăхнине палăртмалли паха материал шутланать. Яковлев кунта патша империне “пулнă-иртнĕ бюрократла Раççей” ят парать, Совет влаçне халăх влаçĕ тесе хаклать.

“Чăваш халăхне пехил” уçă çырăва 1921 çулхи августра Яковлев вырăсла çырать, каярахпа ăна ывăлĕпе А.И.Яковлевпа пĕрле чăвашла куçарать. Ку çырури кашни сăмах-хĕрӳллĕ чĕнӳ, кашни сăмахĕ автор Тăван çĕр-шыва чун-чĕрипе юратнине палăртать. Яковлев патриотлăха хăйне майлă ăнланать. Ун шучĕпе, чăн-чăн патриотăн чи малтан вырăс халăхне чунтан хисеплемелле. “Вырăс халăхĕ - пит пысăк халăх, - çырать публицист. - Вăл ырă кăмăллă, ăслă: эсир ăна итлĕр, юратса пурăнăр. Унăн ăсийĕн вăйĕ, ырă кăмăлĕ, пурнăçа малалла ярас шухăшĕ хисепсĕр нумай, нихçан та пĕтес çук. Çак халăх сире тăван вырăнне хурса йышăннă, хăй çемйи тунă. Вăл сире пусмăрламарĕ, сире аяла хăвармарĕ... Эсир

малалла каяс ĕçре çак халăх сире çавăтса ертсе пыракан пултăр, ун хыççăн пырăр, ăна шанса тăрăр"[157].

Чăн-чăн патриотăн çавăн пекех тăван халăха юратмалла, ăна вĕрентмелле, çутта кăларассишĕн тăрăшмалла. Публицист чăвашсене туслă, тӳрĕ кăмăлпа пурăнма хушать. Ку уçă çыру пурнăçран уйрăлас чăвашăн çичĕ пехилĕ евĕрлĕ.

Яковлевăн литературăри пултарулăхне сăнарсемпе сăнсене (документ тĕрĕслĕхĕпе кăтартакан çынсене) уçăмлă ӳкерни пуянлатать. Пĕр-пĕр илемлĕ сăнар е уйрăм сăн час-часах унăн пĕтĕм произведенийĕн никĕсĕ пулса тăрать. Тĕслĕхрен, "А.И.Баратынский протоиерей" очерка (Хусан, 1895) вăл çапла йĕркеленĕ. "Манăн пурнăçăм" мемуарта вара документ тĕрĕслĕхĕпе ӳкернĕ персонажсен тулли галерейи тухса тăрать. Хăйĕн произведенийĕсенче кăтартма автор çынсене ытларах хура халăх хушшинчен, куллен ĕçре вăй хуракансен шутĕнчен суйласа илет. "Атăл тăрăхĕнчи урăх халăхсем хушшинчи пирки" памфлетри салтакран таврăнсанах хăйĕн килĕнче ял ачисене хут вĕрентме тытăннă Терентий Мартынов, "Пулă сĕрни" тĕрленчĕкри тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан пулăçсем, "Тĕлит-тĕлит Микулай" произведенири икĕ сум укçипе тем те тума ĕмĕтленекен каччă - çаксем пурте хура халăх хушшинчен, пурлă-çуклă пурнăçпа тертленекенсем. Çакăнтан "çутлăхшăн кĕрешекенсем героя демократизацилени уçăмлăн курăнать"[158].

Публицист ӳкернĕ сăнарсемпе сăнсем кăптăрмăшсем мар, питĕ хастар çынсем. Вĕсем хăйшĕн мар, халăхшăн тăрăшаççĕ. Çавăн пек çынсенчен пĕри - земство таврашĕнче ĕçлекен И.А. Горбунов. "Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн пысăк мар историйĕнче Пăва уесĕнчи тата Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи земствăсенче обществăлла ĕçре палăрнă пĕр вашават çын Иван Афанасьевич Горбунов хисеплĕ вырăн йышăнать... Ку çыннăн паха енĕ – вĕренни хресченшĕн усăллине тата кирлине шанса тăни. Унăн 1861 çулчченех пурнăçне, каярахри ĕçне-хĕлне ним япăххи те тĕксĕмлетмест, вăл тӳрĕ кăмăлпа пурăнать; катăк çур пус та хăвараймасăр, чухăнлăхра вилет, - çырать ун çинчен публицист"[159].

Çавăн пекех вăл Чĕмпĕрти пĕр улпут хĕрне, чăваш шкулне пулăшассишĕн тăрăшнă А.А.Глазовăна, ăшшăн сăнлать: "Ăна чи лайăх вырăс хĕрарăмĕсен шутне кĕртмелле, вăл çынăн хăй те лайăххăн ăнкарса çитермен пахалăхне хаклама, унăн ĕмĕтне хĕмлентерсе чĕртсе яма, хавшак кăмăла ĕçе-хĕле кӳлме пĕлет... Çак хĕрарăм пуçарнипе тата хĕрӳллĕн йĕркелесе пынипе, тĕрлĕ кăмăллă çынсемпе мĕн калаçмаллине тата вĕсене итлеттерме пĕлнипе шкул пурлăх енчен пĕрремĕш пысăк пулăшу илет. Вăл тăрăшнипе ирĕклĕн çырăнтарнă тăрăх малтанхи вĕренекенсем валли чылаях укçа пухăнать".

Халăхшăн тăрăшакансем çинчен публицист мухтаса та ырă сунса

çырать, вĕсене малашне те хастарлă пулма хавхалантарать. Вăл персонажсене темиçе паллăпах ĕнентерӳллĕ ӳкерет. Акă "Выртмара" произведенире çаран çине лашасене çитерме кайнă хресчен ачисем вут хураççĕ те, çулăмĕ çӳлелле пӳрт çӳллĕш каять. "Хăйсем пурте кашличĕ тусанĕпе цыгантан та хура пулнă, куç шуррисем анчах курăнаççĕ. Хăйсем çапах пĕр-пĕринчен тăрăхлакаласа кулса, вут йĕри-тавра чупкаласа çӳреççĕ. Шăри-шари, лăй-лай тăваççĕ: пĕтĕм çаран çĕр çĕмĕрлет, калăн, темĕн пулнă тейĕн"[160]. Пушар сӳнтерес шутпа килекенсене те автор вулакан куçĕ умне яр-уççăн кăларса тăратать: "Насуспа килекенсем пирĕн пата пырса чарăнчĕç те ни вăрçаймаççĕ, ни ятлаймаççĕ пире. Хăранипе шап-шурă шурса кайнă хăйсем. Пĕççисене шарт çапаççĕ..."[161]

И.Я. Яковлевăн çынсене çырса кăтартас ăсталăхне Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн преподавателĕ пулнă Н.И. Колосов çапла палăртать: "Церковные ведомости" хаçатра пичетленнĕ статьяна питĕ кăсăкланса вуларăм. Эсир Анастасипе Варвара Миронова сăнарĕсене çав тери чаплă ӳкернĕ"[162]. Кунта "Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çумĕнче хĕрарăм училищине йĕркелени" статьяри чăваш хĕрĕсен сăнĕсем çинчен сăмах пырать"[163].

Сăн е сăнар ĕненмелле те тулли пултăр тесе, Яковлев çынна тĕрлĕ енчен кăтартать. Акă, Пăва уесĕнчи Кивĕ Пăрăнтăкри Гаврила Иванович Мушкеева епле сăнланине тишкерер. Удельни училищинче вĕреннĕ чухне çамрăк Яковлев ун патĕнче пурăннă. Мушкеев кĕлеткине автор çапла ӳкерсе парать: вăл "вăтам пӳллĕ, тăлпан, сарлака хул-çурăмлă, вăйлăскер, çирĕп сывлăхлăскер"[164]. Яковлев çав çын хăйне çемьере, ытти çынсем хушшинче епле тытнине тĕплĕн кăтартать. Вăл пăхма сивлек, хăйне çирĕп  тытать, ыттисене те çапла тума хистет, апла пулин те çемьере никама те кӳрентермест. Ватă амăшне уйрăмах пысăк хисепе хурать. Сĕм-тăлăх ачана Яковлева тăванла юратать, ăна пӳрнепе те тĕкĕнмест. Мушкеев килти выльăх-чĕрлĕхе епле пăхнине те автор паллă тĕллевпе кăтартать. Кунта та пирĕн умра чăн-чăн вырăс хресченĕ - тăрлавлă хуçа, хисепе тивĕçлĕ çемье пуçĕ.

Çын ăс-хакăлĕн уйрăмлăхĕсенчен унăн ĕçченлĕхне автор малти вырăна хурать. Мушкеев ĕçе юрататъ çеç мар - унсăр пурăнма пултараймасть. Кирек мĕне те вăл хăвăрт, тăрăшса та хĕпĕртесе тăвать, пурне те паха тĕслĕх кăтартать. Унăн чунĕ пур ĕç патне те туртăнать теме çук - алă вăйĕпе тумаллине кăна кăмăллать. Суту-илӳпе кĕрмешмест - унашкал ĕçпе хăйĕн чысне вараласшăн мар. Сунара çӳресси илĕртмест. Мул пухса пуйма нихăçан та шутламан.

Çĕнни, усăлли вара Мушкеева яланах хăй патне туртать. Хурт-хăмăр тавраш çукчĕ унăн - ку ĕçе алла илме шут тытать. Малтан хурт пăхас ăслая вĕренет, унтан чаплă утар тăвать. "Гаврила сĕреке çыхма, пулă

ытмалли хатӗрсем тума пӗлместчӗ. Ун пек кӑмӑл ҫуралать те, ҫавсе-е хӑех питӗ лайӑх ӑсталама тытӑнать. Тир тӑвасси асра та пулман - ку ӗҫе те хӑнӑхать..."[165]. Мушкеев пурне те, ҫав шутра хӑй патӗнче хваттер-е пурӑнакан ачана та ӗҫе вӗрентет.

Ҫавӑн пекех вулакан Гаврила Иванович пирки ял-йыш мӗн шутлани-не те пӗлет: пурте ӑна хисеплеҫҫӗ, сума сӑваҫҫӗ. Юлашкинчен автор произведенири персонажа хӑй хак парать: "Пӗтӗмӗшле илсен, ҫӗре кӗнӗ Гаврила Мушкеев мана темӗнле вырӑс паттӑрӗ пек, ӑс-хакӑлпа йӗрке-ирпей тӗлӗшӗнчен кармашса ҫитейми улӑп пек курӑнса тӑрать, пӗр сӑ-махпа каласан, вӑл пур енчен те калама ҫук лайӑх, питӗ паллӑ вырӑс ҫынни пулнӑ"[166]. Ҫыравҫӑ шухӑшӗсем фактсенчен тухса тӑраҫҫӗ, пӗтӗмлетӗвӗсене вӗсемпе ҫирӗплетет, факчӗсене вара хӑй курнисене, хӑй сӑнаса тӗрӗсленисене илет.

Публицист пӗчӗк пулӑма ҫырса кӑтартнинчен пысӑк шухӑш патне илсе пырать вулакана. "Чӑваш шкулӗсен инспекторӗ пӗлтернӗ хыпар-сем" корреспонденцире Яковлев Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче тӗрлӗ халӑх ачисем килӗштерсе пӗрле вӗренни ҫинчен хӗпӗртесе каласа парать[167]. Урӑх халӑх ачисене вырӑс ачисемпе пӗрле вӗрентни вырӑсла вӗренес-сине хӑвӑртлатма пулӑшать, пӗр-пӗринпе ҫывӑхраххӑн паллашма тата туслашма май парать. Тӗрлӗ наци ҫыннисене Яковлев пӗр карта лар-тать, пӗр хак парать. Ҫапла вара, тӗрлӗ халӑх ачисем пӗр шкулта пӗрле вӗреннине ҫырса кӑтартни халӑхсене туслӑ пурӑнма чӗнекен паха про-изведени пулса тӑрать.

"Пулӑ сӗрни" пӗчӗк тӗрленчӗкре те (1885) тӗрлӗ халӑх ҫыннисем ҫин-чен сӑмах пырать. Виҫӗ халӑх ҫынни тӗрлӗ калаҫать, анчах вӗсене пӗрлештерекенни те пур: «вырӑс, тутар, чӑваш - пурте ҫын»[168]. Вӗсем пурте ӗҫ ҫыннисем, пӗр пек ӗҫ тӑваҫҫӗ. Шӑпи те вӗсен пӗрешкел. Эппин, тӗрлӗ халӑх ҫыннисен пӗр-пӗрне хисеплемелле, килӗштерсе, туслӑ пу-рӑнмалла - ҫапла каласшӑн автор хӑйӗн произведенийӗпе. Кунта та вӑл пӗчӗк эпизод пулӑшнипе вулакана тарӑн шухӑшлӑ пӗтӗмлетӳ патне илсе пырать.

Яковлев хӑйӗн чылай произведенийӗсен никӗсне халӑх сӑмахлӑхне, халапӗсене хунӑ. Ҫакна "Пулӑ сӗрни", "Тӗлит–тӗлит Микулай", "Кашкӑр" тата ытти тӗрленчӗксемпе калавсенче куратпӑр.

Илемлӗ литературӑпа публицистика произведенийӗсенче Яковлев мӗн курнине–илтнине, хӑй мӗне лайӑх пӗлнине ҫырса кӑтартать. Акӑ, "Ҫур-кунне" тӗрленчӗке (1886) илер: "Ҫуркунне хӗвел хӗртсе пӑхать. Тулта ӑшӑ. Ҫил пӗртте вӗрмест. Ҫӳлте тӑрисем юрлаҫҫӗ. Юр ирӗле–ирӗле кӑшт анчах юлнӑ. Урам хушшинчи ҫырмасем чӑл–чӑл–чӑл! юхса выртаҫҫӗ"[169]. Произведенин малалли пайӗ те ҫыравҫӑ хӑй мӗн пӗлни ҫинче никӗс-

леннĕ. Унăн публицистики пĕтĕмпех автор хăй умне мĕнле тĕллевсем лартнипе, вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн ырми–канми кĕрешнипе çыхăннă.

Яковлевăн публицистикăри пултарулăхĕнчи палăрса тăракан тепĕр уйрăмлăх - маларах каланă шухăша пĕрмаях тарăнлатса çĕнетни. Хăйĕн тĕллевĕсене халăх лайăх пурнăç çинчен ĕмĕтленнипе çыхăнтарса, публицист вĕсене кашни хутрах анлăлатать, уçăмлăрах тăвать. Çакна чăвашсене "ăс–хакăл енчен вырăслатас" ("духовное обрусение") сунăм епле улшăнса аталанни те уççăн кăтартать. 1870 çулта "Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн малтанхи утăмĕсем" произведенире, хăй пурнăçĕн тĕллевĕсене кăтартса, вăл çапла çырать: "Чăвашсене хутла вĕрентес... тата аслă вырăс халăхĕпе пĕр чăмăра пĕрлештерес" килет[170].

Унтанпа "халăхсене пĕрлештересси", "ăс–хакăл енĕпе вырăслатасси" сăмахсем Яковлев произведенийĕсенче час–часах тĕл пулаççĕ. Чăвашсем вырăс халăхĕпе пĕрлешмелли çулсене "Вырăс мар халăхсен земствăсенчи шкулĕсем çинчен земство пуçлăхĕ С.Я. çырнă заметка пирки" тата "Чăвашсене шкулта вĕрентесси" произведенисенче кашнинчех автор уçăмлăрах та тĕплĕрех кăтартать[171]. Чăвашсем вырăс халăхĕпе пĕрлешесси Яковлев ăнлавĕпе вырăс наци культурине йышăнассине пĕлтернĕ, çакă вара тăван халăх культурине çĕклемелли май пулса тăнă. Публицист вырăс халăхĕн малта пыракан культури çине пысăк шанăç хуни "Атăл тăрăхĕнчи урăх халăхсем хушшинчи ĕç пирки" памфлетра та лайăх курăнать: "Христос тĕнĕ тата халăха вĕрентесси - акă пирĕн пурнăçри икĕ паха тĕллев, вĕсене яланах асра тытмалла. Патшалăх интересĕсем енчен пăхсан, çак икĕ задачăна тĕрĕс татса пани - вырăслатмалли чи лайăх май, вырăслатассине вара вырăс мар халăхсене вырăссемпе ăс-хакăл енĕпе çывхартасси тата пĕрремĕшĕсене иккĕмĕшсен шайĕ таран çĕклесси тесе ăнланмалла"[172].

Яковлев хăйĕн пурнăçне пĕтĕмпех чăвашсене "вырăс халăх культури шайĕ таран" çĕклессишĕн парать [173].

Публицист 1906 çулта каллех çак ыйту патне таврăнать. "Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ тата ун çине эпĕ епле пăхни" статьяра чăвашсене "вырăслатас" проблемăна автор татах та тарăнрах, тĕплĕнрех çутатать. Вăл çакна ĕнентермелле кăтартса парать: "вырăслатас задача вырăс чĕлхине вĕрентни кăна пулмасть: ун пек ăнланни ыйтăва пĕр енлĕ пăхни пулать, унашкал туни ăнăçлăх кӳмест"[174]. Тĕллев çакăнта: вырăс мар халăхсем вырăссемпе пĕрле "уйрăлми, вĕçерĕнми çирĕп чăмăр" туса хумалла. Ку тĕллеве пурнăçланă чухне хĕсĕрлени пачах вырăнлă мар. "Чи малтанах хĕсĕрлӳ меслечĕ пирки кирек мĕнле шухăша та сирсе ямалла, унашкал шухăш миçе хутчен ĕнтĕ кулянтармалли патне илсе пынă, -

палăртать Яковлев, - вырăс мар халăхсене вырăслатассишĕн ăнтăлмалла мар, вĕсене вырăсланма пулăшмалла"[175].

Публицистикăри пултарулăхĕн илсе кăтартнă уйрăмлăхĕ Яковлев халăх ырлăхĕшĕн мĕн тери çине тăрса кĕрешнине ĕнентерӳллĕ çирĕплетсе парать. Шухăша вăйлатмалли тата полемика меслечĕсемпе вăл перекетлĕ, пĕлсе усă курать. Автора вĕсем тĕп шухăшсене лайăхрах палăртма, хирĕç тăракана вирлĕрех çапма кирлĕ. Сăмахран, сепаратизм çумне хушни Яковлевпа унăн ĕçĕшĕн ытла та хăрушă пулнă. Çавнашкал айăплани тĕрĕс маррине кăтартма вăл "Вырăс мар халăхсен земствăсенчи шкулĕсем çинчен земство пуçлăхĕ С.Я. çырнă заметка пирки" статьяра шухăш пĕлтерĕшне хушса пымалли меслетпе усă курать. "Автор пире ӳпкелет, сепаратизм çумне хушса айăплать, çапла ĕнтĕ патшалăха сутакансем вырăнне хурать, пирĕн çине пылчăк сирпĕтет, эпир вара ирĕксĕрех ӳпкеленисемпе айăпланисем вырăнсăррине кăтартма тăрăшатпăр, хамăр таса иккенне ĕнентерессишĕн тимлетпĕр... Чăвашсем тата вĕсене çутта кăларассишĕн вăй хуракансен хушшинче унашкал туртăм пулман, çук тата пулма та пултараймасть - ку вăл факт"[176].

Тепĕр тĕслĕх илер: "...Чăваш йăхĕ, вырăссемпе тата тутарсемпе çумаçумăн пурăнаканскер, историре нимĕнпе те палăрманскер, çĕр ĕçĕ тăвакан тăнăçлă, ĕçчен йăх, тавракурăмĕн анлăшĕпе хăйĕн ялĕнчен тата тăван хирĕсенчен тухайманскер, вырăс халăхĕпе Вырăс правительствине нимĕнле хăрушлăх та кӳме пултараймасть; унăн чăваш нацине пĕр пĕтĕмле таса халлĕн сыхласа хăварас тата чăваш цивилизацине хăйне уйрăм çулпа аталантарас туртăм пур тесе заметка авторĕ шикленни кăлăхах"[177].

Çавăн пек айăпланине тăрă шыв çине кăларма Яковлев, шухăш пĕлтерĕшне хушса пымалли меслетсĕр пуçне, меллĕ танлаштарупа усă курать: "Пачах расна цивилизаци çулĕ çинчен сĕмленни хăйĕн историйĕ пур халăхсемшĕн те мĕлкесене ĕмĕр-ĕмĕр асапланса кăлăхах хăваланипе пĕрех"[178]. Кунта икĕ ăнлава - "пачах расна цивилизаци çулĕ çинчен сĕмленнине" "мĕлкесем хыççăн ĕмĕр-ĕмĕр асапланса кăлăхах хăваланипе" танлаштарнă. Танлаштару илсе кăтартнă икĕ ăнлану та тăрлавсăр пулни çинче никĕсленнĕ. Ăна предложени тытăмне пулăшу сăмахĕсемсĕрех кĕртсе вырнаçтарнă пулин те, танлаштаракан пулăмсем хутăшса каймаççĕ, пĕрпĕринчен çăмăллăнах уйрăлса тăраççĕ. Танлаштару хăйĕн тĕллевне çав тери лайăх пурнăçлать: иккĕмĕш пулăмпа юнашар тăратсан, пĕрремĕшĕ татах та арăш-пирĕшрех курăнать.

Публицист танлаштарăва синтаксис енчен кашни хутрах хăйне евĕрлĕ калăплать. Акă, тĕслĕхрен, унăн танлаштаруллă сăмах майлашăвĕсем: "Вăл уçнă икĕ шкул - икĕ çутă çăлтăр..." ("Две школы, заведенные им, - две светлые точки..."), "Çавăн чухне мĕн курни мана Колумб Америкăна

уҫнинчен те ытларах тĕлĕнтерчĕ, шухăша ячĕ" ("Я во время этой поездки сделал важное открытие, которое... не менее удивило и поразило меня, чем открытие Америки Колумбом"); "Чиркÿпе ҫыхăнман ҫынсене вырăс мар халăхсем пурăнакан вырăнсенче ҫулталăкĕ-ҫулталăкĕпе питĕ кирлĕ хатĕрленÿ ĕҫĕсене тума чарни ҫуртăн никĕсне кăларса илнине пĕлтерет" ("Лишить недуховных лиц права вести целые годы подготовительную работу, необходимую в инородческой местности, это значит вынуть из-под здания весь фундамент"). Ача-пăча валли ҫырнă произведенисенче танлаштарусене вĕсене ҫывăх ăнлавсемпе тунă: "Ҫулăм ҫурт ҫÿллĕш..." ("Пламя вышиною с дом..."), "Шалчасем ҫинчен хăмла перчетке пÿрнескисем пек ҫакăнса тăрать" ("Хмель висит, будто пальцы перчаток с тычин свешиваются") т.ыт.те.

Яковлев стилĕнче анлă танлаштарусем чылай. Вĕсенчен пĕринпе пĕлмен ют чĕлхепе тата тăван чĕлхепе этем ăс-хакăлне витĕм кÿрессин уйрăмлăхĕ мĕн тери пысăккине палăртать: "Ăнăҫсăр опыт кăтартнă тăрăх, пĕрремĕш майĕпе сĕнессе нумай сĕннĕ, илессе вара пачах нимĕн те илеймен, иккĕмĕш майĕпе сахалрах сĕнеҫҫĕ пулин те, мĕн сĕнни пĕтĕпех халăхшăн юравлă"[179]. Тепĕр тĕслĕхре этем кăмăлĕн хурламалли икĕ енне пĕр-пĕринпе ăста шайлаштарнă: "Авторăн ыттисене хăртас туртăм мĕн чухлĕ, хăйне мухтас туртăм ҫавăн чухлĕ... Ку вăл медалĕн икĕ енĕ: путăкки тата мăкăрăлса тăраканни"[180].

Яковлев пултарулăхĕнче синтаксис параллелизмĕ те танлаштару пек тухса тăрать: "Ҫутăпа ăшă илес тесе, кирек хăш ÿсентăран та хĕвел еннелле туртăнать. Пытармалли вăрттăнлăх мар, пулăшу илес шутпа нумайăшĕ, ăшă хĕвел еннелле туртăннă евĕр, Николай Яковлевич (Шатров) патне пыраҫҫĕ, пыраҫҫĕ те пушăлла каймаҫҫĕ"[181]. Тăрăхлас шутпа усă курнă тепĕр тĕслĕх: "Дворянсен предводителĕ хăйĕн сословине тата унăн интересĕсене хÿтĕлет, паллă, пупăн вара, паллах, чиркÿре ĕҫлекенсемшĕн ҫунмалла"[182].

И.Я. Яковлевăн литература ĕҫĕ пирки хăйĕн шухăшĕсене пĕтĕҫтерсе ҫырнă уйрăм произведени ҫук, ку ыйтупа вăл мĕн шутланине унăн чылай ҫырăвĕсемпе статйисенче курма пулать. Малтанах Иван Яковлевич писательсемпе публицистсенчен мĕн ыйтнине пăхса тухар. Вăл ҫирĕп ĕненнĕ тăрăх, кашни автор, кирек кам пулсан та, пурнăҫа тĕрĕс, хушса сăрламасăр ҫутатмалла. Илсе кăтартнă фактсем пурте тĕрĕс пулсан кăна произведение пичетлеме юрать. Чăнлăха тĕрĕс кăтартакан произведени витĕмлĕхĕ калама ҫук пысăк. Хăшĕн те пулин айăпĕпе йăнăш кĕрсе кайсан, ун ҫинчен вулакансене ҫийĕнчех пĕлтермелле. "Эхер те Эсир, ыр кăмăллă государыня, хăвăрăн чысăра тата пичетри сăмаха хисеплетĕр пулсан, редакци хуҫи пулнă май, паллах, ку ыйтупа факт-

семпе çирĕплетнĕ татăклă сăмах тăхтаса тăмасăр калама тивĕçлĕ"; - хистет вăл Чĕмпĕрте хаçат кăларса тăнă Л. Сахаровăна[183].

Яковлев шучĕпе, кирек хăш шухăша та никĕслемелле тата фактсемпе çирĕплетмелле. Иккĕлентерекен материала вулакан ырласса кĕтме çук. "Хаçат страницинче анонимсем ĕненмелле мар шахвăртса каланисем çине хуравлама шутламастăп та", - пĕлтерет вăл хăй шухăшне элекçĕсене[184].

Авторăн материала кĕскен те уçăмлă çырмалла, редакци вара шухăша улăштаракан тӳрлетӳсем хăй тĕллĕн тума пултараймасть. "Церковный вестник" журнал А.И.Баратынский отчечĕн пĕр пайне чылаях пысăк улшăнусем кĕртсе пичетлесен, Яковлев автора хăй хирĕçлени çинчен çырса пĕлтерме сĕнет.

Писательпе публицистăн тĕп шухăша, уйрăмах кирлине палăртма пĕлмелле. Ун шучĕпе, хăйĕн ывăлĕ А.И.Яковлев çырнă "Старая и новая постановка инородческого дела" статьян пахалăхĕ "ыйтăвăн тĕп енне çутатма пĕлнинче"[185].

Яковлев гимназист, вырăс сăмахлăхĕн преподавательне М.В.Барсова хирĕçлесе, сочинени пайĕсем хушшинче шалти çыхăну кирли çинчен каланă[186].

Педагог литераторсене çине тăрса, пикенсе ĕçлеме хистенĕ. "Лайăх çырма ансат мар, анчах тăрăшсан, тӳсĕмлĕх çитерсен, май килетех", - ӳкĕтлет вăл А.В.Рекеева 1870 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕнче янă çырура[187].

"Хистесех малалла тăсма ыйтатăп, мĕн çырни çумне çĕннине хушса пыр тата юса. Ĕненсем, эсĕ çырнинчен паха произведени пулса тăрĕ..." - хавхалантарать Яковлев хăйĕн вĕренекенне тепĕр çырура[188].

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çинчен асаилӳсем çырнă чухне Яковлев Рекеева çакнашкал канашсем парать:

1. Тĕплĕнрех çыр, чи кирлине, фактсене уйрăмах лайăх çутат. Çырнине пĕр хут, тепĕр хут пăхса тух; кирлĕ маррине, ĕçпе çыхăнманнине чĕр[189]

2. Диалогсемпе усă кур, урăхла каласан, чăн-чăн калаçусене илсе кăтарт.

3. Вĕриленсе каймасăр, тĕрĕс çыр.

4. Тĕслĕх вырăнне Н.И.Ильминский вырăс тĕнне йышăннă тутарсен шкулĕ çинчен çырнă кĕнекене вуласа тух, ăна çав шкул 25 çул тултарнă ятпа кăларнă.

5. Грамматикăна "тĕплĕн те ăнкарса" вĕрен, "лайăх кĕнекесене тимлĕн" вула, мĕншĕн тесен литераторăн хăйĕн пĕлĕвне пĕрмаях çĕнетсе тăмалла[190].

Пурин ĕçне те, çав шутра çывăх тусĕсен ĕçĕсене те, Яковлев ырă пулас тесе мар, объективлă хак парать. “Пичетлеме юрать, аван темелле, анчах алçырăвне вăйлах юсамалла тата кĕскетмелле. Çакна тума тăрăш”, - сĕнет вăл Рекеева 1910 çулхи декабрĕн 16-мĕшĕнче.

Хăйĕн учителĕн паха сĕнĕвĕсене Алексей Васильевич пачах кӳренмесĕр йышăнать, вăл хушнă пекех тăвать, алçырăвĕ вара тепĕр çул “Чăвашсем. Вĕсене çутта кăларма Ильминский системипе усă курни” ятпа пичетленсе тухать[191].

Пичетре халăха мĕнле йышши ăс-хакăл çимĕçĕ панине Яковлев сăнасах тăнă. Чылай автора вăл паянхи кунпа çыхăннă темăсем сĕннĕ, çырас енĕпе кăтартусем панă. Сăмахран, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ Н.С.Сергеев çапла аса илни пур: “1917 çулхи çуркунне И.Я.Яковлев мана “Падение царизма” статьяна куçарса “Хыпар” хаçата яма сĕнчĕ. Вăл калана тăрăх, Микулай патшана “Хыпарта” çырнă пек урăлми ĕçнĕшĕн çеç мар, сиенлĕ ĕçсем тунăшăн çапса антарнă, çитменнине тата, пире нимĕнле патша та кирлĕ мар”[192].

Çут ĕçĕпе культура, наука тата хуçалăх ыйтăвĕсемпе Яковлев çĕр ытла произведени çырнă. Вĕсенче чăвашсеннипе пĕрле Атăл тăрăхĕнчи ытти халăхсен интересĕсене те хӳтĕленĕ. Ахальтен мар ун çинчен вырăс историкĕ А.С.Агринский çапла çырса хăварнă: “И.Я.Яковлева Атăл тăрăхĕнчи вак халăхсене çутта кăларас ĕçе пуçарса яракансенчен пĕри тесе шутламалла”[193].

Яковлев произведенийĕсем вăл демократ-просветитель пулнине çирĕплетеççĕ. Пĕтĕм халăха – ар çынсене те, хĕрарăмсене те хут вĕрентесси, вĕсене вырăс культури çумне явăçтарасси, кӳршĕллĕ халăхсемпе пуринпе те килĕштерсе пурăнасси, тӳре-шарапа пуп таврашсене пăсăк йăла-йĕркерен хăтарса тӳрĕ кăмăлпа ĕçлемелле тăвасси, çĕр ĕç культурине хăпартса хресченсен пурнăçне лайăхлатасси, хура халăха юравлă реформăсем йышăнасси - акă публицист пултарулăхĕнчи демократилле туртăмсем.

В.И.Ленин 1918 çулхи апрелĕн 20-мĕшĕнче Мускавран çакăн пек телеграмма янă:

“Чĕмпĕр

Совдеп председательне

Чăвашсен хĕрарăм тата ар çын учителĕсен семинарийĕсен председателĕсене мĕнле лару-тăрура тата еплерех условисенче суйланине телеграфпа пĕлтерĕр. Мана Иван Яковлевич Яковлев инспектор шăпи интереслентерет, чăвашсене наци енĕпе çĕклессишĕн вăл 50 çул ĕçленĕ, патша тытăмĕ хĕснине чылай тӳссе ирттернĕ. Яковлева унăн пурнăçĕ ĕçĕнчен уйăрмалла мар тесе шутлатăп. Совнарком председателĕ Ленин”[194].

В.И.Ленин хӑй чӑваш халӑхне ҫутта кӑлараканӗн И.Я.Яковлевӑн шӑпипе интересленни, унӑн ӗҫне пысӑка хурса хаклани питех те пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Ҫакӑ ӗнтӗ Иван Яковлевич тӑван халӑх ырлӑхӗшӗн пӗтӗм чун хавалӗпе тӑрӑшнине ӗнентерӳллӗн ҫирӗплетет. Паллах, "чӑвашсене наци енӗпе ҫӗклессишӗн" пынӑ ӗҫ шутне вӑл чӑваш публицистикипе журналистикине аталантарассишӗн тӑрӑшни те кӗрет.

Яковлев чӑваш ҫутлӑх юхӑмне вӑйлӑн малалла аталантарать. Ун вӑхӑтӗнче чӑваш халӑхне ҫутта кӑларассишӗн кӗрешекенсем хӑйсен умӗнчи тӗллевсене анлӑлатаҫҫӗ, тарӑнлатаҫҫӗ. Вӗсем ачасене шкулта вӗрентессине йӗркеленипе ҫырлахмаҫҫӗ, халӑх культурине хӑпартасшӑн, унӑн пурнӑҫ условийӗсене лайӑхлатасшӑн, чӑвашсене наци енӗпе ҫӗклесшӗн. Яковлев чӑваш ҫутлӑх юхӑмӗн идейӑлла никӗсӗсене хывать, ҫавӑнпа пӗрлех халӑха вӗрентессине анлӑрах сарса ярассишӗн ырми-канми тӑрӑшать.

Чӑваш публицистикипе журналистикине аталантарас ӗҫре те Яковлев тӳпи пысӑк. Тӗрӗссипе вӗсен аталанӑвӗн никӗсне ҫак чаплӑ педагог хывнӑ. Ку никӗс - чӑвашсен ҫӗнӗ ҫырулӑхӗ. Кунсӑр пуҫне, чӑваш публицистикин малтанхи произведенийӗсене те тӑван чӗлхепе вӑл ҫырнӑ. Наци кадрӗсем хатӗрлессипе тунӑ ӗҫӗ чӑваш журналистикине ҫуралса аталанма май panӑ. Чӑвашсен пӗрремӗш хаҫачӗ "Хыпар" редакцийӗн сотрудникӗсенчен нумайӑшӗ Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗреннӗ.

Яковлев публицистики пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Унӑн произведенийӗсем халӑха хутла вӗренме, культурӑпа ӑслӑлӑх еннелле утма чӗннӗ, халӑхсен туслӑхне ҫирӗплетмелли ҫулсене кӑтартнӑ. Халӑха хутла вӗрентессине йӗркеленипе, публицистикӑри ӗҫӗ-хӗлӗпе вӑл ӗҫхалӑх массисен ӑнланулӑхне сарма, общество пурнӑҫӗнчи активлӑхне ӳстерме пулӑшнӑ.

Ҫут ӗҫ халӑх комиссарӗ А.В.Луначарский 1928 ҫулта чаплӑ чӑваш педагогӗ 80 ҫул тата Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ 60 ҫул тултарнине паллӑ тунӑ кунсенче Ульяновскри чӑваш педагогика тата ял хуҫалӑх техникумӗсене телеграмма янӑ, унта ҫапла каланӑ: "Чӑваш ӗҫ халӑх массисем, иртнӗ саманара ҫав тери йывӑр пусмӑр тӳснӗ пулин те, массӑллӑн хут вӗренессин тата наци ҫырулӑхӗпе шкулӗн малтанхи никӗсӗсене хывма пултарнӑ. Чӑваш хресченӗсен чи чухӑн сийӗсенче ҫуралса ӳссе чапа тухнӑ Яковлев, унӑн хӑй пекех хресченсем хушшинчен тухнӑ ӗҫри юлташӗсем, чӑваш ӗҫ ҫыннисен массӑллӑ культуришӗн ҫур ӗмӗр ӗҫлени чӑваш ӗҫҫыннисен миллионлӑ массисене Октябрьти аслӑ революцие активлӑ хутшӑнма хатӗрленӗ"[195].

# УСĂ КУРМАЛЛИ ТЕКСТСЕМ
## Охатер Томеев сăввисем

### Шупашкарта шурă çурт

Шупашкарта шурă çурт,
Пирĕн ялта хура çурт,
Хура чăваш пурăнать унта.
Шурă ĕмĕтпе туслă
Хура чăваш пурăнать унта.

### Тĕрĕслĕх тĕнчине тупасчĕ

Кăкшăм хĕрне антăм эпĕ,
Таса шыв ĕçес тесе.
Шупашкара кайрăм эпĕ,
Тăвансене пулăшас тесе.

Шăнкăртатакан шывра пулă çук,
Вăлтапа ларнин усси çук.
Вайпутсенче тĕрĕслĕх çук,
Вĕсене пуç çапнин усси çук.

Çивĕч хĕçсене алла илер,
Тĕрĕслĕхшĕн кĕрешĕве кĕрер.
Тăшман пуçне пирĕн касмалла,
Тĕрĕслĕх тĕнчине шыраса тупмалла.

### Шупашкар хулинче ристан пултăм

Ристан пултăм эпĕ Шупашкарта,
Тарса ĕлкĕртĕм эпĕ армана.
Ристан пултăм эпĕ Хусанта,
Тарса ĕлкĕртĕм эпĕ вăрмана.

Арманта усал арманçă
Çав кунах хăваласа ячĕ.
Вăрманта каллех усал вăрманçă
Йытăсене ман йĕр тăрăх ячĕ.

Арманта та канăç çук,
Вăрманта та тĕрĕс пурнăç çук.
Ăçта каймалла тĕрĕслĕхшĕн кĕрешекен чăвашăн?
Ăçта телей тупмалла-ши, тусăм?

Усал çавра çил - манăн тус,
Çивĕч хĕç - манăн хурăнташ.
Вăрманти кашкăрпа упа
Манпа ялан пĕрле çӳреççĕ.

**Охатерпа Улюна**
Килтеш вăрманĕ шавлать те шавлать,
Килтеш вăрманĕнче кашкăр ами улать.
Кашкăр ами хăйĕн кашкăрне кĕтет,
Пĕччен унăн юлас килмест.

Питтукасси пит хумханать,
Питтукассинче çынсен сассисем.
Тăлăха юлнă Улюна йĕрет,
Хăйĕн упăшкине Улюна кĕтет.

"Ах, Охатер, юратнă мăшăрăм,
Мĕншĕн Шупашкара кайрăн-ши?
Шупашкарта шурă çуртсем,
Анчах çыннисем хура чунсем.

Кайкăр пулса вĕçсе пырăттăм,
Кашкăр ами пулса чупса килĕттĕм.
Сана ăçта тупассине пĕлсен,
Эсĕ ман пулăшăва кĕтсен".

Килтеш вăрманĕ шавлать те шавлать,
Килтеш вăрманĕнче кашкăр ами улать.
Кашкăр хăйĕн ами патневаскать,
Анчах Улюна патне Охатер килеймест.

Охатер шурă çуртра тĕрмере ларать,
Хăйĕн юратнă Улюнишĕн тунсăхлать:
Улюна, кашкăр ами пулса ман пата кил,
Е кайкăр пулса вĕçсе пыр.

# АСĂРХАТТАРУСЕМ

[1] Известия о чувашах, живущих в Казанской, Симбирской, Оренбургскои и других губерниях // Казанский вестник, 1829. Ч. XXV, XXVI, XXVII, кн. 4, 5, 6, 9, 10.

[2] Григорьев П.Г. Очерки по библиографии историко-этнографической литературы Чувашии в первой половине XIX века. Рукопись // НА ЧНИИ, отд. 11, ед. хр. 952, инв. 3734. С. 28-29.

[3] Матвеев Г.Б. Изучение этнографии чувашского народа в первой половине XIX века // Вопр. историографии историко-этнографического изучения Чувашии. Чебоксары, 1981. С. 8.

[4] Казанские губернские ведомости. 1849. №30.

[5] Казанский вестник. 1829. Ч. XXV. Кн. 4. С. 292.

[6] Çавăнтах, 299 с.

[7] Çавăнтах, 294 с.

[8] Казанский вестник. 1829. Ч. XXVI. Кн. 5-6. С. 107.

[9] Замечания на статью "Известия о чувашах", напечатанную в "Казанском вестнике" 1829 года // Там же. 1831. Ч. XXXII. Кн. 7-8 С. 278 - 294.

[10] Казанский вестник, 1831, ч. XXXII, кн. 7-8. С. 284-285.

[11] Çавăнтах, 293 с.

[12] Çавăнтах, 284-285 с.

[13] Çавăнтах: 286-287 с.

[14] Казанский вестник, 1831, Ч. XXXII. Кн. 7-8. С. 293.

[15] Çавăнтах, 282-283 с.

[16] Вопросы историографии историко-этнографического изучения Чувашии. Чебоксары, 1981. С. 8.

[17] Çавăнтах.

[18] Аноров П.А. Нравы и поверья чуваш // Сын Отечества. СПб, 1838. Т. 3. С. 193-204.

[19] Фукс А.А. Записки о чувашах и черемисах Казанской губернии. Казань, 1840.

[20] 1969 çулта ку ял хăй вырăнĕнчен куçса кайнă.

[21] Никитин В. Александра Фукс - паллă этнограф-сăвăç // Коммунизм ялавĕ. 1975. Октябрĕн 14-мĕшĕ.

[22] Сигов Г. Замечания жителя Цивильского уезда на статью А.А. Фукс «Поездка из Казани в Чебоксары» // Заволжский муравей (Казань). 1834. № 23. С. 512-516.

[23] Там же. С. 512.

[24] Çавăнтах, 512-513 с.

[25] Т-р: Егоров В.Г. Чăвашла-вырăсла словарь. Шупашкар, 1954. 3 с.

[26] История Чувашской АССР. В 2 т. Т. 1. 2-е изд., перераб. Чебоксары, 1983. С. 246

[27] Т-р: Ленин В.И. Соч. тул. пух., 25 т. 94 с.

[28] Краткая чувашская энциклопедия. Чебоксары: Чуваш. книж. изд-во, 2001. С. 405.

[29] Великое служение. Кугеси, 2000. С. 45.

[30] Родионов В Г. Чăваш литератури (XVIII-XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурри. Шупашкар, 1999. 13 с.

[31] Родионов В.Г. Чăваш литератури (XVIII-XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурри). Шупашкар, 1999. 16 с.

[32] Ожегов С.И., Шведова Н.Ю. Толковый словарь русского языка. М.: Азъ Ltd. 1992. С. 650.

[33] Сăвăç ку йĕркесенче чăваш таса та тĕрĕслĕхшĕн çунакан çын пулнине, ăна хĕсĕрленине, чăнлăха ниçта та тупайманнине кăтартнă. Ăçта тупмалла-ши хӳтлĕх?

[34] Краткая чувашская энциклопедия. Чебоксары: Чуваш. кн. из-во, 2001. С. 363.

[35] Родионов В. Шăпамăр, тертĕмĕр-телейĕмĕр // «Хыпар» хаçатăн ятарлă кăларăмĕ. 1991. Чӳк уйăхĕн 13-мĕшĕ.

[36] Димитриев В.Д. Предисловие // Михайлов С.М. Труды по этнографии и истории русского, чувашского и марийского народов. Чебоксары, 1972. С. 4.

[37] Красный архив. 1938. № 87. С. 91.

[38] См.: Михайлов С. О себе. Автобиографический очерк //Записки ЧНИИ. Вып. IV. Чебоксары, 1950. С. 252.

[39] Егоров Д.Е. Чăвашсен пирвайхи писателĕ, просветителĕ, историкĕ // Пионер сасси. 1966. Ноябрĕн 12-мĕшĕ.

[40] Румянцев М. В. Чăвашсен малтанхи историкĕ, писателĕ тата этнографĕ çинчен // Тăван Атăл. 1969. 5 №. 45 с.

[41] Революцичченхи чăваш писателĕсен произведенийĕсем. Шупашкар, 1962. 171 с. (Аялтан туртни пирĕн. - И.Т.).

[42] Революцичченхи чăваш литератури. 1 т. Шупашкар, 1984. 98 с.

[43] Канюков В. Тĕпчевçĕ, писатель // Коммунизм ялавĕ. 1971. Дек. 30-мĕшĕ.

[44] Михайлов С. О себе. Автобиографический очерк // Михайлов С.М. Труды. С. 356.

[45] Михайлов С. Повесть о пребывании в городе Козьмодемьянске государя императора Павла Петровича с великими князьями Александром Павловичем и Константином Павловичем // Михайлов С.М. Труды. С. 20.

[46] Михайлов С. Повесть о пребывании в городе Козьмодемьянске государя императора Павла Петровича с великими князьями Александром Павловичем и Константином Павловичем // Михайлов С.М. Труды.С. 19.

[47] Тапă - яш-кĕрĕмĕн çуллахи уяв вăхăтĕнчи пасарĕ.

[48] Михайлов С.М. Труды. С. 23.

[49] Çавăнтах, 22 с.

[50] Михайлов С.М. О себе // ЧНИИ, вып. IV. Чебоксары. 1950. С. 246-247.

[51] См.: Фукс А.А. Записки о чувашах и черемисах Казанской губернии.

[52] Михайлов С. Чебоксарцы - свиносудцы // Михайлов С.М. Труды. С. 328.

[53] Çавăнтах.

[54] Михайлов С.М. Труды. С. 190.

[55] Çавăнтах, 190-191.

[56] Михайлов С.М. Труды. С. 191.

[57] Çавăнтах. 191 с.

[58] Çавăнтах. 190 с.

[59] См.: ЦГА ТАССР, ф. Н.Я.Агафонова, т. 4, рукопись С.М.Михайлова, л. 609.

[60] Ленинградское отделение архива АН СССР, разряд IV, оп. 1, ед. хр. 946, л. 7 и обр.

[61] Ленинградское отделение архива АН СССР, разряд IV, оп. 1, ед. хр. 946, л. 7 и обр.

[62] Çавăнтах.

[63] Михайлов С. Краткое этнографическое описание чуваш // Михайлов С. М. Труды. С. 75.

[64] Михайлов С. Краткое этнографическое описание чуваш // Михайлов С. М. Труды. С. 76-77.

[65] Çавăнтах, 77 с.

[66] Çавăнтах, 79 с.

[67] Çавăнтах, 84 с.

[68] Çавăнтах, 85 с.

[69] Михайлов С. О музыке чуваш // Михайлов С.М. Труды. С. 38.

[70] Çавăнтах, 42 с.

[71] Çавăнтах, 39-41 с.

[72] Михайлов С. Краткое этнографическое описание чуваш // Михайлов С. М. Труды. С. 83.

[73] Революцичченхи чăваш литератури, I т. 364 с.

[74] Çавăнтах, 365 с.

[75] Михайлов С. Как управлять чувашами. Рукопись // Ленинградское отделение архива АН СССР, разряд IV, оп. 1, ед. хр. 946, л. 1.

[76] См.: Фукс А.А. Записки о чувашах и черемисах Казанской губернии. Казань, 1840; Сбоев В.А. Исследование об инородцах Казанской губернии, ч. 1. Заметки о чувашах. Казань, 1851.

[77] Михайлов С. Село Ишаки в Козьмодемьянском уезде // Михайлов С.М. Труды. С. 184.

[78] Çавăнтах, 185 с.

[79] Çавăнтах, 186 с.

[80] Революцичченхи чăваш писателĕсен произведенийĕсем. 8 с.

[81] Çавăнтах, 9 с.

[82] Михайлов С. Село Ишаки в Козьмодемьянском уезде // Михайлов С.М. Труды. С. 178.

[83] Раççейри бурятсемпе калмăксен тата якутсен вырăс вулăсĕ евĕрлĕ административлă-территориллĕ единици.

[84] Михайлов С. Воспоминание о пугачевщине // Михайлов С.М. Труды. С. 282.

[85] Михайлов С. О ярмарках в Козьмодемьянском уезде в 1856 году и о ценах на привозные товары в г. Козьмодеьянске // Казанские губернские ведомости. 1857. № 18.

[86] Çавăнтах.

[87] Михайлов С. Вести из Козьмодемьянска// Михайлов С.М. Труды. С. 279.

[88] Михайлов С. Известия из Козьмодемьянска // Михайлов С.М. Труды. С. 273.

[89] Михайлов С. Воспоминание о пугачевщине // Там же. С. 281.

[90] Воевода.

[91] Михайлов С.М. Труды. С. 281.

[92] Çавăнтах, 282 с.

[93] Михайлов С.М. Труды. С. 282.

[94] Çавăнтах, 284 с.

[95] Çавăнтах, 787 с.

[96] См.: Михайлов С. [[Как управлять чувашами]] // Михайлов С.М. Труды. С. 172.

[97] См.: Михайлов С. [[Как управлять чувашами]] Михайлов С.М. Труды. С. 172.

[98] Çавăнтах. 172-173 с.

[99] Михайлов С. Капустки, простонародные игры в Козьмодемьянском уезде // Михайлов С.М. Труды. С. 161.

[100] С.М. Михайлов 1851 çулти декабрĕн 29-мĕшĕнче А.И. Артемьева янă çыруран Записки ЧНИИ, вып. IV. Чебоксары, 1950. С. 234-235.

[101] Димитриев В.Д. Чувашские исторические предания. Ч. 1. О жизни и борьбе народа с древних времен до середины XVI века. Чебоксары, 1983. С. 11.

[102] Васильев А. Ум сăмах // Революцичченхи чăваш литератури, 1 т. 13 с.

[103] Михайлов С. Казанские инородцы перед памятником Державину в Казани // Михайлов С.М. Труды. С. 364.

[104] Михайлов С. Чувашские аристократы // Там же. С. 193.

[105] Михайлов С. Повесть о пребывании в городе Козьмодемьянске государя императора Павла Петровича с великими князьями Александром и Константином Павловичами // Казанские губернские ведомости. 1852. № 2.

[106] Михайлов С. Село Ишаки в Козьмодемьянском уезде // Михайлов С.М. Труды. С. 179.

[107] Çавăнтах, 183 с.

[108] Çавăнтах.

[109] См.: Михайлов С. Балдран-базар в Козьмодемьянском уезде // Там же. С. 21.

[110] Михайлов С. Анатри чăвашпа вирьял чăвашĕ хушшинчи калаçу // Революцичченхи чăваш литератури, 1 т. 99-100 с.

[111] Михайлов С.М. Труды. С. 336.

[112] Записки ЧНИИ, вып. IV. Чебоксары, 1950. С. 244.

[113] См.: Григорьев П.Г. Очерки по библиографии историко-этнографической литературы, Рукопись // НА ЧНИИ,отд. II. ед. хр. 952. инв. 3734. С. 14.

[114] Золотницкий Н. Несколько слов об Елабуге и Николаевском приходском училище в селе Иксом-Устье // Вятские губернские ведомости. 1860. 26 ноября.

[115] Золотницкий Н. Несколько слов о Вятском женском приходском училище // Там же. 1860. 10 декабря. Вятские губернские ведомости.

[116] Золотницкий Н. По поводу открытия частных школ в Вятской губернии // Вятские губернские ведомости. 1861 25 ноября.

[117] См.: Золотницкий Н. О состоянии Вятской воскресной школы в первое полугодие ее существования // Вятские губернские ведомости. 1861.
29 июля.

[118] Он же. Несколько слов по поводу отчета слободского женского училища

2-го разряда за 1861-62 учебный год // Там же. 1862. 22 сентября.

[119] Он же. Частная школа в селе Макарьевском // Там же. 1861. 16 декабря.

[120] Он же. О состоянии Вятской воскресной школы в первое полугодие ее существования // Там же. 1861. 29 июля.

[121] Он же. Частная школа в селе Макарьевском // Там же. 1861. 16 декабря

[122] Золотницкий Н. Несколько слов по поводу отчета слободского женского училища 2-го разряда за 1861-62 учебный год // Вятские губернские ведомости.1862. 22 сентября.

[123] Золотницкий Н. По вопросу о способах образования чуваш // Казанские губернские ведомости. 1866. 16 декабря.

[124] См.: Вятские губернские ведомости. 1861. 25 ноября.

[125] Магницкий В. «Чуваш кнеге» // Справочный листок г. Казани. 1867. 1 9 декабря.

[126] Золотницкий Н. По поводу статьи о «Чуваш кнеге» // Справочный листок г. Казани. 1867. № 143.

[127] Баратынский А.И. Об улучшении начальных инородческих училищ Буинского уезда // Современный листок политических, общественных и литературных известий (СПб). 1867. 19 и 23 августа.

[128] Иванов С.И. Письмо Н.И. Золотницкому от 11 июля 1867 г. // Справочный листок г. Казани. 1867. 15 октября.

[129] См.: Иванов С. Записка о причинах равнодушия крестьян Буинского уезда к делу грамотности и о способах к устранению тех причин // Там же. 5,7,9 ноября; Заметка крестьянина на передовую статью «Современного листка» // Казанские губернские ведомости. 1868. 25 февраля.

[130] Ильминский Николай Иванович (1822-1891) – вырăс педагогĕ. Хусанта пурăнса, Вăтам Атăл тăрăхĕнчи халăхсене хут вĕрентес енĕпе ĕçленĕ, çак ĕçе миссионерла тĕллевсемпе тунă.

[131] Золотницкий Н. По поводу открытия частных школ в Вятской губернии // Вятские губернские ведомости. 1861. 25 ноября.

[132] Ильминский Н.И. Об образовании инородцев посредством книг, переведенных на их родной язык // Православное обозрение. 1863. Март.

[133] См.: Образование крестьян // Русский вестник. 1860. № 10. С. 336-339; Н. Бл. Заметки о Пермяках Вятской губернии //Вятские губернские ведомости. 1861. 11 ноября.

[134] Золотницкий Н. О состоянии Вятской воскресной школы в первое полугодие ее существования // Вятские губернские ведомости. 1861. 29 июля.

[135] См.: Золотницкий Н. По вопросу о способах образования чуваш // Казанские губернские ведомости. 1866. 16 декабря.

[136] «Положения о начальных училищах».

[137] «Правила о мерах к образованию инородцев».

[138] Чувашский праздник учюк // Симбирские губернские ведомости. 1867. 28 марта, 4 апреля.

[139] Пантусов А. Чувашские поверья в Курмышском уезде // Там же. 1867. 23 и 28 февраля

[140] Магницкий В. Празднование чувашами нового года (соргоры) // Справочный листок г. Казани. 1867. 7 февраля.

[141] Симбирские губернские ведомости. 1867. 28 марта.

[142] Магницкий В. Празднование чувашами нового года (соргоры) // Справочный листок г. Казани. 1867. 7 февраля.

[143] Симбирские губернские ведомости. 1867. 28 марта.

[144] Тенюшев И. Такой статьи не было // Дружба (Чебоксары). 1974. № 18. С. 179-182.

[145] ЦГИАЛ, ф. 733, оп. 170, ед. хр. 1008, лл. 5-25.

[146] Церковные ведомости. 1893. 12 июня.

[147] Православный благовестник. 1893. № 11.

[148] Çавăнтах.

[149] ЦГА ЧАССР, ф. 207, оп. 1, д. 1156, л. 74.

[150] С.Я. Заметка земского начальника о земских инородческих школах // Симбирские губернские ведомости. 1894. 28 сентября.

[151] Яковлев И. По поводу заметки земского начальника С.Я. о земских инородческих школах // Там же. 3 и 7 декабря.

[152] По поводу возражения г. И. Яковлева на заметку земского начальника о земских инородческих школах // Симбирские губернские ведомости. 1895. 25 и 28 января.

[153] С.Е.Н. К вопросу о более желательной и целесообразной постановке церковноприходской и школьной миссии среди населения инородческого Среднего Поволжья // Миссионерское обозрение. 1899. Ноябрь-декабрь.

[154] Яковлев И. К вопросу об инородческой миссии в Поволжье // ЦГА ЧАССР, ф. 515, оп. 1, ед.хр. 4.

[155] Яковлев И. К вопросу о должностях окружных инспекторов инородческих школ при управлении Казанского учебного округа // Труды особого совещания по вопросам образования восточных инородцев. СПб., 1905.

[156] Краткий очерк Симбирской чувашской учительской школы (По случаю сорокалетия (1868-1908). Симбирск, 1908.

[157] И.Я. Яковлев пехиллесе çырса хăварнинчен // Чăваш календарĕ. Шупашкар, 1958. 147 с.

[158] Васильев А.В. Черты просветительства в дореволюционной чувашской литературе и фольклор. // Яковлев И. 25 лет Симбирской чувашской школе // ГБЛ, в. 361, карт. 32, ед.хр. 14, л. 3.

[159] Яковлев И. 25 лет Симбирской чувашской школе // ОР ГБЛ, ф. 361, карт. 32, ед. хр. 14, л. 3.

[160] Яковлев И. Выртмара // Революцицченхи чăваш литератури, I т. 131 с.

[161] Çавăнтах.

[162] ЦГА ЧАССР, ф. 515, оп. I, д. 34, л. 1.

[163] Яковлев И. Очерк возникновения женского при Симбирской чувашской школе училища // Церковные ведомости. 1893. № 24.

[164] Яковлев И.Я. Воспоминания. Изд. второе, доп. Чебоксары, 1983. С. 50.

[165] Яковлев И.Я. Воспоминания. Чебоксары, 1983. С. 49.

[166] Çавăнтах. 50-51 с.

[167] Яковлев И. Сведения, доставленные инспектором чувашских школ // Симбирская земская газета. 1878. 6 августа.

[168] Революцичченхи чăваш писателĕсен произведенийĕсем. 10 с.

[169] Яковлев И. Çуркунне // Яковлев И.Я. Выртмара. Шупашкар, 1960. 7 с.

[170] Яковлев И. Первые шаги Симбирской чувашской школы // НА ЧНИИ, отд. II, ед. хр. 525 (2). С. 71.

[171] Яковлев И. По поводу заметки земского начальника С.Я. О земских инородческих школах // Симбирские губернские ведомости. 1894. 3 и 7 дек.; Яковлев И. О школьном образовании чуваш // Городской и сельский учитель ( Казань). 1897. Вып. 5.

[172] Яковлев И. К вопросу об инородческой миссии в Поволжье // НА ЧНИИ, отд. II, ед. хр. 61, инв. 146. С. 258-259.

[173] Çавăнтах. 280 с.

[174] Яковлев И. Чувашская школа и мое отношение к ней. Рукопись. (1906) // НА ЧНИИ, отд. II, ед. хр. 61, инв. 146. С. 23.

[175] Çавăнтах.

[176] Яковлев И. По поводу заметки земского начальника С.Я. О земских инородческих школах // Симбирские губернские ведомости. 1894. 3 дек.

[177] Çавăнтах.

[178] Çавăнтах.

[179] Яковлев И. К вопросу об инородческой миссии в Поволжье. С. 272.

[180] Çавăнтах. С. 309.

[181] Яковлев И. Война и чувашская школа в Симбирске. Симбирск, 1915. С. 28-29.

[182] Çавăнтах. 14 с.

[183] ОР ГБЛ, ф. 361, карт.4, ед.хр. 27, л. 9 на об.

[184] Çавăнтах.

[185] Яковлев И. Моя жизнь // НА ЧНИИ, отд. II, ед. хр. 525 (2). С. 193.

[186] Çавăнтах. 80 с.

[187] НА ЧНИИ, отд. II, ед. хр. 525 (2). С. 378.

[188] И.Я. Яковлев 1893 çулхи августăн 21-мĕшĕнче А.В. Рекеева янă çыру // Çавăнтах, 514 упр. ед. 61 л.

[189] НА ЧНИИ, отд. II, ед. хр. 525 (2). Л. 378.

[190] Çавăнтах, 656 упр. ед. 55 л.

[191] Рекеев А. Чуваши. Применение системы Ильинского к их просвещению // Сотрудник брадства св. Гурия (Казань). 1911. № 25, 26.

[192] И.Я. Яковлев в воспоминаниях современников. С. 118.

[193] Агринский А.С. Симбирская гимназия (1809-1909). Историческая заметка. Симбирск, 1909. С. 145.

[194] Ленин В.И. Соч. тул. пух. 50 т. 61 с.

[195] Итоги юбилейной научной сессии, посвященной столетию со дня рождения И.Я.Яковлева // Записки ЧНИИ, вып. III. Чебоксары, 1949. С.44.

# ЧĂВАШ ПУБЛИЦИСТИКИН МАЛТАНХИ ТĔСЛĔХĔСЕМ

## Ермей Рожанский хайлавĕсем

### Сăваплăран та сăваплă, аслă господина Чулхулапа Улатăр епископне Феофана

### Кăрмăшпа Етĕрне уесĕнчи крешĕн чăвашсен ыйтăвĕ

Сирĕн сăваплăхăр епархийĕн Кăрмăшпа Етĕрне уесĕсенчи тĕрлĕрен ялĕсен çĕрпĕвĕсем ытти крешĕнсемпе пĕрле пуç çапса ыйтаççĕ, мĕн ыйтнине пунктсерен пĕлтеретпĕр.

1. Кăçалхи, 1764 çулхи çĕртме уйăхĕн 10-мĕш кунĕнче Кăрмăшпа Етĕрне вайпучĕсен кĕнчелерĕсем урлă хут тăрăх пире, чурăрсене, çапла пĕлтерсе каланăччĕ: асăннă кĕнчелерсен хăйсен кантурĕсенче крещĕнсене хӳтĕлеме Император аслăлăхăн тӳре-шара Сеначĕ ярса панă, кантурсем çумне çирĕплетнĕ штатпа оберофицер тытма юрамасть.

Указра çакна та каланă: Сирĕн сăваплăхăрăн епархийĕпе ыттисенче урăх тĕне ĕненекенсене чăн тĕне кĕртме тата крешĕнсен ĕненĕвне çирĕплетсе пыма вĕреннĕ тата тӳрĕ кăмăллă çынсенчен ӳкĕтлевçĕ уйăрса лартмалла, тенĕ.

2. Турра юравлă çакă ĕç хамăра усă кăна кӳрет пулин те, эпир, мĕскĕнсем, урăх халăх çыннисемпе пачах хăнăхайманран тата хамăр тӳрккеслĕхĕмĕре пула çывăх пĕлмен вĕрентекене хăвăрт хăнăхса çитме пултарас çукки çинчен евитлетпĕр.

3. Çавăнпа та эпир, алă пуснă çынсем пурте малтан калани пирки пĕр-пĕринпе калаçса татăлса, пурте пĕр шухăша килсе, Сирĕн сăваплăхăртан Кăрмăш хулинчи Микула чиркĕвĕнче ĕçлекен Иван Герасимов иерей ывăлне Ермей Иванова пирĕншĕн ӳкĕтлевçĕ пулма çирĕплетсе памашкăн ыйтса чăрмантарма шутларăмăр. Ермей Иванов халĕ Чулхулара Анатри посадра, Иоанн Предтеча чиркĕвĕнче тияккăнта тăрать. Чылай малтан хăй Кăрмăшра пурăннине хамăр курнă тăрăх, вăл çирĕп кăмăллăскер, сыпма юратманскер, йăваш та тӳрĕ чунлăскер пулнине пĕлсе тăратпăр. Вăл пирĕн чĕлхене пĕлет çеç те мар, кирек хăш самантра та унпа çăмăллăн вĕрентсе калама пултарать. Çавăн пирки

эпир, мĕскĕнсем, ăна кирлĕ пек итлесе ырă пурнăçа лайăхрах вĕренме май пуласса шанатпăр.

Çавăнпа та Сирĕн сăваплăхăртан çав асăннă тияккăна Ермей Иванова чи аслă кĕтÿçĕн ырă кăмăлне хамăрăн çав ырра вĕрентес тĕллеве кура пирĕн, мĕскĕнсен, ÿкĕтлевçи пулма çирĕплетмешкĕн чунтан тĕмсĕлсе ыйтатпăр, пурсăмăр та çав ыйтăвăмăра кура тивĕçтерÿллĕ йышăну тума тархаслатпăр.

**1764.**

## ХАЛĂХ ХАЯРЛАНСА АН КАЙТĂР

### Сăваплăран та сăваплă, аслă господина Чулхулапа Улатăр епископне Феофана урăх тĕн çыннисене чăн тĕне кĕртме çирĕплетнĕ Ермей Иванов иерей ÿкĕтлевçĕн евичĕ

Эпĕ, сирĕн чурăр, крешĕнсен ялĕсенче хама хушнă ĕçе тунă май 1765 çулхи юпа уйăхĕн 22-мĕш кунĕнче Етĕрне уесĕнчи Штанашра пулнă чухне Хусанти Тур Амăшĕн кунĕ çитнине пула пупĕ Вырăнта пулман пирки тияккăнпа ытти чиркÿçĕсем ыйтса тархасланăран каçхи тата кăнтăрлахи кĕлĕ ирттертĕм. Унта эпĕ çакна асăрхарăм, таса чиркĕвĕн турăшĕсене илсе хунă, çÿлти пĕтĕм турăшсене, дейсус текенскерсене, çав ялта ĕçлекен Аврам пуп пухнăскерсене (ашшĕ ятне пĕлместĕп), апатлану пÿлĕмĕнчи çÿллĕ вырăна саксем çине лартса тухнăччĕ, вĕсенчен нумайăшĕ (ăста туманскерсем) кивелсе кайнăччĕ, вĕсене юсама вăхăт, мĕншĕн тесен пайтах юрăхсăр ĕнтĕ. Çитменнине çав апатлану пÿлĕмĕнчех алăк патĕнче вилнĕ ача тупăкĕ пурччĕ. Кам ачи вăл, ăна хăçан тĕне кĕртнĕ, тупăкне хăçан чиркĕве илсе пынă - ун пирки асăннă тияккăнпа чиркÿçĕсем нимĕн те пĕлмеççĕ, тĕрĕсрех каласан - тупăка чиркĕве пуп тухса кайиччен виçĕ кун маларах кĕртнĕ имĕш. Унсăр пуçне, кĕлтума тата мĕн çинчен вĕрентнине итлеме пынă крешĕнсем пурте çапла каларĕç: тĕрлĕ ÿсĕмри çынсен виллисене чиркÿре хăш-пĕр чухне икĕ е виçĕ эрнешер пытармасăр тытса тăраççĕ, çакăн сăлтавне хăйсем те пĕлмеççĕ имĕш.

Крешĕнсене хама тивĕçлĕ пек вĕрентсе каланă хыççăн эпĕ, сирĕн чурăр, асăннă ялтан çав прихутри тепĕр яла çав куннех ларса кайрăм. Унта эпĕ асăннă Аврам ятлă иерейпе ытти чиркÿçĕсене куртăм. Малтан хам мĕн-мĕн курни пирки питĕ пăшăрханса, пупа хайхи çитменлĕхсем пирки кала пуçларăм. Анчах вăл, чылаях ĕçсе супнăскер, мана йĕркеллĕ итлесе тăмасăрах, эпĕ кĕлĕ ирттернишĕн мана пуп таврашне пачах килĕшмен усал сăмахсемпе ятлама тапратрĕ. Ăна май çапла каларĕ: эсĕ кунта мĕн

туса ҫӳретӗн, манран ыйтмасӑр чиркӗве кӗме, унта ҫӑхавҫӑ пек кӗлӗ ирттерме тата вӑл-ку йӗркеллӗ мар теме сана кам ирӗк пачӗ, терӗ, татах тем те хушса каларӗ. Ӑҫта кайса вӗрентес тетӗн, унта кайса вӗрент, кунта вара санӑн нимӗнле ӗҫ те ҫук, терӗ. Хӑйсен вара кунта мӗн тума тивӗҫлине пурне те вӗрентсе ҫитернӗ имӗш.

Унта пулнӑ крешӗнсен, ҫакна курса, манӑн кунта вӗсем тӗлӗшӗнчен нимӗнле ӗҫсем те ҫук тенине илтсе, пӗрерӗн-пӗрерӗнех саланса пӗтрӗҫ. Ҫакӑ вара ытти ялсенчи крешӗнсене мана чӑрмав кӳни ҫинчен пӗлсе тӑмашкӑн май пачӗ. Ҫавӑн пирки эпӗ, сирӗн чурӑр, крешӗнсем мана итлеме пӑрахнипе пӗр ӗҫсӗр тӑрса юлтӑм.

Ҫавӑн ҫинчен Сирӗн сӑваплӑхӑра пуҫ тайса евитленӗ май ҫакнашкал чӑрмавсене сирсе пымашкӑн ӑнӑҫлӑрах мел тупма ыйтатӑп, малашне малтан асӑннӑ иерей те, ҫавӑн пекех ытти ялсенчи пупсемпе чиркӳҫӗсем те мана хамӑн ӗҫӗмпе ытларах чарӑнса тӑма ан чӑрмантарччӑр. Чӑн тӗне ҫирӗп ӗненме тытӑнакан халӑх вара ҫакӑн пек тивӗҫсӗр те нӗрсӗр тӗслӗхе курса хаярланса ан кайтӑр, турткалашса ан тӑтӑр. Ҫавӑн ҫинчен пӗлтернӗ май чи аслӑ кӗтӳҫӗрен ӗҫе ырӑпа татса пама ыйтатӑп. Евите эпӗ, Ермей Иванов, хам аллӑмпа хам ҫырса яратӑп.

**Ермей РОЖАНСКИЙ**

## ВУНӐ ЗАПОВЕДЬ
### /Кӗске катехизисран/

**Ыйту. Мӗне вӗрентет пирвайхи заповедь?**

Хурав. Вӗрентет чӗрепе паллашма, чӗлхепе те картма пӗрехҫӗ Турӑна анчах, пӗрехҫӗ ӑна пуринчен ытла юратма тата картма, пӗрехҫӗ ӑна ҫеҫ шанма, тарма пур суяпа хаяртан, нумай турра ӗненессинчен, саккунсӑрлӑхран, тухатмӑшпа пӑрахӑҫ йӑларан, чиркӗве хирӗҫ сӑмахран тата расколтан; ҫавӑн пекех мӑн ӑспа пурӑнакансенчен: Турӑ йӑлине манса, хӑв шухӑшусем, хӑв вӑй-халу ҫине ҫеҫ шанассинчен.

**Ыйту. Епле картас кирлӗ Святой турӑ таврашӗнчисене?**

Хурав. Турӑна хӑйне картнӑ пек мар, анчах Турӑ таврашӗнчи пек. Турӑ умӗнче тӑракансем пек, пирӗн ырлӑхшӑн ӑна кӗлтӑвакансем пек, вара вӗсен пурнӑҫ ҫулне те тӗслӗх пек картма-хисеплеме.

**Ыйту. Мӗн тума чарать Турӑ иккӗмӗш заповедьре?**

Хурав. Хушмасть кашни каскана, тămсая, ытти тĕрлĕ япалана Турă вырăнне хурса пуç çапма: çавăн пекех ултавçă, тĕшмĕш, икĕ питлĕ, усал-хаяр пулма тата тутлă юратма; кам вара тутлă юратать, хаяр-усалпа пурăнать, вăл тăранманлăхне, килĕшӳсĕрлĕхне Турă вырăнне хурать.

**Ыйту. Епле картма кирлĕ Святой турăшсене?**

Хурав. Кирлĕ вĕсене картма, анчах Турă вырăнне хурса мар, вĕсен сăнĕсене ӳкерсе çеç хунă, вĕсем Турăпа ун таврашĕсен ĕçĕсем çинчен аса илтерессĕ кăна, вĕсем çине пăхса тăрăшма, вĕсем пек таса пурнăçпа пурăнма.

**Ыйту. Мĕне чарать Турă виççĕмĕш заповедьре?**

Хурав. Чарать Турă ятне кĕлĕре мар, причакра мар, вырăнсăр асăнма. Унта та чунри хăравçăлăхпа тата сывлăхпа çеç. Çавăнпа та ăравасăр çылăх Турра, Святой чиркĕве хирĕç калаçасси, чуна сутса пурăнасси, нушасăртан тупăшасси, мĕн те пулин килĕшӳсĕррине Турăран ыйтасси, хăв ырра шантарнине манасси.

**Ыйту. Мĕн хушать Турă тăваттăмĕш заповедьре?**

Хурав. Хушать пур вырсарни кунра тата праçникре, пур ĕçсене пăрахса, чиркĕве пыма, итлеме, вулама тата тăнлама Святой вĕрентĕве, килте те вĕрентме тăван ачасене, килти пур йыша та Турă законĕсене, ытти кунсенче те, Святой кунсенче те сыхланма кирек те мĕн кирлĕ мар ĕçсемпе, вăйăсемпе, ĕçкĕпе аппаланассинчен.

**Ыйту. Мĕн хушать Турă пиллĕкмĕш заповедьре?**

Хурав. Хушать ашшĕ-амăшне, вĕсен ячĕпе чи пирвай кĕлĕсенче Ăс паракана, вĕрентекенсене, ырă тăвакансене, ватăраххисене хисеплеме тата итлеме, кашни этеме харпăр хăйне юратнă пек юратма.

**Ыйту. Епле ашшĕ-амăшĕсен тăван ачисемпе пулмалла?**

Хурав. Ашшĕ-амăшĕсен тăван ачисене Турăран хăрама вĕрентмелле; тата хăнăхтармалла: мĕн кĕçĕнтен ĕçе юратма, кил-çурт пуçтарма-çавăрма, çынсемпеле варлă пурăнма, усал юлташлăхран сыхланма: хăйсен вара вĕсен умĕнче килĕшӳсĕррине нимĕн те калаçмалла та, тумалла та

мар: вĕсене ытларах, ерипе сăпайлăхпа, йăвашлăхпа тӳрлетме, вĕсенче этеме телейлĕх тата тӳрĕлĕх паракан ырă ĕç тăвас шухăша вăйлатма; айăп вара çынна тĕп тăвать. Ачасен вара ашшĕ-амăшне юратмалла, картмалла тата итлемелле, юрлă пурăннă чухне, ватăлса çитсен - вĕсене ĕçтермелле-çитермелле, канлĕх памалла, унпа ырлăхпа тав туса тавăрмалла, тӳлемелле.

**Ыйту. Епле кирлĕ пурăнма упăшкин арăмĕпе?**

Хурав. Упăшкин арăмне юратмалла, унпа хыттăн, усаллăн калаçмалла мар, ăслă вĕрентӳпе тӳрлетмелле ун çитменлĕхĕсене, кил-çурт пăхнă, ачасене тумлантарнă чух ăна хăйĕн пулăшаканĕ пек шанмалла тата картмалла. Арăмсен кирлĕ хăйсен упăшкисене картма тата юратма, хăйсене юраттарма тăрăшма. Унран пуçне иккĕшне те кирлĕ пĕр-пĕри умĕнче хăйсене айăпсăр тытма, пĕр-пĕрне панă сăмаха пурнăçлама.

**Ыйту. Мĕнле пурăнмалла пур çыннăн та ытти çынсемпе?**

Хурав. Пур çыннăн та ыттисемпе кунĕ, тирпейлĕ, варлă пурăнмалла, выççине тăрантармалла, ăш хыпнине ĕçтермелле, çарамассине тумлантармалла, чирпе выртакана пырса курмалла, çылăхлине çылăхран пăрмалла, айвана вĕрентмелле, иккĕленекене ырă канаш памалла, каçаракан Турра пурне те тӳрлетме ыйтса пуç çапмалла.

**Ыйту. Мĕне чарать Турă улттăмĕш заповедьре?**

Хурав. Чарать кама та пулин хур тума, ни хăвăнтан, ни çын урлă, ни ĕçпе, ни сăмахпа, ни шухăшпала. Питĕ сыхлама хушать кашнине тĕрлĕ инкек-синрен. Турă умĕнче ăравасăр йывăр çылăх: çынна епле те пулин вĕлересси, усал канашпа е пулăшу парса çынна вилĕм патне çитересси. Вăрçнине курсан чарманни, ăшша каякана сӳнтерменни, юрлине, чирлине пулăшманни.

Ку заповедь тата питĕ чарать хăвна ху вĕлерме, сыхлама хушать ху сывлăхна Турă панă телей пек.

**Ыйту. Мĕн чарать сана Турă çиччĕмĕш заповедьре?**

Хурав. Чарать мана ясарланма, ют арăм патне çӳрессине, пур çылăхлă ӳт тасамарлăхне. Хăш этем киленĕçпе пурăнать. Çавăн пекех çав киленĕç патне илсе пырана та: çавă пулать ĕçкĕ, ĕçлемесĕр пурăнасси, килĕшӳсĕр сăмах, ташăсем, вăйăсем, килĕшӳсĕр юрăсемпе кĕнекесем.

Çавӑнпа хушать упӑшкипе арӑмне пурӑнма айӑпсӑр.

**Ыйту: Мӗн чарать сана Турӑ саккӑрмӗш заповедьре?**

Хурав. Чарать мана Турӑ усалпа, вӑрттӑн камран та пулин мӗн те пулин туртса илме, тупнӑ япалана хӑвӑн пек йышӑнма, таракан çынна пытармасӑр-çӑлмасӑр тӑма, çын сухаланине, çаранне-пахчине хӑвӑн выльӑхупа ваттарма, ют анана йышӑнма, сутнӑ чухне, улӑштарнӑ чухне кама та пулин улталама, чиркӳ е камӑн та пулин укçине пытарса усрама. Çавӑнпа ӗçлемесӗр пурӑнмалла мар, ӗçе юрататакан пулмалла. Ӗçленӗ вӑйпа хӑвна тата килтисене çеç мар, мӗскӗнсене те тутлӑхра усрама тӑрӑшмалла.

**Ыйту. Мӗн чарать Турӑ тӑххӑрмӗш заповедьре?**

Хурав. Чарать мана Турӑ суяпа кӗнтелен (свидетель) пулма, суйса чухма, çынна кулса, намӑслантарса чыссӑрлатма, элек тума, çын сӑмахне улшӑнчӑклӑн ӑнлантарма: пур суяпа ултав тухаççӗ ултав ашшӗнчен, шуйттанран.

**Ыйту. Мӗн чарать вуннӑмӗш заповедь?**

Хурав. Чарать епле те пулин усал тума. Ӑна шухӑша та илме, чӗрепе те асӑнма; унашкал шухӑшсенчен çӑмӑллӑнах усал ӗçсем те тухма пултараççӗ.

Текста паянхи чӗлхе шайӗпе тӗл килтернӗ чух тӑлмачӑ тытса пынӑ грамматика нормисене шута илнӗ. Çапах та хӑш чухне кивӗ чӑваш çырулӑхӗнче тӗл пулакан тӗрлӗ çаврӑмсене улӑштарнӑ, хальхи пекрех çаварса калама тӑрӑшнӑ. Тури диалект сӑмахӗсене, вырӑнти калаçу уйрӑмлӑхӗсене тӗкӗнмен.

## УРМАЙ ЯЛӖНЧИ ПӐТӐРМАХ

Шанса панӑ ӗçӗме пула çула тухнӑскер, анчахрах тӗне кӗнӗ чылай чӑваш ялӗнче пулнӑ хыççӑн эпӗ Кӑрмӑш уесӗнчи Элӗк салине çитсе кӗтӗм. Ун чухне июль уйӑхӗн вунвиççӗмӗш кунӗччӗ, вырсарни кунччӗ. Хам эпӗ чиркӗве кайрӑм, Николай Ушков ватӑ салтака, Кӑрмӑш çыннине Василий Шуваева тата кунти чирку сутникне Афанасий Михайлова, - чӑвашла каласан. Янтӑван ывӑлне - Урмай ялне (вӑл Кӗçӗн Тӑван ялӗн инçете выр-

naçнă касси) кайса килме ыйтрăм. Кĕçĕн Тăванта эпĕ маларах пулнăччĕ, ун чухне çав касă çыннисем манăн ÿкĕте итлеме пырайманччĕ. Хальхинче вара, вĕсен çывăхĕнчи салара пулнă май, вĕсене кунта чĕнтерес тесеттĕм.

Эпĕ янă çынсем урмайсене уйра, ĕçленĕ çĕрте шыраса тупнă, унта вĕсем пĕр çирĕмрен ытла та пулнă. Ĕçлекенсене пĕр çĕре аран-аран пуçтарнă та, хайхисене Элĕк салине кайма чĕннĕ. Кусем сехĕрленсе ÿкнĕ. Вĕсем эпĕ хăйсен ялĕнче пулнă чухне мана итлеме пыраймашăн айăпласран шикленнĕ-мĕн. Кунсăр пуçне чиркÿ канмалли кун ĕç тума хушманнине уямашăн ятласран та хăранă-тăр.

Пынă çынсене курсассăнах вĕсем унталла та кунталла тарма пуçланă, лешсем çавсенчен вунпилĕкĕшне çеç тытса чарайнă. Тарма ĕлкĕрейменнисем кусемпе ятлаçнă, ĕççи вăхăтĕнче вĕренме, çитменнине тата ют прихут чиркĕвне кайма килĕшместпĕр, тенĕ. Калаçсан-калаçсан, пынисем кусене ÿкĕте кĕртнĕ-кĕртнех, вара вĕсем Элĕкелле çул тытнă.

Салана çитсе кĕрес тенĕ чухне сасартăк вĕсем çине касăра юлнисем тапăнаççĕ, çапăçу пуçлаççĕ. Савастей Урмаев тата Туйсар Утласкин хăйсен юлташĕсемпе хайхисене хăтараççĕ те юлашкинчен çапларах хăратса хăвараççĕ:

-Эпир сире халĕ те, ÿлĕмрен те итлемĕпĕр, ĕçленĕ вăхăтра чăрмантарса çÿренĕшĕн вара татах та патак тутантарма пултаратпăр!

Кайса килнисем мана çак ĕç-пуç Элĕк чиркĕвĕнче ĕçлекенсем тата ытти чăвашсем умĕнче каласа пачĕç, çавăнтах хĕненĕ хыççăн юлнă суранĕсене кăтартрĕç.

Ÿлĕмрен капла урăх ан пултăр тесе, эпĕ урмайсене вĕсем кăлăхах çапла хăтланнине ĕнентерме тата намăслантарма хăйсем патнех кайса килес терĕм. Хампа пĕрле эпĕ Элĕкри икĕ пупа, Василий Степанов тиеккĕне, Михаил Степанов тиечука тата малтан янă çынсене илсе кайрăм.

Урмай ялне хăвăртах çитрĕмĕр. Унта вăтăрăн ытла пуçтарăнса тăнă иккен. Кашнин çумĕнче е чукмар, е ытти çапăçу кăралĕ пур. Манпа пынă Элĕк çыннисене курсассăн урмайсем чăннипех урса кайрĕç. Савастей тата Туйсар пуçтахсемпе вĕсен юлташĕсем Элĕк чиркĕвĕнче ĕçлекенсем çине сиксе ÿкрĕç, мĕн ĕç пур сирĕн ют прихутра, тесе, вĕсене тÿпелеме пуçăнчĕç.

Çак шăй-шăй, кăшкăрашу-хурахлату, тĕпĕртетÿ-тÿпелешÿ чылайччен пычĕ. Элĕк пупĕсене хăтарасси çинчен шухăшлама та май çукчĕ, мĕншĕн тесен хĕрсе кайнă çапăçу пуçаруçисем Элĕк чиркĕвĕн çыннисене çеç мар, хăйсен ялĕсене те чылай тивертсе илчĕç. Сăлтавĕ акă мĕнре пулчĕ. Çак çуйра пĕри теприне ăнсăртран вĕлерсе те пăрахĕ тесе, çапăçсах кайманнисене эпĕ ыттисене лăплантарма ыйтрăм. Ÿкĕте кĕнисене, чарма хăтланса пăхнисене, авă, çавăнтах патак тиврĕ.

Юлашкинчен, çуйланнă çынсем ерипен-ерипен лăпланса çитсен, эпĕ вĕсене:

-Эсир мĕншĕн çапла çуйлашса кайрăр? - терĕм.

Утлас Степановпа унăн ывăлĕ Туйсар хыççăн ыттисем те:

-Мĕншĕн эсир пире ĕçленĕ çĕртен, çитменнине тата ют прихут чиркĕвне илсе каясшăн? Сирĕн чиркĕвĕрсен уявĕсем нумай пулĕç, вĕсене уяуя, кайран пирĕн мĕн, хамăрăн тислĕке çисе пурăнмалла-и? - терĕç.

Вĕсенчен хăшĕ-пĕри, пĕшкĕнсе пуçĕсене пĕкнĕ май:

-Акă, пуççене касма хушăр, - эпир сире итлемен те, итлес те çук!" - тесе кăшкăрчĕ.

Мĕнпур сăмахĕсене вĕсем хĕрсе кайса, чунтан тарăхса каларĕç. Эпĕ вара хам вĕсене çак вăхăтра лăплантараяс çукне ăнланса илтĕм, каялла çаврăнса, саланалла çул тытрăм. Элĕк пупĕсем манран юлмарĕç.

**Ермей РОЖАНСКИЙ.**
**1768.**

## ЧĂВАШСЕМ ÇИНЧЕН

Вĕсем тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕрен турра асăнаççĕ, туррисене çапла-çапла ятпа чĕнеççĕ: Мăн турă, Мăн турă амăш, Турă, Турă амăш, Пӳлĕхçĕ турă, Пӳлĕхçĕ амăш, Хĕрлĕ çыр, Çĕр амăшĕ, Çĕр ашшĕ.

Вĕсенчен Мăн турра, Мăн турă амăшне, Турăпа Турă амăшне пысăк чӳксенче асăнаççĕ, хăйсене çав турăсем пултарнă тата пăхса тăраççĕ тесе шутлаççĕ, вĕсенчен ырлăх кӳме çапла каласа йăлăнаççĕ: "Мăн турă, Мăн турă амăш, Турă, Турă амăш! Пире тăваканĕ-усраканĕ! Çанталăка çуратаканĕ, этеме тăваканĕ! Çырлахсамăр, усрасамăр, ан пăрахсамăр пире".

Пӳлĕхçĕ турăпа Пӳлĕхçĕ амăшĕнчен çынсене çутта кăларма, ырлăх кӳрен сывлăш яма, кирлĕ вăхăтра çумăр çутарма, çынсене ырă тăвакансене ырă кун-çул пама, тĕрлĕрен выльăх-чĕрлĕхе хунаттарма ыйтаççĕ: "Пӳлĕхçĕ турă! Пӳлĕхçĕ амăшĕ! Çуталтарсамăр пур халăха, тасатсамăр çут çанталăка, юхтарсамăр хиcеплĕ çумăр, пуйтарсамăр пире, пирĕн выльăх-чĕрлĕхе пур ырлăхпа".

Тĕрлĕрен ç-имĕç турринчен Хĕрлĕ çыртан çĕр çинче ӳсекен тĕрлĕрен çимĕçе çил-тăвăлтан тата ытти çĕмĕрекен усал вăйран сыхласа усрама тархаслаççĕ: "Хĕрлĕ çыр, усра пирĕн тырра, пур çĕртен тухнă япаласене: пăрпа, çилпе, пур усаллăхпа ан çĕмĕрсе яр, пире тĕпех ан ту".

Çĕр ашшĕпе Çĕр амăшне çапла каласа пуç çапаççĕ: "Çĕр ашшĕ! Çĕр амăшĕ! Çирĕплетсемĕр çĕре; халăхпа выльăха мĕн-мĕн кирлĕ, пурне те çитĕнтерме вăй парăр".

Чăвашсем пурте калакан яланхи кĕлли çапла: "Турă! Çырлах, турă! Ан пăрах мана, турă! Усра мана, турă! Хĕр-ывăл пар мана! Кĕлет тулли тырă пар. Карта тулли выльăх пар. Лашама, ĕнеме, сурăхăма хунаттар". Ытти кирлĕ япалана та çакăн пекех ыйтаççĕ, мĕн кирлине хăй ячĕпе асăнса тухаççĕ, эрешлесе каласа тăмаççĕ. Кăнтăрлахи, каçхи апат умĕн е пĕр-пĕр ĕçе тытăнас чухне кĕлĕ вырăнне пĕр сăмахпа "пĕсмелле" тесе калаççĕ, ку вăл "турă пулăштăр" тенине пĕлтерет. Апат çисен е ĕç пĕтерсен, час-часах "рахмат, турă" тесе турра тав тăваççĕ.

Вилнисене асăннă чухне вил тăпри çине икерчĕ, кукăль тата тĕрлĕрен аш-какай татăкĕ хываççĕ: "Сирĕн умăрта пултăр", - теççĕ; куркари сăрана сапса: "Астивĕр", - теççĕ.

Чăвашсем, хăйсен тăванĕсем вилсен, вĕсене яланхи пекех çăваççĕ, ун хыççăн вара хăйсен кил-йышĕпе тата пухăннă тăван-пĕтенĕпе, кӳрши-аршипе пĕрле пӳртре юрлаççĕ те ял çывăхĕнчи çырмана каçса килеççĕ. Унта кăштах та пулин шыв юхмалла, çырми вилнĕ çын хăй пурăннă чухне уй-хире, çарана та вăрмана ун урлă каçса çӳренĕскер пулмалла. Çав çырма урлă хăмаран е вĕрлĕкрен пĕчĕк кĕпер хываççĕ те пурте ун урлă каçаççĕ, кĕпер çирĕплĕхне тĕрĕслеççĕ. Çапла кĕпер çирĕп иккенне пĕлеççĕ те леш енче сăра ĕçеççĕ, кĕсле калаççĕ, вилнĕ çынна: "Килех, çирĕп кĕпер хыврăмăр", - тесе йыхăраççĕ. Унтан, виле патне таврăнса: "Каях, каях, саншăн çирĕп кĕпер хывса килтĕмĕр", - теççĕ те ăна пытарма йăтса каяççĕ.

Пытарсан темиçе кунран ятарласа пухăнаççĕ те хайхи кĕпер патне пыраççĕ. Унтан пуснă выльăх ашне пĕçереççĕ (вăй çитерекенĕ вăкăр, ыттисем така пусаççĕ), сăра ĕçеççĕ, хăйсем ĕçсе çиеççĕ, пĕр пайне вилнĕ çыншăн хываççĕ. Ĕçсе çикелесен, вилене малтан каланă пек йыхăраççĕ: "Килех, килех", - теççĕ. Вара, вăл килнине курнă пек пулса, пурте савăнăçлăн: "Килет, килет!" - теççĕ. Мĕн хатĕрленине ĕçсе-çисе тăрансан, юлакан шăмăсене çунтарса яраççĕ те килĕсене таврăнаççĕ.

Кĕрхи кунсенче, тĕплĕрех каласан, чӳк уйăхĕнче, чăвашсем вăрмансенчи тĕрлĕрен çырмасене çӳреççĕ, унта харкам хăй пултарнă таран вăкăр е така пусать те ăна пĕçерсе хăйĕн кил-йышĕпе çиет, сăра ĕçет, çапла вара вилнĕ тăван-пĕтенне асăнать. Çав ĕçкĕ-çикĕре вара вĕсенчен пурте хăйсем астунă таран вилнĕ çын мĕнле пурăнса ирттернине, унăн кăмăлĕ епле пулнине, вăл хăйне епле тыткаланине тата ыттине те аса илсе калаççĕ.

Çуллахи кунсем çитсен хура сурăх е така сутакан шыраççĕ. Тупсан выльăхне вăрмана илсе каяççĕ, пĕр-пĕр йывăç турачĕ çумне пуçне çӳлелле туса çыхса хураççĕ, çакна вĕсем выльăх, тӳпенелле пăхса, турăран уй-хире шăварма çумăр ыйттăр тесе тăваççĕ. Выльăхĕ сасă кăлартăр тесе, ăна икĕ енчен те аптрипе чиккелеççĕ. Лешĕ çапла чиккеленĕрен макăрса

ярсан, вăл турра юрăхлă тесе, хăйсемшĕн усăллă тесе пусаççĕ те ашне пĕçерсе çисе чӳк тăваççĕ, шăммисене вутра çунтарса яраççĕ. Выльăхĕ хăйне темиçе хут чиксен те макăрса ямасан, унпа чӳк тумаççĕ, вăл турра юрăхсăр, хăйсене усă кӳмĕ тесе шутлаççĕ.

**1785.**

## НИКОЛАЙ ЗОЛОТНИЦКИЙ ХАЙЛАВĔСЕМ

Несколько слов об Елабуге и Николаевском приходском училище в селе Икском - Устье

"... Село Икское - Устье находится в 40 верстах от Елабуги на правом берегу реки Камы, имеет пристань для пароходов, для нагрузки и выгрузки судов и состоит из 140 семейств, в которых до 400 душ. Оно занимает одно из благоприятнейших для благосостояния народонаселения местностей. Но, ведь, самая счастливейшая местность не может устроить благосостояния общества, если само общество не умеет им дорожить, ни пользоваться разумно выгодами своей местности и, что всего хуже, если оно не понимает тех начал, которые служат главною основой для истинного, прочного благосостояния. Что беспокоит автора! Отличительные свойства характера икских крестьян состоят в их удальстве и отваге, а с тем вместе в наклонности к разгульной, беспечной "жизни... едва ли где-нибудь пьянство развито до такой степени , как в селе Икском-Устье". (Из другого материала другого автора). Какого же благосостояния искать в обществе, об котором идет какая молва!

Г.Емельянову, без сомнения, известна вся темная сторона быта своих прежних односельцев, очевидны их главнейшие потребности; а потому что он, помимо всех других условий крестьянского быта, не иначе выразил конечную цель своих желаний, тем, чтобы между ними укреплялась православная вера, развивались и совершенствовались понятия о доброй нравственности и "благоустроенной жизни".

От всей души желаем Николаевскому икскому училищу полного успеха в своем деле и благотворного влияния на окружающее его общество, а основателю этого заведения - совершенного исполнения его прекрасных желаний.

**Вятские губернские ведомости. 1860.№48.**

### Несколько слов о Вятском женском приходском училище

В последнее время в "Вятских губернских ведомостях" очень редко

появлялись известия об открытии или состоянии такого рода учебных заведений в здешней губернии.

Читатели помнят, как коротко было известие (в № 40 Губ. Вед.) об открытии в Вятке женского приходского училища. Многого и сказать об этом было нечего. Мысль о потребности этого заведения явилась не в общественном сознании, а родилась она из того особенного обстоятельства, что многие из девочек, поступивших в женское училище 1-го разряда, оказались мало приготовленными, это затрудняло первоначальные занятия с ними и требовало устройства особого приготовительного класса. Не знать об этой потребности обществу пожалуй что было и извинительно: перворазрядное училище обязано своим существованием вятскому купечеству. Но что мысль эта была совершенно верна в основании и вполне сообразна с желанием и потребностями бедных людей, так это доказалось тем, что тотчас же по открытии училища ( 18 сентября) явилось 20 учениц, а в два месяца эта цифра удвоилась: в настоящее время в приходском училище обучается 45 девочек. (Из них по происхождению дочерей чиновников 12, купцов 2, причетника1, мещан 15, крестьян 3 и солдатских 11, служит. 1.).

Но в то же время нельзя не заметить, что и эта цифра, значительная сама по себе, еще далеко не соответствует народонаселению города...

... Сомнения и недоразумения не затемняют пробуждающегося сознания необходимости образования, что образование из потребности немногих обращается в потребность общественную, что теперь яснее, чем когда - нибудь, прежде и безграмотный сознает, или хоть чувствует, что "ученье - свет" и в массе народной просветляется истина, что просвещение есть великое, святое дело, принявшему на себя расходы по содержанию его, но в этом почтенном, готовом действовать на общую пользу, сословии нет того, что, без сомнения, можно найти в каждом из его членов, взятом отдельно, - нет постоянного внимания к полезному делу, начатому общими силами; думается даже, что во все продолжение существования училища само купечество едва ли хоть однажды справлялось об его успехах обучения, едва ли хоть раз спросило об нуждах и потребностях, которые не могли быть предусмотрены при открытии заведения. (Эти предложения не могут вполне относиться к настоящему: с недавнего времени в заседаниях педагогического совета училища присутствует депутат от купечества, который передает своему сословию о состоянии училища, об его нуждах, потребностях и проч.).

...Для города необходимо заведение, в котором девочки всех званий и самого недостаточного состояния могли бы бесплатно получать начальное образование...

Для избежания расходов на наем дома, обзаведение классной мебели и приобретение учебных пособий, заведение помещено в квартире 1-го приходского училища. (На Спасской улице в доме купца И.Н.Веретенникова). Учение изначально в после - обеденное время с 2-х до 4-х часов, по окончании классов в мужском приходском училище.

..Единственный расход состоит в жалованьи учителю и надзирательнице; значит, нужно полтораста рублей в год. ...Значит, для доставления начального образования сорока пяти (берем нынешнюю цифру) бедным и небогатым девочкам нужна в год с небольшим половина той суммы, какую обыкновенно богатые родители платят в год же на обучение дочери в пансион. Но все таки без этих полутораста рублей этому училищу существовать нельзя, - его должно будет закончить.

Надо упрочить существование женского приходского училища...

Вероятно, и другие города обратят внимание на полезность здешнего земского училища, на простоту его устройства, на незначительность расхода, и не замедлят открытием и у себя таких же благодетельных заведений.

## О состоянии Вятской воскресной школы в первое полугодие ее существования

Предназначена для первоначального образования рабочих и ремесленников. Открыта 8 января 1861 г.

В ноябре месяце (1860 г.) один из принявших участие в преподавании ( редактор губернских ведомостей), имея случай посетить до 40 ремесленных заведений, с целью ознакомиться с их устройством и бытом ремесленного класса, принял себе за правило заводить при этих посещениях, между прочим, с хозяином мастерской, при работниках и учениках разговор о грамотности и об устраивающейся Воскресной школе. Последствием всего этого было убеждение в действительной необходимости школы...

Вятская школа и хотя называется собственно Воскресною, но обучение в ней не ограничивается воскресными днями - оно происходит и в те из праздников, в которые как преподаватели, так и рабочий класс народа свободны от своих ежедневных занятий. Со дня открытия школы (с 8 января) по июль месяц обучение в ней происходило 30 раз. Всех объявивших в течение этого времени желание обучаться в школе записано в книгу 135 человек разного возраста от 9 до 36 лет... преимущественно ремесленников и лиц живущих в услужении.

Из них 18 человек приходили в школу только по одному разу, 10 человек по 2 раза, по 3 раза - 14 человек, к июлю общее число учеников Воскресной школы состояло из 66 человек.

Относить неаккуратное посещение учениками школы к собственному их нерадению - было бы несправедливо. При изыскании настоящих тому причин, прежде всего следует обратить на зависимость учеников от воли и от произвола старших над ними в доме. Нередко случается, что живущий в услужении мальчик, в то самое время, как обращается к своим господам с просьбой о позволении сходить в школу, получает от них к неотложному исполнению поручение, которое, при маленьком внимании или снисхождении со стороны последних к доброму желанию мальчика, удобно могло бы быть исполнено им прежде или после времени, назначенного для занятий в школе. Ученики из ремесленного класса, по-видимому, могли бы иметь более возможности располагать своим праздничным временем, но часто бывает, что из них оставляются в своих мастерских дневальными, другие задерживаются хозяевами для исполнения разных домашних услуг; доходят известия о том, что некоторые из хозяев, набирая значительное количество заказов, злоупотребляют своей властию, заставляя мальчиков, помимо их собственного желания и без всякого вознаграждения, работать по воскресным и праздничным дням.

... Нельзя оставить без внимания еще и то, что ученики ремесленных заведений кроме воскресного дня в продолжение недели не имеют ни одного часа, в котором могли бы поработать "на себя", т.е. приобрести починкою чужого платья или обуви нескольких копеек для удовлетворения своих необходимых потребностей и даже заняться починкою предметов собственного туалета; да если бы и нашелся в праздничный день такой свободный часок, то хозяева, мало интересующиеся нуждами и потребностями своих учеников, все-таки ни под каким видом не позволят им работать на себя, - считая такое дозволение приучением к баловству и нарушением своих прав...

Не мало нарекания навлекает на себя Воскресная школа ласковым, вежливым обращением наставников с учениками, отсуствием всякого принуждения и наказания. Не далее как вчера случилось нам говорить об этом с одним добрым, почтенным, нравственным, знатоком своего дела мастером. «Нет, - сказал он, - что ни говорите, а такое учение только испортит навеки человека: в этой школе всякому, даже какому ни на есть чумазому так уж наука". Но, благодарение Богу, время это прошло и не возвратится, такие учителя умерли и не народятся, только такие родители живут еще, пугают рассказами и смешат своими убеждениями молодое поколение.

Пока не узнали мы положительно, какой мысли заключают в себе часто слышимые нами слова: не пускает хозяин в школу, то и не беремся за толкование их. Слова эти слышали мы и от учеников, выбывших из школы, которые, встречаясь, иногда спрашивают: "А что в школе-то учатся?

А нас хозяин не пущает. Почему же?" Да бог его знает. Слышали мы это и от побывавших в школе: " и я бы поучился, да не велят, а вон Кондраша то ничего не знал, походил, а теперь читает, пишет, считает и молитву знает, и еще бы говорит, походить надо, да барыня в эти часы кофий кушает, ну и не пускает". Кофе - причина, может быть, уважительная; но хотелось бы знать, что заставляет хозяев удерживать мальчиков от посещения школы: боязнь ли, чтобы ученики не сделались умнее их самих, чтобы не прочитали как- нибудь Ремесленного Устава, чтобы не написали при случае жалобы к начальству ( словесные-то ни по чем, их тотчас замять можно), чтобы сделавшись работниками, не заметили недодачи платы: или уж, в самом деле, ученики, побывавши 5-6 раз в школе, от вежливого обращения с ними стали чувствительнее к побоям, или что-нибудь другое; но пока не знаем - не хотели и говорить, а узнавши скажем.

Обязанности распорядителей Воскресной школы, с самого его основания, исполняли: П.П. Хохряков (Штатный смотритель) и Н.И.Золотницкий.

**Вятские губернские ведомости. 1861. №30**

## По поводу открытия частных школ в Вятской губернии

В официальной части настоящего №Губернских Ведомостей ( отд.II) напечатан список духовных лиц Вятской губернии, которые, в следствии приглашения епархиального начальства и г. управляющего палатою государственных имуществ, изъявили желание в частных школах при своих домах заняться безвозмездным обучением крестьянских детей - как мальчиков и девочек. В этом списке перечислены 96 школ и лица, занявшихся преподаванием. (В 22–х селах все священно-церковнослужители и особо: 1 протоиерей, 43 священника, 7 священнических жен и 1 дочь, 17 дьяконов и 2 с причетниками, 33 причетника, 1 исключен из духовного звания и 1 крестьянин).

При таком сочувствии духовенства к этому делу остается только желать, чтобы сам народ с сознанием пользы и необходимости образования спешил воспользоваться предлагаемым ему благодеянием. К сожалению, вести об этом не так уж утешительны: во многих местностях губернии у крестьян, в особенности же у инородцев - черемис, вотяков и пермяков, предубеждение против грамотности, особенно для женского пола, так сильно, что все доводы и разъяснения о необходимости ученья оказываются безуспешными.

Мы намерены сказать несколько слов о причинах предубеждения крестьян вообще и инородцев в особенности против образования детей.

Первая причина этого предубеждения, без сомнения, заключается в пони-

мании пользы и необходимости образования. Но есть ли такие данные, на основании которых крестьянин может составить и усвоить себе понятие о пользе просвещения для поселянского быта? Голословные убеждения и доказательства не имеют для него никакого значения, - и ему, более чем кому-другому, нужны ясные факты и очевидные примеры... Если на это нельзя дать утвердительного ответа, то не вправе ли крестьянин сомневаться в пользе грамотности для его быта? (Является ли учение средством для улучшения своего хозяйства и семейного быта, для повышения своего нравственного состояния и служат ли они своему обществу словом, делом и примером?)

Другая причина предубеждения крестьян против образования состоит в опасении их, что грамотность может произвести расстройство в их поселянско-хозяйственном быте. Это опасение выражается в ответе пермяков на убеждения об отдаче детей в ученье: "грамотный не будет робить", возражают они и "напрасно - говорит автор - будете доказывать им противное".

Крестьянин " естественно желает, чтобы сын его оставался при своем крестьянском ничтожестве", не подавался в писаря.

Итак, для уничтожения предубеждений простонародья против грамотности прежде всего нужно достигнуть того, чтобы крестьяне, получающие образование в школе, оставаясь в своем быте, вносили свое учение в действительную жизнь. А для этого необходимо, чтобы школьное учение состояло не в механическом затверживаньи на память книжных фраз - в заучиваньи уроков, но в сознательном уразумении изучаемого предмета и в развитии соображения учащегося.

Что касается инородцев, то главная причина их отвращения от учения заключается в различии природного их языка от языка школы, и надобно сказать правду, что мы поступаем не совсем человечно, усаживая вотского или черемисского мальчика за русский букварь и потом заставляли его задолбливать на чуждом ему языке молитвы, катехизис, историю и прочее. Полагаем, что учение для инородцев тогда только будет полезным, если он начнет и выучится читать, писать, считать и всему прочему на своем природном языке; русскому же языку пусть он учится только разговорному, занимаясь этим дня по два в неделю: выучившись читать по вотски (русскими буквами) с пониманием прочитанного и ознакомившись с русским языком, вотяк и сам возьмется за русскую книгу и она не будет казаться ему, как ныне, противною до отвращения. Конечно, до этого прежде всего нужны учебники и книги на инородческих языках; но какой же труд нашего духовенства, живущего среди инородцев, может более полезным, нежели составление таких учебников и книг для истинного просвещения своих прихожан?

## По вопросу о способах образования чуваш

В виду того, что обращение в христианство чуваш и других подобных инородцев, по способу исполнения этого дела, не принесло желаемых плодов, и после того как 25-летнее существование заведенных между инородцами училищ не повысило до желаемой степени умственного и нравственного их уровня и не оказало достаточного успеха в деле национального объединения этих приемных детей с русским народом, - правительство и общество пришли к убеждению о необходимости принять более действительные меры для обрусения и религиозно-нравственного образования инородцев.

Все, касающиеся дела народного образования, инородцев в особенности, имеет для меня особенный интерес, так как, имев случай пять лет тому назад, высказать взгляд мой на способ образования инородцев (№47 Вят. Губ. Ведом. за 1861 г. "По поводу открытия частных школ в Вятской губернии") и затем проверив мои воззрения на потребности народного образования как посредством обмена мыслей в звании редактора губернских ведомостей, так особенно при непосредственных сношениях с народом в бытность распорядителем воскресной школы и мировым посредником, я приступил, наконец, к осуществлению моих убеждений посредством составления и издания учебников для первоначального обучения чувашских детей. А потому искренне сочувствие к заботам правительства и общества об образовании инородцев побуждает меня изложить здесь несколько мыслей по этому предмету.

Обрусение инородцев и просвещение их, представляющиеся с первого взгляда как две независимые одна от другой цели, в понятии об упрочении общего блага государственной семьи сливаются в одну задачу. Ближайшие к народу исполнители этой задачи - училищные советы, земские и мировые учреждения - считают, как кажется, вопрос о способе обрусения инородцев положительно разрешаемым посредством применения к делу известного мнения, что "усвоение языка усвояет и народность", а потому в настоящее время они особенно озабочены разрешением вопросов, касающихся собственно образования - об открытии училищ, о приискании в них учеников и наставников, об устройстве учебной части и о способах обучения.

Имея в виду высказаться по тем же самым вопросам, я считаю нужным сказать предварительно несколько слов о значении русского языка в деле обрусения и просвещения инородцев.

Государственное право господствующего языка, как решение, вошедшее в законную силу, не может возбуждать никаких вопросов, а тре-

бует только исполнения. На основании этого права, инородцы и иноверцы, безусловно принятые в семью русского народа, обязаны употреблять господствующий язык во всех отношениях к государственной власти и при исполнении обязанностей государственной и общественной деятельности. А на этом основании требование удовлетворительного знания русской грамоты в здешней местности может быть распространено на инородцев и иноверцев избираемых в члены волостных правлений, земских управ и других учреждений, на принимающих иноверческие духовные должности и на учителей в иноверческих школах.

Очевидно, что сближение и затем объединение национальностей помимо политических обстоятельств, совершается главным образом подобно сближению отдельных личностей - именно под условием единства убеждений. Минувшие и современные отношения разных национальностей доказывают, что единство убеждений религиозных, как самых прочих из всех убеждений по свойству их задушевности, служит наилучшим средством не только к объединению подданных одного государства, но и к поддержанию постоянной симпатии между отделенными друг от друга народами и в обоих случаях - независимо от условий единства или сродства языка, и наоборот разность религиозных убеждений при единоплеменности сродстве и даже единстве языка, возбуждает и поддерживает в природных подданных государства взаимную антипатию, а в соединенных по обстоятельствам - стремление к политической независимости. Если из числа поволжских инородцев татары "примыкают как говорят - своими симпатиями к Турции, даже - к Хиве и Бухарию, то главным источником такой симпатии можно признать только единство религии, а не сродство по языку и по происхождению - сродство очень далекое. Между тем племя по языку самое близкое к татарам - чуваши в отношении к татарской народности представляют такое явление: те из них, которые живут вдали от татар и которых по их религиозным убеждениям, можно назвать крещенными, полуязычниками, те не имеют расположения к татарской народности, а живущие вместе с татарами, крещенные чуваши, под очевидным влиянием исламизма, легко усваивают татарскую народность, чуваши же язычники, тоже живущие среди татар, упорнее прочих своих единоплеменников отстаивают свою племенную народность. Вообще, для прочного объединения здешних инородцев с русским народом, необходимо усвоение им не только русского языка, сколько- инстинкт христианской религии.

Второе после религии средство, способствующее обрусению инородцев, состоит в усвоении ими понятия о нравственном превосходстве русской народности. Многочисленные примеры перехода инородческих

семейств в русские селения и города, женитьбы инородцев на русских и проявляющееся в них желание жить по русским обычаям убеждают, что эти явления происходят не вследствие усвоения им русского языка, но под влиянием сознательного уважения их к русской народности, к которой без такого уважения остаются вполне равнодушными весьма многие инородцы, ознакомившиеся с русским языком по торговым и иным сношениям и даже по русской школе. Для наилучшего же действия этого средства кроме распространения в массе инородцев понятия о значении русской народности, в особенности желательно повышение, посредством правильного образования умственного и нравственного уровня близких к инородцам сословий русского народа.

* * *

Вместо желаемого открытия новых училищ в некоторых инородческих местностях приходится закрывать и нынешние за недостатком средств на содержание их и главным образом, разумеется, на жалованье наставникам. К такому грустному явлению, как закрытие училищ, не могут оставаться равнодушными те, на ком лежит главная забота о просвещении инородцев- их духовные пастыри. Настоящий случай дает им возможность показать свое сочувствие к делу народного образования и сознание пастырского своего долга; они могут протестовать против закрытия училищ предложением безвозмездного преподавания. Здесь, кстати, я выскажу, может быть, непрактичное, но твердое убеждение в том, что пастыри церкви обязаны быть безвозмездными учителями, потому что главнейшую обязанность священника составляют: просвещение прихожан с самого их детства евангельским учением, постоянное во всю жизнь руководство их в духе этого учения и напутствования в вечную жизнь; исправление же треб есть уже вторая обязанность, вытекающая из добросовестного исполнения первой, так как треба, составляющая теперь непонятный для инородца обряд, только тогда сделается настоящей требой, потребой, когда будет требоваться прихожанином вполне сознательно, а не из какого-нибудь спасения. Равнодушие приходских священников к делу образования было бы тем более невыгодно для них, что доверяя сочувствию их к этому делу и сознанию долга, правительство утвердило за ними исключительное право обучения Закону Божию и возложило на них наблюдение за религиозно- нравственным направлением в училищах и школах вообще.

За вопросом о наставниках следует вопрос о приискании учащихся. Самое существование этого вопроса и суждения о преимуществах обязательной и добровольной систем, доказывают, что со стороны самих ино-

родцев нет соразмерного с предложением запроса на грамоту. Отсутствие же запроса объясняется отвращением инородцев от грамоты. А это отвращение порождено самою грамотою. Во всяком деле, чтобы стоило заниматься им или жертвовать для него чем-нибудь, надобно видеть пользу или удовольствие. А грамота, как она предлагалась и предлагается инородцам, не может доставить им ни того, ни другого. Родители не понимают, чему и для чего учатся их дети... Язык школы единственное препятствие к уразумению этого, дети уже и выучившись, не в состоянии доказать, что они учились не напрасно – язык школы обращает ученье их в механическую работу, не дозволяет им усвоить науки душою и лишает возможность внести ее в семью, в среду, в жизнь. Чем же другим, если не близостью школьного языка к жизни, объясняется сравнительно больший запрос на грамоту со стороны татар? Введение в училища чувашских детей первоначального, и разумеется, разумного обучения на их природном языке даст, прежде всего, возможность родителям поднять цель грамоты и, так сказать, осязательно почувствовать пользу ее, а учащимся, облегчая сознательное приобретение познаний, дает возможность в своей среде словом и делом доказать превосходство сообщаемого грамотою умственного развития. Это – по моему твердому убеждению - единственное средство к искоренению естественного предубеждения инородцев против грамоты, к возбуждению запроса на нее и к разрешению вопроса о способах приискания учащихся.

## 1906-1907 ÇУЛСЕНЧИ «ХЫПАР» ПУБЛИЦИСТИКИ

## ЫЙТУ-ШЫРУ

Ĕлĕк эпĕ кĕнекесем валли чăвашла нумай çырсаттăм, çав çырнă хутсене вăл вăхăтра укçа çук пирки халиччен станпа çаптараймасăр тăтăм. Эпĕ çапла кĕнекесем валли çырса хăтланнине пĕле тăра юлташăмсем, тус-йышăмсем, çав çырнă хутсене вуласа пăхма тесе илсе, пăхсассăн халичченех пĕрне те, мана калле тавăрмарĕç. Мĕншĕн тавăрманни пĕр енчен мана паллă: ăнсăртран çунса туса кайман пулсан, вăл хутсене вулама юрăхлине пĕлсе, манран вулама илнĕ çынсенчен, тата çапла ытти çынсем вулама тесе ыйтса илсе, халиччен алăран алла çӳретеççĕ пулĕ. Вăл çырусем кам-кам патĕнче эпĕ хам пĕртте пĕлместĕп, мĕншĕн тесен, çав хутсене хамран илни ĕнтĕ пĕр вуннă - вунпилĕк çулта ытла-тăр. Хальхи саманана кура пирĕн чăваш чĕлхипе Хусанта хаçат кăларма пуçларĕç. Хаçатра станпа çаптарма малашне нумай çыру кирлĕ пулĕ, çапла алăра çӳрекен хай хутсем станпа çаптарма юрăхлă пулсан, эпир вĕсене пурне те станпа пуçтарăттăмăр, вĕсене мĕн çинчен çырнине чăвашсем пурте çыру пĕлекенсем вуласа пĕлсе тăрĕччĕç. Çавăн пирки эпĕ çакăнта çырнă кĕнекелĕх çырусем кам-кам аллинче пур, вĕсене вăл хутсене халĕ станпа çаптарма хăйсенчен тӳрех Хусана чăваш хаçат редакцине яма тархаслатăп; май килсен çак адресĕпе ярăр: "поч. ст. Анненково, Симб. губ. И.Н.Юркину". - Хамăр чăваш хушшинче алăра çӳрекен кĕнекелĕх çырнă хутсен ячĕсем ак епле: 1) "Лирические произведения (народные песни) - 25 мая 1888 г., 2) "Различие однозначущих слов у низовых и верховых чуваш" 1890 г., 3) "Юмахсем", 4) "Ваттисен сăмахĕсем", 5) "Илья паттăр" - 5 мая 1889 г., 6) "Этемĕн пырĕ тутă та куçĕсем выçă" - 3 июля 1889 г., 7) "Истинное происшествие, Мул" - 28 окт. 1889 г., 8) "Чувашские песни, записанные со слов крестьянки д. Поповой волости Чебоксарского уезда Хавроньи Ивановой" 1891 г., 9) "Песни Чебоксарского уезда", 10) "Чăвашсенĕн тĕнĕ" - 8 августа 1891 г., 11) "Сборник чувашских песен", - тата ыттисем те.

Манăн сăмахăма итлесе кĕнекĕмсене эпĕ ыйтнă çĕре яракан çынсене пурне те ăшă чунтан тав тăватăп.

**И.Юркин.**

**Хыпар, 1906 ç., февраль 19, 7 №.**

## РЕДАКЦИЯ ХУШНĂ СĂМАХ

Чăвашла хаçат илес тиекенсем нумайăшĕ: хаçат укçине пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн тӳлемелле пулсан илеттĕмĕр теççĕ. Анчах хаçат хакне пĕчĕккĕн тӳлесен редакция нумай сиен кӳрет.

Хаҫатӑн хӑйӗн хакӗ пит пысӑках мар, унӑн хакӗ "почта" укҫи нумайран пысӑк. Почта хаҫат илекентен кашнинчен 80 пус илет.

Ҫулталӑк пек илекенсемшӗн те 80 п., ҫур ҫул анчах илекеншӗн те 80 пус илет.

Хӑшӗ-хӑшӗ хаҫатшӑн яракан укҫана хут ӑшне чиксе конвертпа яраҫҫӗ. Апла хакла ӳкет. пӗр тенкӗ анчах ямалла пулсан та 25 п. яхӑн кирлӗ.

Укҫа ямалли юри тунӑ "переводный бланк" пур, унпа 25 т. ярас пулсан та 15 пус анчах кирлӗ.

**Хыпар, 1906 ҫ., январь 29, 4 №.**

## ҪӖНӖРЕН ТУХНӐ ЧӐВАШЛА КӖНЕКЕСЕМ

1) "Требник". 1 часть. Ун ҫинчен таинствосен церкви, кил-ҫурта кӗрес умӗн тумалли кӗлӗсем, ытти кӗлӗсем те пур. Кӗнеки хакӗ 1 тенкӗ те 30 пус.

2) "Всенощное бдение и литургия", Чӗрӗлнӗ кун умӗн тӑвакан каҫхи кӗлӗпе апат кӗлли. Хакӗ 50 пус.

3) "Сборник молитв и песнопений из триоди, цветной и минеи месячной". Вун икӗ аслӑ праздниксенче тӑвакан кӗлӗсем, ҫӗнӗ ҫулта, ачасене вӗрентес умӗн, патша кунӗсенче тӑвакан кӗлӗсем. Хакӗ 1 тенкӗ те 30 пус.

4) Беседы на символ веры. Тӗн Символӗ ҫинчен. Хакӗ 30 пус.

5) Жизнь и учение Мухамеда. Хакӗ 5 пус.

6) Календарь на 1906 г. Ҫулталӑк кӗнеки. 1906 ҫ. Хакӗ 6 пус.

7) Патшалӑха мӗнле тытса тӑрсан халӑха авантарах пуласси ҫинчен вӗрентекен ушкӑнсем. Хакӗ 2 пус.

8) Беседы о земледелии. Ҫӗр ӗҫне епле тусан тырӑ нумайтарах тухмалла? Хакӗ 15 пус.

9) Эрех сиенӗ. Хакӗ 2 пус.

10) Евангелие. 35 пус.

11) Псалтир. 25 пус.

12) Откровение тиекен кӗнеке халӗ ҫук.

**Хыпар, 1906 ҫ., январь 29.**

## ҪУТТА ТУХАСЧӖ!

Пӗрре ман патӑма юлташ килчӗ те, акӑ мӗн каласа кӑтартрӗ: "Эпӗ пӗчӗкренпех хам пурнӑҫа ӗретлӗ астумастӑп. Кӑш пӗле пуҫласан эпӗ хам патри япаласем ҫинчен шухӑшлама тытӑнтӑм. Ман йӗри тавра сӗм-тӗттӗм, нимӗн те курӑнмасть. Ҫутӑ кӑшт та ҫук. Эпӗ суккӑр-ши, е ҫутӑ ҫукран нимӗн те курмастӑп-ши терӗм хама хам. Унтан эпӗ ҫынсем пур-и кунта, тесе кӑшкӑртӑм. Инҫетри йӗррипе сасӑ илтӗнчӗ. Эпӗ каллех: "Килӗр-ха

кунта, ăҫта эсир", - тесе кăшкăртăм. Ман пата пĕр ватă ҫынпа ҫамрăк ача килчĕҫ. Эпĕ вĕсенчен, "Епле эсир ҫакăнта пурăнатăр, ҫутă ҫинчен шухăшламастăр та-и мĕн?"- терĕм. Ватă ҫын каларĕ: "Эпĕ халиччен кунта ним курмасăр пурăнтăм, халĕ ҫутă ҫĕре тухсан та усси пулмĕ, тесе шухăшлатăп", терĕ. Ача каларĕ: "Пирĕн аттесем, асаттесем ҫутă ҫинчен илтеймесĕр пурăннă, эпĕ те вĕсем пекех пурăнап, ҫиме ҫăкăр пулсан мана нимĕн те кирлĕ мар", терĕ. Унтан эпĕ вĕсенчен уйрăлса кайрăм та, епле тухасши кунтан, тесе шухăшлама тытăнтăм. Шухăшласа тăнă чухне эпĕ ҫӳлелле пăхрăм та, кăшт ҫутă куртăм. Ăҫтан кĕрет-ши вăл ҫутă, вăл ăҫтан та пулсан шăтăкран кĕрет пулĕ, терĕм эпĕ. Вăл шăтăкран тухма ҫул ҫук-ши? Унтан эпĕ ҫав ҫутă кĕрекен шăтăк патне утса кайрăм. Унта ҫитиччен ман тĕрлĕ тусем урлă, шăтăксем урлă каҫмалла пулчĕ. Нушаланса эпĕ шăтăк патне ҫитрĕм. Вăл шăтăкран эпĕ ахалех тухаймарăм, вăл шăтăк пит пĕчĕккĕччĕ. Ăна эпĕ алăпа тăрмаласа пысăклатрăм та (ман алăра кĕреҫе тавраш нимĕн те ҫукччĕ) ҫав шăтăк витĕр тухрăм. Ах епле тĕлĕнтĕм эпĕ... Кăн-кăвак таса пĕлĕт, пĕр ҫумăр пĕлĕчĕ те ҫук. Эпĕ йĕри-тавра пăхкаласа малалла утрăм. Ак ман ҫул ҫинче ҫулĕ те урлă каҫмалла пулчĕ. Урăх нихăш еннеле те ҫул ҫук. Пĕр енче вăрман, тепĕр енче шыв. Ҫутă курма ман ҫав ту урлă каҫмалла пулчĕ. Ту урлă каҫнă чухне эпĕ темĕн тĕрлĕ асап, темĕн тĕрлĕ хĕн куртăм. Кăш астумасăр, пуссан, ту айне, е шăтăка ӳкмелле. Анчах мĕнле йывăр пулсан та, эпĕ ту урлă каҫрăм та, яла кайрăм. Ял ҫинче каллех сĕм-тĕтĕм. Нимĕн те курăнмасть. Ҫынсем те пĕртте курмаҫҫĕ. Анчах хăш ҫутăра ҫӳресен те, ыттисене ҫутă курма вĕрентиччен, аллисене туя тыттараҫҫĕ. Те тĕрĕс, те тĕрĕс мар ҫак юлташ сăмахĕсем?

**Т.С. - в.**

**Хыпар. 1906 ҫ., январь 8, 2 №.**

## ЧĂВАШСЕМ ХАҪАТ ҪИНЧЕН КАЛАҪНИ

Хуласенче вăрҫаҫҫĕ. Мĕншĕн капла-ши? теҫҫĕ чăвашсем. Пĕри калать: «Сан ҫинчен хаҫат ҫине ҫырнă пулĕ-ҫке?» тет. Тепри: кам вуласа тăнлантарĕ пире?, тет. Тата тепĕри калать: «Укҫа ҫук тесе питех те каламалла мар. Эрех ĕҫес килсен пухăва пыратăр та виҫ-тăват тенкĕлĕх ҫĕр сутатăр, укҫине сутса яратăр; ҫав укҫапа хаҫат илме пулĕччĕ», тет Ҫапла вара халăх хушшинче ăсли те, ухмаххи те пур. Эрех вырăнне хаҫат илме хушаканĕ ăслă ҫын пулмалла тесе шутлатăп эпĕ.

**М - в.**

**Хыпар. 1906 ҫ., январь 8, 1 №.**

## ХАÇАТ КИРЛĔ!

"Нижегородский Листок" ятлă хаçат çине халăха хаçат кирли çинчен çыраççĕ. Чул-хула уесĕнче Борисово ятлă ялта нумай пулмасть хут пĕлекен çынсем хаçат пит нумай вулама пуçларĕç. Вĕсенĕн халăха вуламалли çурт (читальня) виçĕ çултанпа пур ĕнтĕ, анчах ку таранччен хаçата ун пек нумай вуламан. Вуламалли çуртра пур хаçат халĕ ăмăртса вулаççĕ, кашни тата, кӳршĕсене, хăйĕн çемйине вуласа кăтартмалла, киле илсе каясшăн. Вăрçă тухнă пирки çапла хаçата ăмăртса вулама пуçларĕç. Пур вулăс тиекенсене шутласан пирĕн хаçатсем сахал, çавăнпа вуламалли çурта пăхаканни çынсене хаçата йĕркерен, черет тăрăх парать. Раскольниксем тепĕре псалтиртен пуçне урăх кĕнеке вулама та çылăх, теççĕ, халĕ вĕсем те хаçата вуласа пăхасшăн çунаççĕ.

**Хыпар. 1906 ç., январь 8, 1 №.**

## ХАÇАТ УССИ

Чăвашсем нумайăшĕ: "Пире чăвашла хаçат кирлĕ, мĕншĕн тесен эпир вырăсла пĕлместпĕр, вырăслине вуласан та ăнланмастпăр", теççĕ. Тата: "Тĕнчере мĕн-мĕн пулнине чăвашла хаçат тăрăх пĕлесчĕ", тиекен те пур. Çапла ĕнтĕ чăвашсем хăйсемех чăвашла хаçатшăн çунаççĕ. Чăнах та хаçатсăр пурăнма йывăртарах. Ырă курса пурăнас тиекен халăхсен пурин те пĕр хаçат мар, вуннă, çитмĕл, çĕр хаçат та тухать. Араб ятлă халăх хăй йышлах мар пулин те, хăйĕн чĕлхипе темиçе хаçат кăларать. Хаçат тăрăх арабсем нумай пĕлеççĕ, нумай пĕлнĕрен пурăнăçа та пирĕн пек типĕ çăкăр çисе ирттермеççĕ, пирĕн пек пит начар пурăннă, хаçат тухнăранпа вĕсен школăсем нумайланнă, пурăнăçĕ аванланнă. Пирĕн те, чăвашсен, хаçат тăрăх ырра вĕренесчĕ, хамăр начар пурăнăçа аванлатасчĕ!

**Хыпар, 1906 ç., январь 8, 1 №.**

## ЧĂВАШ ХУТЛА ПĔЛЕКЕН САХАЛ

1897 çулта тĕрĕсленипе Хусан кĕпĕрнинче 100 çын пуçне хут пĕлекене: вырăс – ар çын 36 пулнă, хĕрарăм - 13 пулнă; тутар – ар çын 22, хĕрарăм - 18; çармăс – ар çын - 18, хĕрарăм - 2; чăваш - ар çын 100 пуçне хут пĕлекен 13 тивнĕ, хĕрарăм çĕр çын пуçне 1 çын анчах пулнă.

Чăвашăн хĕрарăм хушшинче хут пĕлекен мĕншĕн сахал-ши? Школа çителĕклĕ пур-и? 1900 çулта чăваш хушшинче хĕрача вĕреннĕ школасем: Етĕрне уйесĕнче 6 пулнă (церковно-прих. - 2, грамоты -4). Çĕрпӳ у. - 6 (земск. - 2, церковно-прих. - 1, братск. - 2, грамоты - 1). Чикме у. - 3 (земск. -2, церк.-прих. - 1). Тетĕш у. -1 (братск). Ытти уессенче чăваш хушшинчен хĕрачашăн тунă школа пулман.

Ар çын вӗренекен школасем ытларах пулсан та унта хӗрача йышлӑ каймасть. 10-12 çултан иртнӗ хӗрачасене ар çын ачасемпе вӗрентме май килмест. Ахаль те ар çын ачисем школа пыраканнисем хӑйсем йышлӑ. 40-50 ача вырнаçмалӑх тунӑ школасене 80-100 ача ытла пухӑнать. Чӑвашӑн ачисене хутла вӗрентес тесен (вӗрентмесӗр юрамасть, - малашне хутла пӗлменнисен пур çӗрте кая тӑрса юлмалла пулӗ) çак школасемпе сахал. Пирӗн те школшӑн тӑрӑшас пулать, тутарсенчен кая пулас мар. 1897 çулта тӗрӗсленӗ тӑрӑх мӗн пурӗ 843755 çын.

Хусан кӗпӗрнинче: 1) Çӗрпӳ у. - 131.277 ç; 2) Шупашкар у. - 84.603 ç. 3) Чикме у. (Козмод.) - 48.943 ç. 4) Чистай (Чистопол.) у. - 49563 ç. 5) Тетӗш (тетюш) у.- 30.865 ç. 6) Спасск. у. - 12.570 ç. 7) Сӗве (Свияжск) п. - 1920 çын; 8) Етӗрне у. - 170 пин çын.

Чӗмпӗр кӗпӗрнинче: 1) Пӑва (Буинск.) у. - 80.600 ç.; 2) Кӑрмӑш у. - 41.921 ç. 3) Чӗмпӗр у. - 16.745 ç. 4) Сызрань у. - 8.282 ç. 5) Сенгилей у. - 6.979 ç. 6) Корсун у. - 5.100 çын.

Самара кӗпӗрнийӗн: 1) Бугуруслан у. - 34.832 ç. 2) Пӗхӗлме у. - 25.406ç.; 3) Бузулук у. - 12.556 ç.; 4) Ставрополь у. - 11.018 ç.; 5) Самара у. - 7.923 çын.

Ӗпхӳ (Уфа) кӗпӗрнийӗн: 1) Белебей у. - 31.442 ç.; 2) Стерлитамак у. - 23.882 ç.

Саратов кӗпӗрнийӗн: 1) Хвалынск у. - 5762 ç.; 2) Кузнецк у. - 3930 ç.; 3) Вольск. у. - 2442 ç.; 4) Петровск у. - 2212 ç.

Оренбург кӗп.: 1) Орск у. - 2095 çын.

Тобольск, Томск кӗпӗрнисенче чӑвашсем, - 1897 ç. тӗрӗсленӗ чух, чӑваш ячӗпе пулман.

1897 çултан чӑваш тата хушӑннӑ. Хусан кӗпӗрнинчех 1897 ç. - 502. 042 ç. вырӑнне 1903 çулта чӑваш 550.604 ç. çитнӗ. Ытти кӗпӗрнесенче кун пек хушӑннӑ пулсан, халӗ чӑваш 1 миллиона яхӑн пулас пулать.

Вӗсем валли сахал-сахал 10 пин школа кирлӗ.

**Іоанн Йуркки.**
**Хыпар, 1906 ç., 18 №.**

## ЯЛ ХЫПАРӖ

Пӑва уесӗнчен. Чӗмпӗр кӗпӗрнинче, Пӑва уесӗнче пӗр ялта çимӗкре эрех çитмерӗ. Нумайӑшӗ хупахра эрех çуккипе, кӗтсе тӑрас килмен пирки вӑрттӑн сутакансенчен бутылка пуçне вуншар пус пара-пара илчӗç. Тӗлӗнсе кӑна каймалла çавсенчен. Епле вӗсене намӑс мар-ши, ку выçлӑх çул эрех ӗçме. Епле пӗр шухӑшламасӑр вунӑ пуса ахалех пӗр усӑсӑр кӑларса ывӑтаççӗ-ши? Час-часах ялсенче калаçкалаççӗ, "Хыпар" илме

укҫа ҫук теҫҫӗ. Хупахра ӗҫсе яма укҫа пур! Ҫук, чӑвашсем, ҫапла пурӑннипе эсир малаллах каяймӑр. Ялан ҫынсем айӗнче пурӑнӑр. Ялан ҫухӑмран вырӑс мӗлкине курса ҫӗлӗксене илсе ҫӳрӗр. Хӑвӑр пурнӑҫӑра хӑвӑр аванлатас тесен, пӑрахӑр эрех ӗҫме, ялсенчи хупахсенче, хупахсем вырӑнне лартӑр вуламалли ҫуртсем (читальнясем). Эрех ӗҫсе укҫана сая ярас вырӑнне, илӗр эсир вӑл укҫасемпе кӗнекесем, хаҫатсем. Ҫурта кӗнекене пӑхса тӑма лартӑр пӗр ҫынна. Ҫак ҫурт тавра йывӑҫсем лартса пӗтерӗр. Сире пурсӑра та тухса ҫӳреме вара вырӑнлӑ пулӗ, тата вырсарни кунсенче, празниксенче ҫак ҫурта чӗнсе килӗр вӗреннӗ ҫынсене, мӗн те пулин япаласем ҫинчен каласа пама. Школа кайманнисене, хут вулама пӗлменнисене ку пит усӑллӑ пулӗ. Хут пӗлекенсене вулас тесен те, пирӗн халӗ чӑвашла кӗнекесем пит сахал. Ҫавӑнпа ҫак ӗҫе епле те пулсан аванлатас пулать.

Хамӑршӑн, хамӑр тӑрӑшмасан, хальхи пекех чӗлӗмсене паклаттарса халапсемех пулӑпӑр.

Ваттисем калани: "Макӑрман ачана чӗчӗ памӗҫ" тени, ҫитӗ вара.

**Хыпар, 1906 ҫ. июль 16, 28 №.**

## ХАҪАТРИ РЕКЛАМА

Продолжается подписка на 1906 г.
школьного, общественно-литературного журнала
"ОБНОВЛЕННАЯ ШКОЛА",
издаваемого под редакцией Александра Оатула.
Цена 25 коп.
Журнал выходит каждые две недели.

Ближайшее участие в журнале принимают: Архангельский, Б.Будилин, Г.Брониковский, Н.Бивол, Н.Грасул, А.Гришков, Н.Корнев, Лоэнгринь, А.Оатул, Я.Окснер, А О.Платонов, В.Прохненский, С.Риварес, Я.Соколин, М.Скодигор, В В.Татаринов, Н.Трубчевский, В.Флоров, Н.Флоров, И.Борода.

Имеются собственные корреспонденты из Петербурга, Москвы, Киева, Одессы, Острогорска, Елисзаветограда и т.д.

Подписка и продажа номеров производится в главной конторе журнала: Кишинев, Рениская, 63, и во всех книжных магазинах города.

Подписная цена на 3 мес. с пересылкой 1 р. 50 коп.

**Редактор-издатель А.И.Оатул.**

Открыта подписка на 1906 года на газету:
"СЕЛЬСКИЙ ВЕСТНИК".

Начиная с 1 января 1906 года газета "С.В." будет выходить ежедневно, кроме дней после праздничных. Формат газеты сохраняется, настоящий в виде обыкновенного листа в 4 страницы. В воскресных нумерах будут помещаться:

1) Иллюстрации - портреты, виды, рисунки и т.п. тщательно исполненные на особых выполненных с этой целью, новых иллюстрационных машинах. 2) Краткая жития святых. 3) Повести, рассказы и стихотворения. 4) Научные статьи. 5)Полезные сведения. 6) Мелочи. В течение года из этих номеров составится, таким образом, у подписчиков, их сохраняющих, целый отдельный том для назидательного интересного и полезного чтения.

Объявления об издании в 1906 году журналов и газет.

С 1906 года выходит в свет по воскресеньям газета "Хыпар" на чувашском языке.

Подписная цена в год 3 руб., 1/2 г. - 1р. 75 к.

Адрес ред.: Казань, Учительская семинария.

Конторы: Казань. Центральная типография на Воскресной улице.

**Редактор-издатель Н.Никольский.**

Продолжается подписка
на еженедельный журнал
"ЦЕРКОВНО–ОБЩЕСТВЕННАЯ ЖИЗНЬ",
издаваемый при Казанской духовной академии.
(52 №№ в год, по 2 печатн. листа в каждом).

Подписная цена: на год - 5 рублей, на полгода - 3 рубля, на 3 месяца - 1 р. 50 к., на месяц -50 коп., отдельный номер -12 коп. Разсрочка годовым подписчикам: 3 рубля при подписке и 2 рубля к июню.

Подписная цена на "Ц.О.Ж." вместе с "Православным Собеседником" (ежемесячным журналом) - 10 руб. в год.

Подписная цена на "Ц.О.Ж.;" вместе с "Прав. Соб." и "Известия по Казанской Епархии" - 12 р. в год.

Подписная цена отдельно на "Прав. Соб." - 7 руб. в год с приложением двух томов 1 и 2 № "Толковный на Новый Завет бл. Феофилакта" - 8 руб.

На Известия по Казанской Епархии 5 руб. в год.

Подписка принимается:

1) В контору редакции - Первая Академическая ул. дом Улитиной.

2) В отделении конторы при "Центральной типографии" Воскресенская ул., д. Крупеникова, рядом с магазином Алаторцева и цирком.

Открыта подписка на 1906 г. на газету "СЕЛЬСКИЙ ВЕСТНИК"

Начиная с 1 января 1906 года газета "С.В." будет выходить ежедневно, кроме дней праздничных. Формат газеты сохраняется настоящий в виде обыкновенного листа в 4 страницы.

В воскресных номерах будут помещаться: 1. Иллюстрации - портреты, виды, рисунки и т.п., тщательно исполненные на особых выписанных с этой целью, новых иллюстрационных машинах. 2. Краткая жития святых. 3. Повести, рассказы и стихотворения. 4. Научные статьи. 5. Полезные сведения. 6. Мелочи. В течение года из нумеров составится, таким образом, у подписчиков, их сохраняющих, целый отдельный том для назидательнаго интереснаго и полезнаго чтения.

Ежемесячно при газете будет рассылаться бесплатное приложение в виде книжек "БОГ–ПОМОЧЬ"

В книжках помещаются общепонятные сельскому люду статьи духовно-нравственные, исторические, сельско-хозяйственные, научные и разные занимательные рассказы, повести, стихотворения и смесь.

## Условия подписки на "СЕЛЬСКИЙ ВЕСТНИК".

На 1 год с доставкой и пересылкой - 2 руб.

На полгода - 1 руб. 20 к. На месяц - 25 коп. На остальные сроки по расчету 25 коп. за каждый месяц. При годовой подписке допускается рассрочка, а именно - 1 руб. 1-го января и 1 руб. 1 июня.

Адрес конторы: С.Петербург, Виленский переулок, д. №2, кв. 3.

**За редактора А.Никитин.**
**Хыпар, 1906 çул, 46 №.**

Открыта подписка 1906 г. на "КАЗАНСКУЮ ГАЗЕТУ".

Еженедельное издание Казанского губернского земства.

ПРОГРАММА ГАЗЕТЫ

1.- Правительственные распоряжения. 2.- Земское хозяйство (продовольственное и страховое дело, пути сообщения и т.д,). 3.- Родное образование. 4 - Специальные статьи: по вопросам сельско-хозяйственной практики вообще, и в частности, по скотоводству, пчеловодству, садоводству, огородничеству и прочие; по земской медицине; по ветеринарному делу; по кустарным промыслам. 5.- Отзывы о книгах по сельскому хозяйству и промышленности. 6.- Хозяйственная жизнь России и губернии. 7.- Сообщения местных сельских хозяев. 8 - Обзор текущих общеполезных сведений по сельскому хозяйству и промышленности. 9.- Ответы

на вопросы по сельскому хозяйству и промышленности. 10.- Сведения о погоде (хроника и популяризация метеорологических наблюдений и изысканий). 11.- Торговые сведения (телеграммы и корреспонденции о биржевых пристанских и базарных ценах, поставках, фактах и т.п.). 12.- Частные объявления.

Газета выходит еженедельно в объеме одного до двух печатных листов.

Подписка принимается при Казанской губернской земской управе, (угол Черноозерской и Попер.-Покровской), при книжном магазине И.Я.Башмакова (Воскресенская, Пассаж), при книжном магазине Дубровина (Воскресенская ул.) рядом с Волжско-Камскими номерами и при всех уездных земских управах Казанской губернии.

**Редактор: Председатель губернской земской управы П.И.Геркен**

## ХАҪАТСЕМ КАЛАНӐ ТӐРӐХ

Ҫак кунсенче Питӗре, "Халӑх ирӗкӗ" теекен ушкӑна Питӗре пырсан чӑрӑнма вырӑн ыйтса яраҫҫӗ. Нумайӑшӗ вӗсем хресченсем. Халӗ ҫак "халӑх ирӗкӗ" ушкӑнӗ хватир тупма тӑрӑшать. Вӗсен хӑйсен те халӗ хватирӗ аван, ирӗк; тата шыраса хума пулаҫҫӗ. Питӗре пырсан ӑҫта мӗнле хватир пуррине, мӗн хак тӑнине "халӑх ирӗкӗ" теекен ушкӑнӑн комитетӗнче пӗлме пулать. Тата ҫак ушкӑнри студентсем вокзалта Питӗре пыракансене асӑрхаса тӑраҫҫӗ. Вӗсем Патшалӑх Пухӑвне суйланӑ ҫынна ӑҫта каймаллине каласа тӑраҫҫӗ. Лав ҫӳрекен Харитонов кашни кунах 15-шер лав укҫасӑрах пама пулнӑ. Вӗсем вара Патшалӑх Пухӑвне суйланӑ ҫынсене укҫа тӳлемесӗрех вокзалтан хватире илсе каяҫҫӗ.

Рассийара кашни ҫын пуҫне виҫӗ теҫеттинрен кая тивекен ҫын 1900 ҫулта ак мӗн чухлӗ пулнӑ.

Пӗр теҫеттинрен пуҫласа унтан кая ҫӗр тытса тӑракансем 1273673.

Пӗр теҫетинрен пуҫласа икке ҫитиччен 2428000.

Иккӗрен пуҫласа виҫҫе ҫитиччен 5554000.

Ҫакӑн чухлӗ халӑхӑн 4-шар теҫетине пултӑр тесен тата 22 миллион теҫетине ҫӗр кирлӗ.

Ҫапла ӗнтӗ кашни ят пуҫне 4-шар теҫетине тивтӗр тесен, виҫ веҫетине яхӑн ҫӗрлисене 509200 теҫетине памалла, икке яхӑн тытса тӑракансене 486000 теҫетине кирлӗ, пӗр теҫетине яхӑннисене 11 миллион теҫетине кирлӗ.

Хресчене ҫӗр кирли паллӑ. Ҫавӑнпа та ҫӗр ӗҫне тӑнласах та авантарах, тӗплӗнрех калаҫмалла, хальхи йӗркесене ҫӗнетмелле. Анчах хрес-

чен пурнăçĕ начарри ĕмĕрне çĕр сахаллинчен килмен, малалла та яланах унтан килес çук. Хресчен çĕр сахаллипе, тырă пулманнипе ан аптратăр тесен, ăна хут вĕрентме тăрăшас пулать. Пирĕн нумай çитмен пурнăç хамăр пĕлменнинчен килет.

1861-мĕш çулта, февралĕн 19 кунĕнче, хресченсене улпут аллинчен хăтарнă чух нумай япала асăрхамасăр хăварса, халăха хĕн курмалла тунă. Халĕ ун пек ан пултăр тесен, хресченсене çĕр панипех ĕçе пĕтерес пулмасть. Хысна ăна хут вĕрентме пулăштăр, çĕр ĕçлес тĕлĕшрен тĕрлĕ машинăсемпе пулăштăр.

**Хыпар, 1906 ç., май 7, 18 №.**

## РЕДАКТОРТАН

Августăн 6 кун. тухмалла нумер вăл кун тухмарĕ. 1) Редакцияра ĕçлекенсем килте пулмарĕç. 2) Типографияра час пуçтарса кăларма шут тытрăмăр. Анчах ăна та, типографияра, пĕр лист çурă анчах кăлармалла пулчĕ. “Хыпара” вăхăтлă кăларайманшăн хаçат илекенсем пире питех ятламаç тесе шутлатпăр, мĕншĕн тесен ку таранччен редакцияра мĕн пурĕ те икĕ çын анчах ĕçлесе пурăнтăмăр; ĕçлекен çын нумер усрама вăй нумай кирлĕ. Пирĕн хаçат кăçал хăйне-хăй тӳлеймест. Тата çул йывăр пирки çыру вулама юратакан çук çынсене нумайăшне “Хыпар” ахаль яратпăр.

**Хыпар, 1906 ç., Август 6-13, 31-32 №.**

## ÇЫРУСЕМ

***ТЕТĔШ, у.с. пролей-каши.*** “Хыпар” ятлă чăвашла çырнă хаçата вулакансем те, вуланине итлекенсем те пурте калаççĕ:” “Пирĕншĕн те, чăвашсемшĕн, тĕнче çутти çутăлчĕ”, - теççĕ. Тĕнче çутти, тĕнче пулнăранпах çутă вăл, анчах чăвашсем вăл çутта курманччĕ, халĕ те хаçат алла илсе вуламасан, вуланине тăнламасан, Евангелие çуттине пĕлмен пекех, тĕнче çуттине курас çук. Патшалăхра мĕн тунине, мĕн пулнине, мĕн пулассине пĕлес çук. Евангелие килте пулсан та, пулашник çинче ахаль вуламасăр выртсан, вуланине тĕрĕс тăнланмасан, пурте хăй тĕллĕн çутатмасть, кил хуçи те ĕмĕр çутта кураймасть. Евангелие вулакан çынна, чипер итлесе тăнланакан çынсене анчах çутатать; çак хаçат та, мĕн пур çыру та, кĕнеке те çапла, вуласан, чипер тăнласан, пире çутă курмалла тăваççĕ. Пĕтĕм тĕнчене те хут тытан, хут çутатать, атьăр, тăвансем, эпир те аллăмăра хут тытар та, хут вулар, çанталăк çуттине пĕр курар.

**А.Сизов**

**Хыпар, 1906 ç., 8 №.**

## ÇАПТАРАÇÇĔ

1. Пешехонова: “Тутă пулас, çутă курас, ирĕке тухас”. Тата акă çаксене тĕрлĕ çĕрте куçараççĕ.
2. Шишко. Рассказы из русской истории.
3. Федорович. Как собираются и на что расходуются народные деньги.
4. Волювский Ф. Как мужик у всех в долгу остался.
5. Как сицилийские крестьяне боролись за свои интересы.
6. Русова С. В стране волна крестьянства.
7. Ея–же. На счастливых островах Ао - Теароа.
8. Д.Г. Наша полиция.
9. Новоторжский. Что такое правовое государство.
10. Пименова. Постоянное войско и милиция.

**Хыпар. 1906 ç., октябрĕн 29. 43 №.**

## ОБЪЯВЛЕНИЯ

С 1906 года выходит в свет по воскресениям газета “ХЫПАР” на чувашском языке. Подписная цена в год 3 руб; 1/2 - 1р. 75 к.

Адрес редакции: Казань, Учительская семинария.

Конторы: Казань. Центральная типография на Воскресенской улице.

**Редактор - издатель Н. Никольский.**
**Хыпар. 1906 ç., апрель 23. 16 №.**

Тула кĕпĕрнинче тата акă мĕн тăваççĕ. Одоевское земство, халăх валли “Россияна”, “Русское знамя” ятлă хаçетсем илсе тăма, 1, 500 тенкĕ укçа салатма хунă. Земство шухăшĕпе вăл хаçетсем çынна та ухмаха ертеççĕ. Халăх укçине халăха ухмаха ертме салатаççĕ.

**/С.В/.**
**Хыпар, 1906 ç., ноябрĕн 26. 44 №.**

## ХЫПАР ÇИНЧЕН...

Латышсен 22 тĕрлĕ хаçат, журнал тухать; тутарсем кăçал виç хаçат кăларчĕç, пирĕн пĕрре те çукчĕ. Ытти халăх пур те пиртен чеерех, пиртен маларах ăса кĕнĕ пулмалла. Кунти чăвашсем: тутарăн ăсĕ пирĕнтен çичĕ çухрăм малта пырать теççĕ, чăнах пулĕ çавă. Вĕсем хăйсем ахаль те аптăрамаççĕ - хĕрарăмĕ-ар çынĕ мĕнĕпе хута пĕлеççĕ, меччечĕсенче вырăс сăмахĕ çук (мĕншĕн тесен Турра чĕлхе илемĕ кирлĕ мар, ăнланни кирлĕ), законне хытă тытаççĕ, суту-илӳ таврашне ăста, пуянни темĕн чухлĕ,- тата, пурăнăça епле лайăхлатас-ши тесе Питĕрте тĕрлĕ çĕртен суйласа янă тутарсем пуху турĕç. Халĕ вырăс патшалăхĕнче пурăнăç

хуçăлса улăшăннă вăхăтра сисекен халăхсем пурте харпăр-хăйшĕн тăрăшаççĕ. Халĕ халăхсем хушшинче халап нумай çӳрет: çĕр кăларса валеçес, теççĕ, пурăнăç çулĕсене уçас, аслă шкулсенче укçасăр вĕренмелле туса, тĕрлĕ "çăкăрлă" вырăнсене кирек кама та кĕме çăмăл тăвас, теççĕ. Кун пек вăхăтра çывăрма юрамасть, çывăракан нимĕнсĕрех юлакан, макăрман ачана чĕчĕ памаççĕ теççĕ; çавăн пек тата урăхла сăмахсем те нумай калаçаççĕ. Çавсем пурте чăн пулмасан та, мĕн те пулин те пурах ĕнтĕ хальхи самана вăхăтĕнче. Чăнах та, ыйхăран вăранса хамăршăн тăрăшсан, пире те усалах пулмĕччĕ. Пирĕн нушасене каласа та пĕтерес çук. Эпир халĕ тин чунпа пурăнма пуçлакан халăх вĕт. Чун тĕлĕшĕнчен пирĕн Библия кĕнеки те çук. Школасенче чăвашла вĕрентсех каймаççĕ, вĕрентекенĕсем нумайăшĕ вырăс, çавăнпа, Хусанта тухакан вырăсла хаçат çинче калană пек (Обновл. №2), чăвашсене вĕрентни те вĕрентменнинчен нумаях усă кӳмен... ӳт нуши, ӳт нуши... чăвашăн... калама та хăрушă,- пĕр Хусан кĕпĕрнинчех пилĕк çĕр пин ытларах чăвашсенченех пилĕк пинĕшĕ (трахомапа) сĕм суккăр лараççĕ! Вĕсене кам хĕрхенĕ-ши? Малашне те каплах пурăнсан суккăрсем пушшех ĕрчемелле-ха. Тутарсем Хусан кĕпĕрнинче чăвашсенчен темиçе хут ытла, çапах та суккăрисем вĕсен икĕ пин ытларах анчах (см. стат. свид. Каз. губ. зем.).

Тата ытти нушасем: ĕçе пĕлменни, чухăн, хура пӳртсенче пăнтăхса пурăнни... Каласа та пĕтерес çук... Çав чухăн, вĕренсе пĕлмесĕр пурăннипех ĕнтĕ пирĕн чăваш халăхне çав тĕрлĕ пĕтерсе лартнă. Çав тĕрлĕ нушаран хăтăлма пире вăйпа ăс пит нумай кирлĕ-ха. Ют çын - ют çынах вăл, хамăр çине шанмасан эпир чĕрĕлес çук.

Çавăнпа ытти халăхсем пухăна-пухăна калаçса пурăнăçа юсама тăрăшнине кура, пирĕн те пĕтĕм чăваш халăхĕ ячĕпе пуху тума пулмĕ-ши, тетĕп эпĕ.

**Хыпар, 1906 ç., 8 №.**

## РЕДАКЦИЯРАН

Кун умĕнчи № 37 "французсен патшалăх йĕрки улшăннă; "генеральная штатра улпутсемпе пуп-таврашсем анчах ларнă" тенĕ. Ăна акă çапла çырнăччĕ: "Генеральные штаты" вырăнне "сенат анчах тăрса юлнă. Сенатра улпутсемпе пуп-таврашсем анчах ларнă", тенĕччĕ. Генеральные штатра хресченсем те пулнă, çавăнпа та ăна корольсем пухма чарнă. Анчах унта сословие тăрăх сасă панă. Улпутсемпе пуп таврашсем пĕр май пулса, хресченсене хĕстерсе пурăннă.

**Хыпар, 1906 ç., сентябрь 24, 38 №.**

## ХАҪЕТСЕМ ҪИНЧЕН

Самана пит начарланса ҫитрĕ. Пурăнма хĕнтен хĕн пула пуҫларĕ. Кивĕ йĕркесем начарланса ҫитрĕҫ, ҫĕннисем часах пулаймаҫҫĕ. Халăхăн хуйхи, халăх нуши кунтан кун ӳссе пырать. Хресченсем пĕтĕмпех ҫука юлчĕҫ, хуласенче, савăт-фабрикăсенче ĕҫре ҫӳрекенсем ĕҫсĕр тăра-тăра юлса, ҫиме пĕр татăк ҫăкăр тупаймасăр ҫӳреҫҫĕ. Хресченсем те, ĕҫре ҫӳрекенсем те, ĕмĕрех тĕттĕмре, нимĕн пĕлмесĕр пурăнаҫҫĕ. Нумайĕшĕ вĕсен хушшинче те хăйсен нуши мĕнтен килнине те пĕлмеҫҫĕ; нумайĕшĕ хăйсен пурнăҫне епле майпа, мĕн туса тӳрлетессине ăнланса илеймеҫҫĕ. Выҫăпа, тĕрлĕ нушапа, нумай асаппа аптăранипе вĕсем шалт тĕлĕнсе, хуйхăрса анчах тăраҫҫĕ. Вĕсене ҫывăх тăракан чиновниксем, урядниксем, старшинасем, вĕсене вĕрентме питех тăрăшасшăн мар; вĕсенчен мĕн те пулсан ыйтсан, шар ҫухăрса анчах пăрахаҫҫĕ. Пупсен те хресченсене вĕрентес шухăш питех ҫук пулмалла. Учительсем халăха вĕрентме тытăнаҫҫĕ: анчах вăл ĕҫшĕн вĕсене вырăнĕсенчен час сирпĕтеҫҫĕ.

Хресченсене, ĕҫре ҫӳрекенсене чăн кирлĕ япалана вĕрентекен пит сахал. Ҫавăнпа вĕсем нумайĕшĕ нимĕн те пĕлмеҫҫĕ. Тĕнчере мĕн пулнине, тĕрлĕ халăхсем епле пурăннине, вĕсем мĕн тунине, пĕртте пĕлмеҫҫĕ. Хресченсем патне тĕрлĕ хыпарсем пăсăлса анчах ҫитеҫҫĕ. Вăл хыпарсене вара вĕсем хăйсем темĕн тĕрлĕ пăсса пĕтереҫҫĕ. Ҫапла, пĕлтĕр пĕр вăхăтра ҫырма ирĕк пачĕҫ. Ирĕк панă тенине илтсен, нумайĕшĕ - темĕнле усал япала та ҫырма юрать пулĕ - тесе шухăшларĕҫ.

Тата, пирĕн Государственная Дума пуҫтарчĕҫ. Анчах хресченсем хушшинче нумайĕшĕ ҫав Думана мĕн тума пуҫтарнине, вăл мĕн тунине, ăна мĕншĕн салатса янине пĕлмесĕрех юлчĕҫ пулĕ.

Тĕнчере мĕн пулнине, халăх епле пурăннине, унăн пурнăҫне епле улăштарассине хаҫетсем ҫинче ҫыраҫҫĕ. Халĕ тата хаҫетсенче пуринче тенĕ пекех ҫĕнĕ йĕркесем кăларасси ҫинчен, тĕрлĕ ҫынсем, тĕрлĕ партиясем ҫав йĕркесене епле тăвасси ҫинчен; кам халăхшăн тăрăшни, кам ăна хирĕҫ тăни ҫинчен, халăх пурнăҫне епле урăхлатасси ҫинчен нумай ҫыраҫҫĕ. Хресченсем те, ĕҫре ҫӳрекенсем те ҫав япаласем ҫинчен пит аван пĕлсе тăрас пулать. Анчах хаҫетрен пуҫне урăх тĕлтен вăл япаласем ҫинчен пĕлме пит хĕн; час-часах пĕрте май та пулмасть. Ҫавăнпа, халĕ хаҫет пур ҫынна та кирлĕ, пĕр ялăн та хаҫетсĕр пурăнас пулмасть.

Хресченсем хăйсем хăшĕ-хăшĕ хаҫет уссине, хаҫет кирлине пĕле пуҫларĕҫ. Ҫавăнпа хăшĕ-хăшĕ хаҫетсем иле пуҫларĕҫ. Анчах ҫапах та хресченсен хушшинче нумайĕшĕ е хаҫет вулама вĕренменнипе, е хаҫет уссине пĕлейменнипе, е пурнăҫ начар пирки укҫа ҫуккипе хаҫете вулама мар кураймаҫҫĕ те. Ун пек хресченсем пирĕн чăваш хушшинче вырăсран та

нумайтарах пулӗ. Пирӗн 1906 ҫула ҫитиччен чӑвашла хаҫет ҫукчӗ. Хресченсемшӗн кӑларакан вырӑсла хаҫетсем те ҫук тенӗ пекехчӗ; тухаканнисем нимӗне те юрӑхсӑрчӗ. Пулсан та, вырӑсла ҫырнӑ япалана чӑваш пӗтӗмпех ӑнланса илеймест. Ҫавӑнпа пирӗн чӑваш хушшинче хаҫет илекен пит сахал. Анчах вӑл йӑлана пӗтерес пулать. Пӗлекен ҫынсен, ҫыру пӗлекен ҫынсем, хаҫет уссине пӗлекен ҫынсем хаҫет вулама вӗренменнисене вӗрентме тӑрӑшас пулать, хаҫет уссине пӗлейменнисене хаҫетрен мӗн усӑ килнине ӑнлантарса парас пулать.

Анчах, хаҫет уссине пӗлекенсем те пурте хаҫет илеймеҫҫӗ. Ҫук-пур пурнӑҫ пире пит нумай кансӗрлет. Хаҫет илме темӗн тӗрлӗ шухӑш пулсан та, пирӗн хресчен ҫынни илеймест: хаҫет 2-3 тенкӗ тӑрать. Пирӗн хресчене 3 тенкӗ мар, 10 пус та нумая тӑрать. 10 пус тупас тесе вӑл кунне 15-16 сехет анкартӗнче тырӑ ҫапас пулать. Вӑл пӗр пуса та тар тухиччен ӗҫлемесӗр илеймест. Ӑна укҫа пит хакла ӳкет. Ҫавӑнпа вӑл хаҫет илме темӗн тӗрлӗ кӑмӑлӗ пулсан та, илеймест.

Пирӗн ҫука юлнӑ хресчен ҫыннине пӗччен ик-виҫӗ тенкӗ тӳлеме пит хӗн. Вуннӑн виҫӗ тенкӗ тупма вӑл териех хӗн мар. Вӑл кашнине вӑтӑршар пус анчах тивет. Ҫавӑнпа, хаҫетшӗн тӳлеме хӗн ан пултӑр тесе, ҫичшерӗн, саккӑршарӑн, е вуншарӑн пӗрлешес пулать те, хаҫет илме тытӑнас пулать. Вара пурте 30-35 пуспа ҫулталӑк иртиччен хаҫет вулама пултараҫҫӗ. Пӗрлешсе хаҫет илни урӑх енчен аван. Хаҫет пӗрле илсен ӑна вулама пӗрле пуҫтарӑнмалла пулать. Пӗрле пуҫтарӑнса вуласан, хаҫет хыпарӗсене ҫыру пӗлекен кӑна мар, ҫыру пӗлменни те ӑна итлеме пултарать. Ҫыру пӗлекен вулать, ҫыру пӗлменни ӑна итлет. Тата вӑл акӑ мӗнтен аван. Хаҫата пӗрле пуҫтарӑнса вуласан вӑл пурне те усӑллӑрах пулма пултарать. Мӗн те пулсан вуласа пӗтерсен, ун ҫинчен харпӑр ҫын мӗн шухӑшланине калама пултарать. Статьяна тӗрлӗ енчен пӑхма пулать. Хаҫата вуласа тухсан, унта мӗн ҫырни ҫинчен шухӑшламасан, калаҫмасан, ӑна час манса кайма пулать. Вара вуланинчен нимӗн усӑ та пулмасть. Хаҫата пӗрле вуласан, вуласа пӗтерсен унта мӗн ҫинчен ҫырни ҫинчен калаҫсан, кам мӗнле шухӑшланине пӗлсен, ҫын час манмасть. Усӑ та нумайтарах пулать.

Ҫавӑнпа ӗнтӗ, хаҫат пӗччен илме вӑй ҫитмен ҫынсен хаҫат пӗрлешсе илме тӑрӑшас пулать. Апла туни вӑл укҫа енчен те ҫӑмӑлтарах, ытти енчен те усӑллӑрах.

Анчах, тата ак мӗне астӑвас пулать. Тӗрлӗ хаҫатсем вӗсем тӗрлӗ ҫынсем пекех. Ҫынсем хӑшӗ тӗрӗс калаҫҫӗ, хӑшӗ суяҫҫӗ, хӑшне ӗненме пулать, хӑшне пулмасть; хӑшӗ халӑхшӑн тӑрӑшаҫҫӗ, хӑшӗ ӑна хирӗҫ пыраҫҫӗ. Хаҫатсем те ҫаплах пулаҫҫӗ. Хӑшӗ халӑхшӑн тӑраҫҫӗ, ӑна кирлӗ япаласем ҫинчен халӑха ӑнлантарса ҫыраҫҫӗ, хӑшӗ пуянсен, чиновник-

сен хутне кĕрсе, вĕсене сыхлаканнисем пулаççĕ. Çавăнпа пĕр япала çинченех тĕрлĕ хаçатра тĕрлĕ çыраççĕ. Çĕр çинчен – хăш хаçатсем халăха çĕр кирлĕ тесе çыраççĕ; ыттисем халăхăн çĕр пур, анчах вăл ăна е наянланса ĕçлемест, е ĕçле пĕлмест, теççĕ. Пĕр йышши хаçетсем - халăха тĕрлĕ парăм тӳлеттерсе вăйран янă. Çавăнпа парăмсене çăмăллатас тесе çыраççĕ. Тепĕр йышши - халăхран тĕрлĕ акцизсем, куланайсем илес пулать, улпутсенчен, хаçетсенчен куланай илме юрамасть, мĕншĕн тесен вĕсем ахаль те халăхшăн çутă туса, служит туса тăраççĕ, тесе çыраççĕ. Пĕр хаçет - хресченсене ытти сословисемпе танлаштарас пулать, вĕсене земский начальниксен, урядниксен ирĕкĕнчен кăларас пулать, тет. Тепĕри - апла тума юрамасть, мĕншĕн тесен халăх ача халĕ вăл, ăна пăхма ача пăхакан (чиновник) кирлĕ, - тет.

Пĕр ĕç çинченех тĕрлĕ хаçат тĕрлĕ çырать. Çапла Государственная Думана салатнăшăн хăш хаçатсем çинче пит хуйхăрса çыраччĕç; хăшĕнче хавасланса, Столыпинсене мухтаса çырчĕç.

Пĕлмен çын тĕрлĕ хаçет вуласа пăхсан нимĕн те ăнланса илеймĕ: пĕри пĕр май, тепри тепĕр май çырать.

Çавăнпа хаçет илме укçа янă чух, хаçет мĕнле иккенне пит аван пĕлес пулать. Вăл тĕрлĕ япаласем нимĕн хушмасăр, нимĕн чикмесĕр çырас пулать. Улталаса çырни аван мар: мĕншĕн тесен, ултав сăмахшăн редактора суда параççĕ: хаçата ĕненми пулаççĕ. Çырсан чăнах пулнă япала çинчен анчах çырас пулать.

Хресченсем хăйсем те вĕсен кăмăлне каякан хаçатсене халăх хушшинче сарма тăрăшас пулать. Мĕнле те пулсан нумай çынна вулаттарас пулать. Хусанта кăларакан "Хыпар" ятлă хаçат халăха епле те пулсан, вăй çитнĕ таран, усă кăтартасшăн. Çавăнпа халăх пурнăçне, хальхи вăхăтра чăваш хушшинче мĕн пулнине пĕлтĕр тесе, пирĕн пурсăмăрăн та вăй çитнĕ таран ăна пулăшас пулать: унта çырусем çырас пулать, ăна халăх хушшинче сарас пулать, хаçат илекенсене нумайлатас пулать.

**Крестьянин Николай Захаров.**
**Хыпар, 1906 çул, декабрь 10, 46 №.**

## ПОЧТА ЯЩИКĔ

1. Пирĕн пата укçасăр хаçат ярăр тесе темĕн чухлĕ çырусем пыраççĕ. Халăх хаçат вулас тенĕшĕн эпир пит савăнатпăр, май пулсан, пурне те ахалех яраттăмăр, анчах хаçат кăларасси çăмăл ĕç мар, укçа та сахал кирлĕ мар, çавăнпа эпир темĕнле хĕрхенсен те хаçата укçасăр кăларма пултараймастпăр. Эпир хамăр та çук çынсем. Хаçат сирĕн ак мĕнле илме кирлĕ: кашни ялта пĕр 5-10–шар çын пĕрлешсе илĕр. Вара кашни çынна

пĕр 30 пус анчах тивет. Вăтăр пус çулталăка мĕне тăрать вăл?

2. Г.Бугуруслан, село Степановка. В. Усачева. Сана халĕ виçĕ номер яратпăр. Укçа ярсан, пĕрмаях яма пуçлăпăр.Чăваш хаçачĕ пĕрре анчах, ăна илес пулать: ку чухне хаçатсăр пурăнма юрамасть.

3. Цивильск. Ян- Арх. вол. В. Жестяникова.

Çакăнта малтан çырнине вула.

4. Г. Чебоксары. С. Вомбукасы. Е. Карпова.

Çакăнта малтан мĕн çырнине вула. Çĕнĕ çулччен кивĕ адреспах илĕр, çĕнĕ çултан укçа ярсан, çĕнĕ адреспа яма пуçлăпăр: адрес улăштарма укçа кирлĕ.

5. Ядрин. Б Чурашево. А. Галкина. Кивĕ адреспах илсе тăрăр: адрес улăштарма укçа кирлĕ.

6. С. Тяптяево. С. Мешкову. Çакăнта çырнă 5–мĕш çырăва вуласа тух.

7. Д.Б. Яльчики. П. Сергеева. Хаçат илесси çинчен малтанхи çырусене вуласа пăх. Штукатурка хăлчăкпа тумаççĕ, йĕпенессе вăл уншăн йĕпенмест. Мăк начар пулĕ: тултан сивĕ кĕнипе йĕпенсе тăрать. Пуçа йĕперен тивет. Тул енчи мăха сӳспе тытăнтарса çапса тух. Улма пахчи ӳстерме кĕнекесем вулас пулать.

**Хыпар, 1906 çул, август 27, 34 №.**

## МĔНЛЕ ХАÇЕТ, МĔНЛЕ КĔНЕКЕ ИЛЕС.

Эпĕ нумай пулмасть, пĕр хресченпе калаçрăм.

- Кала–ха мана, мĕнле хаçет илес манăн, анчах вăл хаçетшăн тĕрмене ан хупчăр, - тет хресчен.

- Епле апла, мĕнле хаçетшĕн тĕрмене хупаççĕ, - тетĕп эпĕ.

- Акă, кай та калаç ĕнтĕ, - тет хресчен. - Пирĕн земский начальникпе урядник тăнлантарчĕç пире. Пур хаçата та, пур кĕнекене те вулама юрамасть мĕн. Хăшне вуланăшăн тĕрмене лартаççĕ иккен. Вăл вĕсенĕн ятне те каларĕ те, эпĕ мантăм. Авă, Юман Петĕр илетчĕ хаçет... Земский, урăх ан ил, терĕ те лешĕ пăрахрĕ вара илме. Ун патне Питĕрти хаçет килетчĕ пулас. Земский калать кĕнекесем те çавах, тет. Эсĕ те пĕлместĕн-и вĕсене? - тет мана хресчен.

-Эпĕ хампа калаçакан хресчене вăл ĕç çинчен тĕппи-йĕррипех каласа кăтартрăм. Анчах пирĕн ытлашши хытă тăрăшакан земскийпе урядниксем чăнах та, тĕрмене лартатпăр, тесе хăратса, хаçетсене турта-турта илеççĕ. Çавăнпа эпĕ вăл япала çинчен хамăр хаçета вулакансене каласа парас терĕм.

-Вăл ĕç акă мĕнле. Пирĕн Россияра хаçетсем закон тăрăх тухаççĕ. Хаçет хуçи пĕр çын - "редактор". Хаçета, укçа пулсан, кирек кам та кăларма пултарать. Вулама та çавах кирек кам та пултарать.

-Хаçет закон тăрăх тухнă пулсан уншăн никама та нимĕн те пулмасть. Хаçет хуçине (редактора) та, хаçет çине çыракана та, хаçет илсе вулаканĕн, вĕсем пек те мар, никамран та хăрамалли çук. Хаçет закон тăрăх тухман пулсан, уншăн редактор, хаçет кăларакан тӳсет. Çапла ĕнтĕ кирек мĕнле хаçета та пĕр хăрамасăрах вуламалла.

-Епле тата хăй мана хресчен каланă пек калаççĕ?

-Вăл акă мĕнрен. Халĕ тĕрлĕрен хаçетсем пит нумай. Пурте вĕсем кам хутне те пулсан кĕреççĕ, кама та пулсан усă кӳресшĕн. Пуринчен ытла пур улпутсенĕн, пуçлăхсенĕн, пуянсенĕн пур вăйлă çынсен хутне кĕрекен, вĕсем çыракан хаçатсем нумай. Акă: "Правительственный вестник"- унта пĕтĕмпе аслă, чинлă çынсем çыраççĕ. "Обновление" (Хусанта тухатчĕ те, халĕ пăрахăç пулнă), "Свет" (Питĕрте) -унта пĕтĕмпе улпутсем çыраççĕ, "Сельский вестник". Çав хаçатсем мĕнле те пулсан улпутсене, чинлă çынсене аван пултăр, тесе çыраççĕ.

-Хура халăхшăн тăрăшакан, хура халăх хутне кĕрекен хаçатсем те нумай. Вăл хаçатсем çине, хура халăха пурăнма епле çăмăл пулассине, патшалăхра епле йĕрке тусан хура халăха авантарах пуласси çинчен çыраççĕ. Ун пек хаçетсене, кĕнекесене- халăх хаçачĕ, халăх кĕнеки теççĕ. Çапла хресченсемшĕнех халĕ чылай хаçат тухать. Хусанта "Крестьянская газета", Саратовра - "Голос деревни", Питĕрте - "Рабочая жизнь". Хăвăрах пĕлетĕр, кашни хăй майлă хаçата анчах юратать. Хаçат çине, улпутсенчен, пуян çĕр хуçисенчен çĕр туртса илсе хресченсене парас пулать, тесе çырнă пулсан, ăна улпутсем юратмаççĕ. Хаçат çине, пуçлăхсене çăварлăх парас пулать, чарас пулать, вĕсене астуса тăма юри çынсем суйлас пулать, тесе çырнă пулсан, ăна земскийсем, урядниксем юратмаççĕ. Çавăнпа вĕсем, çапла çыракан хаçетсене темшĕн хресченсене вулаттарасшăн мар.

-Çак ĕçре ĕнтĕ, Закона хирĕç хаçет илсе вулаканĕ мар, хаçет вулама чараканĕ Закона хирĕç пырать. Ниепле хаçата вуланăшăн та тĕрмене хупмаççĕ. Пуçлăхсем те хресченсем почта тăрăх илекен хаçета малтан ярса тытма пултараймаççĕ, çапла закон çук! Çапла ĕнтĕ, хресчен хамăр Россияра тухакан кирек мĕнле хаçата та илсе вулама пултарать.

-Хаçет вулама чаракансем вĕсем ĕлĕкхи саманана асăнса тĕттĕмрех хресчене мĕнле те пулсан хĕсĕрлесшĕн.

/С.В./

**Хыпар, 1906ç., ноябрĕн 26. 44 /.**

# ПИРĔН ЧĔЛХЕ

Акă ĕнтĕ, тавтапуç Турра, пирĕн те хамăр чĕлхепех хаçат тухакан пулчĕ, кунтан малашне пирĕн нихăш енчен çутă курмасăрах ĕмĕрĕсене тĕттĕмре ларса ирттерекен чăваш çыннисене те хăйсем тавралла тĕнчере пулакан тĕрлĕрен ĕçсем çинчен пĕлсе тăмашкăн май килчĕ. Хаçат вăл питĕ кирлĕ япала, хаçат пулман халăха хăйĕн пурăнăçĕ йĕркисене аванлантарма питĕ хĕн, мĕншĕн тесен хаçатран пуçне самананăн арканса явкаланса пыракан йĕррисене йĕрлесе тупма, хăйĕн пурăнăçне малалла яма ниепле май та пултараймасть. Питех те пирĕн чăваш çыннисене куллен-кун мĕн–мĕн кирлине хамăрăн хаçат пулмасан ниепле те пĕлмелли çук, мĕншĕн тесен чăвашсем çинчен халиччен никам та нимĕн те çырман, чăвашсем, епле пурăннине тĕпĕ-йĕрĕпе лайăх пĕлекен çынсем те çукпа пĕрех. Çавăнпа пирĕн çынсем валли хаçат кăларма тахçанах пит кирлĕччĕ, анчах ăна кăларма пултаракан çын çукччĕ, е пулсассăн та çӳлте тăракан тӳре-шарасем ирĕк памасчĕç. Халĕ ĕнтĕ, Турă çырсан, эпир те нимĕнтен хăрамасăр, никамран вăтанмасăр хамăр хуйхăсем, хамăр нушалăхсем çинчен каласа тăрăпăр, пирĕн Раççейре те, ытти патшалăхсенче те хамăршăн кирлĕ пек япаласем çинчен уйрăм уççăн хамăр чĕлхепех пĕлтерсе тăма тăрăшăпăр. Хăшĕ пур, чăвашла хаçат туха пуçланине илтсен тĕлĕнсе те кайĕ: мĕнле ку чăвашла хаçат кăларса аппаланаççĕ-ши? тейĕ. Ун пек калаçни пушă арман авăртнипе пĕрех, мĕншĕн тесен апла калаçни чăваш чĕлхи мĕн иккенне пĕртте пĕлменнинчен килет: пĕтĕм халăх валли усăллă япаласем çырма шухăш пулсассăн чăваш чĕлхине пит аван пĕлес пулать. Усă чухнехи чăвашсем хăш-хăш çĕрте (Чикме хули уйăсĕнчи Вирелсем тата урăх çĕртисем те) хăйсен чĕлхине е çармăсла сăмах хутăштаркаласа е вырăсран илтнĕ пĕлнĕ-пĕлмен халапсем кӳрткелесе нумай пăснă, улăштарнă. Хăшĕ пур, калаçма тытăнсан чăвашла виç сăмах каламассерен пĕр сăмахне вырăсла çыпăçтарать, çапла вара хăй чĕлхине пăсса шалт унăн илемне ярать. Пурăнсан–пурăнсан апла калаçакан çынсем чăваш чĕлхине пит иксĕтеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен сăмахĕсене калас вырăнне нумаях шухăшласа тăмасăр вырăслах каласа яраççĕ. Çапла вара сыпăкран сыпăка чăваш чĕлхинĕн сăмахĕсем пĕрерĕн–пĕрерĕн манăça юлса пырса вĕсен вырăнне урăх чĕлхе сăмахĕсем кĕрсе вырнаçаççĕ. Чăвашла хаçат–и, кĕнеке–и, мĕн–и çырас теекен çын ун пек пулми–пулмин сăмахран пит сыхланас пулать, тĕп чăваш сăмахнех ĕçе курса çырас пулать. Хăй ялĕнчи чĕлхере ун пек кирлĕ сăмах–юмах пулмасан ăна урăх çĕрти чăвашсен чĕлхинчен илес пулать, мĕншĕн тесен пирĕн халăх тĕрлĕ çĕрте пурăнса калаçасса та пĕр пек калаçмасть, тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ калаçать. Пĕр ялта пулман сăмах, кам пĕлет, тепĕр ялта пур–и тен,

çапла вара сурăх кĕтĕвĕ пек саланса кайнă чăваш халапĕсене, сăмахĕ--юмахĕсене пĕр çĕре пуçтарсан пит лайăх чĕлхе тума пулать. Унтан тата ак мĕн калас шухăшăм пур: пирĕн чăвашăн çамрăкрах çынсем, яш–кĕрĕмсем, ваттисенчен урăхларах калаçаççĕ, ваттисем калаçакан хăш–хăш сăмахĕсене çамрăккисем нихăçан та каламаççĕ, е пĕлессе те пĕлмеççĕ, е вăл тахçанхи сăмах тесе тиркесе ун вырăнне вырăслах калаçаççĕ. Апла туни хăй чĕлхине манăç айне туни, пĕтес еннелле пыракан çулпа ăсатма тăрăшни пулать. Çак эпĕ кунта калани тĕрĕс иккенне сире ĕнентермешкĕн ак мĕнле–мĕнле сăмахсене кăтартас тетĕп. Ĕлĕк–авал пирĕн чăвашсем çын пĕр–пĕр ĕç тунине хăй куçĕпе курнă çынна тина тенĕ, халĕ вăл сăмаха ниçта та илтеймĕн те, ун вырăнне свитеттĕл теççĕ, мăнастирте пурăнакан çынсене ĕлĕк хура–тум тенĕ, халĕ пулсан вырăслах манах теççĕ, çынна ырăлăх тунăшăн тав–туса ĕлĕкхи чăвашсем рахмат (рехмет) е тавтапуç тенĕ, хальхисем ун вырăнне нумайăшĕ спаççипă теççĕ; аслă шывра пурăнакан пысăк пулла ĕлĕк çуйăн тенĕ, тата тепĕр тĕрлĕ хаклă йышши пулла çекĕ тенĕ, халĕ апла калас вырăнне вырăсла: сум, сетерле (стерлак) тесе аппаланаççĕ. Çапла вара вĕсем пирĕн илемлĕ чĕлхене пăсса хураççĕ, йĕри–йĕррипе пĕтес патнелле уттараççĕ. Чăваш чĕлхине йăлтах пĕтерес мар тесессĕн, халех ăна пуçтарма кирлĕ, тĕрлĕ çĕрте мĕн пур сăмахсене пухса пĕр кĕнеке çине çырма кирлĕ, апла тусан вара эпир хамăр чĕлхене манмăпăр, унтан тата тĕрлĕ çĕрти сăмах–юмаха пĕр çĕре пухсан пирĕн чĕлхе те сăмах–халапран пуйса кирек мĕн калас тесессĕн те ют çынсем патне сăмах кивçен илме каймалла пулмĕ вара.

Тата хăш çынсем, шăтăк тăрлăраххисем калаççĕ: пирĕн чăваш чĕлхипе мĕн тумалла, пирĕн вырăсла вĕренес пулать теççĕ, хамăр чĕлхене часрах манса вырăсла пакăлтатма вĕренсессĕн вара тин аван пулĕ–çке, теççĕ, вырăссенĕн вĕсенĕн кĕнеке таврашĕ те нумай, хаçат–япала та ним хисепĕсĕр теççĕ, чăвашла кĕнеке–масар çырса аппаланиччен, хаçат кăларкаласа муталаниччен вырăсла вĕрен те вырăслах çĕмĕрттер вара, теççĕ. Кун пек çынсем калаçни чăн–и, суя–и, вĕсем тĕрĕс калаççĕ–и, е ахаль анчах хăйсем айваннине кура вырăнсăр лăпăртатаççĕ–и? Ман шухăшпа пулсассăн вĕсем апла калаçнине итлесен те харам, мĕншĕн тесен харпăр халăха хайпăр хăй пурлăхĕ хаклă. Ют чĕлхе пит аван пулсан та вăл пирĕн мар, çыннăн, çын лаши темĕн тĕрлĕ матур пулсан та ун çине утланса ларса хам лаша тесе мухтанса çӳреймĕн, темĕн тĕрлĕ чаплă пуян çын тумтирне тăхăнса хам тумтирĕм тесе калаймăн, хăвăн пулсан ытлашши чиперех пулмасан та шанчăклă пулĕ, мĕншĕн тесен сана: çын япалипе анчах ырă куратăн, хăвăн нимĕскер те çук, тесе калакан пулмĕ. Çыннăнне йышăнсан кирек кам та сана пырса тĕртсе хурлăха хăварĕ: хăвăн нимĕскер те çук, çыннăннипе анчах пурăнатăн, тийĕ. Апла сăмаха

илтни санăн питне пĕçермĕ–ши? Намăслантармĕ–ши? Унтан тата ак мĕн калас пулать: пирĕн чĕлхепе темиçе пин çул пирĕн аттесем, асаттесем, мăн–асаттесем калаçнă, эпир тĕнчене çуралса анне аллинче выртса чăн малтан илтнĕ чĕлхе те чăваш чĕлхиех, мĕн кĕçĕнтенпе эпир чăвашла калаçса ӳснĕ, çамрăкла юлташсемпе выляса çӳренĕ чухне те, ӳссе çитсен хамăр ял-йышпа та, юратнă туссемпе те, кӳршĕ-аршăсемпе те, юратса килекен хăна-вĕрлесемпе те эпир вырăс чĕлхипе, е тутар чĕлхипе калаçман, чăвашлах калаçнă. Чиркĕве кайсан та эпир Турра кĕл тунă чухне чăвашла кĕл тăватпăр, хăш–хăш чухне çуралнă çĕр–шывран уйрăлса аякка каймалла пулсассăн, çул çинче теплерен чăвашла калаçнине илтсен, эпир хамăр çын тесе савăнмастпăр-и? Вăл чăвашла каланă сăмах пирĕн чуна епле пырса тивет, епле савăнтарать, епле хамăр çуралса ӳснĕ çĕр–шыв çинчен, хамăрăн мĕскĕн пулсан та, хамăршăн питĕ паханăн, пит илемлĕн туйăнакан пурăнăç çинчен, аттепе–аннепе, чун патĕнчи хурăнташ ăрăвăрсемпе епле пурăннине аса илтерет! Çавăнпа та хăй халăхне юратакан çын, кирек кам пулсассăн та, хăй чĕлхине пит пахаласа, темрен те мала хурса ăна хăй чунне юратнă пек юрататъ. Çавна кура нумай кĕнеке çырнă питĕ ăслă çын этемĕн хăй чĕлхине епле юратмалли çинчен ак мĕн каланă: "Хăй çĕрне-шывне юратакан çыншăн хăй чĕлхи питĕ хаклă, çавăншăн эпĕ англичансене питĕ юрататăп, вĕсем хăйсем ют чĕлхепе калаçма темĕн тĕрлĕ ăста пулсан та ют чĕлхепе калаçиччен хăйсенĕн темĕскерле шăхăрнă пек, чашкăрнă пек илтĕнекен чĕлхепе калаçма юратарах параççĕ", тенĕ.

Чăвашсем, хăвăрăн чĕлхĕре ан манăр, ăна ан çухатăр, ăна çухатсан эпир хамăр та çухалăпăр, чăваш ячĕ те çухалĕ. Ан çывăрăр, вăранăр, пирĕншĕн те çĕнĕ самана пуçланать, çĕнĕ шурăм пуç шуралса килет, ирĕклĕх хĕвелĕ хĕрелсе тухать; ваттисем мĕн калани ăсăртан ан кайтăр, вĕсем каланă: "Ир тăнă кайăк выçă вилмен", тенĕ...

**Хайхи.**
**Хыпар, 1906 ç., март 12.**

## РЕДАКТОРТАН

Редакцияна тĕрлĕ енчен тĕрлĕ çыру килет. Хăшĕ-хăшĕ ман çырăва хаçат çине çырăр тет: хăшĕ, - хирĕç çырса ярăр тет; хăшĕ хаçата укçасăр ярайм ăр-ши тет, хăшĕ, - кĕнеке ямăр-ши тет, хăшĕ тата хаçата аванах çырмастăр, чăваш чĕлхине пăсатăр тесе ӳпкелесе çыраççĕ, хăшĕ пат. пухăвĕ çинчен ытларах çырăр тет. Çапла çыру яракансене пурне те хирĕç çыру яма укça та çук, вăхăт та çук; çавăнпа редакция пурне те мĕн ыйтнине тума пултараймасть. Хаçат çине çырса яракан çырусене, юрăхлă пул-

сан, вырăн пур таран халĕ те çыратпăр. Хаçата укçасăр яма редакциян вăй çитмест, почта укçи кăна кашни çыннăн 80 пус кирлĕ. Кĕнекесем ярасси те çаплах. Камăн вăй çитмест, кĕнекесем сутма "склад" тăвăр, вара "переводч. комиссия" кĕнекесем ярать, хăш чух кĕтмелли те ярать. Хаçата вăй çитнĕ таран тăрăшса çыратпăр, ÿпкелекене ирĕк. Хаçат çине мĕн-мĕн çинчен çырассине калакансене редакция тав тăвать. Хирĕç çыру ямалли пулсан çыру ăшне 7 пуслă марка ярас пулать. Марка çыпăçтармасăр кунта тÿлесе илмелле янă çырусене редакция почтăран илмест. Укçа тÿлесе те халиччен хаçат илменнисем редакцияна "открытка" ярăр. Тепĕр майлă çур çулшăн яракан çыру çине адрес çине çырнă нумера çырăр, унсăрăн шыраса тупасси хĕн. Хăвăр адресе палăрмалла çырăр.

**Хыпар, 1906 ç. 16 июль. 28 №.**

## РЕДАКТОРТАН

"Хыпарăн" 23 нумерĕ пиртен вăхăтлă, июнĕн 11 кун., вырăсэрни кун тухрĕ. Анчах çав кунах "Хыпарта" пĕр айăп тупса яма хатĕрленĕ нумерсене полицияна пуçтарса илчĕç. Хаçат илекенсем хаçатсăр ан юлччĕр тесе, айăплă ырăна кăларса пăрахса, 23 нумере тепĕр хут кăлартăмăр. "Ырлăхăра вăрçса илĕр" тенĕшĕн айăпларĕç.

**Хыпар, 1906 çул, июнь 18, 24 №.**

## ЫРĂ ÇЫННĂМ РЕДАКТОР!

Эсĕ кăларакан хаçатăн 25 нумĕрĕнче вырăссем чăвашсенчен мăшкăласа кулни çинчен çырнăччĕ. Мана та çавăн çинченех пĕр-ик сăмах çырма хăвăн хаçатунта вырăн пар.

Эпĕ чăваш; çавăнпа вырăссем чăвашсене хулара епле хапăл тунине лайăх пĕлетĕп. Мĕн ачаранпах пире Шупашкарта та, Хусанта та, Чĕмпĕрте те яланах; Фасилий Ифаныч кута итеш, тесе мăшкăллаччĕç. Эпир ун çине пĕрте пăхмастăмăр; нимĕн чĕнмесĕр малалла утатăмăр. Чăнах та вĕсемпе тавлашса мĕн усă пулмалла? Вырăс çынни паллă епле çын! Вăл пĕр чĕнмесĕр именмесĕр аяк шăммисене суйлĕ; унпа сутлашса тÿрĕ пулас çук. Анчах пур халăх та чăваш пек кунĕ, йăваш мар. Ун çинчен эпĕ малалла калăп. Эпĕ Сибирте Манджурия чикинче, учителре тăратăм. Эпĕ пурăнакан хула - Чита ятлă. Вăл Байкал кÿллинчен нумай хĕвел тухăçĕ енче. Чита пысăк хула. Унта тĕрлĕ халăх пурăнать; еврейсем, армянсем, бурятсем, Китай çыннисем, Япония çыннисем, тата урăххисем те пур. Вырăссем ытла йышлах мар: çапах вĕсем кунта та урăх халăхран кулма юратаççĕ. Пуринчен ытла вĕсенчен Китай çыннисене лекет, ку енĕ кунта "китайская собака" "ходя" теççĕ. Ходя тени чăвашла хăта тени пулать. Китай çыннисем пĕр-пĕрне ходя теççĕ. Ĕлĕкрех Китай çыннисем чăваш-

сем пекех нимĕн чĕнме те хăяймасчĕç. Анчах иртнĕ телейсĕр вăрçă хыççăн вĕсем те пуçĕсене çӳлерех çĕклеме тытăнчĕç. Халĕ вĕсем вырăссене хирĕç пит аван çавăрса çыпăçтараççĕ; час-часах вăрçма та ӳркенмеççĕ.

Çапла çавăрни хушшинче пĕр вырăс Китай çыннинчен мăшкăласа çивĕтĕнчен туртнă. Леш нимĕн чĕнмесĕр атă кунчинчен çĕçĕ кăларнă та, ăна вырăсăн аякне лартнă. Вырăс вилнĕ пек урам варрине ӳкнĕ. Китай çыннинчен мĕншĕн суран турăн тесен вăл пĕр сăмах каламасăр хăйĕн çивĕте вĕçне кăтартнă...

Тата тепĕр бурят вагонра пынă чух вырăсла хаçат вуланă. Ăна курсан пĕр вырăс: "ей тварин тоже вздумал газету читать", тесе кулнă. Бурят сивĕн пăхса ăна çав вырăнтах çĕре ӳкернĕ. Чăваш çыннисем! Китай çыннисемпе бурятсем вырăс мăшкăлне ахаль ирттермеççĕ. Еврейсемпе армянсем çинчен эпĕ каламастăп та. Вĕсем хăйсенчен кулма, пусмăрлама никама та ирĕк парас çук. Анчах чăвашсем хăçан хăйсене урăх çынсене пĕлтерĕç? Вĕсем хăçан пур иртсе çӳрекен юрăхсăр пухувăн мăшкăлĕнчен хăтăлĕç? Тĕрĕс, - Христос тӳсме, каçарма хушнă. Çапах Христос та пуп-пуçлăх тарçи калах çупсан, мĕншĕн çапрăн тесе ыйтнă. Чăвашсем Христосран та кунĕ пуласшăн. Анчах чăвашсем ват çынсем вĕрентнине манаççĕ. Вĕсем каланă: "Кашкăрпа пурăнас тесен кашкăрла ӳлес пулать" тенĕ. Кăна астăвăр.

**Етĕрне чăвашĕ Йăка Петр ратни.**
**Хыпар. 1906 ç., август 6-13, 31-32 №№.**

## РЕАКЦИЯРАН

1. "Хыпарăн" 43 номерне полиция конфисковать турĕ.
2. Октябрĕн 31-мĕш кунĕнче "Хыпара" кăларакан редактор-издателе Сидор Игнатьевич Игнатьева тытса тĕрмене хупрĕç. Çĕнĕ редактор аллине "Хыпар" часах куçаймарĕ. Çавăнпа çак номер вăхăтра тухаймарĕ.

**Хыпар, 1906 ç., ноябрĕн 26, 44 №.**

## РЕДАКЦИЯРАН

Январь уйăхин 14-мĕш кунĕнче тухнă "Хыпарăн" иккĕмĕш номерне (№ 2) цензор конфисковать турĕ. Унтан редактора сута пачĕç. Çавăнпа сут пуличчен хаçата кăларма май пулмарĕ. Январĕн 31-мĕш кунĕнче сут пулчĕ те редактора тӳрре кăларчĕ. Халĕ ĕнтĕ хаçете кăларма пуçларăмăр. Пирĕн хаçете илекенсем, хаçет вăхăтра çитейменшĕн, пире çиленеççĕ те пулĕ. Анчах унта эпир питех айăплă мар. Айăп ан туччăр пире! Тухайман №№-семшĕн те пулсан кĕнеке яма тăрăшăпăр.

2. Тĕрлĕ тĕлте, пĕтĕм Россияра, Государственная Думана депутатсем суйлаççĕ. Пĕтĕм халăх - Думана мĕнле çынсем суйлаççĕ-ши - тесе, шухăшлаççĕ. Пурин те çавна пĕлес килет. Пурте - ун çинчен хаçат вуласа пĕлĕпĕр теççĕ пулĕ. Эпир те çапла шухăшлаттăмăр. Çавăнпа çак номерта пулас Дума çинчен эпир нумай çырнăччĕ. Анчах эпир тăвас тенĕ пек пулмарĕ. Думана суйлани çинчен, вăл епле пуласси çинчен çырнине пурне те кăларса пăрахмалла пулчĕ. Вĕсен вырăнне урăх япаласем çинчен çырмалла пулчĕ.

Пирĕн хаçете вулакансем уншăн пире айăп ан тăвăр.

**Хыпар, 1907 çул, февраль 11, 3 №.**

## ÇĔНĔ КĔНЕКЕСЕМ

Халĕ "Хыпарăн" редакцийĕнче "Куланайпа акцизсем çинчен" çырнă кĕнекесем пур. Вăл кĕнеке çинче хура халăх начар пурăнни çинчен çырнă. Кам халăха мĕнле хĕстернине пĕлес тесен, çав кĕнекене вуласа пăхас пулать. Ку кĕнеке пур çынна та усăлă пулмалла, пуринчен ытла вăл хресченсене аван. Хакĕ 3 пус.

Тата "Халăх суйласа янă çынсем çинчен" пур. Кун хакĕ 7 пус.

**Хыпар, 1906 çул, сентябрь 10, 36 №.**

## РЕДАКЦИЯРАН

Ку номер вăхăтра тухаймарĕ. Малтанхи статьяра сут туса çынсене вĕлертерни (смертная казнь) çинчен çырнăччĕ, ăна пĕтĕмпех кăларса пăрахмалла пулчĕ. Тата "Хальхи самана" тенĕ статьяран та нумай пăрахтарчĕç. Ытти пăртакăн-пăртакăн хуратнине каламастпăр та.

**Хыпар, 1906 ç., октябрь 1, 39 №.**

## ПОЧТА ЯЩИКĔ

Самар кĕпĕрни Дмитриева.

Сирĕн стихотворениене çаптарма май килмест. Лайăхрах, урăх япаласем çинчен çырас пулать. "Хыпара" № 380 илсе тăракана. Сирĕн статьясене халĕ çаптарма вырăн çук. Каялла илес пулсан, наложенный платежпа ярăпăр.

**Хыпар, 1906 çул, октябрь 1, 39 №.**

## ОБЪЯВЛЕНИЯ

С 1-го февраля 1906 г. выходит в Харькове новая еженедельная общественно-литературная "Церковная газета". Как орган церковного обновления и культурно-прогрессивных стремлений.

Газета будет издаваться по широкой программе. Девиз ее: свобода церкви и ее жизни, объединение во имя святых идеалов братства и равенства, завещанных миру Христом, забытых людьми.

ЗАДАЧИ: 1. отзываться на все духовно-культурные запросы духовенства, общества и народа; 2. освещать выдающиеся явления современности с идейно-религиозной и вселенски-христианской точки зрения; 3. содействовать развитию христианской общественности и проведению реформ на началах соборности во всех сферах труда и жизни церкви.

В газете изъявили согласие сотрудничать видные религиозные писатели - публицисты, женщины- писательницы, профессора, священники, народные учителя, студенты и др. лица, сочувствовать церковно- прогрессивному направлению нашей газеты.

Подписная цена: с доставкой и пересылк. - 5 руб. 50 коп. в 11 мес. на 1/2 года 3 руб; на 3 мес.- 1 руб. 20 коп; на 1 мес. - 50 коп. Отдельный номер 10 коп. Каждый номер будет выходить не менее 1 печатного листа. Объявления: за место в одну строку петита, впереди текста - 20 коп., а позади - 10 коп. Годовые по соглашению.

Подписка принимается: в редакции / коммерч. училище, кварт. законоучителя / , во всех книжн. магазин., "Нового времени",в книжн. магазин И.Л.Тузова /СПб, Гостин. двор/ , в конторе Печкорской / Москва/ .

Редактор- издатель, приват- доцент императорского Харьковского университета, священник Иоанн Филевский.

Хыпар, 1906 ç., апрель 9, 14 №.

## ПИРĚН ХАÇАТА " ХЫПАРА" ВУЛАКАНСЕНЕ

"Хыпар" редакцийě акă çак кěнекесене чăвашла куçарасшăн:

1.Щишко Л. "Разсказы из русской истории" 2 части. Изд. "Земли и воли", СПб. 1906 г. ц. 25 коп., "Дон речь", ц. 22 коп.

2.Надеждин И. - "Народ и земля" Изд. Иванова. СПб. ц. 5 коп.

3.Пошехонов А. - Хлеб, свет и свобода. - Изд. Русс. Бог. СПб. 1905 г. ц. 10 коп.

4.Феодорович .- Как собираются и на что расходуются народные деньги. - Изд. "Молота". СПб. 1905 гг, ц. 5 коп.

5.Беседы о земле. - Изд. "Земля и воля" СПб., 1905 г. ц. 3 коп.

6.Хватит ли на всех земли ? - Изд. "Д. Р." Ростов -на- Дону. 1906 г., ц. 3 коп.

7.Волховский Ф.- Как мужик у всех в долгу остался ? - Изд. "Народной Воли" СПб. ц. 2 коп.

8.Что такое крестьянский союз?- Изд. Лебедева Н. - Новгород 1906 г., ц. 1 коп.

9.О крестьянском союзе. - Изд. "Крест. дела". СПб. 1906 г., ц. 10 коп.

10.Как сицилийские крестьяне боролись за свои интересы. Изд. "Д.Р" Рост.-на-Дону. 1906 г., ц. 3 коп.

11.Русова С. -В стране вольного крестьянства. Изд. "Д.Р" Рост.-на-Дону. 1906 г., ц. 3 коп.

12.Ея же. - На счастливых островах "Ао-Теа-Роа" Новая Зеландия. Изд. "Дон.-Речь". Рост.-на-Дону. 1905 г., ц. 6 коп.

13.Обухов Сергей. - Не вмоготу.- Изд. "Народ. Воля" СПб. 1906 г., ц. 12 коп.

14.Д.Г.- Наша полиция.- Изд. "Г. и В" 1906 года, ц. 6 коп.

15.Зак Г. - Смертная казнь.- Изд. "Г. и В." СПб. 1906 г., ц. 10 коп.

16.Николаев А.- Для чего нужно всеобщее обучение. Изд. "Труд и воля". М., 1906 г., ц. 10 коп.

17.Новоторжский.- Что такое правовое государство. СПБ. 1905 г., ц. 10 коп.

18.Толстой Л. -Обращение к духовенству., цена 5 коп.

19.Дан. Всенародное Учредительное Собрание. (Правильное производство выборов) СПБ. 1905 г., ц. 15 коп.

20.Иванов. Что такое политическая партия. Изд. "Труд и воля". М., 1905 г., ц. 2 коп.

21.Какой должен быть суд? Изд. "Народное Право". СПБ. 1906 г., (листок) ц. 1 коп.

22.Титов. О мировых судьях и земских начальниках. Издание "Народное Право" СПБ. 1905 года, ц. 5 коп.

23.Пименова. Постоянное войско и милиция. Изд. "Вят-Товар". СПБ 1905 г., ц. 2 коп.

24.Якубович П.Ф. Шлиссельбургские мученики. Издание освобод. борьбы". № 1. СПБ. 1906 года, ц. 15 к.

Чăваш халăхне тĕттĕмрен кăларас тесе тăрăшакансем çак кĕнекесенчен хăшне те пулсан куçармĕç–ши? Куçарсан ăна редакцине парсан пит юрĕччĕ. Редакци вара хăй шучĕпе кĕнекесем кăларĕччĕ. Кам та пулсан çапла тăвас тесен, мĕн куçарнине, хăш вăхăта куçарса пĕтерессине çырса ярсан аван пулĕччĕ. Вара редакци кам мĕнле кĕнеке куçарнине пĕлсе тăрса, "Хыпарăн" çитес номерĕсенче çавна çырĕччĕ. Çавна пĕлмен пирки час–часах пирĕн пĕр кĕнекене темиçе çын куçарать. Çапла тăвакансене редакци пит пысăк "спасибо" (тавтапуç) калĕччĕ.

**Редакци.**

**Хыпар, 1906 çул, сентябрь 10, 36 №.**

## РЕДАКЦИРЕН

Час–часах редакцине хаçат укçасăрах яраймăр–ши тесе çырусем килеççĕ. Ĕлĕк хăшне–хăшне ярattăмăрччĕ. Ăна та пĕр укçасăрах мар, çав ыйтакан çыншăн кам та пулин редакцине укçа тӳлесен анчах яраттăмăрччĕ. Халĕ ун пек укçа паракансемех çук. Хамăрăн та укçасăр яма вăй çитмест.

Тата нумайăшĕ хаçат ярăр, хаçат ярсан укçа ярăпăр, тенĕччĕ. Вĕсенчен те нумайăшĕ укçа яман–ха. Укçа яманнисем часрах ярăр. Укçа яманнисене хаçат яма чармалла пулĕ. Тата хăшĕ çур çулшăн кăна тӳленĕччĕ. Хаçата çĕнĕ çулчченех илес тесен, вĕсем те часрах яччĕр. Укçа ямасан, вĕсене те хаçат яма чармалла пулĕ.

**Хыпар. 1906 ç., сентябрь 17. 37 №.**

## ХАЛĔ ТУХНĂ ЧĂВАШЛА КĔНЕКЕСЕМ

1. Нужда. (Çĕнĕ çĕре куçакансем çул çинче курнă асап). - 3 пус.
2. Крестьянское малоземелье и способы борьбы с ним. (Хресченсен çĕрĕ хĕсĕклĕхĕ, ăна мĕнле çăмăлатасси)- 8 пус.
3. Автономия и единство России. (Российăри тĕрлĕ тĕлти халăха "автономия" йĕркипе пурăнма ирĕк парсан та Россия темиçе патшалăха уйрăлма, пĕр патшалăхах пулĕ) - 4 пус.
4. Беседы о земле и небе (Çĕрпе пĕлĕт çинчен калаçни) - 7 пус.
5. Татары и чуваши (тутарсемпе чăвашсем) - 2 пус.
6. О земстве. (Земство çинчен) - 7 пус.

Ыйтса ямалли адрес:

Казань, Воскресенская улица, дом Мартинсона, магазин А.А.Дубровина.

**Хыпар, 1906 ç. август 6-13, 31-32 №.**

## РЕДАКЦИРЕН

1. Нумайăшĕ пире хаçат ямастăр тесе, ӳпкелеççĕ. Хаçат эпир яратпăр. Çитмест пулсан, ăçта та пулин çул çинче çухалать пулĕ.
2. Хăшĕ пирĕн çырăва мĕншĕн çапмастăр, тесе ыйтаççĕ. Эпир çапатпăр, анчах хăшне центр ямасть.
3. Редакцире пĕлтĕрхи хаçат пур, анчах хакĕ 1т. 50 пус. 6 № час тухмарĕ. Вăл çăварнире типографи ĕçлеменрен пулчĕ.

**Хыпар, 1907 çул, март 4-11, 6-7 №.**

## ХАÇАТ ИЛЕКЕНСЕНЕ

1. Июлĕн 2 кунĕнче пирĕн хаçат туха пуçлани çур çул иртет. Хаçатшăн

1т. 75 пус янисем, хаçата çулталăкĕпех илес тесен, тата 1 т. 25 п. ярăр; анчах янисем тата 2 т. ярăр. Хаçат укçине июль уйăхчен яманнисене июньрен вара тухакан нумерсене яраймастпăр.

Редактор Н.В. Никольский çу уйăхĕсене ирттерме яла кайрĕ. Хăй вырăнне мана хăварчĕ. "Хыпар" ман алăра та ĕлĕкхи майлах çырăнĕ.

**За редактора-издателя С. Кириллов.**

## ПĔЛТЕРӲСЕМ

"Х Ы П А Р".

1907 çулта та тухать, хакĕ ĕлĕкхи пекех:

Çулталăка——3 тенкĕ! 3 уйăха——90 пус.

Çур çула——1 т. 75 п.! 1 уйăха——30 пус.

Кашни номер, уйрăм————8 пус.

**"Хыпар", 1906 çул, 44 №.**

Редакцире "Хальхи самана" ятлă çĕнĕ кĕнеке пур. Хакĕ 4 пус.

Тата "Патшалăха тытса тăрас йĕркесем" ятли пур. Кун хакĕ 3 пус.

Редакцияна "Хыпарта" çаптарма тĕрлĕ хыпар çырса яракансем хăвăр адресăра та çырса ярăр.

Чăвашла календарь тухнă.

Хакĕ 10 пус. Пĕр календарь ыйтса яракансем 14 пус ямалла. Укçа вырăнне маркăсем ярсан та юрать.

**Хыпар, 1907 çул, февраль 18, 4 №.**

## ЯЛ ХАÇАЧĔ

Питĕрте пĕр пысăк хаçат тухать, ăна "Правительственный вестник" теççĕ. Вăл хысна хаçачĕ, ун çине çĕнĕрен тухакан законсене, патшалăха тытса тăракансем чиновниксене, мĕн ĕç тума хушнине, патшалăхри пур пуçлăхсем мĕн тунине, патшалăхра пулакан пысăк ĕçсене пурне те çав хаçат çине çыраççĕ. Ун çине мĕн çырни пур те тĕрĕс, вăл "патшалăх хыпарĕсене салатакан" ятлă. Ăна чиновниксем, тĕрлĕ ĕçе тирпейлесе тăракан вырăнсем илеççĕ. Укça тӳлесен ахаль çынна та яраççĕ. Анчах ăна ахаль çын вуласа ăнланма пултараймасть. Пирĕн пеккисем валли çав хаçатпа пĕрлех, пĕр редакцире тепĕр хаçат тухать, ăна "Сельский вестник" теççĕ, эсир ăна курнă та, вуланă та пулĕ. Ун çинче эсир патшалăха тытса тăракансене хирĕç, чиновниксене хирĕç пĕр сăмах та тупаймăр, мĕншĕн тесен ăна хăйне те чиновниксене пăхăнса тăракан çынсем çыраççĕ. Вăл хаçата пур çĕре те салатма тăрăшаççĕ, вулăс кантурне укçасăрах яраççĕ. "Сельский вестник" çинче хресчен халăхĕ земский, становой пул-

масан, пӗтӗмпех пӗтмелле, кӗтӳҫӗсӗр кӗтӳ пек тесе ҫыраҫҫӗ. Ҫӗрпе ирӗкшӗн тăрăшакансене тăшман вырăнне хурать. 117 нумерте хура халăхшăн тăрăшакансем Патшана- октяберте тухнă манифеста каялла ил тесе йăлăнаҫҫӗ. Ҫав нумертех патшана - хресчен халăхне ӗлӗкхи майлах хăвар тесе ыйтаҫҫӗ. Вӗсен шухăшӗпе, ӗлӗкхи пекех, хуҫине чури, дворянӗпе хресченӗ пултăр. Камсем–ши вӗсем ҫапла калакансем? - Пенер, Озеров, дворянин Задонский, проф. Денисов, купец Уткин. Унтан тата "Сельский вестник" еврейсене пит кураймасть. Халăх ҫӗр пирки пăлханать, вăл калать: еврейсем пăлханаҫҫӗ, тет. Халăх ҫӗрне еврейсем илсе пӗтернӗ--ши мӗн?

**Хыпар, 1906 ҫул, июль 9, 27 №.**

## ЧĂВАШЛА ҪЫРАКАНСЕНЕ

Кӗнеке тума, хаҫат ҫине ҫапма юрăхлă пур ҫын та ҫыраймасть. Хăшӗ уҫă, илемлӗ калаҫать пулсан та, хут ҫинче унăн апла пулмасть. Пур чăваш та вулатăр тесен, пур чăваш та ăнланмалла чӗлхепе ҫырас пулать. Пӗр вырăнта пурăннă ҫын пур ҫӗрти чăваш сăмахне пӗлеймест. Хăй ăссӗнех пур чăваш ăнланмалла ҫыраймасть. Анатрисен турисем ăнланайман сăмахсем пур (иккен, ахăр, пикен...), турисенӗн анатрисем пӗлмен сăмахсем пур. Ҫавăнпа чăвашла асăрхаса тӳрлетсе ҫырас пулать. Епле ҫырса пурӗ те ăнланмалла пулӗ–ши? Халиччен ҫырнă чăвашла кӗнекесене пурне те ăнланаҫҫӗ. Ăнланма йывăр кӗнеке нумай та мар. 1) Ăнланма ҫăмăл халиччен тухнă кӗнекесем пек ҫырма тăрăшас пулать. Лайăх юсаса ҫырнă чăвашла кӗнекесем акă ҫаксем: Св. Евангелие, псалтир, Иасослов, священ. история Аоинского, Букварь тата ытти т.е. Ку кӗнекесене епле ҫырнине асăрхаса, тӗплӗ вуласа тухас пулать. Кăна тунипех сахал–ха. 2) Ҫыпăҫтарса каланă чăвашла сăмаха, халапа, юмахсене ҫырса пырас пулать. 3) Ху мӗн шухăшланине, илтнине, калаҫнине йӗркелӗн ҫыпăҫуллă, юсаса ҫырса пырас пулать. Ҫаксене асăрхаса туса пыракан пӗчӗккӗн, вăраххăн кӗнеке, хаҫата юраллă ҫырма вӗренӗ. Ăна шухăшласа кăларса ҫырма та ҫăмăл пулса пырӗ.

Эпир вырăс хушшинче вӗреннӗ ачасем хамăр чăваш хушшинче вырăсла пӗлекен чăвашла калаҫмастпăр, вырăсла пӗлменнисемпе анчах вырăс сăмахӗсене хутăштаратпăр, унтан чăвашла калаҫатпăр. Сайра хутра анчах чăвашла калаҫсан ăҫтан чăвашла уҫă калаҫма, ҫырма пултарăпăр? Ӗҫни–ҫини, тырă хакӗ ҫинчен анчах чăвашла калаҫсан шухăшри япала ҫинчен калаҫнă чух яланах тытăнса тăрăпăр, чăваш чӗлхине пăскаласа калаҫăпăр. Пур чӗлхенӗн те калаҫма тăрсан сăмах тухать. Ку чӗлхенӗн сăмах сахал, теҫҫӗ. Шухăшласан, ҫав чӗлхеннех сăмах сиксе тухать,

нимĕнле халăх та хăй шухăшланине, хăй чĕлхипе калаймасăр, ют чĕлхерен чĕпĕтсе хăйĕн чĕлхи çумне çыпăçтарса нумай пурăнмасть, хăйĕн чĕлхинчех сăмах шыраса тупать.

**Тоанн Иуркки 8 апр.**
**Хыпар, 1906 ç., апрель 23. 16 №.**

## ÇЫРУСЕМ

1. Хаçат илсе тăма укçа янă çынсем нумайăшĕ хаçат килмест, тесе çырусем çыраççĕ. Хусантан хаçатне укçа илсенех яраççĕ. Хаçатсем нумайăшĕ вулăс кантурĕнче çухалаççĕ, мĕн. Çапла тиекенсем вулăсра хаçатне илсе тăнă, анчах укçа яракан çынни хаçатне халиччен те курман. Ăна ют çынсем вулама тесе илеççĕ те, хуçине кăтартмаççĕ те. Хаçат çухатнăшăн вулăс старшини айăплă: вăл кантур хуçи, вулăс чури: унăн халăх пурлăхне лайăххрах пăхса тăрас пулать, ют çын аллине парас пулмасть.

2. Нумайăшĕ: халĕ хаçат илме юрать–и? теççĕ. Хаçат халĕ те яма пулать.

Хыпарăн 17–мĕш нумертен пуçласа Патшалăх Пухăвĕнче мĕнле канашсем туни çинчен пĕтĕмпех çырса парĕç. Вакăн–тĕвекĕн илсе тăрсан, хаçат хаклăрах ўкет.

Уйăхĕ: 1 ! 2 ! 3 ! 4 ! 5 ! 6 ! 1çула

Хакĕ: 30п! 60п! 90п! 1т. 20п! 1т. 50п! 1т.75п! 3 тенкĕ

Çулталăкĕпех илсе тăма шухăш пулсан, укçа пурне те сасартăках тўлеме виçĕ пая уйăрма пулать: хаçатне илес умĕн 1 тенкĕ яма юрать, май уйăхĕнче 1 тенкĕ, ноябрь уйăхĕнче 1 тенкĕ. Çулталăка илес тиекенĕн редакцине малтантарах пĕлтерес пулать.

3. Кам хаçат илсе тăрас тет, вăл укçа парса тултарман пулсан, укçине часрах тўлетĕр.

4. Редакцине мĕн те пулсан ыйтса çыру çырас пулсан “открытое письмо” тиекен çыру хучĕпе çырса ярас пулать. Ун пек хут иккĕ пĕр çĕрте. Пĕрин çине ыйтаканни çырса ярать, тепĕр хучĕ çине ăна хирĕç çырса яма пулать. Вăл пайне “Письмо для ответа”, теççĕ. Хакĕ унăн 6 пус. Çыру кĕпипе (конвертпа) ярас пулсан 7 пуслăх “марка” чиксе ярас пулать.

5. Хресчен С. Ордов пиртен тырă вырмалли машина (жнейка) çинчен ыйтнăччĕ. Аван тырă вырмалли машина, “Мак-кормика” ятлă. Ăна Хусанти “Земский складран” илме пулать.

6. 145-мĕш № валли “Руководство по садоводству и огородничеству. Шрейдера” хакĕ мĕнлине пĕлме вăхăт пулмарĕ. Ăна илес тесен Питĕртен тупма пулать.

Адрес çапла:
"С.-Петербург. Книгоиздательство Девриева". Наложеный платежпа та ярасçĕ.

**Хыпар, 1906 çул, 14 май. 19 №.**

## ЧĂВАШЛА ХАÇАТ ÇИНЧЕН

Халиччен чăвашла хаçат çукчĕ, кăçал чăвашла та хаçат тухрĕ, чăвашла хаçат тухать тенĕ хыпар илтĕнсен тĕрлĕ çын тĕрлĕ калаçкалаччĕ: хăшĕ мĕн тумалла чăвашла хаçатпа, вулама пĕлекене вырăсла хаçат та нумай, теччĕç, хăшĕ, чăвашла хаçат тухсан чăвашсем хăйсем ĕçсен аппалана пуçласа вырăса час тухаймĕç, пирĕн вырăс патшалăхĕнче пурăнакан халăхсен хăçан та пулин вырăссемпе пĕр чĕлхеллĕ халăх пулас пулать, мĕн чухлĕ часрах пĕр чĕлхеллĕ халăх пулнă, ун чухлĕ авантарах, вырăс патшалăхĕнче урăх чĕлхеллĕ халăхсем хăйсен чĕлхипе кĕнеке, хаçат ÿкере пуçласан вĕсем вырăса час тухаймĕç, е нихăçан та вырăса тухас шухăшне тытмĕç, теччĕç.

Пирĕн шухăшпа тĕттĕм халăх хăй чĕлхипе кĕнеке е хаçат тухнипе вырăссенчен уйăрăлса пурăнас çук пек туйăнать. Чăвашсем вырăсла калаçма лайăх вĕренсе çитессе кĕтсен вырăсла кĕнеке е вырăсла хаçат вуламалла пуласса кĕтсен, вĕсем хăçан ун пек пулĕç? Вĕсем апла вырăсла вуланипех ăнланмалла пулас вăхăт çитиччен ним вуламасăрах, е вуланине ăнланмасăрах пурăнмалла пулать. Халĕ чăвашсем пурте вырăсла лайăх пĕлекенех пулса çитеймен–ха. Тĕнчере мĕн пуррине епле килĕштерсе пурăннине, ăçта мĕнле çĕр–шыв пуррине, ăçта ку япала мĕн хак тăнине, ăçта тырă лайăх пулнă, ăçта начар, ăçта мĕнле халăхсем пур, вĕсем епле пурăннине, тĕнчере миçе тĕслĕ патшалăх пур, вĕсен халăхĕ мĕн чухлĕ, çĕрĕ-шывĕ мĕн чухлĕ, мĕнле çĕр–шыв пирĕн патшан, мĕн чухлĕ халăхĕ пур, миçе тĕслĕ халăх, мĕнле çĕр–шывра пурăнаççĕ, пурăнма аван–ши, аван мар–и, мĕнтен аван, мĕнтен аван мар, тата тĕреклĕрех пурăнмалла, пулас тесен мĕн тумалла, мĕн усрамалла, мĕн ÿстермелле, вĕсене епле пăхмалла, пĕр–пĕринпе йĕркеллĕ пурăнас тесен мĕн тумалла, мĕнле йĕркепе пурăнмалла, çавсене пурин те пĕлесси килмелле, пуринĕн те пĕлесси килмесен те нумайăшĕн пĕлесси килмелле. Çавăн пек мĕн килчĕ ăна таврăнсан кÿршĕ–аршăсем (пус–килсем) пуçтарăнса епле тĕнче курса çÿренисене йăлт ыйтса пĕтереççĕ. Çавсене ахаль ыйтмаççĕ, пĕлесси килнĕрен ыйтаççĕ. Хаçатсем, кĕнекесем вуласа пурăнакан çын салтак мĕн курнинчен, мĕн пĕлнисене салтак каласа памасăрах та ун чухнех лайăх пĕлсе тăма пултарать. Халĕ салтаксем Японияран тыткăнтан таврăнакансенчен унта вĕсем мĕн курнине, вĕсен мĕнле пурнăçне

каласа параççĕ. Пĕр çын салтакран Япония çыннисем, "ура" теес вырăнне урăх тĕрлĕ кăшкăрнинĕн мана, вĕсем темле кăшкăраççĕ теччĕ–ха тесе тăрать манпа калаçнă чух. Эпĕ каларăм: "Вĕсем "банзай" тесе кăшкăраççĕ,- терĕм". Манпа калаçакан çын манран тĕлĕнчĕ. "Эсĕ епле Японияна пымасăрах вĕсем епле кăшкăрнине пĕлетĕн?" Эпĕ каларăм: "Вăрçă пуçлансанах хаçатсем çинче илтнĕччĕ", терĕм. Хаçат çинче çавăн пек япаласем çинчен нумай илтетĕн. Кĕнекесене, хаçатсене вуласан ăс–пуç уçăлать, хаçатсене вуласан çынсен шанк хытса кайса ним пĕлмесĕр пăхса тăракан çынсем тĕслĕ мар, е çÿçне–пуçне тăраткаласа мелке пек еврекен çынсем тĕслĕ мар, илемлĕ тĕс кĕнĕ çынсем пулаççĕ, йĕркеллĕ, ăслă çынсем пулаççĕ. Чăвашла хаçат çине çавăн пек мĕн килчĕ, вăл япаласем çинчен тата нумайтарах ÿкересчĕ, вара тата пушшех вулас килерех парĕччĕ.

**Хыпар. 1906 ç., май 14. 19 №.**

## РЕДАКЦИЯРАН

Пирĕн редакцияна час-часах хресченсем тĕрлĕ тĕлтен "Хыпара" укçасăр яма ыйтса çырусем яраççĕ. Вĕсем калаççĕ: "Хыпара" пит вулас килет, анчах кăçал пит вăйлă выçлăх пулчĕ. Çавăнпа, хаçат илме мар, кил кирлишĕн те пĕр пус укçа та тупаймастпăр. Укçа çуккипе хаçат илме те укçа ярaймастпăр. Редакция хаçат епле те пулсан укçасăр ярaймĕ-ши? теççĕ.

Кăçал выçлăх пит вăйлине эпир аван пĕлетпĕр. Хресченсен пурнăçĕ пит хĕсĕнсе çитнине те пĕлетпĕр. "Хыпара" та хресченсене эпир пит вулаттарасшăн. Анчах укçасăр ыйтакансене пурне те хаçат яма пирĕн вăй çитес çук: укçасăр ыйтакансем пит нумай. Тата, хаçат кăларма та укçа нумай кирлĕ. Пурне те укçасăр ярсан, хаçат кăларма та пĕр пус укçа та пулас çук. Хаçат илекенсенчен пуçне пире укça ниçтан та памаççĕ.

**Хыпар, 1907 çул, февраль 11. 3 №.**

## РЕДАКТОРА ВĔЛЕРНИ ÇИНЧЕН

Çак кунсенче Мускаврa Толлос ятлă çынна вĕлернĕ. Вăл "Русския Ведомости" тиекен пысăк хаçатăн редакторĕ пулнă. Кăнтăрла иртсен пĕр сехет çурăра Толлос редакцияран килне кайнă. Торопов ятлă çыннăн çурчĕ тĕлне çитсен, сасартăк тăватă хутчен револьвертан пенĕ сасă илтĕннĕ. Çав урамри городовой тепĕр урамра, Торопов çуртĕнчен пĕр 300 утăмра пулнă. Пенĕ сасса илтсен вăл Торопов çурчĕ патне чупса пынă. Унта вăл пĕр юнланнă çын выртнине курнă. Вăл кăшт анчах сывласа выртнă. Городовой, Торопов картишĕнчен пенĕ пулĕ тесе унта чупса кĕнĕ. Анчах ника-

ма та курман. Вăл унтан каялла тухнă çĕре Толлос вилнĕ. Ăна пенĕ чухне урамра никам та пулман. Кам вĕлернине пĕлеймеççĕ. Анчах халăх хушшинче, хаçатсем çинче ĕç епле пулни палăрса пырать. Ку ĕç пĕлтĕрхи Думăра депутат пулнă Герценштейна вĕлернĕ ĕç евĕрле. Толлоса Торопов çурчĕ тĕлĕнче вĕлернĕ. Ун çуртĕнче "Вĕчĕ" ятлă черносоточный хаçатăн редакцийĕ. Вăл хаçат Толлоса вĕлерни çинчен ак çапла сăмахсем çырать: "Пулĕсем ăна çăварĕнчен лекрĕç, хăш-хăш шăлне катса кăларчĕç. Толлос тайкаланса кайрĕ те, пĕчĕк алăк янаххинчен пырса тытрĕ, унтан часах кĕлте пек йăванса кайрĕ" тенĕ. Толлоса вĕлернине никам та курман. "Вĕчĕ" çав япаласене çырма камран пĕлнĕ-ши?

Толлос пĕлтĕрхи Думăра депутат пулнă. Ун пек ырă, ăслă, вĕреннĕ çын Россияра та пит сахал. Вăл патшалăх укçине епле тыткалама кирли çинчен пуринчен аван пĕлекен çынччĕ; халăхшăн хытă тăрăшакан çынччĕ. Çавăнпа та, тен, унăн пурнăçĕ кĕске пулни.

/Дн. К./

**Хыпар, 1907 çул, март 25, 9 №.**

## РЕДАКЦИЯ ÇЫРĂВĔСЕМ

1. "Хаçат çитмест пирĕн патăмăра" теекенсене: Эпир укçа тӳленисене хаçат пурне те яратпăр. Сирĕн патăра çитмест пулсан, айăп пирте мар.

2. "Çурт тума укçа пĕр вăхăта ăçтан илмелле" тесе ыйтакана: Чул çурт тума Губернское Земство укçа парать; çавăнта прошение парас пулать. Анчах кăçал Земствон укçи сахал. Çавăнпа вăл ыйтсан та, те парĕ... темен.

3. Спасск уйăсне, Василий Леонтьева: Сана уйрăм çыру ятăмăр.

4. Янгильдина, Федор Зайцева: Çырнăшăн тавтапуç. Анчах сирĕн енче Зем. ком. суйлани çинчен эпир пĕр çыру çаптартăмăр.

5. Карач вулăсĕнче Фед. Феод. Белякова: Сан çыруна Мартăн 19-мĕш кунĕнче Челябинскра пурăнакан пĕлĕш патне ятăмăр. Вăл унта авантарах тĕпчесе час калла çырса ярĕ. Уфа кĕпернинче акма юрăхлă ирĕк çĕр Уделăн, Земельный банкăн тата улпутсен пур. 1905-мĕш çулта çĕр хакĕ чи пысăкки 69 тенкĕ, чи юнни - 7 тенкĕ, вăтамĕ - 38 тенкĕ пулнă. Улĕмрен мĕн хакпа сутассине, е укçасăрах памалла тăвассине Дума татăклă туса парассине кĕтетпĕр. Çав çулах хыра хакĕ тĕпрен тăваткал халаçе (сажень) вăтам хакпа - 18 тенкĕ пулнă, хатĕрри - вăрманта 23, пасарта 31 тенкĕ пулнă; юман вăтам хакпа, тĕпре пĕр тăваткал халаçе 19 т., хатĕрри - вăрманта 22 т., пасарта 30 тенкĕ. Пĕр тесетинерен ыраш тĕрлĕ тухать. Пĕтĕм кĕпĕрнере вăтамĕ ыраш - 49 пăт, сĕлĕ -71 п., тулă 49 п., пăри 55 п., вир 48 пăт. Хăш тĕлте 250 пăта çитет, хăш тĕлте 1 пăта юлать. Тырă хакĕ пирĕн-

ни майлăрах. Выльăх валли курăк пур. Выльăхăн вăтам хакĕ 1905-мĕш çулта ак çапла пулнă: лаша хакĕ 49, савла 41; ĕне хĕлле 31, çулла 30; сурăх хĕлле те, çулла та пĕр пек (5 т) пулнă. Хальхи хаксем çинчен çыру илсен çырса ярăпăр.

6. Чистай уйăсĕнче пурăнакан Иван Тарасова: Сирĕн министерская школа уçас килет пулсан, Чистопольский Уездный Училищный Совета приговорпа прошение парăр. Земская школа тăвас килет пулсан, тата Чистопольская Земская Управăна пама юрать. Прошение çинче мĕншĕн сире уйрăм школа кирлине кăтартăр. Училищный Совет, е Земство, вĕсен шухăшĕпе сире чăнах школа кирлĕ пек пулсан, сире школа укçасăрах туса парĕç. Анчах хăвăр кăштах пулăшма шухăш тусан - школа валли çĕр парсан, ăна çӳллен пăртак укçа ярса тăмалла пулсан, авантарах пулĕччĕ; апла Земство та, министерство та школа уçма хапăрах тăвать. Халĕ Думăра халăха вĕрентесси çинчен час закон пăхса тухмалла. Вăл закон кашни 50 ача пуçне пĕр школа тумалла, йĕри-тавра 3 çухрăмра школа пулмасан, 50 ача пулмасан та школа тумалла тăвасшăн. Ку закона Дума пăхса тухсан, сирĕн школа тума ĕмĕт пурри-çукки паллăрах пулĕ. Пĕр ялта икĕ тĕрлĕ халăх пурăнать пулсан, "кашни халăх валли уйрăм школа" тума юрать. (Пĕлтĕр апрель уйăхĕнче кăларнă "Правило" çинче çапла каланă). Кăçал хыснан та, Земствон та укçа сахал. Çавăнпа сирĕн школăна кăçалах ĕмĕтленес çук. Анчах çапах та тытăнса пăхăр. Ир тăнă кайăк выçă вилмен, теççĕ. Эпир чăвашсем ахаль те нумай çывăрнă. Тен Дума правительство тĕрлĕ кирлĕ мар çĕре яракан укçана халăха усăлă ĕçе ямалла тума пултарайĕ.

7. "Хыпара" укçасăр ыйтакансене: Пĕр сакăрвунă пилĕк çынна яхăн "Хыпара" укçасăр яма ыйтаççĕ. "Хыпар" илсе тăрас килнине эпир пĕлетпĕр. Анчах "Хыпара" кăларма та, почтăпа яма та укçа кирлĕ-çке... Май пулсан эпир пĕртте чарăнса тăмăттăмăр.

**Хыпар, 1907 çул, апрель 1, 10 №.**

## 1906-1907 ÇУЛСЕНЧИ «ХЫПАР»
## Йюркие

"Хыпарăн" вăтăр улттăмĕш нумерĕнче эсир "чăвашла кĕнекесене мĕн пуррине тухнине пĕр илес пулать" тесе çыратăр. Манăн кăмăлпа та çапла пек туйăнать: пирĕн чăвашăн, ахаль те çыру пĕлекен çыннăн, темĕн тĕрлĕ тăрăшас пулать, епле те пулин хамăрăн хура халăха нумайтарах çыру вĕрентсе, кĕнекесем вулаттарса, çутта кăларттарма... Чăвашран пурте çапла пирĕн пек ырă шухăшлаççĕ-ши? Манăн шухăшăмпа пулсан, çук, пурте çапла ырă шухăшламаççĕ. Камсем шухăшламаççĕ тесе, пĕлетĕр? Ялти пупсем, хамăр чăваш çăкăрне çисе мăнтăрланнисем. (Эсир те ялта пуп пулса пурăнатăр, эпĕ сире вĕсем хисепне хисеплеместĕп). Мĕншĕн вĕсем пирĕн пек ырă шухăшламаççĕ? Акă мĕншĕн: хăйсем вĕсем мăнтăрланнă, малашне тата çапла хăйсем пек ачисене мăнтăрлатасшăн. Çав пиркепе вĕсем ытти чăваш ачисене çырăва вĕрентесшĕн мар. Вĕсене çырăва вĕрентсен, вĕсем малашне пуп ачисенĕн татăкĕсене туртса илме те пултараççĕ. Авă çавна пĕлсе тăрсан "ачăмăрсем хамăра пăхнă çĕрте, ырхан ан пултăрччĕ", теççĕ. Вĕсенĕн ăсĕпе пулсан, ытти чăваш ачисене çырăва вĕрентни паха мар. Çапла шухăшпа пурăнакан пупсем е ытти çынсем, чăвашла кĕнекесем туянса хамăр чăваша вулаттарма тăрăшас çук. Вĕсем патне янă çĕнĕ кĕнекесене "кирлĕ мар, юрăхсăр япаласене янă" тесе, вĕсем çыраканни патне киле тавăраççĕ. Эпĕ хам çырнă кĕнекесене пупсем патне яркаласаттăм. Çирĕм çынтан виççĕшĕ, пархатарсăррисем, калле тавăрчĕç. Эпĕ пĕлесшĕн: çав çынсем пирĕн чăвашсем хушшинче усă тăвасшăн пурăнаççĕ-ши? Эй паçăр çырнă пек, мăнтăрланасшăн кăна-ши? Усă тăвасшăн пулсан вĕсем çапла хăтланмалла-и? Çук, апла тума кирлĕ марччĕ. Хамăр çыншăн тăрăшас пулатчĕ. Курăсăн, вĕсем авă епле тăрăшаççĕ... Ун пек мăнтăрланас текен пупсене пирĕн чăвашăн хытă пĕлсе тăрас пулать. Пирĕн чăваш хушшинче пурăнччăр ырхан пупсем, мăнтăррисене, чăваша ырă тăвас теменнисене, хамăртан ăсатас пулать. Пурăнса пăхчăр вĕсем вырăссем е ытти çынсем хушшинче. Унта вĕсем мăнтăрланас вырăнне час шăранаççĕ. Пирĕн чăваш хушшинче пурăнччăр пĕр усă тăвас тенĕ çынсем анчах. Усăсăррисене эпир ахаль те ĕлĕк те темиçе çĕр çул хамăр вĕсене ирĕксĕр кашлаттарса пурăнтăмăр. Вăл саманасем иртрĕç ĕнтĕ ĕмĕрне... Эпир халĕ хамăра епле çырусем кирлине суйлама пĕлĕпĕр. Кахалсене, ĕлĕкхи кивĕ правительство чухнехи пек, иртĕнсе пурăнма ирĕк памăпăр.

**Ив. Юркин.**

**Хыпар. 1917. Юпа уйăхĕн 19-мĕш кунĕ. 44 №.**

## ТĂВАНСЕМ, ЮЛТАШСЕМ!

Эпĕ "Хамăр чĕлхене вĕренмелли кĕнеке" (хрестоматия) çыртăм. Алăпа

çырни мĕнпурĕ 75 листа. Станпа пуçтарсан, сахалтан 10 листа пулмалла, пĕр 169 стр. Çав кĕнекене пуçтарма пилĕк пин тенкĕ укçа кирлĕ. Ăна пуçтарма манăн хамăн вăйăм çитмест. Авă çавă пиркепе хамăр тăвансене, чăвашсене, тархасласа ыйтатăп: кам укçаллă çынсем, мана пулăшăр кĕнекене пуçтарма, укçа панăшăн эпĕ сире усламне 10 кӳрĕп. Укçине тавăрăп кĕнекисене сутсан. Панă укçăр çухаласран хăраса ан тăрăр! Эсир мулпа пулăшнипе хамăр чăваша çутта кăларма пултаратăр. Халиччен кун пек кĕнеке чăваш чĕлхипе тухман. Çак кĕнекене класра вуламалла пулать, çавăнпа нумайтарах пуçтарăпăр. Тăвансем, чăвашсем, пулăшăр! Тăрăшăр çав кĕнекене часрах станпа пуçтарса кăларма! Чăваш чĕлхине епле хăватлине пĕлсе тăрса вĕренер. Адрес г. Симбирск. Ярмароч. кв. д 97. И.Н. Юркину.

**Хыпар. 1917., юпа, 19, 44 №.**

## ЧИРКĔВĔРСЕНЕ ТЕ ПУЛИН ТАСА ТЫТĂР

Пирĕн чăваш çи-пуçне, пӳрт ăшчиккине таса тытмасть. Ма таса тытмастăн, тесен, вăй çитмест, тет, ача-пăчапа мĕн тăван? тет. Ку çаплах тейĕпĕр. Ун çинчен эпĕ те хытах тавлашасшăн мар. Эпĕ акă тата мĕн сиснĕ. Пĕр чиркĕве пыратăн - стени, турăшсем çара тусан, чӳрече кантăкĕсем тусанланса, хуралса пĕтнĕ, йĕри тавра шăна кари. Тепĕр чиркĕве пыратăн – унта та çавăн пекех. Çакăн пек чиркӳсем Етĕрне уесĕнче чылай, ыйтсан, ялĕсене те каласа парăп.

Чиркĕвĕрсене ма таса тытмастăр? Вăй çитмест-и? Ача-пăча япăха кăларать–и, е чиркӳ хуралçине çывăрма та вăхăт çук–и? Чиркӳ - Турă çурчĕ, ăна таса тытни Турра юратнине пĕлтерет. Таса илемлĕ чиркĕве çӳрес те килет, унта Турра та кĕл тăвас килет. Чиркĕве таса тытни тата халăх таса, тирпейлĕ пурăннине пĕлтерет. Халăхăнне анчах мар, пачăшкин пурнăçне те пĕлтерет. Ăçта халăх е пачăшкă таса, тирпейлĕ - унта чиркӳ те çавнашкал. Ăçта халăх е пачăшкă таса мар, тирпейсĕр - унта чиркӳ те япăхса кайнă. Килес праçникре чиркĕве кай та йĕри-тавра пăх: таса–и сирĕн чиркӳ.

Хăш чиркӳ çывăхĕнче тула тухмалли вырăн та çук. Вăл аван мар. Тула тухмалли вырăн кирлĕ, анчах ăна чиркӳрен катарах тумалла. Ăна таса тытмасан, чиркĕве те вара таса урапа кĕмелли çук. Курнă эпĕ тата: хăшĕ чиркӳ картинех тула тухаççĕ. Кун пеккисем выльăхсем пекех вĕсем, урăх ним калама та пĕлместĕп.

**Т. Х.**

**Хыпар. 1917. Юпа уйăхĕн 19-мĕш кунĕ. 44№.**

## ЧĔЛХЕ ÇИНЧЕН

Кам вĕт халăхсен чĕлхи тата ытти хальччен вĕренмен халăхсен те чĕлхи лайăхланма пултараймасть, тет, çавă начар филолог (ăнлантарса пани пур хаçатра: филолог тесе тĕрлĕ чĕлхесене тĕпĕ–йĕрĕпе вĕреннине калаççĕ.- А.Д.) тĕнчери прогреса (ăнлантарни пур: прогресс тесе пурнăç йĕрки, ăслăлăхсем малалла уçăлса, аванланса пынине калаççĕ) ĕненмен çын пулать. Прогреса ĕненмен çынна урăхла обскурант теççĕ, вăл тĕттĕм çын тени пулать. Тĕлĕнмелле! Епле чĕрĕ, ăслă çын калаçакан чĕлхе лайăхланма пултараймасть пулать–ши? Унпа çын шухăшлать! Шухăшлакан чĕлхе лайăхланма пултараймасть тени- вăл этем шухăшĕ малалла каймасть тенипе пĕрех пулса тăрать. Çапла никам та калас çук тетĕп эпĕ. Этем шухăшĕ малалла каять, уçăлнăçем уçăлать, çавăн пекех чĕлхе те унăн уçăлса пырать. Пĕр вилнĕ чĕлхесем çинчен анчах вăл малалла каймасть тесе калама пулать (латинпа грек чĕлхисем). Вĕсем малалла мĕншĕн каймаççĕ-ши? Вĕсемпе шухăшлакан çынсем пĕтнĕ, вилнĕ. Çавăнпа вĕсем малалла кайяймаççĕ. Нихçан та хăш чĕлхепе те пулсан калаçакан, шухăшлакан, хуйхăракан, савăнакан, юрлакан пĕр-ик çемье пулсан та, ун пек чĕлхене пĕтет тесе калама çук! Çавăн пек чĕлхе çинчен те пĕтет тесе калама май килмест пулсан, унта вара пинлĕ, мĕльюнла халăх чĕлхи пĕтет тесе калама тивĕç килет-ши? Нимĕнле тивĕç те, нимле никĕс те ун пек калакансен хăйсене тӳрре кăлармалли çук! Пинлĕ, мĕльюнла халăх çинчен çапла калаççĕ пулсан, вăл çав халăхран йĕрĕнсе калани, е мăшкăласа кураймасăр калани анчах пулса тăрать. Урăх нимпе те çакна ăнлантарса пама çук! Çак сăмахсене вĕренмен çынсем каланă пулсан, эпĕ ăна урăхла ăнлантарса пама та пултараттăм: вĕренмен çын хăй мĕн каланине те лайăх çавăрса илеймест, кăна вĕреннисем калаччĕç-çке! Пит аван филологсемех калатчĕç! Вĕсен сăмахĕсем “пушă хирте сас чĕнни" пек юлмастчĕ, вĕсене ĕненсе тăратчĕç. Вĕсен сăмахĕсем пирĕн вĕреннисене йăлтах çĕнтерсе илнĕччĕ! Вĕсенчен те нумайăшĕ чăваш малалла кайма, уçăлма пултараймасть, чăваш чĕлхи пĕтсех ларать, тесе калатчĕç! Çав сăмахсене илтме прогреса, чăнлăха ĕненекен çынна калама çук йывăрччĕ! Хăй халăхне, унăн чĕлхине хытă юратаканшăн вăл вилĕмпе пĕрехчĕ: “чăваш халăхĕн чĕлхи пĕтет" тенине илтсенех ун пек çыншăн “мĕльюнла чăваш халăхне" çĕçĕпе пусса (чиксе) пăрахнă пекех туйăнатчĕ! Эпĕ хам уншăн куççуль юхтарнă вăхăтсем пур. Ун чухне чăнахах хуйхăрмасан та хуйхăрмалли пурччех, йĕмесен те йĕмеллехччĕ! Йĕри-тавра кашкăр пек пире çатса ярасса пăхса анчах тăратчĕç.

Чăваш вĕреннĕ çыннисенчен чăвашшăн ырă шухăшлакансем, хамăр чĕлхене вĕренес текенсем çукчĕ! Йĕри-тавра чăнласан “пĕтет" тени кă-

наччӗ! Чиркӳсенче чӑвашла кӗл тума, чӑвашла юрлама пӑраха пуҫланӑччӗ: чӑвашла кӗл тӑвас, юрлас текенсене ӑҫта кирлӗ унта хӗстеретчӗҫ.

Акӑ ҫӗнӗ самана пуҫланса кайрӗ. Халӑхсене хӑйсен чӗлхипе калаҫма ирӗккӗн калаҫма, ҫырма ирӗклӗх пачӗҫ. Чӑвашсем валли эпир те чӑвашла хаҫат кӑларса патӑмӑр. Анчах ку хаҫата кӑларнипе кӑна пирӗн чӑваш пурнӑҫӗ, чӑваш чӗлхи ҫиеле тухрӗ теме ҫук-ха. Халӗ эпир "Хыпарта" ҫырни вӑл чӑваш чӗлхипе аташни анчах-ха, малашне пирӗн чӑваш чӗлхи аташма кӑна мар, вӑл тӗрӗссипех лайӑх чӗлхе пултӑр тесен,- пирӗн, чӑваш вӗреннӗ ҫыннисен, нумай тӑрӑшас пулать-ха. Асапланасси малалла, вӗҫӗ те курӑнмасть. Халӗ пирӗн чӑвашсенчен хамӑр чӗлхене лайӑх пӗлекен пӗр ҫын та ҫук темелле. Пухусенче калаҫатпӑр, шуйӑхатпӑр, пӗринчен пӗри маттуртарах калаҫасшӑн. Хӑшӗ хытӑрах кӑшкӑрнипе ҫынсен чӗрине хӑйсем май ҫавӑрасшӑн. Анчах чӗлхен хӑвачӗ кӑшкӑрнинче мар. Урӑххинче. Унӑн илемне пӗлес пулать. Ҫав пухусенче калаҫакансенчен, ахаль калаҫакансенчен те чӑваш чӗлхин илемне пӗлсе калаҫакансем пирӗн ҫук Тен, мана калӗҫ, халӗ илемлӗх ҫинчен шухӑшлас вӑхӑт мар, тумалли вӑхӑт, тейӗҫ. Кӑна та эпӗ пит лайӑх пӗлетӗп. Пирӗн калаҫакансем чӑваш чӗлхин илемне пӗлмеҫҫӗ тесе малашне пирӗн ун ҫинчен шухӑшлама питех кирлине систерсе анчах калатӑп. Ҫакна эпӗ малашне тенӗрен, ун ҫинчен шухӑшлама вӑхӑт ҫитмен-ха теме юрамасть. Эпӗ кун ҫинчен: пирӗн чӑваш вӗреннӗ ҫыннисен хамӑр чӗлхе ҫинчен тӗплесе шухӑшласса халех ҫитнӗ, тетӗп. Ҫитӗ ӗнтӗ халиччен хамӑр чӗлхене ним вырӑнне те хуманни. Нумай "чӑваш  чӗлхи" сысма кайма анчах" теҫҫӗ (ҫак сӑмаха кунта ҫырнӑшӑн мана ан айӑплӑр - ку халӑх сӑмахӗ). Ҫакна вӗренмен чӑвашсем калаҫҫӗ тейӗр, анчах чӑваш чӗлхине хурлас тӗлӗшӗнчен чӑвашӑн вӗреннӗ ҫыннисем те каях юлмастчӗҫ, халӗ те юлмаҫҫӗ пулмалла. Хисеплемесен кирек мӗнле лайӑх япала та нумая пымасть! Лайӑх тумтире упрамасӑр: хӑнана кайнӑ чух та, кил хушшинче те, ӗҫре те тӑхӑнсан, вӑл часах ҫӗтӗлсе пӗтет. Пирӗн чӑваш чӗлхи те чӑвашсем хӑйсем ӑна упраманнипе пӗтсе килчӗ. Пухусенче калаҫма тухакан аратӑрсен сӑмахӗсенчен ҫурри вырӑсла тухать. "Хыпара" статьясем ҫырса яраҫҫӗ, вӗсене "Хыпар" ҫине ҫапиччен тӳрлетсе шалт асапланса пӗтес пулать. Ҫыракансем пӗр майлӑрах ҫырсан та юрӗччӗ, анчах кашни хӑйсем патӗнче мӗнле калаҫаҫҫӗ, ҫапла ҫырма хытланаҫҫӗ (хӑтланаҫҫӗ). Ҫавӑнпа пушшех тӳрлетме йӑвӑр тивет.

Ҫакна эпӗ тӳрлетме йӑвӑрришӗн анчах каламастӑп, пуринчен ытла ҫаксене курнипе манӑн чун чӑваш чӗлхине пӗлекенсем ҫук, тесе хуйхӑрать. Малашне те пирӗн ҫаплах пулсан, пирӗн чӑваш чӗлхи лайӑхланмӗ, тата начарланӗ, тесе шухӑшлатӑп эпӗ. Ҫапла ан пултӑрччӗ тесен пирӗн мӗн тумалла-ши? Чӑваш чӗлхине вӗренме частарах тӑрӑшмалла. Лайӑх

чĕлхепе çырнă чăвашла кĕнекесене вулама тăрăшас пулать, чăвашла грамматика вĕренмелле. Пуринчен ытла чăвашла вуламалла. Чăваш чĕлхине пĕлес тесен грамматика вĕреннипе чăвашла вулани те çитеймест. Тата мĕн кирлĕ-ши? Чăваш чĕлхи мĕнлине пĕлме тăрăшас пулать, унăн илемне чухлас пулать. Çапла хамăр чĕлхене хисеплеме тытăнсан тин эпир чăваш чĕлхи лайăхланма пуçланине курăпăр: ун чухне чăваш чĕлхинчен тĕрлĕ ют халăхсен сăмахĕсем тухса кайма тăрăшĕç. Юлашкинчен, чăваш чĕлхине лайăхлантарас тесен, пирĕн чăвашла шухăшлама хăнăхас пулать. Халиччен эпир вырăсла шухăшлама вĕреннĕ, çавăнпа та калаçма тапрансан пирĕн çурри чăвашла, çурри вырăсла тухать. Мана, тен, чăвашла шухăшлама чăваш чĕлхинче сăмахсем çитмеççĕ, тейĕç. Вĕсем çитеççĕ, анчах пиртен кам та пулсан, çапла калакансенчен, хăйне хăй чăвашла шухăшлама пурнăçĕнче пĕрре те пулсан хистенĕ-ши? Хистемен пулсан, айăп вара чăваш сăмахĕсем шухăшлама çитменнинче мар, хăйсене хăйсем чăвашла шухăшлама хистеменнинче айăп, урăхла каласан, хăйсем айăплă, хăйсем шухăшлас тĕлĕшрен наян. Пирĕн чăваш вĕреннисенчен чăвашла шухăшлакансем пур-ши? Эпĕ, чăвашла шухăшлакан пĕр-ик-виç çын пулмасан, пĕр çын та çук тейĕттĕм, анчах вĕсем те пысăк вĕреннĕ çынсемех мар. Пысăк вĕреннисенчен чăвашла шухăшлакансем час çуралĕç-ши? Хăçан пирĕн чăвашсенчен хамăрăн поэтсем, художниксем, архитекторсем, чăваш музыканчĕсем çуралĕç, - çавсем пире чăваш халăхĕн чунне, унăн иртнĕ, хальхи, малашне пулас пурнăçне пĕр картинка пек кăтартса парĕç - çавăн чухне пирĕн чăваш вĕреннĕ çыннисем чăвашла шухăшлама тытăнĕç. Ун чухне вара пирĕн чăваш чĕлхи те лайăхланса тĕнчери чи пуян, илемлĕ чĕлхесемпе танлашĕ. Ун чухне пирĕн чăваш чĕлхинчен тĕлĕнмелли питĕ нумай пулĕ! Иисус Христос каланă чăнлăх: "кайрисем мала тухĕç, малтисем кая юлĕç" тени вырăнлă пулнине курăпăр, е эпир кураймасан, пирĕн ачасем курĕç. Халĕ пирĕн, пĕр ӳлĕме хурса тăмасăр, эпĕ маларах каланисене часрах тума тăрăшас пулать. Вĕсене эпĕ юлашкинчен каллех калатăп:

1) Халех чăвашла грамматикăна вĕренме тăрăшмалла, 2) чăвашла кĕнекесем, хаçата пĕр сăмахне хăвармасăр тăнласа вуламалла, 3) чăваш чĕлхине хисеплеме, е юратма тытăнас пулать, унтан 4) чăвашла шухăшлама хăнăхас пулать.

Çаксене тусан эпир чăваш чĕлхине лайăхлантарма тин пуçлăпăр. Малашне чăвашсен пурнăçне чĕртес поэтсем валли çул хатĕрлесе хурăпăр. Хальхи вăхăт пирĕн ăраснах хатĕрлес вăхăт. Çакна кашни чăваш çынни ăшĕнче тытса тăрас пулать.

А. Милли.

Хыпар. 1917. Юпа уйăхĕн 4-мĕш кунĕ. 40 №.

# ЧĂВАШ ИСТОРИЙĔ

## *Умĕн сăмах*

"Чăваш кĕнекине ĕне ҫинĕ". Ҫак сăмахсене пире асаттесем хăйсен пăшăрханнă чĕрисенчен каласа хăварнă. Ҫакăнпа эпĕ чăваш кĕнеки пулнине, пулманнине, пулсан ăна кам ҫинине, вăл ăҫта кайса ҫухалнине, ĕлĕкавал чăваш халăхĕ пулнине, пулманнине, пулнă пулсан епле пурăннине кĕскен кăна каласа парас терĕм. Ҫакна ҫырнă чух мана пуринчен ытла Н.И. Ашмарин кĕнеки "Болгары и чуваши" нумай пулăшрĕ, унтан эп кунта ытти нумай кĕнекесенчен кирлисене илкелерĕм, ватăсенчен илтнисене те ҫыркаларăм. Тĕлĕ-тĕлĕпе пĕлеймесĕр тĕрĕс мар ҫырни тупăнас пулсан, тăрăшнине курса, каҫарăр мана.

## *Чăвашăн авалхи ячĕ*

Чăваш тенĕ сăмах чи малтан 16-мĕш ĕмĕрĕн пуҫламăшĕнче историе кĕнĕ. Унччен чăваш тенине никам та илтмен, чăваш ятлă халăх тĕнчере пуррине никам та пĕлмен.

Ăҫта пулнă-ши авал чăваш халăхĕ? Чăнласах вăл 16-мĕш ҫĕр ҫул пуҫланнă чух пĕлĕт ҫинчен персе аннă-ши?

Апла пулсан, вăл персе аннине куракансем пулĕччĕҫ! Ҫав тери тĕлĕнмелли ĕҫ ҫинчен мĕнпур тĕнче калаҫĕччĕ! Анчах тĕнче ун ҫинчен калаҫман, ăна кураканни никам та пулман.

Е чăваш халăхĕ ҫĕр айĕнчен сиксе тухнă-ши?

Апла каласан та, мĕльюн ҫын ҫĕр айĕнчен тухмалăх шăтас пулать. Анчах та ун пек шăтăк тĕнчере ҫук. Е чăваш халăхĕ тутарсемпе Ҫĕпĕртен ерсе килмен–и?

Апла пулсан, истори ҫыракансем (историксем) чăвашсем ҫинчен тутарсем килнĕ вăхăтрах асăнăччĕҫ. Тутарсем вырăс ҫĕрне XIII ҫĕрĕн пуҫламăшĕнче килнĕ, чăваш ячĕ XVI ҫĕр пуҫламăшĕнче тин сиксе тухать. Тата, апла пулсан, чăвашсене кунта киличчен вĕсем ăҫта пурăннине ҫырăччĕҫ. Вăл та ҫук.

Е чăвашсем пит вăйлă, чăтлăх вăрманта, сас-хура кăлармасăр, пурăнман-ши?

Апла та, авалтанпа чăтлăх вăрманра пурăннă халăх ҫĕр ĕҫлеме пĕлмен пулĕччĕ, анчах, чăваш пек, ҫĕр ĕҫне ăста халăх тĕнчере те сахал. Чăваш ватти ҫумăр пуласси, ҫил-тăвăл пуласси ҫинчен малтанах каласа пама пултарнă. Ҫакă вĕсем ĕмĕр тырă туса пурăннине пĕлтерет. Анчах тырă вăрманта, йывăҫ тăрринче ӳсмест, хирте, хура тăпра ҫинче ӳсет.

Ĕнтĕ чăвашсем пĕлĕт ҫинчен персе анманнине, ҫĕр айĕнчен те сиксе тухманнине, тутарсемпе те ерсе килменнине, вăрманта та ялан пытанса

пурӑнманнине пӗлтӗмӗр. Апла ӗнтӗ чӑваш халӑхӗ ӗмӗрех ҫак вырӑнта ларнӑ пулчӗ. Айтӑр малалла!

Тӗрлӗ халӑхсен чӗлхисене пӗлекенсем ак мӗн ҫинчен калаҫҫӗ: тӗрлӗ халӑхсен (нимӗҫсен, мадьярсен, Тӑнай шывӗ ҫинчи пӑлхарсен, вырӑссен) чӗлхисене авалтанпа пит нумай чӑваш сӑмахӗ кӗрсе юлнӑ теҫҫӗ: чӑваш чӗлхине те арапсемпе перссен сӑмахӗсем нумай кӗнӗ теҫҫӗ. Ҫакӑ, чӑвашсем, авалтанпа тӗрлӗ халӑхсен хушшинче, вӗсемпе калаҫса, ҫӳренине пӗлтерет. Анчах мӗнле ҫынсем тӗрлӗ халӑх хушшинче вӗсемпе калаҫса ҫӳреҫҫӗ? - Суту-илӳ тӑвакан ҫынсем. Ҫапла ӗнтӗ, авал чӑвашсем суту-илӳ тума пит ӑста халӑх пулнӑ. Вӗсем таҫти-таҫти халӑхсемпе, вырӑссемпе, нимӗҫсемпе, мадьярсемпе, арапсемпе, перссемпе суту-илӳ туса пурӑннӑ.

Анчах чӑваш ҫав тӗрлӗ, мӗн пур тӗнче пӗлсе тӑракан, чаплӑ, пуян халӑх пулнӑ пулсан, епле унӑн ячӗ историксен хӑлхине кӗмен-ши?

Атьӑр-ха, вулаканӑмӑрсем, истори кӗнекисен хушшине кӗрсе, тусан пухса, пулнине пӑхса, сӗтӗрӗнсе ҫӳрер!

Тӗнчере тӗрлӗ халӑх пур. Вӗсен пурин те авал ячӗсем урӑх пулнӑ. Вырӑссене авал "славян" тенӗ. Хӑйсене хӑйсем вӗсем "русский" теҫҫӗ. Хӑҫан "русский" теме пуҫланине никам та, тӗрлӗ юмах шухӑшласа кӑларнӑ пулсан та, чӑнласах пӗлмеҫ, мӗн калани юмаха тухса каять. Швед халӑхӗ хушшинчи Руҫ ӑрӑвне чӗнни те, авалхи ӑстарах историксем калана тӑрӑх, юмах.

Хрантсуссене авал "галл" тенӗ.

Нимӗҫсем хӑйсене "детуш" теҫҫӗ, хрантсуссем вӗсене "аллеман" теҫҫӗ. Грексем хӑйсене "еллин" теҫҫӗ, авал та вӗсене ҫаплах чӗннӗ.

Тутарсене авал "монгол" тенӗ, тутар тенине никам та пӗлмен.

Турӑ ҫырӑвӗнче пӗр "ешпет" халӑхӗ ҫинчен ҫырни пур. Ҫав ешпетсен йӑхӗсене халь "копт", "феллах" теҫҫӗ. Вӗсем ешпетсен йӑхӗ иккенне пӗлни те нумай пулмасть. Египетсем пит вӗреннӗ, пуян, ӑста халӑх пулнӑ, ҫыру ҫырмаллине чи малтан ҫавсем шухӑшласа кӑларнӑ, - вӗсен йӑхӗсем, коптпа феллахсем, пит начар халӑх, чӑваш пек, хӑйсен ӗлӗкхи ҫырӑвӗсене манса ют халӑхӑн сас паллисемпе ҫырма вӗренеҫҫӗ.

Тата авал пӗр "Ассирия" халӑхӗ пулнӑ. Ассирсен хули "Ниневия" пит пысӑк пулнӑ. Иона пророк кӗнеки ҫинче калана тӑрӑх, ҫав хула витӗр тухас тесен, виҫӗ кун пӗр канмасӑр пымалла пулнӑ. Ҫав тери пысӑк хула ӑҫта-ши вӑл? - Ӑна ют халӑхсем пырса ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Ҫав тери аслӑ хула тума пултарнӑ, ӑста, вӑйлӑ халӑх, ӑҫта-ши вӑл? Халь апла, ҫав халӑхӑн хулисем урлӑ каҫма виҫ уйӑх пымалла мар-ши? - Ҫук, вуланакӑм. Ҫав халӑха халь "курд" теҫҫӗ. Курд халӑхӗн халӗ виҫ уйӑха пыма мар, виҫ сехет пымалӑх хули те ҫук. Вӗсем халӗ ҫыру та пӗлмеҫҫӗ, хӑй-

сен ашшёсем мĕнле чаплă пулни - вĕсен шухăшĕнче те çук. Хулисем мар, ялĕсем пур-и? Вĕсем халь чăтăр карса пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çÿреççĕ. Тата çакăн пеккине нумай калăттăм та, калани те çитĕ.

Кунта эпир мĕн пĕлтĕмĕр. Халăхсем, хăйсене хăйсем, пĕр тĕрлĕ калаççĕ, ытти халăхсем вĕсенех урăх тĕрлĕ каласа чĕнеççĕ. Нумай халăхăн ячĕсем авал хальхинчен урăхла пулнă. Авал хăйĕн ячĕ мĕнле пулнине пĕрре те пĕлмен халăх та пур. Нумай çĕрте, авалхи чаплă халăхсен начар йăхĕсем пурăнакан çĕрсенче, - халĕ вĕреннĕ çынсене кăна çак халăхсен авалхи чапне пĕлтерсе, авалхи чаплă хуласен ишĕлнĕ чулĕсем кăна, купаланса, ту пек курăнса лараççĕ. Çак тăвсем ăçтан пулнине, чаплă халăхин йăхĕсем тавçăрса та илеймеççĕ.

Çакăн пекех, тăванăм, чăваш халăхин те, авал ячĕ урăх пулман-ши? Хăйне хăй чăваш авалтанпа чăваш тесе чĕннĕ пулсан та истори çыракансем ăна урăх ят парса çырман-ши? Чăваш пек авал пит вăйлă суту-илÿ туса пурăннă халăх, епле вăл историе кĕмесĕр юлнă-ши? Апла, чăваш, хăйĕн авалхи чапне маннипе кăна, хăйне хăй начара хурса, хăй чăваш пулнинчен, хăйĕн ятĕнчен ахалех кăна вăтанса пурăнмасть-ши?

Çакăн çинчен, тăванăм, нумай вĕреннĕ, ăслă çынсем шухăшласа ларнă. Нумай, хăйсен пуçĕсене хăйсем çавăрса, ыраттарнă. Анчах никам та çакна тĕплĕ пĕлеймен. Пĕр Н.И.Ашмарин ятлă вырăс чăваш чĕлхине тĕрлĕ енчен, сăмахсерен сăмахне тĕплесе вĕреннĕскер, пĕрре чăвашсен хушшинче авалхи çăва чулĕ тупнă. Çав чул çинчи арап саспаллисемпе çырнă сăмахсене вăл вулама тытăннă та - тĕлĕнсех ÿкнĕ. Саспаллийĕсем арапла, сăмахĕсем - чăвашла! Çав чул çинчех хăçан çакна çырнин çулĕ пулнă. Пит авалхи чул мĕн! Чăваш ятне никам та пĕлмен вăхăтриех! Апла ун чухне те чăвашсем пулнă-ши? тет. Тĕлĕнсе ăнран каять! Апла, чăвашăн ун чухне ячĕ урăх пулнă пуль, тет. Чул çинче кăтартнă вăхăт кунта кам пурăннă-ши? тет. Хăй историе пăха-пăха шырама тытăнать. Ак ĕнет, чул çинче кăтартнă вăхăтра, чула тупнă çăва тĕлĕнче, истори каланă тăрăх, пăлхар халăхĕ пурăннă пулса тăрать. Чулĕ çинче çырăннă, кунта çынсен ячĕсене вулать - ун пек ятсем, çĕв-чăваш хушшинче халиччен те нумай.

Тавçăрса илĕр ĕнтĕ. Авал çак чăвашсем пурăнакан вырăнсенче пăлхар халăхĕ пурăннă. Çав пăлхар çыннисен ячĕсем - хальхи çĕв чăваш ячĕсемех. Калаçма та вĕсем чăвашла калаçнă. Анчах мĕншĕн çав пăлхар çыннисем арап саспаллисемпе, хăш чух вара арап сăмахĕсемпе те çырнă-ши? Пăлхарсем çинчен историре нумай çырнă. Вĕсем авал пуринчен ытла арапсемпе суту-илÿ тунă тет, вĕсен хушшинче арапла калаçакансем те нумай пулнă тет. Тата çак пăлхарсем ытти халăхсемпе те, мĕнпур тĕнчепе суту-илÿ тунă тет. Суту-илÿ тăвас йĕркепе, пăлхар халăхĕ пек, чаплă халăх сахал пулнă тет.

Ан тав-ха, çапла вăйлă суту-илӳ тунă тесе, авалхи чăвашсем çинчен каламарăмăр-ха эпир? Тĕлĕнсех каймалла! Ере, халĕ чăваш тесе пурăнакан халăха авал пăлхар тесе каламан-ши? Çук пуль! Истори çинче вĕсем çинче иккĕшин çинчен те пĕр вăхăтра çырнă пулсан, вĕсем пĕр чĕлхепе калаçнă пулсан та, паллă - вĕсем пĕр халăх мар. Анчах... историçин çинче XV çĕрĕн çуррине çитиччен пăлхарсем çинчен ялан çырнă, чăвашăн ятне те асăнман. XVI çĕр пуçланнăранпа чăваш çинчен ялан çырнă, пăлхарĕ çинчен пĕр сăмах та çук. Пăлхарĕ сасартăк пĕтрĕ те, ун вырăнне, сасартăках, чăвашĕ сиксе тухса пырать, малашне те пĕтме Турă ан çыртăр! Ĕнтĕ, тăванăм, çитĕ, калаçни. Чăвашпа пăлхар пĕр халăх иккене пăхмасăр та паллă. Авал çав халăха истори çыракансем “пăлхар” тенĕ, халĕ çав халăхах “чăваш” теççĕ. Пăлхарсем хăйсене мĕнле çĕннине малалла калап, анчах халь те ик сăмах калам. Сармăçсен, тĕлĕ-тĕлĕпе, халиччеленех, Хусан тутарĕсене, пăлхартан тутара тухнăскерсене, “чăваш” тесе чĕнеççĕ. Çапла чĕнни вăл пăлхарсене “чăваш” тесе чĕнекенсем пулнине пĕлтерет.

Ĕнтĕ, тăванăм, хамăр халăхăмăрăн пурăнăçĕ çинчен çырам тесен, пирĕн,аслă аттемĕрсем пăлхар пулнă вăхăтранах пуçласа килес пулать. Анчах, истори каланă тăрăх, пăлхар халăхĕ вăл пĕр йышлă “гунн” халăхĕн хăрах юппи кăна пулнă.

Итлĕр ĕнтĕ! Хунсенченех пуçласа каям.

Хунсен историйĕ.

Христус çураличчен пин çул ĕлĕкрех Китайран çурçĕр еннеле пĕр “хун” ятлă халăх пурăннă. Христус çураличчен III-мĕш çĕрĕн çурринче çак халăх пит вăйланнă та куршĕри халăхсене хăйне пăхăнтарса, пит ăслăлана пуçланă. Çак халăх Китайсене те пит нумай тертлентернĕ. Виçĕ çĕр çул хунсем пур кӳршĕри халăхсене те хăратса пурăннă, хăш-хăш халăхĕсем, çак хунсен мăшкăлне чăтаймасăр, урăх çĕрелле те куçкаласа кайкаланă. Кайран, хунсен хăйсен хушшинче килĕшу пулманнипе, хунсем хăйсем те начарланнă. Вара вĕсен кăнтăрлари юппи Китая парăннă. Кунтан вара китайĕсем, куршĕри халăхсемпе пĕрлешсе, çурçĕрти хунсем çине тăрăнса ӳкнĕ те, Христус çуралсан 93-мĕш çулта, вĕсене çĕнсе начарлатнă, ак çапла ятлă хуласем пулнă: Марха (Чикме уесĕнче чăваш ялĕ Сатра Марка пур), Арнас (Маматмăш уесĕнче Арнаш ятлă ят пур), Бассов (Пусă). Тата ку хуласенчен пуçне пысăк хула Аспаль е Еспел пулнă.

Вырăс историкĕсем тата ак çапла ятлă хуласем çинчен асăнаççĕ. Бряхимов (кăнах вырăссем тата “чаплă хула” теççĕ), Керменчĕк, Жукотин, Тухчин, Ошел. Пĕр вĕреннĕ çын Кирелский сали çывăхĕнче тесе кăтартать.

Кунтан пуçне кăнтăрлара тата тепĕр аслă хула пулнă (ятне ас туса

илейместĕп, çак хула çинчен çырнă кĕнеке халь аллăмра çук). Çак хула Пăлхарпа Сувартан та пысăк пулнă. Çак хулари çынсем малтан еврей тĕнĕпе пурăннă, кайран мăсăльмана тухнă.

Пăлхар тĕнĕ.

Пăлхарсем малтан кĕлеткеçĕсем, шаманистсем пулнă. Вĕсен хушшинче вĕсемпе пĕр чĕлхепе калаçнă хусар кӳршисенчен кура, еврей тĕнне тытнă çынсем те пулнă. Тата, мăсăльмансемпе суту-илӳ туса пурăннăран, мăсăльман тĕнне тытакансем те авалтанах пулнă. Малтан çав пăлхар-мăсăльмансем хуçасем (сутакансем) пулнă. Кайран, çав хуçасенчен илтсе, мăсăльман тĕнĕ çинчен тĕне вĕрентекенсене кӳртернĕ те, хăй те мăсăльман тĕнне кĕнĕ. Ĕмпи хыçĕнчен ун çывăхĕнчи таранĕсем те, турханĕсем те çав тĕне йышăна пуçланă. Çакăнтан каярах пăлхарсем мăсăльман шутланаççĕ. Анчах пур халăхĕ те чăнласах ку тĕне тытманни паллах. Мăсăльман тĕнĕ пăлхар çĕрĕнче сарăлни çинчен çыраканни, тӳрех, "пăлхарсем пурте мăсăльман" тесе калама хăяймасть, хули-хулипе, çынни-çыннипе кăна "мăсăльмансем ак çаксем" тесе асăнать. Тата вăлах хушшинчен кĕлеткеçĕсем çинчен те каласа хурать.

Çапах та, тĕнне пурте кĕмен пулсан та, тĕнĕ çинчен пурте пĕлнĕ пулмалла. Ĕмпине юрасшăн, çиелтен кăна мăсăльман тĕнне тытнисем те пулнă пулмалла. Халичченех чăвашсем тĕн япалисене мăсăльманла асăнаççĕ Çак мăсăльманла сăмахсем ак çаксем: Пихампар, Пирĕшти, Эсрелĕ, Кĕпе. Çакăн пек сăмахсем тата та нумай.

Христус тĕнне тытакансем пăлхарта пит сахал пулнă. Пуринчен ытла çав Христус çыннисем ют çĕртен килнĕ хуçасем пулнă. Пăлхарти таса Авраамие те вырăс хуçи пулнă теççĕ. Анчах çапах та çав Христус тĕнне тытакан çынсене валли Пăлхар хулинче чиркӳ те пулнă.

Çапла авалтанпа Пăлхар çĕрĕнче тĕрлĕ тĕн нумай пулнăран, тĕрлĕ тĕнлĕ çыннисем пĕрне пĕри ытлашши хĕсĕрлемен пулмалла.

Пăлхарсемпе вырăссем.

969 çулта чăваш чĕлхипе калаçнă халăхсен пурин те тăшманĕ, ĕмĕрне Танай пăлхарĕсемпе, хусарсемпе, пĕчченехсемпе вăрçса ирттернĕскер, вырăс князĕ Святослав, Атăл пăлхарĕсем çине тăрăнса ӳкнĕ. Вăл пăлхарсен вырăс енчи хулисене йăлтах çĕмĕрсе тухнă, çыннисене салатса янă. Çак килсĕр-çуртсăр юлнă пăлхарсем нумайăшĕ 970 çулта, авал хăйсемпе юнашар пурăннă мадьярсем патне, Венгрияна кайнă. Мадьярĕсем çак нушаран тарса телей шыраса çӳрекен пăлхарсене пит аван йышăннă. Вĕсем авал пăлхарсемпе пĕрле пурăннине ун чухне манман пулмалла. "Пилерсем" килчĕç тесе, йышăнса, вĕсене пурăнма Танай шывĕн сулахай енне çĕр уйăрса панă. Çакăнта вара пилерсем хăйсене валли "Пешт" ятлă хула тунă. Çак пилерсем суту-илӳ тума пит маçтăр, пит ăста пулнă. Ма-

дьяр патшалăхĕнче хыснана пăхса тытса тăракансем пурте пилер çынни-сем пулнă. Вĕсем XIV-мĕш çĕрĕ çитичченех вăл харлă калаçса пурăннă. Унтан вара майпе мадьяра тухса кайнă. Пирĕн çак тăвансем пурăнакан хула халĕ мадьярсен пуç-хули, ăна Буда-Пешт теççĕ.

Тата хăшĕ хусарсене Святослав çĕмĕрсен хусарти килсĕр-çуртсăр юлнă çынсемпе пĕрлешсе, пĕчченех халăхĕ пулнă пулмалла. Çак мĕскĕн пĕчче-нехсем, хăйсене çемьесĕр, пĕр пĕччен хăварнăшăн Святослава епле та-вăрни çинчен элĕ кунта çырнăччĕ.

994 çулта пăлхарсемпе Владимир князь вăрçнă. Çак вырăс княçĕ пĕрре тĕнне улăштарма шухăш тытнă. Пăлхарсем, кăна сиссен, хăйсен măсăль-ман тĕнне мухтама, Владимир патне çын янă. Çыннисем Владимире ак çапла каланă: "Эс пит ăслă князь, анчах чăн тĕне пĕлместĕн, пирĕн тĕне кĕр те Махмите пуççап", тенĕ.

Владимир: "Сирĕн тĕнĕр мĕнле?" тесе ыйтнă.

Пăлхарсем каланă: "Эпир пĕр Турра ĕненетпĕр. Махмит пире ӳте кас-ма хушать, сысна ашне çиме, ерех ĕçме хушмасть. Вилсен эпир хĕр-арăмсемпе ыр курса пурăнăпăр. Пире кашнине махмит çитмĕл ытарайми илемлĕ хĕр парĕ. Чи илемлине суйласа илсен пурин илемне те çавăн çине куçарĕ, вăл вара пирĕн арăм пулĕ. Ку тĕнчере те хĕр-арăмсемпе епле вылясан та юрать. Ку тĕнчере чухăн çын унта та чухăн пулĕ, ку тĕнчере пуянни унта та пуян пулĕ,"- тенĕ.

Историк калать: "Вĕсем, çакăн пек, юрăхсăр сăмахсем тата та нумай каланă та çырма намăс," тет.

Владимир çак сăмахсене пит юратса итлерĕ тет. Вăл хăй те хĕр арăмсем-пе выляма юратнă тет, анчах ӳте касмаллипе сысна ашне çимелле марри ун кăмăлне ытлашшиех каймарĕ тет. Эрех ĕçмелле мар тени вара пĕрре те юрамарĕ тет. Владимир кăна хирĕç - "Ĕçкĕ - вырăссен хавасĕ, ĕçкĕсĕр пу-рăнма пултарассăмăр çук" тесе каларĕ тет те, урăх ним те калаçмарĕ тет.

1006 çулта Владимирпе пăлхарсем пĕр-пĕринпе суту-илӳ тума калаç-са килĕшнĕ.

1024çулта Суздаль хулипе çĕрĕнче пит вăйлă пăлхавпа выçлăх пул-нă. Вара вырăссем Атăлпа Пăлхар хулине кайса тулă илнĕ те выçă ви-лесрен хăтăлнă.

1088 çулта Атăлпа Ока шывĕ çинче таварпа çӳренĕ пăлхар хуçисене çаратса вĕлернĕшĕн пăлхарсем вырăссенчен Мурам хулине туртса илнĕ.

1107 çулта пăлхар çарĕ Суздаль хулине хупăрласа илсе ялти халăха нумай вĕлернĕ, анчах Суздальри вырăссем тухса пăлхарĕсене хăйсене вĕлерсе пĕтернĕ.

1117 çулта половецсем пăлхарсем патне пынă, анчах пăлхар ĕмпийĕ вĕсене наркăмăш ĕçме кăларса парса вĕлернĕ.

Юрий Долгорукий Суздаль ҫӗрӗнче ҫӗнӗ хуласем тунӑ чух ҫав хуласене пӑлхар ҫыннисем пырса ларнӑ. Пӑлхарсемех Суздаль ҫӗрӗнче маҫтӑр пулса та ҫӳренӗ. Вӗсем вырӑссене чиркӳ те нумай лартса панӑ. Юрий ывӑлӗ Андрей Боголюбскийӗн арӑмӗ те пӑлхар хӗрӗ пулнӑ. Ун чухнех чӑваш хӗрӗсем майрасенчен илемлӗрех пулнӑ мӗн. Вырӑс патши ытараймасӑр майрисене пӑрахса чӑваш хӗрне илнӗ мӗн.

1120 ҫулта Юрий пӑлхарсен ҫӗрне ҫӗмӗрсе кӗрсе, вӗсен ҫуррине ҫӗнтерсе, нумайӑшне тыткӑна илнӗ.

Анчах 1129 ҫулта мӗн пур вырӑс ҫӗрӗнче пысӑк выҫлӑх пулнӑ. Вара пӑлхарсем Атӑлпа Ока тӑрӑх мӗн пур вырӑс хулисене тырӑ турттарса, вырӑссене вилӗмрен хӑтарнӑ. Пӑлхарсен ӗмпийӗ те хӑйне сиен тунине манса, Юрие валли хӑй темӗн чухлӗ тырӑ янӑ. Юрий ку тырра илсен питӗ хавасланнӑ. Пӑлхарсен ӗмпине валли парнене тӗрлӗ лайӑх япаласем, тала, ылтанла, кӗмӗллӗ ука (парча), пулӑ шӑмми янӑ.

1164 ҫулта Андрей Боголюбский пӑлхар ҫаррине пит хытӑ ҫапӑҫса амантнӑ. Ун чух пӑлхарсен ӗмпийӗ те аран тарса хӑтӑлнӑ. Вара вырӑссем, пӑлхар ҫӗрне кӗрсе Бряхимов хулине тата урӑх та пӑлхарсен нумай хулисене ҫунтарса янӑ. Ҫак савӑнӑҫлӑ ӗҫе асӑнса эпир, чӑвашсем, ҫурла уйӑхӗн 1-мӗш кунӗнче ҫулсерен праҫник тӑватпӑр.

Кунпа пӑлхар хӗрӗ упӑшкин чунӗ тулман, вӑл 1172 ҫулта пӑлхарсене ҫӗмӗрме хӑйӗн ывӑлне, Мстислава, янӑ, анчах Мстислава ҫӗнӗ праҫник шухӑшласа кӑларма Турӑ ҫырман, вӑл хӑй те хӑйӗн куккӑшӗсенчен аран кӑна тарса хӑтӑлнӑ. Ҫакӑнтан кайран вара пӑлхарсем хӑйсем вырӑс ҫӗрне кӗрсе Рязаньпе Мурӑм ҫӗрӗсене ҫӗмӗрсе тухнӑ.

1184 ҫулта аслӑ князь Всеволод Юрьевич пӑлхарсене тавӑрма кайнӑ. Кунпа пӗрле, тупӑш пулассине сиссе, тӗрлӗ ытти вырӑс княҫӗсем, половец халӑхӗн ҫарри кайнӑ. Вара ҫак хӑрушӑ ҫар Кӗмӗллӗ Пӑлхар ҫӗрне ҫӗмӗрсе кӗрсе Аслӑ Хулана (Пӳлере) хупӑрласа илнӗ. Анчах пӑлхарӗсем те парӑнман. Вӗсене ҫакӑнта Всеволодӑн шӑллӗне Изяслава амантса вӗлернӗ. Кӑна курсан Всеволод хӑвӑртрах пӑлхарсемпе килӗшнӗ те, килне таврӑннӑ.

Анчах вӑл килӗшсе нумай тӑман, 1186 ҫулта, 1205 ҫулсенче тата икӗ хут пӑлхарсене ҫӗмӗрме ҫар янӑ.

1218 ҫулта пӑлхарсем вырӑссенчен Устюг хулине илнӗ. Кӑна хирӗҫ тавӑрма Всеволод ывӑлӗ Юрий хӑйӗн ҫарне янӑ. Вара вырӑссем 1220 ҫулта пӑлхарсен Ошел хулине ҫунтарса янӑ.

Кунтан вара вырӑссемпе пӑлхарсем нумайччен килӗштерсе пурӑннӑ.

1229 ҫулта Аслӑ Хулара пӑлхарсем мӑсӑльман тӗнне хурланӑшӑн пӗр Авраамий ятлӑ пуян хуҫана асаплантарса вӗлернӗ

Вырӑссемпе пӑлхарсем ҫапла, ҫапӑҫкаласа та, туслашкаласа та пу-

рӑннӑ. Малашне мӗн пулассине нихӑшӗ те пӗлмен, пуҫӗ ҫинче мӗн пурри вӗсене куҫне курӑнман.

(Малалли тата пулать)

**Турхан Энтри**
**Хыпар. 1917. Юпа уйӑхӗн 23-мӗш кунӗ. 45 №.**

## АЧЧА ПРИХОЧӖ ҪИНЧЕН
**/Ҫӗрпӳ уесӗ/**

Эпӗ салтакран курма таврӑнтӑм. Ҫак вӑхӑтра чӑвашсен усӑсӑр йӗркисене курса чун темӗн чухлӗ хурланать. Мӗншӗн ку пирӗн тӑван чӑвашсем ӑса кӗме шутламаҫҫӗ-ши? Шутласа пӑхсан, ҫак айӑплӑ ӗҫсем ӗлӗкхи йӗркесене пӑрахас килменнипе пулса тӑраҫҫӗ. Самана йывӑрланса ҫитнипе пурте тараҫҫӗ, анчах ӑна ҫӑмӑллатасси ҫинчен шутлакан сахал.

Ҫав халӗ тӗрлӗ тырӑ хакланса кайрӗ. Комитетсем тырра урӑх уеса сутмалла мар турӗҫ, анчах пирӗн чӑвашсем кӑна хӑлхана чикмеҫҫӗ. Халь те вӑрттӑн тырӑ сутаҫҫӗ. Пирӗн ялта пӗр ӗлӗкхи йӑлапа тӑракан пуйтан чӑваш пур, вӑл халӗ эпӗ килнӗренпе пилӗк пин пӑт тырӑ вӑрттӑн кас-кас Етӗрне уйӑсне кайса ҫитрӗ. Ӗлӗк вӑл ҫын управа епле халӑха питӗ аван лартма вӗреннӗскер. Пуясса та управпа пуйнӑ. Уншӑн пулсан ҫар халӑхӗ выҫса вилсен те нимӗн те тӑмасть, хӑйсен пуйса юлни пултӑр. Пирӗн ялти халӑх ҫакна пурте пӗлсе тӑрать, анчах никам та ӑна шарламасть. Пирӗн ялти вӗрентекен валли Хусанти "Хыпара" илет, ҫав хаҫата пӗрмаях халӑха вуласа кӑтартать. Ҫав хаҫат ҫинче тӗрлӗ ырӑ хыпарсем пур. "Ӗҫме пӑрахӑр, чӑвашсем, вӗренме тӑрӑшӑр, халӗ ӗҫмелли вӑхӑт мар, макӑрмалли вӑхӑт". Анчах пирӗн чӑвашсем ку сӑмахсене хӑлхана чикмеҫҫӗ. Хаклӑ тырӑ сӑра туса ӗҫсе пӗтереҫҫӗ. Халӗ салатӑн пӑчӗ ҫичӗ тенкӗ. Сутӑн илсе тӑвакансем те нумай. Шартин Ваҫлин ҫиме тахҫанах пӗтнӗ, хӑмлине, салатне ҫаплипех сутӑн илет; пирӗн ялта пурӑнакан ҫын та ҫулталӑкне вӑтӑр пӑтран кая салат пӗтереймест; пуян ҫынсем ҫӗршер пӑт ытларах пӗтереҫҫӗ. Ҫапла эпир, ҫак хӑрушӑ вӑхӑтра та, ҫар валли сутас тырра ҫӗртсе ӗҫсе яратпӑр. Яла управ сахӑрӗ килет. Пурте сахӑр илме тӑрӑшаҫҫӗ. Никамӑн та сахӑр усса каймасть, пурте кӑрчама (керчеме) туса ӗҫсе яраҫҫӗ. Пирӗн хушӑра ӗлӗкрен чей ӗҫме вӗреннисем те пур, вӗсене ҫук вӑхӑтра пӗр керепенке сахӑр питӗ хаклӑ тӑрать, анчах вӗсене хӗрхенсе пӗр катӑк та ытлашши памаҫҫӗ, пӗтӗмпех е керчеме тума, е сутма илеҫҫӗ. Пирӗн ялти вӗрентекен управ сахӑрӗ килсен, халӑх ҫине тухса тархасласа: пӗр вунӑ керепенке мана тархасшӑн сахӑр парӑр-ха тесе ыйтрӗ; эпӗ сӑра та ӗҫместӗп, сахӑрсӑр керенкине тенке ҫурӑ парса

илсе пурӑнатӑп терӗ; ӑна никам та хӑлхана чикмерӗ. Халиччен сахӑрсӑр пурӑнаканнисем те пурте валеҫсе илчӗҫ те е кӗрчеме туса, е сутса пӗтерчӗҫ. "Ҫапла сахӑр ҫук вӑхӑтра ма эсир кӑрчама туса сахӑра пӗтеретӗр" тесен, "паташкасем ма тӑваҫҫӗ тата" теҫҫӗ. Ҫак сӑмахсене илтсен Аччари паташкасене чулпа персе вӗлерес килет. Эрех пур чух, трактиртен тухма пӗлмесчӗҫ, халӗ халӑха хӑйсем кӑрчама тума вӗрентеҫҫӗ. Ӗлӗк пирӗн ерех ӗҫекен ҫынна "Эрех хурчӗ" тетчӗҫ, халӗ кунсене "хӑмла хурчӗ" тесе калас пулать. Вӗсем пӗр кун та урӑ пурӑнмаҫҫӗ, чиркӗве те ӳсӗрпех кӗреҫҫӗ. Вӗсемшӗн вӑрҫӑ ҫук, пӗр хуйхӑ та ҫук. Ҫӗр ҫӗрӗпе ӗҫсе ӳсӗрӗлсе Микулай патша йӗвӗрле ашкӑнса, картла выляса, вӑхӑта ирттерсе Аччара пирӗн.

Петропавловский ялта пачӑшкӑ пур, пӗр суймасӑр калатӑп, вӑл вунӑ ҫул хушшинче вунӑ кун урӑ пулман. Акӑ пирӗн пачӑшкасен ырӑ ӗҫсем. Ҫапла Патшалӑха йывӑр килнӗ вӑхӑтра вӗсен халӑха питӗ ӑс парса: лайӑх, урӑ пурӑнма вӗрентес пулать, вӗсем апла тума мар, хӑйсем йӗркесӗр пурнӑҫпа пурӑнма вӗрентсе пурӑнаҫҫӗ. "Пупӗ мӗнле, прихучӗ те ҫапла" тенӗ сӑмахсем пур. Пирӗн Аччара ӗҫмен ҫын та ҫук. Ӗлӗкрен, авалтан вӑл Ачча ӳсӗр ҫынсен йӑви пулнӑ: халӗ те пӗрре те улшӑнмасть. Унта кашни килтипе пӗрех, ӗлӗк эрех сутти туса питӗ пуйса кайнисем те пур, тата ӗҫсе ҫарамас юлнисем те нумай, Мясников Микулайпа Листаркӑ шӑллӗ Ваҫка кашни пасарта Шӑмат кун, икшер сер тенкерен кая услам хӑвармаҫҫӗ. Яку Михали ӗҫсе ашшӗ ҫуртне салатрӗ. Анукка патӗнче ҫӗрӗҫӗрӗпе усӗр ҫынсем юрланӑ сасӑсем анчах илтӗнеҫҫӗ. Ҫав юрлакан ҫынсем хушшинче Аччари пачӑшкӑсем председатель пек варрине лараҫҫӗ. Ӗҫсен ҫынсем сӑтӑр тӑвакан ҫынсене: "Шалчи тулинччӗ" тетӗп. Ҫак сӑмаха "хӑҫан патшалӑхра ӗҫмелле мар саккун кӑларса" Ачча халӑхне ӗҫме пӑрахтарас-ши тесе калатӑп.

**Курма килнӗ салтак**
**"Хыпар", 20 №, 1917-ӗш ҫул,**
**утӑ уйӑхӗн 17-ӗш кунӗ.**

## ВӐРҪӐ

Пӗтӗм патшалӑхри ҫарсен пуҫлӑхӗ (главнокомандующий) Брусилов пулнӑран вара кермансӗннипе австрисен фронтӗнче пирӗн салтаксем тӑшмансем ҫине кайма хатӗрлене пуҫларӗҫ, хӑш-хӑш ҫӗрте тыткӑна илнисен пур ӗнтӗ.

Румынисеннипе Кавкасри фронтра нимӗскер те ҫук.

Анклисем Ипр патӗнче пит хӑватлӑ нимӗҫсене ҫӗнтернӗ. 6400 ҫын тыткӑна илнӗ, вӗсенчен 132-шӗ ахвитсер.

Италисем халӗ Австрирен Триест ятлӑ хулине илме хӑтланаҫҫӗ. Хрантсуссем патне Америк салтаксем килеҫҫӗ.

## ТЕЛЕГРАММĂСЕМ

Париш. Афинăран 30. у. Крексен королĕ Константин вырăнĕнчен тухнă. Хăй вырăнне Александр ятлă ывăлне кӳртнĕ. Король Константин Швейцарине каясшăн.

Рим... 30. у. Пирĕн салтаксем Монте артигаре ятлă тупа Ангелло ятлă ту хушшине илнĕ. 512 çын тыткăна илнĕ.

Лондон. 30. у. Ирхине Лапотерри патĕнче 7 тупă тыткăна илтĕмĕр.

## ПАТШАЛĂХРИ ХЫПАРСЕМ

Витебск. Велил уесĕн Крестовский вулăсĕнчи хресченсем 9000 тенкĕ укçа "ирĕк кивçĕнĕ" калла илмелле мар панă, 600 пăт тырă çарсемшĕн панă.

Саратов. Çак кунсенче Салтыковкара элеватор (тырă пуçтарса хуракан вырăн) çунса кайнă. Унта 169000 пăт тĕрлĕ тырă пулнă. Çав хисепрен 40000 пăт йăлтах çунса кайнă, 30000 пăт тĕтĕм шăршиллĕ пулнă, юлашки 100000 пăта яхăнни халех çиме те юрăхлă, пĕрре те пăсăлман. Саратов хулинче халь çăкăр çитми пула пуçларĕ. Нумай пеккарнĕсем хупăннă, çавăнпа нумайăшĕ çăкăрсăр юлчĕç.

Рязань. Скопин уесĕн Горловска ятлă ялти шкулне гимнази туса хурасшăн. Хăйсем уçăлмалли кимнаçишĕн 8000 тенкĕ укçа пуçтарса хунă.

Пирĕн ялти çынсен çырăва вĕренес килни çакăнтан пит паллă. Ĕлĕк ухмах Микулай вĕрентменнипе халăх тĕттĕмре пурăннă.

Хусан. 30. у. Ĕнер кăнтăрла Устьсере тытăннă пушар пит пысăк сиен тунă. Хуралтăсем пĕр-пĕринчен пит çывăх. Çил пит вăйлă пулнă пирки пушар питĕрех хăвăрт сарăлса çитнĕ.

Мĕн пурĕ ултă çур та тăват прахут обществан 7 лупасĕ çунса кайнă. 10 миллион ытла сиен пулнă. Нумай пусма- таварĕ, салтак тумтирĕ, çăм, пулă вутра çунса пĕтнĕ.

## *ВĂРÇĂ*

Хĕвел Анăçĕнчи фронт. Вырăнĕ-вырăнĕпе пăшалран та тупăран пĕрне - пĕри перкелеççĕ.

Румын фрончĕ. Пĕрне-пĕри çапкалаççĕ.

Кавкасри фронт. Пĕчĕккĕ салтак ушкăнсем тăшмансене хирĕç пулса çапăçкалаççĕ. 5-мĕш июньте. Калхитран кăнтăрлана хĕвел анăç енче пирĕн салтаксем тĕрĕксен хуралне хăваласа янă.

Огнотран çур çĕр енчен куртсем пирĕн çине кĕре пуçласан калле хăваласа янă.

## ХРАНТСУССЕМПЕ АНКЛИСЕН ФРОНЧĔ

Париж... 2.VI. Кун хуллен иртрĕ. Юртенинискран патĕнче анчах икĕ енчен тупăпа пĕрне - пĕри çапрĕç.

Гавр. 2.VI. Шильдербрюг, Стеенстрат тата Хедзас патĕнче пит вăйлă пумпăпа çапăçу пулчĕ.

Ĕнер пирĕн вĕçекенсем тăшмансен икĕ еропланне персе ӳкернĕ.

Париж. 3.VI. Кар патĕнче тăшмансен траншейне туртса илтĕмĕр, унта ларса юлнă нимĕçсене хăшне-хăшне тыткăна илнĕ, нумайăшне вĕлерсе пĕтернĕ.

Лондон. 3.VI. Пĕртак тупăран çапкаласан кайран тăшман Ипркомин ятлă каналран кăнтăрланахри пирĕн траншее илме хăтланчĕ. Анчах нумай çын пĕтнине кура кутăн чакрĕ.

Лондон. 3.VI. Ирхине эпир тăшмансем Бюллекуртан çурçĕрпе хĕвеланăç енчи аккупăн татăкне туртса илтĕмĕр. Тăшман пит сатур çапăçнипе те ним тăваймасăр кутăн чакмалла пулчĕ. Ĕнер пирĕн вĕçекенсем тăвата тăшман еропланĕ персе ӳкернĕ.

Минск. 3. VI. Нимĕçсен еропланĕ Новогрудск уесĕнче Роскош именинчи хĕрлĕ хĕрес (красный крест) палаткисем çинче помпă пăрахнă, икĕ чирлĕ салтака амантнă.

Минск. Тăшмансен виçĕ еропланĕ хула çине вĕçсе пынă, вĕсене тупăсенчен çапса хăваласа янă.

Питĕр. 3. VI. Патруль çак кунсенче салтак тумтир тăхăнса çӳрекен 2 нимĕç ахвитсерĕпе 2 салтак тытса хупнă.

Симферополь. 4. VI. 9 сăнĕсене улăштарнă (пит тăхăннă) усал шухăшлакан çынсем Бахчисарайран инçетре мар Марго ятлă çыннăн именине çаратнă. Вĕсем унта пурăнакан çынсене пăявпа çыхса пĕтернĕ, пĕр ĕçлекен çынна вĕлернĕ, теприне амантнă, унтан вара 1800 тенкĕ укçа илсе тарса пытаннă.

## ТЕЛЕФОНОГРАММА ÇИНЧЕН

Вăхăтлăха пулнă тӳре-шара хушнă тăрăх Хусанти пуштăпа телеграф кантурĕн начальникĕ кашни телефонпа каланă сăмахран пĕр пус хыснашăн памалла тесе халăха пĕлтерет.

## ХУСАН АКРУКРИН ÇАРСЕН ÇĔНĔ КОМАНДУЮЩИЙĔ /ПУÇЛĂХĔ/

Питĕр. 3. VI. Царско-сельски дворецĕн пулнă коменданчĕ подполковник Кровиченко Хусан акрукĕн пуçлăхĕ (командующий) пулать. Кровиченко Царицинри ĕçсене тирпее кўртмелле пулать.

## КĔПĔРНЕРИ ÇĔНĔ ÇЕМСКИ УПРАВĔ

98-мĕш Кĕпĕрнен çемски Пухăвĕ Çемски Управне çĕнĕ членсем суйларĕ. Вĕсем ак çаксем: Управ пуçĕ Ф.С.Лозовой; членсем: А.А.Колегаев, С.П.Покровский, Н.В.Никольский, С.П.Павлов, Н.М.Павлов, М.М.Хомяков, М.М.Вахитов, Х.Сайфутдинов, Герасимов, Н.П.Владимиров, В.Н.Вегер.

Вун пĕр члентан 6-шĕ вырăс, 3-шĕ чăваш, 2-шĕ тутар.

Чăвашсем ак çаксем: халăха çырăва вĕрентмелли ĕçпе, ĕç тăваканни (заведующий) Н.В.Никольский, тырă-пулă акмаллипе ĕç тăваканни С.П. Павлов, çут ĕçпе Герасимов (...)

**Хыпар. 1917. Çĕртме уйăхĕн 8-мĕш кунĕ. 10 №.**

Акулевский вулăсра Шупашкар уесĕнче кĕçнерни пасарĕнчен пĕр çур çухрăмра шыв арманĕ пур: ăна Михаил Васильевич Богданов тытса тăрать. Çав хуçа халăх выçăхтăр тесе арманне пĕвеленĕреннех пĕр чулĕпе хăй хĕлле пухса хунă тыррине авăртать, тепĕр чул авăрас шывĕпе çăм тапать; çавăн пирки халăх хăй тыррине авăртаймасăр çăкăрсăр выçăхать. Кулленех арманта хĕрĕх-аллă çын авăртма кĕтсе тăраççĕ, хăшĕ-хăшĕ антраса çитнисем хăй тырри пур çинчен çав хуçаран çăнăх илсе пысăк хак парса пăтăн çиеççĕ.

Тăвансем! Шухăшлăр-ха, вăл выçăхнине туймасăр хăй пысăк укçа пухасшăн хăтланать, унăн арманĕнче кашни кун хĕрĕх-аллă çын черете кĕтсе ларать, вăл хушăра çурри ытла салтак арăмĕсем, вĕсен килĕнче ачисем выçă лараççĕ, выльăхĕсем саланса çўреççĕ, вăл укçа пухасшăн çăнăх çути туса халăх мăйне хырса ларать.

**Авторне палăртман**
**Хыпар, 1917. Утă уйăхĕн 1-мĕш кунĕ. 16 №.**

## МАН ШУХĂШ

Пирĕн юлташ Н. Егоров "Хыпарăн" 16-мĕш нумĕрĕнче, патшалăха йĕркене кўртмелли пухăва суйламалли çинчен çырнă чухне ак мĕн калать: "Пире чăн кирли çĕр, çĕр ĕçлекен çынна суйлăр" тет.

Вăл ку сăмахсене çĕр ĕçлекен çын анчах çĕр ĕçне лайăхлатма тă-

рăшě, лайăх çырăва вěреннě çын çěр çинчен хуйхăртмě тесе калать-ши, е унăн вăрттăн шухăшě те пур-ши? Çавна эпě пěлейместěп, тепре каласан мана пěлме пит кирлех те мар. Эпě хам епле шухăшланине анчах каласа парас тетěп. Эпě Егоровпа килěштерме пултараймастăп. Вăл "Учредительное Собранине" çěр ěçлекен çынна суйлама хушать. Эпě хам та çěр ěçлекен çын, анчах Егоров пек "Учредительное Собранине" çěр ěçлекене кăна суйлăр тесе каласшăн мар. Эпě унта хам шухăшпа пит нумай вěреннě (университетра, академинче) çынсене ямалла тетěп, měншěн тесен нумай вěренни кирек měнле япалана та тěрлě енчен пăхма пултарать. Çěр ěçнех илер. Эсир пире кирлě тетпěр. Вăл çěр ěçне епле татса туса пăрахмаллине пит пěлсех те пěтерейместпěр. Хусан кěпěрнинче те çěр тěрлě çěрте тěрлěрен тăрать. Чистай, Спас уесěнче ята 4 теçеттинене яхăн лекет, Шупашкар, Етěрне, Çěрпӳ 4 ята пěр теçеттине лекекен вырăн та пур. Унтан тата Чистайпа Спас уесěнче улпут çěрě те питě нумай. Шупашкар, Етěрне, Çěрпӳ (Цивильск) уесěнче улпут çěрě те питě нумай. Шупашкар, Етěрне, Çěрпӳ (Цивильск) уесěнче ытлашши те сахал. Эпир çěр сахаллисем çěр нумай çěре куçмалла тиепěр. Çěр сахалли пире хирěç "Эпě хам çуралнă çěр-шывран каймастăп, хальччен пурăннине, кайран та пурăнăпха" тесен, эпир měн тăвăпăр?

Пěр ку кăна та мар тата урăх япаласем те нумай. Самар кěпěрнинче çěр пит тырă тăвать, Хусан кěпěрнинче тислěк тăкмасан пит аванах тумасть. Ăна епле тумалла? Эпир çырăва сахал вěреннě çынсем çавсене пурне те пěлсе çитерейместпěр. Çавăнпа "Учредительное Собранине" суйланă чухне пит лайăх çырăва вěреннě çынсене суйламалла тетěп.

Учредительное Собранинче пěр çěр ěçě çех мар тата. Нумай ěçсем пулмалла. Пит йăвăр ěç вăл. Халь пирěн патшалăхра патша кирлě тиекенни çук тăр ěнтě, анчах "республика" та тěрли пур.

Буржуазная, демократическая, федеративная тиекен республикасем пулма пултараççě. Федеративная республика татах икě тěрлě пулма пултарать: пěри территориальная (çěр тăрăх тунă пěчěк патшалăхсем пěр пысăк патшалăх тăваççě). Ак епле калаç: Хусан кěпěрни хăйне патшалăх, Чěмпěр, Епхӳ (Уфа), Самар, Саратов тата ытти кěпěрнесем кашни хăйне патшалăх пулса měн пурě пěр пысăк патшалăх тăваççě. Тепри национальная (кашни пěчěк халăх хăйне патшалăх тăвать). Унтан тата кирек měнле республика та пěр палатăлла та, икě палатăлла та пулма пултарать.

Пирěншěн měнле тусан аван пулассине пěлекен çынна суйлама кирлě. Měнле патшалăх йěрки пирěншěн аванне кам пěлме пултарать?

Лайăх çырăва вěреннě çын-и, е çырăва ыт ахальтен вěреннě çěр ěçлекен хресчен-и? Ман шухăшпа çырăва тěплěрех вěреннě çын патшалăх

йёркисене те тёплёрех ăнланмалла пек туйăнать. Пĕр манăн шухăш кăна та мар, ыттисем те çаплах шутлаççĕ пулĕ. Апла пулсан, ку енчен те пирĕн Н. Егоров йăнăшать, вара эпир татах вĕреннĕ çынсене суйламалла пулатпăр.

Юлашкинчен вĕреннĕ çынсен хушшинчен кама суйламаллине те калас тетĕп. Вĕреннĕ çынпа вĕреннĕ çыннăн та ăрасни пулать. Çавăнпа хăвăр пăхса хăвăрах суйлăр тетĕп. Унтан тата пирĕн чăвашсем ак çакна манас пулмасть. Пирĕн епле те пулсан хамăр чăвашран суйласа яма тăрăшмалла, çавăнпа пурте чăвашсем çамрăкки, ватти, карчăкĕ-арăмĕ-пурте чăваш национальнăй списокшăн сасă парăр. Вăл списокра кам камне час пĕлĕр!

Чăваш чăваша сутмĕ, чăваш чăваша хĕрхенĕ, чăваш чăвашшăн тăрăшĕ тетĕп. Чăвашсем, кашни вулăсран депутат суйлама ан тытăнăр! эпĕ çавăнтан та хăратăп; апла эпир пĕр чăваш та яраймăпăр, мĕншĕн тесен пĕтĕм чăвашран та пилĕк çын анчах лекет. Нумая хапсăнса пĕр япаласăр юлас мар! Ăна манма юрамасть! Çавăнпа вĕрентсе каланине итлесен те пăртак юрать. Хам шухăша çырнăшăн ан ӳпкелĕр.

**Юлташ Й-л**
**“Хыпар”, 1917-ĕш çул,**
**утă уйăхĕн 13-ĕш кунĕ, 19 /.**

## ПЕТР ВАСИЛЬЕВИЧ ПАЗУХИН

Июлĕн 9-мĕш кунĕнче позицире тăшмансемпе вăрçнă вăхăтра Петр Васильевич Пазухин ятлă офицер вилнĕ. Петр Васильевич Пăва уесĕнчи Арапуç чăвашĕ. Вăл 1909-мĕш çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухрĕ, çав çулах учителе ĕçлеме кĕчĕ. Пĕр çул учительре Элĕкре, Етĕрне уесĕнче пурăнчĕ, ытти çулсенче Муркашра, Чикме уесĕнче тăчĕ. Петр Васильевич ачасене пит аван, ăнланмалла вĕрентетчĕ, пуринчен ытла вăл вĕсене аван юрлаттаратчĕ. Вăрçă тухсанах Петр Васильевича салтака илчĕç, унта вăл офицера тухрĕ. Офицера тухсан ăна салтаксене вĕрентме ăста пĕлет тесе, вăрçа каймалла мар вырăна кӳртрĕç, анчах Петр Васильевич, офицера яланах вăрçăран аякра пурăнни килĕшмест тесе, хăй ирĕкĕпе вăрçа кайрĕ. Унта вара вăл тăшмансемпе çапăçса пĕтĕм халăхшăн хăй чунне хучĕ.

П.В. вилнине илтсен, манăн чун пит хурланчĕ: П.В. чăваша юратакан, чăвашшăн тăрăшакан учительччĕ. Вăрçă умĕнчи çулсем аса килчĕç. Хамăр юлташсемпе пĕрле хăнана-мĕне е урăх ĕçпе пухăнсан, чăваш ĕçĕ çинчен калаçма тытăнаттăмăр. Ун чухне школа ĕçне пăхакан Хусанти улпутсем вĕреннĕ чăвашсене пит курăймастчĕç, чăваш чĕлхи, чăвашла кĕнеке

никама та кирлĕ мар, тетчĕç. Чăвашсем ан вĕренччĕр тесе Чĕмпĕрти чăваш шкулне учительсене юри ямастчĕç; Иван Яковлевича вырăнтан кăларас тесе тем пек хытă тапăнчĕç. Эпир вара калаçаттăмăр çавăн чухне Иван Яковлевич ĕçĕсем çинчен, Ник. Ив. Ильминский çинчен, чăвашсене йывăр килни çинчен, чăваш пурнăçне епле çăмăллатасси çинчен, çавăн чухне чăваш юррисем юрлаттăмăр. Чăваш юррине пуринчен ытла П.В. юрататчĕ. Вĕсене юратса вăл нумай чăваш юрри пухрĕ, вĕсене çаптарса юрă кĕнеки кăларчĕ: "Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним. Часть II. Издание П.В.Пазухина". Петр Васильевич чăваш юррисене илемлетсе тăвată сасăпа юрламалла тума та тытăннăччĕ, анчах ăна вăрçă пуçланни чарчĕ.

П.В. пит чĕрĕ, çивĕчĕ çынччĕ. Инспекторсенчен, вырăс пачăшкасенчен хăраса тăмастчĕ, чăваша мĕн кирлине вĕсене тӳрех калатчĕ, инспектор чăвашла вĕрентнине курайман пулсан та чăвашлах вĕрентетчĕ. Çавăнпа П.Васильевича курайманнисем те нумай пулчĕç, ăна вара аван шкултан начар шкула куçарчĕç.

П.В. юлашкинчен эпĕ пĕлтĕр кĕркунне Чĕмпĕрте куртăм. Эпĕ ун чухне ăна хам чăваш школĕсем валли çырнă япалана кăтартрăм. П.Васильевича çав япала пит кăмăла кайрĕ. Вăл çавăнтах "çаптар ку кĕнекене" тесе, мана хăйĕн кĕсйинче мĕн пур укçине, 25 тенкĕ яхăн, тӳрех кăларса пачĕ.

Хальхи ирĕке П.В. кураймарĕ. Вăл ăна чунтан ĕмĕтленетчĕ... Чăваш ушкăнĕ, чăваш пухăвĕсем тăвасси çинчен, чăвашла хаçат, кĕнекесем кăларасси çинчен П.В. ун чухнех хытă шутлатчĕ; чăвашсем валли пысăк шкулсем - гимназисем, реальное училищесем, учительская семинариясем, сельско-хозяйственная школасем пулсан чăваш халăхĕ малалла каяссине вăл хытă ĕненетчĕ. Çавсем халĕ пулĕçĕ те ĕнтĕ, анчах П.В вĕсене курса савăнмалла пулмарĕ, вăл чăваш халăхĕнчен темиçе çухрăм аякра - Карпат тăвĕсем патĕнче пĕтĕм Россияшĕн хăйĕн чунне хучĕ.

Турă канăçлăх патăр санăн чунна, Петр Васильевич: эсĕ хăвăн кĕске пурнăçунта хăвăн вăю çитнĕ таран чăваш халăхĕшĕн тăрăшрăн, вилессе эсĕ ырă вилĕмпе вилтĕн!

Сана чăваш халăхĕ те хăйшĕн тăрăшнăшăн манмĕ. Вăл санăн ятна хăйĕн лайăх çыннисемпе юнашар лартса сана ĕмĕрех асăнĕ.

**Хыпар. 1917. Юпа уйăхĕн 9-мĕш кунĕ. 41 №.**

## АСЛĂ ЕЛЧĔК, ТЕТĔШ УЕСĔ

Пирĕн Аслă Елчĕкре, Тетĕш уесĕнче, нумайăшĕ сăрасем-эрексем туса сутаççĕ. Ял канашне туса ларакансем (сельски комитет) сăра-эреке тумашкăн чарма мар, хăйсем кунĕ-çĕрĕ ĕçсе çӳреççĕ. Çитменни-

не ял комитетне пĕрне сăра сутаканнинех хунă. Çавăнпа ытларах та сăра-эреке сутма чармаççĕ. Тата ытти çынсем те праçник кунĕсенче сăра-эреке сутакансем патĕнче пуху пек пуçтарăнса юрла-юрла ĕçсе лараççĕ. Сăра-эрекĕ ĕçме юратман çынсем "мĕншĕн кунĕ-çĕрĕ сăра-эрекĕ сутатăр" тесен, - "эпир унсăрăн пурăнаймастпăр, пĕр пус укçа та ниçтан тума пултараймастпăр, пирĕн ремесле çавă", теççĕ. Милицисем: "Сăра-эрекĕ тăвакансене тытма килтĕмĕр-ха" теççĕ те хăйсем укçасăр ĕçсе ӳсĕрĕлсе тытмасăрах каялла каяççĕ. Халăхсене: "Праçник кунĕ, пушă вăхăтра хаçат вуланине итлеме пуçтарăнăр, ку чăвашла хаçат, ăна хамăр чĕлхепе çырнă", тесен, - "питĕ пырасчĕ те, итлеме вăхăт çук", теççĕ. Эй, Аслă Елчĕк чăвашĕсем, кунĕ-çĕрĕ пушă вăхăтра ĕçкĕ тăрăх çӳреме вăхăт пур, хаçат вуланине итлеме пуçтарăнса ларма вăхăт çук. Праçник кунĕсенче, кĕлĕрен тухсан хаçат вуланине итлесе ларсан питĕ нумай усă пулĕччĕ. Çак сăра ĕçсе пĕтерес укçана, пăртак, пĕрер пус хамăр чăвашла хаçата "Хыпара" пулăшса парсан тата та усăллă пулĕччĕ. Эй, тăвансем, кунĕ-çĕрĕ праçниксенче, е ахаль пушă вăхăтра ĕçкĕ тăрăх сĕтрĕнсе çӳреме пĕлетĕр, пухăва тухсан, лайăх шăппăн кăна председатель суйласа канаш тума пĕлместĕр. Эй, Аслă Елчĕксем, çак пире ирĕклĕх панă вăхăтра пирĕн мухмăрласа çывăрас пулать-и вара? Ытти халăхсем тăрăшаççĕ, хăйсемшĕн шкулсем уçаççĕ. Пирĕншĕн хамăр тăрăшмасан тутарсем те, вырăссем те ĕçлĕç-и вара? Çук, вĕсем ĕçлемĕç, вĕсем эпир ĕçлейменнине курса хĕпĕртесе (савăнса) тăрĕç. Пирĕн те, Аслă Елчĕксен, ыйхăран вăранасчĕ, хамăр çие пăхасчĕ. Хамăра усăллă япаласем тăвасчĕ. Эсир ыйтăр: "Мĕн тăвас пирĕн хамăр усăллă япала тесе? Ак мĕнле япаласем усăллă. Ялти ачасене ялта вĕренсе тухнисене вĕренме ярасчĕ. Шкулсем пур. Кĕçĕн Елчĕкре 2-х классная шкул пур. Чĕмпĕр кĕпĕрнинче, Пăва уесĕнче, Хурăнвар ялĕнче второклассни учительски пур. Унта чăвашсене кăна илеççĕ, юрлисене хыснаран та пулăшаççĕ. Тата ялта пĕр хаçатсем, кĕнекесем вуламалли çурт уçас пулать. Унта обществăран хаçатсем, кĕнекесем, журналсем кӳртерес пулать. Эй, тăвансем, тархаслатăп сире сăра-эрех тумашкăн, ĕçсе çӳреме хăвăртрах пăрахăр. Часрах мухмăрлă йывăр ыйхăран вăранăр. Хăвăршăн тăрăшăр, пиртен пуçне те ĕçлĕç, тăрăшĕç тесе ан шухăшлăр. "Йĕмен ачана чĕчĕ памаççĕ", тенĕ, ăна та ас тăвăр. Сăра-эрек туса сутса пурăнма, ĕçме пăрахса хамăршăн хамăр тăрăшсан ытти халăхсем пекех ăслă, нумай пĕлекен çынсем пулăпăр, тĕнченĕн çуттине курăпăр.

**Шăпчăк.**

**Хыпар. 1917. Çурла уйăхĕн 24-мĕш кунĕ. 30 №.**

# ВĔРЕНĔР

Чăвашсем, ачăрсене тĕрлĕ шкула вĕренме ярăр. Кам ăçта кĕме пултарать, çавăнта вĕренме кĕме тăрăшăр. Пире вĕреннĕ çын пит нумай кирлĕ. Чăвашсем! Пирĕн хамăр хушăран вĕреннĕ çын сахал пулсан эпир ытти халăх аллинчен ĕмĕрне те тухаймăпăр. Чăваш хушшинче пур вырăнта та чăвашсемех пулччăр тесен, çырăва вĕренме хыпаланăр. Халь пирĕншĕн вĕренмелли шкулсем нумай. Уншăн ан хăрăр. Укçасăр вĕренмелли шкулсем те нумай. Хусанта учительски институт, учит. семинарисем, Земледельческое училище, церковно-учительская шкула халь семинари туса хунă, унта та вырăн нумай.

Шăхранти учитель семинаринче 20 укçасăр вырăн, Чистайринче 20, Тетĕшринче 40. Чĕмпĕрти учитель семинаринче те пай пулма кирлĕ. Белебейре кăçал учит. семинари уçăлать.

Чăвашсем, ку шкулсене укçа çуккисем ан хăраччăр тесе çыратăп. Тата урăх та укçасăр вĕрентекен шкулсем нумай.

Çапла çĕнĕ самана пуçланни, патша пĕтсе ларни пирĕн вĕренес ĕçе хамăр тăвас тенĕ пек тума пулăша пуçларĕ. Малалла кун пек шкулсем анчах мар, тата та лайăхрах, пысăкрах, аслăрах шкулсем уçма пултарăпăр. Вара ун чухне çутта тухăпăр. Финляндири пек, латышсенни пек, нимĕçсенни пек часах пирĕн те хут пĕлмен çынсем пулмĕç те. Пирĕн маттур вĕрентекенсем тухĕç, халăха часах çутăлтарса ярĕç. Çак шкулсем уçăлнăшăн пирĕн çавăнпа та питĕ хытă савăнмалла. Ку шкулсем пирĕншĕн, халиччен тĕттĕмлĕхре тĕрмери пек хупăрланса ларакан халăхшăн, çутă патне кастарнă чÿречесем пулса тăраççĕ. Пирĕн чăваш хушшинче малалла вĕренме каяс текенсем халиччен пит нумайăшĕ, ниçта кайса кĕме аптранипе тата шкула кĕнĕ чухне те чăваш ачисене юриех хĕстерсе ыйтнипе, кĕреймесĕр юлатчĕç. Çапла вара çав çутăшăн çунакан ачасем час сÿнекен çурта пек сÿнсе ларатчĕç.

Малашне апла пулмĕ. Халĕ ăçта килнĕ унта хамăр çынсем пулĕç. Вĕсем хамăрăнне юратса йышăнĕç. Тăрăшăр, чăваш çыннисем, вĕренме. Кăçал кĕркуннех хăвăрăн вĕренме каяс текен ачăрсене чарса ан тăрăр - ярăр. Чухăннисем "эпир вĕренме пултараймастпăр" тесе ан тăрăр, сирĕн ачăрсене вĕренме малашне земство пулăшса тăрĕ: земстваcенче хамăр чăваш çыннисемех ĕç туса ларма тытăнĕç. Пуяннисем, эсир те хăвăр ачăрсемшĕн укçăрсене ан хĕрхенĕр, хытса ан тăрăр. Пурте пуянни те, чухăнни, çукки те вĕренме, вĕрентме тăрăшăр. Вара эпир, чăвашсем, часах çутăлса кайăпăр, нумай вĕреннĕ çынсем пулса тăрăпăр - нумай вĕреннипе пĕрле пирĕн пурăнăç йĕрки те çăмăлланса кайĕ. Ăçта кайсан та пирĕн сăмах витĕмлĕ пулĕ, тĕнчене тухсан та кирек мĕнле халăх çине те хăюл-

лă пăхма тытăнăпăр. Тěнче йěркине пěлсе çитěпěр. Ун чухне вара хамăр чăвашлăхран вăтанса çынсем умěнче хамăра хамăр намăслантарса çўреместпěр. Вěренěр, çутăлăр, чăвашсем! Чăвашсем, эсир ăслă халăх, хастарлă халăх. -Чăнахах эпир çаплине халě тěнчери пур ăслă халăхсем пěлсе çите пуçларěç. Пирěн харсăрлăхран, ěçченлěхрен вырăссем анчах мар, пур халăхсем те тěлěнеççě. Чăвашсем! Пирěн малалла каймалли çул хатěр. Çав малалла каяс çулпа ертекенни пирěн питě шанчăклă! Çав ертекенни - вăл чăвашсен хастарлăхě, ěçченлěхě, чăвашсен хастарлăхě, асли. Вěренěр чăвашсем! Пиртен тěлěнмелле пулса тăрасси курăнса тăрать.

Кооперация йěркипе кирлě япаласемпе сут тăвакан лавка (общепотребительская лавкки) уçасси çинчен канаш тунă чухне çапла каласа кăшкăрма пуçларěç çав пуянсемех: çук, пире ун пек лавка тавраш кирлě мар, кирлě пулсан, ахаль лавка та пур, унта та кайса илетпěр, теççě. Ěç артелěсем тăвас тесен те, çав пуянсемех кăшкăраççě: çук, пире нимěн те кирлě мар: ни ěç эртелěсем (трудовой артельсем), ни кирлě япаласем сутакан. Мапкасем: пирěн аттесем, ват аслаттесем вěсемсěрех пурăннă, çапах çăкăр çинě, - татах калас ку йěрке-таврашсем пире ырă тумалли мар, пире çука хăвармалли, теççě. Çавсем çапла çăварсене карнинчен мěскěн чухăн тăвансем, ěлěк пуянсем умěнче çăварсене уçайманскерсем, халě те хăраса лараççě; хăйсем ăшěсенче (çав ырă япаласене) уçасшăн тăрăшаççě, анчах çав пуянпа куштанран хăраççě.

**Редакци.**

**Хыпар. 1917. Утă уйăхěн 27-мěш кунě. 23 №.**

## ЧĂВАШ КУЛЛИ

Çěрпўри почтăра пěр пěчик марка сутакан чăваш чинавник пур. Вăл, чинавнике кěни пěр-ик çулран ытла мар пулсан та, чăвашла манма пуçланă. "Ура тупанě" тес вырăнне "ура çинчи тупан" тет; "эсě мěн ятлă вырăнне", "сана мěн ятлы" теме пуçларě. Тăвансем, çавăн пек хăй чěлхине маннă чăвашсене епле вěрентсе çитерер-ши?

**А.В.**

**Хыпар. 1917. Çěртме уйăхěн 8-мěш кунě. 10 №.**

## ЧУЛХУЛАНА ĚÇЛЕМЕ КАЯС ТИЕКЕНСЕМ ВАЛЛИ

Чулхула (Н. Нов.) комиссарě панă телеграмма тăрăх Чулхулана ěçлеме каяс текен çынсене акă çакăн çинчен пěлтерес терěм: Чулхулана ěçлеме тесе çын пырса тулнă пирки хулара та, кěпěрнере те ěç пěр те çук. Хусан кěпěрнин комиссарě В. Чернышев.

**Хыпар. 1917. Çěртме уйăхěн 8-мěш кунě. 10 №.**

## МĔКĔТЕ ÇИНЧЕН

Атте-анне йăлипе
Эпир пурте этемсем.
Хамăр тăван чĕлхепе
Калаçасшăн çынсемпе.
Вырăс пуплет вырăсла,
Тутар тата тутарла,
Мăкшăсем ав мăкшăлла,
Чăваш каллех чăвашла.
Анчах пирĕн Мĕкĕте
Сăмахламасть, пуплемест.
Хăйĕн чăваш чĕлхипе,
Ашшĕ-амăш йăлипе.
Вăл хăй чăваш сăнĕпе,
Вырăс анчах чĕлхипе,
Çавăнпа та чăвашран
Пăрăнать вăл палласран.
Пĕр сăмах та калармасть
Чăвашла çын умĕнче,
Вырăсла çеç калаçать
Шав вăл чăваш хушшинче.
Чăваш тесе каласран,
Вырăс кулли пуласран
Çакă çутă тĕнчере
Питĕ хăрать Мĕкĕте.
Чăваш тесен çĕр тĕпнех
Анса каять Мĕкĕте.
Пичĕ каять хĕрелсех,
Пытанать хăй çын хыçне.
Пытансан та чăвашсем
Аякранах пĕлеççĕ,
Вырăссемпе пулсан та,
Сăнĕнченех палласçĕ.
Чăвашсенчен кулнă чух
Вĕсен хутне кĕмест,
Чăвашсене вăрçнă чух
Пĕр сăмах та чĕнмест.
Хăрамасть вăл Турăран,
Хăй те кулать чăвашран:
“Ухмах эсĕ: чăваш”, - тет,

“Эсĕ чăваш чĕппи” тет.
“Мĕкĕте эс, чăваш-им?“
Тесе ыйтсан вырăссем,
“Çук, чăваш мар, вырăс эп,
Чăн сăмаха калатăп”.
Тесе калать Мĕкĕте
Хăйĕнчен ыйтан çынсен...
Тĕрлĕ чăваш пухăнсан
Пымасть унта Мĕкĕте.
Епле те вăл вырăспа
Пĕр вырăнта ларасшăн,
Ăна питĕ юрасшăн,
Питĕ вырăс пуласшăн.
Хăй вырăссем калани
Аптри майха шăтарать,
Пытанаймасть курăнать.
Чăн вăл çавсен сăмаххи.
Мĕкĕтене вырăссем
Чăвашшине пĕлеççĕ,
Çилленсессĕн хăш чухне
“Чăваш” тесе чĕнеççĕ.
Вăрттăнах унтан кулаççĕ,
Хăш чух куçнех калаççĕ,
(Часах персе хураççĕ),
“чăваш эсĕ” тиеççĕ.
Çынна мĕскер калани
Хăйне тивет хăш чухне;
Çапа пĕлмен пушă вĕç
Хăнах лекет, Мĕкĕте!
Чăхăпала кăвакал
Нихçан пулмасть пĕр тĕлте.
Лешĕ вĕçсен шыв çине
Чăххи юлать хĕррине.
Чăхă шывра çӳрени
Шӳтлĕ ĕç вĕт тĕнчере!
Çавăнпа та чăваша
Аван мар-ши чăвашпа!
Эй, Мĕкĕте, Мĕкĕте,
Çитĕ сана хĕрелме!
Пăрах ухмах йăлуна,

Калаç шавах чăвашла!
Чăхă пулса хĕрринче
Кăтăкласа çӳриччен
Шыра эсĕ чăваша,
Пурăн унпа пĕрлешсе.
Чăваш сана юраттăр,
Вырăс санран ан култăр.
Эй Мĕкĕте, Мĕкĕте,
Ан култарах тĕнчене!

**Ятман Уççи.**
**Хыпар, 1917. Çĕртме уйăхĕн 8-мĕш кунĕ. 10 №.**

## ВĂРÇĂ ÇИНЧЕН

Кашни кунах хĕрлĕ лента пек тăсăлса выртакан чукун çулĕпе вакунсем çӳреççĕ.

Кашни кунах пирĕн аттесем, пиччесем, тăвансем, ывăлсем таçта инçетре - аккупра тĕрлĕ чирсемпе чирлесе выртаççĕ.

Кашни кун Раççей пуян банкирсене 40 миллионшар тенкĕ парăма кĕрсе пырать.

Кашни кунах пирĕн патшалăх 20 миллиона яхăн салтака тăрантарас, тумлантарас, хĕç-пăшал парас тесе мĕн вăйĕ çитнĕ таран тăрăшать (тапаçланать). Кашни кунах пирĕн патшалăх пĕтĕм халăх ĕçленине вăрçăшăн парнене кӳрсе тăрать.

Халăхăн çав ĕçĕ пушă хирсене ытарма çук чечеклĕ садсем, тырăпулă акмалли илемлĕ хирсем (уйсем) туса хурĕччĕ.

Ĕлĕк-авал 1613 çулта Мининпа Пожарский вăхăтĕнчехи çынсем ачисене çаклатса хунă. Халь эпир арăмсемпе ачасене кăна мар, ачасен ачин ачисене çаклатса хутăмăр ĕнтĕ. Пирĕн патшалăхăн парăмĕ 50 миллиард тенке çитнĕ. Эпир кашниех - пĕчĕкки-пысăкки, ар çынни-хĕрарăмĕ 250 тенкĕ парăм тӳлемелле пултăмăр ĕнтĕ. Пирĕн ирĕке тухнă патшалăха çĕнетсе çитермешкĕн нумай ĕçлемелле.

Нумай тăмалла мар, патшалăха йĕркене кӳртмелли Пуху пуçтарăнмалла. Унта вĕççĕр-хĕрсĕр ĕç нумай пулмалла. Çавăнпа халь пирĕн патшалăха ĕçлекен çынсем пит кирлĕ.

Анчах ĕçлеме пултараканнисем пурте тенĕ пекех халĕ вăрçăра.

Вăрçă пире хамăр пурнăçа йĕркене кӳртме чарать, савăнăçлă пурнăçпа пурăнма ирĕк памасть.

Çавăнпа аккупра ларни хамăр майлă патшалăхсене улăштарнинчен пуçне пире хамăра темĕн чухлĕ сиен кӳме пултарать. Вăрçă халăха пĕтерет, вăрçă выçлăх патнелле илсе пырать.

Мĕнле япала вăл вăрçă?

Вăрçă вăл икĕ тавлашуллă енсене килĕштерекен япала.

Хальхи вăрçăра çав тавлашаканнисем пĕр енчен Раççей, Хрантсус, Америк республикисемпе Анкли пулать, тепĕр енчен тĕрĕксен султанĕпе тата Вильгельмпа Карл икĕ ĕмпӳ (император) пулаççĕ.

Эпир хамăр кăмăла кам енне яма пултаратпăр? Ĕмпӳсен енне-и, е республикăсен енне? Ăна хăвăрах пĕлетĕр пулĕ.

Пире нимĕçсемпе, хрантсуссемпе анклисемсĕр пуçне килĕштерес текенсем акă мĕне манаççĕ. Эпир нимĕçсемпе килĕшсессĕн вĕсем пиртен пуçне хрантсуссемпе анклисене тата ытти пирĕн майлă халăхсене çĕмĕрсе тăкма пит çăмăл пултараççĕ. Вĕсене çĕнтерсен кайран пирĕн патшалăха та вара хăйсен аллине илме пултараççĕ.

Унтан тата нимĕçсемпе хамăрăн ытти майлă патшалăхсенчен пуçне килĕшме япунтан та хăрамалла. Япун анклисен пит тĕрĕс шанчăклă юлташĕ пулса тăрать. Çавăнпа анклисенчен ăрасна эпир нимĕçсемпе килĕшсессĕн вара яппун пирĕн çине килме тытăнать.

Эпир таса пăлхавăрта ирĕке тухнă халăхăн хĕрлĕ ялавĕ "ăрасна килĕшӳ" тенĕ çырупа хăйĕн ятне çĕртмĕ, тĕсне вараламĕ тесе шухăшлатпăр.

"Вăрçăри салтаксем, эсир халĕ пирĕн патшалăхри ирĕкĕн хуралçисем. Эсир халь хăвăр кăкăрпа патшапа Распутина тата улпутсене сыхламастăр, хăвăр тăванăрсен хутне кĕретĕр.

Анчах ирĕклĕхе сыхланă чухне капкăна лекесрен пит хăрăр, салтаксем.

Çавăн пек капкăн нимĕçсемпе вăрçăра пĕрлешни (братание) пулать - салтаксем, хăвăрах шухăшлăр-ха. Керманипе Австрире Вилкелмпе Карл ĕмпӳ (император) пулса ларнă вăхăтра вĕсен салтакĕсемпе пĕрлешсе юлташ пулма пултаратăр-и?

Эсир чунăрсене кăтартса каятăр - тăшмансен аккупĕнчен "штабный" ахвитсер салтак тумтирĕ тăхăнса сире хирĕç тухать. Эсир хăвăрăн шанчăклă чĕрĕрпе мĕн килнĕ ăна калаçатăр, нимĕç ахвитсерĕ хăйĕн чее пуçĕн хутланчăкĕсене сирĕн сăмахăрсене пытарса тăрать.

Эсир калаçса вăхăт ирттеретĕр, нимĕçсем хăйсен аккупсене тĕреклентереççĕ, тупăсем хатĕрлесе хураççĕ. Кайран хăвăрах лектерме тытăнаççĕ.

Çавăнпа эпир нимĕçсемпе пĕрлешнипе вăрçа пĕтерме пултараймастпăр, хамăра хамăр анчах пĕтеретпĕр, мĕншĕн тесен пирĕн салтаксем вăрçман вăхăтра нимĕçсем хрантсуссемпе анклисене çĕнтерчĕç те пире тулама капăрланса килчĕç.

Вăрçа чарас тесессĕн урăхла ĕçлемелле.

Вăрçă усăллă япала маррине, вăл кирлĕ маррине пурте пĕлетпĕр.

Анчах пĕр хускатнă вăрçа вĕçне çитерме кирлĕ. Вĕçĕ вăл нимĕçсем пирĕн патшалăхран кайсан тин пулма пултарать. Хăçан та хăçан вĕсем пирĕн çĕрте тăраççĕ, çавăнччен вăрçă пулать.

Вăрçа часрах пĕтерес тесессĕн эпир пур енчен те Вилкелмĕн салтаксене хĕсме тытăнмалла.

Аккупра выртни те, ăрасна килĕшӳ те, "вăрçă кирлĕ мар" тесе кăшкăрни те вăрçа пĕтермĕ; эпир тăшмансене йĕри-тавра хупăрласа илнĕ унка часрах пĕчĕклетни, йăлтах чăмăртаса хуни анчах вăрçа пĕтерĕ.

**Емел М.**

**Хыпар. 1917. Çĕртме уйăхĕн 8-мĕш кунĕ. 10 №.**

## *А. МИЛЛИ*

Сад пахчине лартрăм панулми,
Улмишĕн мар, шурă çеçкишĕн!
Шăвартăм эп ăна ирхине,
Шăвартăм эп ăна каçхине!
"Кашла, кашла, тусăм, эх кашла!
Сана эп юратса суйларăм,
Пулах мана савăнтармалла,
Шăрăх кун сан айна эп ларам!"
Ӳсрĕ манăн йывăç сарăлса,
Сарлака çулçипе калаçса;
Çиччĕмĕш çул ларчĕ çеçкене,
Тепĕр çултан кӳчĕ улмине.
Иртсе çӳрекенсем курчĕç çеçкине,
Ял ачисем курчĕç улмине;
Чăтаймарĕç мĕскĕн ачисем –
Чечен улма çине уртăнчĕç.
Çеçки çине пăхни юрĕччĕ,
Уртăннипе йăлтах хупларĕç;
Улман турачĕсем хуçăлчĕç,
Ман куçăмсем ăна курайрĕç...
Çемçе чĕрем лăштах çурăлчĕ,
Пуçăм ăнран кайса çаврăнчĕ,
Куçăмсем те тĕтреленеççĕ -
Хуйхă мана пусса антарчĕ.
Пĕчĕкрен пĕр хĕре юратрăм,
Ӳссен хамăн тăвасах терĕм!

Хурлăх чухне унпа калаçса,
Мĕскĕн чуна пусарас тесе.
Ялти ачасем те ун çине
Хăйсен çамрăк куçне янине
Туяймарăм пулать, - ун çумне
Вĕсем çыпăçмашкăн тытăнчĕç.
Ял ачисем кула пуçларĕç,
Тĕрлĕ усал халлап илтĕнчĕ.
Чĕре çумне çавсем çыпçăнчĕç,
Пит-куçăма ват сăн çапăнчĕ.
Пан улмишĕн асапланни те,
Тус туни те ахалех пулчĕ,
Шăрăхланчĕ çанталăкĕ те,
Ăш-чик йăлтах хурлăхпа тулчĕ.
Мĕншĕн пан улмине хуçрĕç-ши?
Ун сулхăнне ларса канăттăм;
Мĕншĕн çавна хĕре илчĕç-ши?
Ăшăма пусарнă пулăттăм!

**Хыпар. 1917. Çĕртме уйăхĕн 8-мĕш кунĕ.**

## КИРЛĔ ĔÇ

Чăвашсем! Патшалăхри çĕнĕ ĕçсене хăвăр епле ăнланнине кăтартмалли вăхăт çитрĕ. Час кашни вулăсра земство пулмалла. Вăл земство мĕнле пуласси: лайăх-и, начар-и - сирĕн хăвăрăн аллăрта. Эсир вулăсра земски собранине каймалли гласнисене лайăх, тӳрĕ, ăслă, халăх пурнăçне тата хамăр патшалăх йĕркине лайăх пĕлекен çынсенчен суйласа ярсан, вĕсем сирĕн валли земски управа туса хăварĕç.

Вулăсри земски управа мĕнле кирлĕ çапла пулнă халăхшăн пурĕ-пĕрех мар пулмалла, мĕншĕн тесен вăл пĕтĕм вулăс ĕçне туса тăмалла япала пулать. Вăл пĕр тĕрлĕ вуласан мими (мини) пулать тесен те юрать. Вулăсри кирек мĕнле ĕç те управа аллинче пулать.

Çавăнпа Вулăсри Земски Управа халăха мĕн кирлине туса пымалла пултăр тесен, унăн пур ĕçĕ те вырăнлă пултăр тесен, эсир унта хăвăра кирлĕ, юрăхлă çынна кӳртме тăрăшăр.

Чи малтан эсир - чăвашсем чăваша суйласа Управан членĕ тума тăрăшăр. Нумай уессенче пирĕн чăвашсем ытти халăхсемпе (вырăспа, тутарпа т. ыт.) хутăш пурăнаççĕ те кирек мĕнле вырăна та вырăсран е тутартан суйласа хураççĕ. Эпĕ хамăр Чистай уеснех илем. Унта чăваш сахал мар, нумай тесен те юрать (65 пин çын).

Анчах çав 65 пинлĕ чăваш халăхĕн Чистайра Уезднай Земски Управара пĕр член та пулсан чăвашран пур-ши? Мана çук пек туйăнать, пĕр чăваш та унта çук тетĕп эпĕ. Чăвашсене мĕн кирлине унта кам хуйхăртĕ?

Ĕлĕк земски шкулсенче пĕчĕк чăваш ачасене малтанхи çулах вырăсла вĕрентме хушакан Нератов - чăваш ачисемшĕн чăвашла кĕнекесем илес, чăваш шкулне чăваш вĕрентекен ярас, ăçта чăваш хушшинче шкул çук çĕре чăвашсемшĕн шкул уçас тесе калĕ теттĕр-им? Чистай уесĕнчи чăвашсем, кĕтсе тăрăр, сирĕн пата пĕлĕт çинчен шкулсем антарса лартса хумĕç-и, чăваш вĕрентекенсем памĕç-и, чăвашла кĕнекесем пырса парахмĕç-и, чăвашран йĕрĕнмен тухтăрсем пульнитсасене пырса лартмĕç-и? Кĕтĕр, кĕтни аван япала вăл, анчах тĕлне пĕлсе кĕтмелле! Татах пĕлме те çук, Шупашкар енчен çил вĕрсен илсе пырса парахĕ (Шупашкар уесĕнче чăваш нумай).

Эпĕ айаккинелле нумаях пăрăнса кайрăм, чăвашсем чăвашран суйлăр тесе кăна каласшăнччĕ, мĕншĕн тесен чăн чăваша мĕн кирлине чăваш анчах пĕлет.

Эпĕ вулăсри земствăна чăвашсем чăваша суйлăр тенĕччĕ. Анчах чăвашпа чăвашăн та уйрăмĕ пысăк пулать. Çавăнпа чăвашшăн тăрăшма пултаракан чăваша суйламалла тетĕп. Чăвашшăн тăрăшма пултаракан çын вăл акă кам. Чăвашшăн тăрăшма чăваша юратакан çын анчах пултарать. Çавăнпа кирек мĕнле вырăна суйланă чухне те "мана чăвашĕ, вырăсĕ те пĕрех" теекен çынсене ан суйлăр. Пире чăвашсене "чăваш халăхĕн пурнăçне çăмăллантарас " теекен çын кирлĕ.

Анчах хăш та пĕри тем пек чăваша ырă тăвĕччĕ, вăйĕ çитеймест. Вăл акă епле çын пулма пултарать. Пирĕн ял хушшинче пурăнакан хресченсенчен ăслă, тӳрĕ çынсем те нумай, анчах нумайăшĕ вĕсенчен çырăва авантарах вĕренмен пирки, халăх пурнăçне епле çăмăллатмаллине пĕлмеççĕ. Çавăнпа вырăна суйланă чухне, халь вулăсри земствăсене, кайран уесрисене вĕреннĕрех çынна суйлама тăрăшăр: çырăва авантарах вĕреннĕ çын пурнăçне епле аванлантармаллине те пĕлет, чăваша мĕн кирли те ăна курăнарах парать, унтан тата вăл вырăссемпе тавлашма та пултарать. Пĕрре те калаçмасăрах ним те тума çук. Çавăнпа ачасене çырăва вĕрентекенсене е тата урăх вырăнта тăракан чăвашсене земствăна суйлăр.

Вĕреннĕ чăвашсем анчах пирĕн пурăнăçа маларах яма пултарĕç, ним чĕнмесĕр тунката пек ларакан çынсенчен пире нимĕнле усă та пулмĕ.

**Ем. М.**

**Хыпар, 1917. Çĕртме уйăхĕн 23-мĕш кунĕ. 14 №.**

# ШКОЛСЕМ
## /Çĕрпӳ уесĕ/

Çĕрпӳ уесĕнче школсем икĕ тĕрлĕ! Пĕри - Земски школсем, тепри - церковно-приходски школсем. Вĕрентессе икшин йышинче те пĕр пекех вĕрентеççĕ, анчах школсен пурнăçĕсем иккĕшĕн те икĕ тĕрлĕ.

Земски школсен çурчĕсем питĕ чаплă, çап-çутă, пысăк, нумай, партăсем лайăх, сăрласа пĕтернĕ, кĕнекесем, хут тата ытти çырмалли япаласем пурте çителĕклĕ. Ачасене вĕренме питĕ ирĕк - ан ӳркен анчах. Çĕрлемĕн вĕренмелле пулсан класра 2-3 лампа çутса яраççĕ, вара класра çапçутах, ачасем хĕпĕртесе кăна лараççĕ. Пирĕн чăваш ачисем, килте лампа начар çуннă пирки, уроксене те килте хатĕрлеймеççĕ. Пурнăç çитмен пирки чăвашсем керосина нумай ан пĕттĕр тесе пĕчик ламп илеççĕ те, ăна та пулсан трупасăр çутаççĕ... Çавăн пек çын ачисем каçхине уроксене вĕренме, школа питĕ хавассăн çӳреççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, земски школра вĕренме ачасене питĕ аван ĕнтĕ. Çитменнине тата вутă хутасси, урай çăвасси - йăлтах сторож çинче. Земски школри вĕрентекенсене пурăнма та çăмăлтарах. Вĕсен хваттерĕсем 3-4 пӳлĕмлĕ, вутăпа керосин казенный, школ çумне пахча тытса пана, хурт-мĕн усрас тесен земство 1-2 вĕлле ахалех парать. Çавăнпа та земски школра пурăнакан учительсем пахча-çимĕç ӳстерсе, хурт усраса нумай усă кураççĕ. Земски школсене пăхакан пуçлăхсем те аван çынсем пулаççĕ, вĕсем учительсене усă пама та йĕрĕнмеççĕ, вĕсене тарçă вырăнне хурса нихçан та çын шутĕнчен кăлармаççĕ, çавăнпа та земски школри учительсем (развитие) вĕренсе уçăлас тĕлĕшрен ц.-п. школри учительсенчен малта тăраççĕ.

Церковно-приходски школсем лайăх çуртлисем уесра та 2-3 ытла мар. Ыттисем пуян çын мунчи чухлĕ пулсан пырĕччĕ, анчах ун пекки те сахалха, çитменнине кура нумайăшĕ çемьеллĕ çын çуртĕнчех вĕренеççĕ. Унта хуçисем те, вĕренекен ачасем те, путексем те, пăру та, учителĕ те çавăнтах хурт пек кĕшĕлтетеççĕ. Пӳрчĕ пĕчиккĕ те сывлăш пĕтĕмпех пăсăлса ларать. Хĕлле чӳречисем шăнса пăрланса лараççĕ те, вара чӳречисем витĕр кун çути кураймаççĕ. Ачисем вуланă чухне те, çырнă чухне те питĕ çывăхран пăхсан 3-4 çул хушшинче куçĕсене пăсса пăрахаççĕ. Вĕсене вара пысăкрах школа кĕрес тесен те, куç начар тесе илмеççĕ, тата ӳссе çитсе салтака кайсан та маттур салтак пулаймаççĕ. Церковно-приходский школăн усси çав ĕнтĕ. Церковно-приходский школсене ырă çынсем - пачăшкăсем пăхаççĕ. Вăл школсене пăхакан пуçлăхсем питĕ нумай. Святейший Синодран пуçласа ялти пачăшкăсем патне çитиччченех. Çавăнпа та церковно-приходский школри учительсен пурнăçĕ çăмăлах мар çав, пуçлăхсем нумай та, пуринĕн кăмăлне те килес пулать: малтан йыттине,

унтан прислугана, унтан матушкана, унтан пачăшкăна юрас пулать, тата наблюдательне хăйне юрас пулать. Цер.-пр. школсене Турă законĕ çинчен вĕрентме пачăшкăсен çӳремелле, анчах ун пек тăрăшакан ырă пачăшкăсем уесра та питĕ сахал, ыттисем Турă законсене вĕрентме учительсенех хушаççĕ, вĕсем шалуне анчах илеççĕ. Шалт тĕлĕнмелле: ĕçлекенни пĕри, çăкăрне çиекенни тепри. Турă умĕнче тăракан çынсене юрать-ши вăл, апла пурăнма? Ĕт çын аллипе кăвара кăмакаран хырса кăларма çăмăлçке те, вăл иртрĕ пулĕ ĕнтĕ, святой аттесем! Пачăшкăсем çапла хăтланнине наблюдательсем пĕлсех тăраççĕ те, анчах пĕртте шарламаççĕ. "Çăхан куçне çăхан чавмасть" тет çав! Пачăшкăсем ц.-п. школри учительсене тарçă вырăннех хурасшăн, йĕплĕ алсапа тыткаласшăн, ялан хăратса, хăйсене Турра пăхăнса пурăннă пек пăхăнтарасшăн, кăшт вĕсен кăмăлне килмесенех "24 сехет хушшинче, перопа пĕрре чарлаттарсах кăларса пăрахап" теекенни те пурччĕ. Вара учительсем пачăшкăсенчен хăраса пурăннă пирки çын çине тухсан та хăюллă калаçаймастчĕç. Ц.-п. школри учительсене "Пуп тарçисем" тесе ахальтен каламастчĕç пуль çав.

Церк.-пр. школсенче вĕренмелли япаласем: кĕнекесем, хут, каранташсем нихăçан та çителĕклĕ пулмаççĕ. 1916/17 çулта ачасем февраль уйăхчен хут çине çырса кураймарĕç. Çав школсемшĕн пачăшкасен тăрăшмалла. Вĕсем школсемшĕн тăрăшатпăр теççĕ, ц.-п. школсенче тăрăшаççĕ тесе пуçлăхсем вĕсене наградăсем: камилавкасем (пурак пек калпак) тата ылттăн хĕрессем те çака-çака яраççĕ, хура халăхĕ ачисене малалла çул кăтартса ярас тиекенсен пачăшкасем питĕ сахал. Вырăнĕ-вырăнĕпе 20-30 ç. служит тăвакансем те пур, анчах вĕсен усси курăнмасть, хăйсем пуçне камилавкка тăхăнни анчах, ман шутпа; пачăшкăсен хăйсен приходри школсенче вĕренсе тухнă хастарлă ачасене малалла 2 к. школсене çул кăтартса ямалла, унтан тухсан, вĕсем татах малалла Учительский семинарине кĕме пултарчĕç, çапла 20-30 ç. хушшинче приходра вĕреннĕ çынсем чылайăн пулĕччĕç, анчах ун пек пачăшкасем питĕ сахал çав. Пирĕн Çĕрпӳ уесĕнче, вырăнĕ-вырăнĕпе вĕреннĕ çынсем çукпа пĕрех. Акă Хурамал прихотĕнче 4 ц.-п. школ, вĕсем уçăлни ĕнтĕ 16-32 çул. Халĕ вĕсенче 230 ача вĕренет. Приходра мĕн пурĕ 4050 чун, вĕсен хушшинчен ялти школсенчен вĕренсе тухса аслăрах школа кĕрсе вĕренни мĕн пурĕ те чăвашран пĕрре анчах. Хурамалта 32 çул хушшинче 1808 чунран малалла вĕреннĕ çын пĕрре те çук. Кам тăрăшман пирки çапла-ши ку? Çак цифрăсенчен ыйтăр. Ку приходра пачăшкăсем хăшĕ 30 çула яхăн служит тунисем те пулнă. Хăш пачăшкасем ялти школсене те çӳремеççĕ, хăрата-хăратах учительсем çинех тиеççĕ. Вĕсем учительсене, псаломщиксене, диаконсене хирĕç пулсан нихçан та ытти çынсем пек алă тытасшăн мар,

ялан пиллĕх илсе аллисене чуп–тутарасшăн, çулаттарасшăн. Çав аллисене çуллатарма тăрăшсах пĕтсе лараççĕ ĕнтĕ хăйсем те.

Халĕ ц.-п. школсене земствăна парас теççĕ, пачăшкасем парасшăнах мар та, ĕлĕкхи пекех хăварасшăн. Тăвансем, - хура халăхсем эпир земствăна школсемшĕн, пульницасемшĕн ятран укçа тӳлесе тăратпăр, апла пулсан, школсем пур çĕрте те земствоРан пулмалла, ц.-п. школсене пĕрне те ан хăварăр. Малашнехри саманара, ялти школсенчен тухсан, малалла вĕренес пулать. Пысăкрах школа кĕрес тесен ялта лайăх вĕренес пулать, лайăх вĕренес тесен, пире лайăх вĕрентекен, учитель кирлĕ. Халĕ хăшхăш школсенче чăваш ачисене, чăвашла пĕлмен майрасемех вĕрентеççĕ. Вĕсем икĕ-виçĕ çул вĕреннĕ ачасем урлă вырăсларан чăвашла куçаркаласа вĕрентеççĕ. Çапла вĕрентни, вĕрентни пулать-ши? Пăхса тăрсан пĕтĕм чун пăшăрханать. 2-3 çул вĕреннĕ ача мар, начартарах учительсем те вырăсларан чăвашла вырăнлă куçараймаççĕ. Çапла вĕрентсе, вĕсем ачасене йăлтах пăрахаççĕ, ни вырăсла, ни чăвашла вĕрентеймеççĕ. Вырăсла лайăх вĕренес тесен, малтан чăвашла, вара тин вырăсла вĕренес пулать. Çавăн пек майрушкăсене чăваш школсенчен кăларас пулать. Халĕ, пули-пулми вĕренмелле мар, вĕренес те, пысăкрах школа кĕрес тесех вĕренес пулать. Вăранăр ĕнтĕ, чăвашсем, çитĕ кун чухлĕ çывăрсан та, ытти халăхсем вĕренсе çуталаççĕ, малалла каяççĕ, эпир, чăвашсем, тĕттĕмрех ларатпăр, вăранăр, чупăр çутталла, аллăрсене чăваш хаçачĕ еннелле тăсăр.

**Вĕлтрен.**
**Хыпар. 1917. Çĕртме уйăхĕн 23 кунĕ. 14 №.**

## ÇĔНĔ ПУРНĂÇ ПУÇЛАНСА КАЙРĔ

Ырă, лăпкă пурнăç çинчен кам шухăшламасть? Пурăнăçа аванлатас хуйха кам тытмасть-ши? Ăраскала, телейлĕ кунсене кам кĕтмест-ши?

Аван пурăнас, лăпкăлăх-канлĕх кирек камшăн та паха, ырă пурăнăçа пурте шыраççĕ, лăпкă кунсем çитессине кĕтсе тăраççĕ.

Этемсем ӳркенмесĕр, ывăнмасăр пĕр май ĕçлеççĕ. Вĕсем яланах ĕçре, яланах чăрманура...

Тăрăшать мĕскĕн çынни, малалла васкать. Тăрăшать чăваш, хытă ĕçлет, канма пĕлмест, ыттисенчен пĕртте юлмасть...

Эй, халăхсем! Тĕнче сире, ачисене, ачашлать-и? Лăпкă пурăнăç пур-и сирĕн? Тупрăр-и-ха?

Ах! Шухăш йышлă, канаш нумай сирĕн...

Пĕрер чухне çав шухăшăрсем-канашăрсем вырăна килсе, каланă пек пулса тăрса, савăнас - лăпкă пурнăç пулĕ-и сирĕн?

Виç çултанпа вăйлă, пысăк, хăрушă вăрçă. Пурăнăçсене аванлатса,

лайăх кунçул курас вырăнне, халăхсем пĕрин çине пĕри тăчĕç, пĕрин çине тепри тăрăнса илемлĕ, çутă кунсене тĕссĕр турĕç.

Мăн тупăсем кĕмсĕртетни, аманнисем йăнăшнă сасă хăлхаран каймасть...

Куççуль юхать... Мăнтарăн халăхĕ çука юлать.

Этем юнĕ юхать, çĕре шŭтерет. . Асаппа хуйхăн вĕçĕ-хĕрри çук! Сарлака хирсем, атăлсем-шывсем, çуллĕ вăрмансем те хуйха ŭкнĕн курăнаççĕ...

Эй ылханлă, тĕссĕр вăхăтсем!..

Шухăшласан чĕре çурăлать. Каламашкăн сăмах çитмест. Йывăр шухăш чĕрене кăшлать...

Çак тискер, хурлăхлă кунсене кам пирки, кам ырлăхĕпе е усаллăхĕпе куратпăр эпир, чăвашсем? Кам айăплă çак усал ĕçре? Кам çине йăвантарса ярас пирĕн ку йывăр çĕклеме?..

Эх, нумай çав сăмах калаçас тесен, ытла хурлăхлă пирĕн юрăсем..

Анчах ахалех сăмах сăмахланипе, пулнă ĕç çинчен калаçнипе пирĕн хуйхăсем сирĕлсе пĕтсе, ыратнă чĕре тŭрленсе çитсе, пирĕн пурнăç çĕнелейрĕ-ши?..

Халăхсем! Çĕнĕ пурнăç, аван пурăнăç кирлĕ пире. Телейлĕ, лăпкă, канлĕ кунсем кĕтетпĕр эпир. Кивĕ ĕçсем, ватă кунсем, çĕрĕк-имшер пурнăçсен - вĕсем пурте иртсе кайччăр, ан таврăнччăр.

Кив сăмаха сăмахласа, çĕнĕ пурнăçа киветес мар; каяс çулсем таса пулччăр, килес кунсем çутă тăччăр!..

Пирĕн патшалăхра чĕлхе каласа çитерейми питĕ аслă, питĕ тĕлĕнмелле ĕç пулса тăчĕ.

Шухăшланă ырă шухăшсем, канашланă аван канашсем вырăна килес вăхăт çитрĕ.

Ĕнтĕ каланă аслă çухалса каймасть, ĕç пулса тăрать, усă та кŭрет.

Ĕнтĕ халăхсем пурнăçĕсене хăйсене кирлĕ пек майласа яма, кĕвĕлесе, ĕнерсе яма пултараççĕ.

Ĕнтĕ халăхăн пурнăçĕ хăйĕн аллинче, патша аллинче мар, министрсен е начальниксен аллинче мар.

Патшаран, начальниксенчен ырăлăх кĕтес вăхăт иртрĕ, вĕсен аллинчен ĕнтĕ мулĕ кайрĕ.

Ĕнтĕ халăх хăех хăй валли ырă пурăнăç тăвас тесен тума пултарать. Кунтан малашне пурăнăç усал пултăр тесен, вăл усал пулĕ, лайăх пултăр тесен лайăх пулĕ.

Çавăн пирки, кунтан малашне, илемсĕр пурнăçсем татах та аванланаймасан, вара халăх хăй айăплă пулĕ, урăх никам та ĕлĕкхи пек айăпласси пулмĕ, айăплани усă кŭмĕ, тĕссĕр пурăнăç маттурланĕ.

Аслă кунсем çитрĕç! Ĕнтĕ Закона халăх хăй кăларать, хăй пурнăçне хăех юсать.

Халăх кам вăл? Халăх вăл - патшалăхра пурăнакан мĕнпур çын: ар çынсем, хĕрарăмсем, пуяннисем, чухăннисем, купсисем, хуçасем, мещансем, хресченсем, улпутсем, вĕреннисем, вĕренменнисем - çаксем халăх, çавсем хуçасем, çавсем пурте граждансем.

Çаксемшĕн тĕнче, çаксемшĕн çĕр-шыв, çаксемшĕн пурăнăç.

Граждансене (çынсене) патшалăхра пурăнма аван, çăмăл пултăр тесен, патшалăхăн хуçисем - граждансем хăйсем ăслă пулмалла, нумай пĕлмелле, хытă ĕçлемелле.

Кашни çын ĕнтĕ пурăнăçа аванлатасси çинчен хытă шухăшламалла.

Кашни çын, ăслă кил хуçи пек, çак аслă кунсенче вăй çитнĕ таран патшалăх ĕçне ĕçлемелле, мĕншĕн тесен патшалăх ĕçĕ ĕнтĕ хамăр ĕç.

Патшалăх ĕçĕсене йĕркене кӳртни пирĕн хамăр ĕçсене пулать.

Патшалăх ĕçĕсем йĕркеллĕ пулсан çех пирĕн хамăрăн пурăнăçсем йĕркеллĕ, лайăх пулма пултараççĕ.

Патшалăх ĕçĕсене ĕнересси çăмăл ĕç мар. Нумай пĕлмелле, нумай чăтăмлăх кирлĕ.

Çавăнпа никам та: "Тăвас ĕçсене манран пуçне те тăвĕç-ха", тесе ан калатăр. Апла калакан вăл хăй çуртне-йĕрне пăхман, хăйĕн пурăнăçĕ çинчен хуйхăрман хуçа евĕрлĕ пулать. Апла калакан вăл гражданин мар, чура пулать.

Пирĕн чăваш хушшинче çапла калакансем пулмĕç, тесе шанас килет...

Пур халăхсем çамрăкланччăр, вăйлăланччăр. Вĕсем пĕр шухăшра, пĕр канашра пулсан, пĕрле ĕçлеччĕр... Ан тавлашчăр, ан вăрçайччăр, пĕрне пĕри ан вĕлерччĕр, ан кăшлаччăр!

Чăваш çыннисем! Çĕнĕ пурăнăç пуçланса кайрĕ!.. Хытă тăрăшăр, пĕрлешсе ĕçлĕр. Ĕçĕрсем ăнса пыччăр, кунăрсем телейлĕ пулччăр!..

**Николай Герасимов.**
**26 май.**
**Хыпар, 1917. 21 №.**

## ЕТĔРНЕ УЕСĔ

Етĕрне уесĕн Кошлавăш кĕтессинче хура вăрман ларать кашласа. Çакă вăрман хӳттинче унта-кунта чăваш ялсем ларса тухнă çумран-çум. Ялпа ял хушшинче шывсем юхаççĕ. Ай, Турă, вăрман сулхăнче пурăнма питĕ ырă-çке. Вутă-шанкă ĕмĕрте-те пĕтес çук. Пыл та çу пурăнăç! Нихçан та хырăм выçас çук уйра та тырă пулсассăн. Хырăмĕ тăрансан вара пире урăх ним те кирлĕ мар. Çапла-и вара пурнăçа пурăнас пулать? Эх, мăнта-

рăн чăвашсем! Пĕр хырăм шухăшне анчах шухăшласан, вара пирĕн пурăнăç нумаях çитмĕ; ирхи çăлтăр пек пĕчĕккĕнех сÿнсе ларĕ. Епле сире пăртак та пулсан куç харшисене чарса пăхма юрамасть? Сирĕн тата икшер хăлха пур вĕт? Шур çанталăкра ăçти чан сасси янранине итлеççĕçке. Ма эсир çывăраттăр? Сирĕн хушăра тĕрлĕ сасă-хура сарăлать. Хăш сасси чăваша ырă сунать, хăшĕ тата тилĕ пек йăпăлтатса чăваша улталаса хăварасшăн. Кама итлесен, кам хыçĕнчен кайсан сире ырă пулĕ-ши? Çавна сисес пулать те вара пĕр канаш тăвас пулать. Пĕр канаш тума сирĕн хушăра лайăх вĕреннĕ çынсем пур. Пĕри Оравăш чиркÿ ялĕнчи пачăшкă Яков Петрович. Вăл ĕлĕкренпех чăвашсене лайăх ăнлантарнă. Тепри Кошлавăш чиркÿ яленчи тиячук - вĕрентекен Федор Павлович. Халĕ çакă Яков Петровичпа Федор Павлович чăвашсемшĕн Тоиси вулăсĕнче питĕ хытă тăрăшаççĕ. Вырăс - вĕрентекенсем, вырăс пачăшкасем çавăншăн вĕсене питĕ юратмаççĕ, унтан ытла тата хĕстерме тытăнчĕç. Чăваш майлă тăрăшнăшăн вĕреннĕ Вырăссем вĕсене пĕтересех теççĕ пулмалла. Мĕншĕн тесен вĕсем халĕ чăваш ялĕсенче пăшăл-пăшăл пуплесе çÿреççĕ. Е тата çав икĕ паçăр каланă чăвашсем çинчен ырă мар сăмахсем сарса çÿреççĕ. Вара хура халăх хаярланса кайсан чăвашсене чăвашсемех хăваласа кăлармалла тăвасшăн. Чăвашсем! Ун пек каласа çÿрекен усалсене ан итлĕр! Вĕсен хыçĕнчен кайсан вара вĕсем кайран сирĕнтен лайăхлайăх тесе çÿрĕç!

**Сасă. "Хыпар" хаçат, 15№.**
**1917-мĕш çул, çĕртме уйăхĕн 27-мĕш кунĕ.**

## ШУПАШКАР

Шупашкар хулинче халĕ "Чебоксарская правда" ятлă хаçат тухать. Вăл хаçатăн редакторĕ - студент латыш Грасис. Эпир çав Грасиса епле редактор тунă-ши тесе тĕлĕнетпĕр. Мĕншĕн тесен вăл çыннăн пуçĕ хăй вырăнĕнче мар. Грасис вăл урнă йытă пек туйăнать. Урнă йытă кама та пулсан туласчĕ тесе чупса çÿренĕ пек, латыш та туламашкăн çын шырать. Ман сăмахсен тĕрĕсне ак çакăнтан курăр. Çу уйăхĕн малтанхи кунсенче Грасис Шупашкарта митинг туса "ирĕклĕх кивçене" укçа ан парăр тесе çăварне карнă. Вăл вăхăтлăха пулнă Тÿре-шарана шанма юрамасть тет, çавăнпа ăна укçа кивçен те ан парăр тет. Грасис вăхăтлăха пулнă Тÿре-Шарана анчах мар, Шупашкар хулинче пурăнакан пуçлăхсене те тулама хатĕрленсех çÿрет. Çак çĕртме (июнь) уйăхĕнче Сĕнтĕр Вăрринче (Мариинский Посад) вулăсри комиссарсем пуçтарăнса, канашланă. Грасисăн урнă ушкăнĕ пырсан, çав канаша унта кÿртмен. Вăл вара ним тума аптранипе чĕлхине çăварĕнчен кăларса часрах хăй ушкăнĕпе Шупашкара чупнă та

Шупашкар комиссарĕ Прохорова хирĕç хулара пурăнакан çынсене тăратнă. "Прохоров чăвашсене вырăссене хирĕç ал туййисемпе, ричаксемпе Шупашкара илсе килет" тесе хула тăрăх пăлхатса çӳренĕ.

Чăвашсем, Грасис мĕнле çын иккенне хăвăрах шухăшласа илĕр. Вăл пулман ĕçе пулнă тет. Вăл халăха усă тăвакан çын мар, вăл халăха тем чухлĕ сиен тăвать. Çавăнпа Шупашкарти урнă кашкăрсене чăвашсем ан итлĕр! Хăвăршăн тăрăшакан чăвашсене çеç итлĕр!

**Нолт.**
**"Хыпар" хаçат, 1917-мĕш çул,**
**çĕртме уйăхĕн 27-мĕш кунĕ. 15№.**

## ÇĂКĂР МУРĔ

Манăн пĕр пĕлекен çыннăмăн килтен кайман сăмахĕсем пур. Çав сăмахсене вăл час-часах çынсем умĕнче тытăнать асăнма. Сивĕре мĕнет çӳресе шăнса таварăнсан, пӳрте кĕрсе кăмака çине улăхса ларсан, савăнса! - "Эх! тет, - эпĕ патша пулсан, ялан çапла кăмака çинче ăшăнса кăна ларăттăм!", - тет.

Икерчĕ çиме ларсан та каллех çапла: "Эх! тет, эпĕ патша пулсан, ялан çапла çуллă икерчĕсем анчах çисе ларăттăм", - тет. Вулакансем, хăвăрах шухăшлăр халĕ! Çапла кăмака çинче ăшăнса ларса çуллă икерчĕсем анчах çиекен çынна патша теççĕ-и мĕн?.. Çук, ун пек çынна пирĕн чăвашсем "çăкăр мурĕ" анчах теççĕ.

**Ив.Юркин,**
**"Хыпар" 1917-мĕш çул,**
**çу уйăхĕн 1-мĕш кунĕ. 1№.**

## ЭЙ, ТĂВАН ЧĂВАШСЕМ!

Халĕ пирĕн те хамăр чĕлхепе хаçат туха пуçларĕ. Анчах хаçат çаптарма укçа пит нумай кирлĕ, пирĕн укçа пит сахал. Павел Тимофеевич Селиванов пулăшман пулсан, халь те эпир чăвашла хаçат кăларайман пулăттăмăр! Ăна ушкăн пĕтĕм чăваш халăхĕ пит тав тумалла.

Чăваш çыннисем, хăвăрăн хаçатăр ялан тухтăр тесен, хăвăр "Хыпара" пурте илме тăрăшăр! Чăвашсем, çут тĕнчере мĕн пулнине пĕлессĕр килсен, хăвăр "Хыпара" илĕр!

"Хыпар" пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн ырă, тĕрĕс, шанчăклă юлташ пулĕ.

**М.Филиппов,**
**"Хыпар", 1917-мĕш çул,**
**çу уйăхĕн 1-мĕш кунĕ.**

## РЕДАКЦИЯ CĂМАХĔ

1907-мĕш çулта, кăрлач (январь) уйăхĕнче чăваш хаçат сасси илтĕнми пулчĕ. Ĕлĕкхи патшан тарçисем тӳрĕ сăмаха юратман пирки чăвашла хаçат кăларма чарчĕç.

Çавăнпа ĕнтĕ вунă çул та тăвата уйăх иртрĕ. Пĕчĕккĕн- пĕчĕккĕн халăх патша йĕрки ырă маррине сиссе çитрĕ те ăна хăвăртрах вырăнтан кăларчĕ. Патшапа пĕрле унăн тарçисем те сапаланса пĕтрĕç. Эпир, Хусанта вĕренекенсем, каллех ĕлĕкхи хаçат ĕçне тапратрăмăр. Эпир ĕлĕкхи "Хыпар" хаçата кăларакан çынсем мар, анчах çав çынсем пекех хура халăха ырă, тӳрĕ пурнăç тума пулăшас тесе тăрăшатпăр.

Халиччен асапланса пурăннă хура халăха çăмăллăх тăвас тесен, пирĕн патшалăхри кивĕ йĕркесене йăлтах улăштармалла, вĕсен вырăнне ырă, çĕнĕ йĕркесем кăлармалла. Çав йĕркесене кăлармашкăн часах Патшалăх Пуху (Учредительное собрание) пуçтарăнмалла. Пирĕн те чăвашсен хамăр хушăран çав Пухăва ырă, ăслă çынсене суйласа ярас пулать, вĕсене хамăр Чăваш халăхĕшĕн мĕн кирлине ыйтма каласа ярас пулать. Çав майпа эпир вăй çитнĕ таран сире пулăшас тетпĕр.

**Хыпар. 1917. Çу уйăхĕн 1-мĕш кунĕ.**

## ШУПАШКАР

Атăлăн сылтăм енче Шупашкар ятлă хула пур. Çав Шупашкар уесĕнче 115 пин (115000) чăваш пурăнать. Ĕлĕк Шупашкар уесĕнче чăвашсем вырăссенчен нумайтарах пулсан та, вĕсене ырă тăвас теекенсен çын пĕрре те пулман. Анчах Турă пулăшнипе чăвашсене пулăшакан çын унта та пулчĕ. Çав çын Шупашкар хулин комиссарĕ Трофим Прохоров. Вăл комиссара ларни нумаях пулмасан та чăвашсене чылаях усă курчĕ... Ака уйăхĕн 18-мĕш кунĕнче Шупашкарта çуркуннехи праçник (ĕç праçникĕ) тума шухăшланă. Çав праçнике лайăх тăвас тесе Земская Управа 500 тенкĕ салатма пулнă. Прохоров çав укçана Çуркуннехи праçник тунă çĕре салатма паман, халăха вĕрентмелли ĕç патне пама хушнă. Тата укçине салатма шухăшласан та уйăрса мĕнле халăх нумайрах çавăн валли укçа ытларах каймалла тутарнă та, вара чăвашсене 500 тенкĕрен 360 т. 28 пус тивнĕ. Çак укçана вара Управа праçник тунă çĕре салатас вырăнне Хусана хаçат кăларнă çĕре янă. Прохоров чăвашсене анчах мар, кирек кама та усă кӳрет. Акă нумаях пулмасть Шупашкарта земское собрание пулчĕ. Çав собранинче вĕрентекенсем те пулнă. Анчах вĕсем сапаланчăк ларнă пирки пĕр шухăшлă пулса хресченсем майлă

калаҫма пултарайман, гласныйсене хирӗҫ те тăрайман. Ҫакна курса Прохоров вӗсене хăваласа пекех пӗр ҫӗре лартнă. Чăнахах та вӗсем пӗр ҫӗре ларсан пӗр-пӗринпе канаш тума пултарнă та вара халăх майлă мар калаҫакан ытти гласныйсене хирӗҫ тăма пултарнă. Халăха хирӗҫ тăракан ҫынсем Шупашкарта лăках пулнă, анчах вӗсем ҫинчен халăх пӗлмен. Прохоров Шупашкарта пурăнакан студент Грасиспа ҫавсем тунă таса мар ӗҫсене ҫиеле кăларнă. Ҫавăншăн Прохоровпа Грасиса Шупашкарта нумайăшӗ юратмаҫҫӗ. Прохорова вырăнтан кăларасшăн та тăрăшаҫҫӗ. Шупашкар ҫыннисем! Пирӗн хулара чăвашран пуҫлăх нихҫан та пулманччӗ. Халӗ ӗнтӗ чăвашран та пуҫлăха туха пуҫларӗҫ. Ҫавăн пек ҫынсене Турă пулăштăр! Чăвашсем чăваша манмӗҫ, вӗсене усă кӳрес тесе тăрăшӗҫ. Ҫавăнпа пирӗн вӗсене пулăшас пулать, урăххисем вӗсене вырăнтан кăларас тесен, пирӗн кăларма парас пулмасть. Чăвашсем, пӗрлешме тăрăшăр! Ҫакна ан манăр.

**Ширновой йăхӗ Н.**

**Хыпар, 1917. Ҫу уйăхӗн 7-мӗш кунӗ. 2 /.**

## ЧĂВАШСЕН МАРСЕЛЬЕЗИ

Тирансене патшалăхран
Хăваласа салатрăмăр,
Вӗсенӗн тискер аллинчен
Патшалăха хăтартăмăр.

Хупса лартрăмăр тӗрмене
Мӗскӗн халăхсен юнне
Сӗлӗх пек ӗҫекенсене,
Халăхран кулакансене!

Эпир ҫӗр ҫулччен халăхшăн
Куҫҫулӗпе йӗрсе ӗҫлерӗмӗр,
Нумайӗш пирӗн ушкăнран
Ҫул ҫинче пӗтрӗҫ вăхăтсăр.

Вӗсен пурнăҫӗ тӗрмере
Турăш умӗнчи майӗпе
Сӳнекен таса ҫуртасем пек
Сӳнсе ларчӗҫ хӗсӗклӗхре.

Яппун вăрçинче пăлханса
Çĕнĕ йĕрке тăвас тесе
Ăмăрт кайăк çунатланса
Вĕçнĕ пек кайрăмăр вĕçме.

Пире ун чухне патшашăн
Тата хăйсен пурнăçĕшĕн
Çунакан усал этемсем
Тĕрмене хупса пĕтерчĕç.

Нумайăшне пире çакса
Вĕлерчĕç, тата Çĕпĕре
Хăваларĕç сивĕ çĕре,
Пиртен кулса мăшкăларĕç.

Хавасланмашкăн тытăнчĕç
Авалхи йĕрке çыннисем,
Пирĕн йĕрке ĕмĕрне те
Пулмасть тесе хавасланчĕç.

Ухмах этемсем, чăнлăха
Епле пытарма пултарăр,
Эсир пĕлмесĕр чăнлăха
Унтан мăшкăлласа култăр.

Ак паянхи кун ирĕклĕх
Çĕнĕ йĕрке сиксе тăчĕ.
Пирĕн юн тăкни ахалех
Тăвансем, çапах çухалмарĕ.

Тирансене патшалăхран
Хăваласа кăтартрăмăр,
Вĕсенĕн тискер аллинчен
Патшалăха хăтартăмăр.

Пĕтĕм Раççей те савăнать
Тирансене пĕтернĕшĕн.
“Ура” тесе хыт кăшкăрать
Ирĕклĕ çĕнĕ ирĕкшĕн.

Мĕн пур чăваш халăхĕшĕн
Эп те çĕнĕ ирĕклĕхшĕн
Мĕн пур чĕререн кăшкăрса
Чăваш чĕлхипе "ура" теп.

**А.Милли.**
**"Хыпар". 1917, Май 7, 2 /.**

## КУШЛАВĂШ МĂНАСТИРĔ ÇИНЧЕН

Етĕрне уесĕнче Кушлавăш ятлă чиркÿллĕ ял пур. Çав ялтан инçех те мар сăрт çинче, вăрман хĕрринче аякранах хĕвеллĕ кун хăйĕн хĕресĕсене йăлтăртаттарса-çутатса Кушлавăш ятлă мăнастир ларать. Çулла пулсан та çав мăнастире таçтан-таçтан йĕри-тавра чăваш халăхĕ пуçтарăнать. Ун чухне вара пÿртсенче шăнăçайманнипе çынсем урамра та çывăраççĕ. Кăнтăрла кĕлĕрен тухса каннă вăхăтра картиш варринче тата Кушлавăш шывĕ хĕрринче курăк çинче хĕрарăмсем хур ушкăнĕсем пек шап-шур курăнса ушкăн-ушкăнĕпе лараççĕ. Çав Питрав вăхăтĕнче тата ытти типĕсенче унта мĕн чухлĕ халăх пырса каймасть пулĕ, вĕсем çав мăнастире мĕн чухлĕ укçа хăвармаççĕ! Çавăнпа, чăваш çыннисем (турра пуç çапма мăнастире çÿрекенсем) укçа нумай панипе те çав Кушлавăш мăнастирĕ çав тери хăвăрт пуйса кайрĕ! Вара вăл мăнастире пуçласа яни нумай пулать-и? Нумаях та пулмасть, пĕр вăтăр çула яхăн анчах. Çав кĕске вăхăтра халапри пек нимскер те çук çĕртен уçланкă сăрт хĕрринче, халĕ илемлĕ, чаплă çуртсем лараççĕ. Ик хутлă чул çуртсем, пысăк чул чиркÿ туса лартрĕç. Темиçе çĕр манашкă хĕр пурăнать. Çулла пулсан çав илемлĕ мăнастирĕн сад пахчинче тем чухлĕ çимĕçсем тăваççĕ! Эп хам çав мăнастире кайса курманни пĕр вунă çул ытлашшипех пулать! Ун чухнех вăл пуянччĕ, чаплăччĕ! Халĕ тата ытларах вăйлăланса кайнă теççĕ! Эп пырса курнă чухнехинчен халь темиçе хут ытларах пысăкланнă, чапланнă теççĕ! Тата çитменнине нумай пулмасть Кушлавăш мăнастирĕ панчен чукун çул иртсе каймалла тунă, çавăн пирки вăл пушшех пуйса кайма пуçланă. Унтан чукун çулĕ май нумай çын çÿрет Манашкăсем кулач (шур çăкăр) пĕçерсе сутнипе тата чейсем ĕçтернипе мăнастиршĕн питĕ нумай укçа тупаççĕ. Çав укçасем пурте кам çине каяççĕ-ши тата вĕсене ĕçлесе тупакансем камсем-ши? Çав укçана ĕçлесе тупакан хĕрсем пурте тенĕ пек чăваш хĕрĕсем! Вĕсене çĕрĕ-çĕрĕпе ырми-канми асаплантарса ĕçлеттереççĕ! Эп çавна пит лайăх пĕлетĕп! Тата эпĕ чăваш манашкисем асапланса ĕçленĕ вăхăтрах вырăс манашкисем ĕççĕр пурăннине те, чăваш хĕрĕсенчен мăшкăлласа кулнине те пит аванах пĕлетĕп! Çапла мăшкăлласа кулни, чăваш хĕрĕсенчен йĕкĕлтетни камран тухса тăнине пĕлме те йывăр мар. Пирĕн чăвашсем "Кĕтÿç мĕнле, сурăхсем çавăн пек"

тесе каланă тăрăх шухăшласан ак мĕне пĕлме пулать. Çав Кушлавăш мăнастирĕнче пуçлăх вырăс хĕрĕ, тата чăваша юратманскер. Çавăн пекех пачăшки те унти пĕри Красновĕ чăвашсене курайман япала... Çавăнпа унти пуçлăхсем çавăн пек пулсан чăваш хĕрĕсене асаплантарнинчен, вĕсенчен йĕрĕнсе тăнинчен ним чухлĕ те тĕлĕнмелле мар. Чăвашран куласси вăл шухăшла пĕлмен вырăсшăн ним те мар. "Асаплан, çун, ĕçле!" ак мĕнле сăмахсем калама пултарнă çавăн пек таса мар шухăшлă çынсем! Вĕсем нихçан та чăваш чунне те пĕлмен... Вĕсен шухăшĕпе чăваш çиме пĕлет, унтан ĕçлеме пĕлет тата хăрама пĕлет - ак мĕнле шухăшланă пирĕн çинчен çавăн пек çынсем, халĕ те вĕсем çаплах шухăшлаççĕ... Халех эпир вăранмасан, хамăршăн хамăр тăрăшмасан, пирĕн çинчен вĕсем малашне те çаплах шухăшлĕç, пире хăйсен мăшкăлăç таса мар урисемпе таптаса тăрĕç. Чăваш çыннисем, хĕрĕсем, арăмĕсем, ваттисем, çамрăккисем! Вăранăр: сирĕн вăранма вăхăт çитрĕ!

Каçарăр мана, юратнă чăвашсем! Эпĕ сире Кушлавăш мăнастирĕ çинчен çырма тытăннăччĕ, таçта çырнă çĕртен пăрăнтăм, унти пурăнăç çинчен калама тытăнтăм. Эпĕ чăваш хĕрĕсенчен вырăс хĕрĕсем кулни çинчен калама пуçланăччĕ. Халь çавăн çинчен пĕтерсех каласа парам...

Чăваш хĕрĕсем Кушлавăш мăнастирĕнче пуринчен нумай, пĕтĕмпех чăваш хĕрĕсем темелле... Анчах вĕсем нумай пулсан та унта пуçлăх пулса тăраканни вырăс хĕрĕ. Вырăс хĕрĕ пуçлăх пулни те ытлашши пысăках мар, анчах хĕрĕсене ăраснах хĕсĕрлесе усрани пĕртте аван мар! Вĕсем вăйĕпе, асапланса ĕçленипе мăнастир пуйрĕ те халĕ çав мăнастиртен чăваш хĕрĕсене хăваласа кăлараççĕ те, тата ним айăпсăрах хăвалаççĕ тет... Нумайăшĕ çав хĕрсенчен чылай пурлăха пынисем те пур. Тата вăл та тепĕр енчен хурлăхах мар, пуринчен нумай ĕçлемесĕр, асапланмасăр ырлăха кĕрсе ӳкнĕ вырăс хĕрĕсем асапланса мăнастир пурлăхне, вăйне пысăклантаракан чăваш хĕрĕсене хăваласа кăларни юрăхсăр япала! Çапла чăваш хĕрĕсене хăвалани халĕ, мăнастир пуйса çитсен ăраснах палăра пуçларĕ! Халĕ пуйса çитнĕ мăнастирте пурăнма пит аван! Халĕ чăваш хĕрĕсем мăнтăрланса, шыçмакланса кайнă “игумения аннесене” кирлĕ мар! Вăл ĕмĕрех çавăн пек çав! Пĕри ĕçле, тепри ырлăх кур, тепри куççуль тăк, тепри савăнса тăр! Çук, Христос пире апла вĕрентсе хăварман! Вăл мĕскĕнсене, йăвашшисене шеллеме хушнă, вĕсенчен мăшкăлама хушман!... Чăваш çыннисем! Малашне апла мар! Кушлавăш мăнастирĕ чăвашсем хушшинче, вăл пĕтĕмпех чăваш укçипе, чăваш хĕрĕсем асапланса ĕçленипе пулса тăнă мăнастир! Çавăнпа унта хĕрĕсем ырă курса пурăнмалла мар: вăл вырăн чăвашран, чăваш хĕрĕсенчен мăшкăлласа кулса пурăнмали вырăн пулмалла мар! Ăна мăнастир тесе ахаль каламаççĕ, вăл таса вырăн! Чăваш тăрăшнипе пулса тăнă мăнастир чăваш халăхнех пултăр! Унта чăвашла кĕл

туса, чăвашла юрласа чăвашсен чĕрисене савăнтармалли вырăн пулмалла. Чăваш хĕрĕсем куççуль тăкмалла вырăн пулмалла мар. Çав мăнастир укçине чăваш хĕрĕсене вĕренмелле шкулсем уçас пулать! Малашне унти пурăнăça йăлтах урăхлатса ямалла! Чăваш çыннисем! Ан манăр эпĕ каланисене! Çав мăнастир çине хăвăр вăйпа туса лартнă мăнастир тесе пăхăр! Çав мăнастир чиркӳвĕн хĕрĕсем малашне çĕнĕ çутăпа çуталччăр, унтан сирĕн валли чуна савăнтаракан Турă юррисем чăвашла чĕлхепе илтĕнччĕр!

***А.Миллин***

***Хыпар, 1917. Çу уйăхĕн 12-мĕш кунĕ. 3/.***

## ХАТĔРЛЕНĔР!

Нумай пулмасть эпĕ чăвашсем мĕн ĕçленине, мĕн шухăшланине пĕлес тесе киле кайса килтĕм. Килте темĕн тĕслĕ сăмахсем, хыпарсем илтсе килтĕм, анчах савăнтармалли нимех те çук. Шемшер вулăсĕнче (Шупашкар уесĕ) тиек халăха çирĕм пилĕк тенкĕ куланай пулать тесе пăлхатать.

Шупашкар уесĕнче Грасиспа пĕр шухăшлă çынсем хресченсемпе хресчене вăрçтарасшăн тăрăшса çӳремеççĕ.

Çĕрпӳ вулăсĕнче икĕ ял çĕршĕн çапăçма тытăннă. Шоркисри патĕнче халăх патшалăха вăрçă валли вутă парас мар тесе тăрăшать.

Çавăн пек пăлхану халăх хушшинче чарăнмасăрах тăрать теççĕ. Патшалăха йĕркене кӳртекен Пуху çинчен мĕн шухăшларăр тесен, никам та нимĕн те калама пултараймасть: хăшĕ "пирĕнсĕр пуçне те тăвĕç-ха унта" теççĕ. Унта хатĕрленес шухăш никамăн та çук, пур вăхăта пăлханса анчах ирттереççĕ.

Тăвансем, чăн малтан Учредительное Собрание çын яма ха-тĕрленес пулать. Учредительное Собрание - йĕркесене татса парать. "Пирĕнсĕр пуçне тăвĕç" тесе калама йĕрке çук, мĕншĕн тесен Учредительное Собрание пĕтĕм халăхăн сасси пулмалла.

Чăваш сасси те унта илтĕнтĕр тесен, сирĕн хушăртан вĕреннĕ, халăх шухăшне тытакан çынна ярас пулать. Анчах çын темле вĕреннĕ пулсан та, пĕтĕм уес пурнăçне лайăх пĕлсе тăмасть. Çавăнпа сирĕн малтан вулăспа, унтан пĕтĕм уеспа шут туса хăвăр суйланă çынна наказ çырса парас пулать. Çавна пĕтĕмпе тума шухăшласан, çапăçма-вăрçма вăхăт пулмĕ, çапăçнинчен усси те çук: мĕншĕн тесен эсир çĕршĕн темĕн чухлĕ çапăçсан та, сирĕн ĕç Учредительное Собранисĕр пуçне татăлмасть: вăхăтлăхшăн çынна хĕнесе туртса илни усă çук.

***А.В.***

***Хыпар, 1917. Çĕртме уйăхĕн 27-мĕш кунĕ. 15 /.***

# ÇĔРПӲ ПУРНĂÇĔ

Пирĕн патшалăхра пур çĕрте те пĕр канаш туса пĕр çын пек пурăнасчĕ тесе калаççĕ. Çав сăмах пирĕн Çĕрпӳ хулине те çитрĕ, анчах çыннисем пĕрлешсе ĕçлес тиекенсен сахал. Пирĕн хулара тĕслĕхрен комитетсем тунă, халăхпа суйласа уест пуçлăхне те лартнă Вороновский хушаматлă çынна. Çав суйланă çынсем тăрăшас пулсан ĕçĕ те ăнса пымалла; суйланă çынсем халăхшăн ĕçлеме васкамаççĕ, хăйсемшĕн анчах, лайăхрах вырăна пысăк шалу илме тăрăшаççĕ.

Вырăна суйланă çынсем хăшĕ хăйсене вырăнтан ан кăларччăр тесе хăйсем майлă çынсем пухма тăрăшаççĕ. Çынсем хăйне майлă пулччăр тесе тăвас мар ĕçе туса парап сире тесе ĕнентереççĕ. Ун пек çыннăн пăртак та пулин суйланă вырăнта пурнас килет пулмалла. Ун пек пуçлăха кĕнĕ çынсемпе эпир малалла каяс çук, тăвас ĕçе пĕтерсех пыраççĕ. Малалла мĕн пуласса шухăшлакан сахал. Ял хушшинче Хура халăх пурнăçне пĕлекен çынсем сахал; мĕн тусан халăха çăмăл пуласси çинчен никам та шухăшламасть. Пирĕн Уездный Земский Управа та халăха вĕрентме чĕннĕ çын пур, ăна Борис Сергеевич Маландин теççĕ. Вăл управта виçĕ çул пурăнать халăха вĕрентекен тесе. Ялти çынсем ăна çак таринччен виçĕ çул хушшинче халăха вĕрентнине курман та. Вăл ялсене тухса вĕрентсе çӳремен ку таранччен, эпир ăна уйăха çĕр (100) тенкĕ ытла тӳлесе тăратпăр хура халăха вĕрентнĕшĕн. Çав Маландинăн çак вăхăтра ялтан яла кунĕн-çĕрĕн вĕрентсе çӳрес пулать, мĕнле тусан хура халăха çăмăл пулассине çынсене каласа кăтартас пулать. Çапла тăвас шухăш Маландинăн асра та çук. Пĕлет пĕр сăрана ĕçмешкĕн, вăл (Маландин) сайра урă çӳрет, хăш чухне халăх пухуне те (собрание) ӳсĕр пырать. Вăл сăра тесен таçта кĕрсе каятчĕ. Пирĕн хуларан икĕ çухрăм Çĕнĕ Катек ятлă ял пур, çав ялта хăш çынсем сăрана лайăх яла Маландин час-часах каять: анчах халăха вĕрентме мар, сăра ĕçме! Нумай пулмасть. Çĕрпӳ комитетĕнче çак Маландин ĕçрен аптăраса, хулара пурăнакан нимĕççемпе, Австрий çыннисене ялсене салатас теме тапратнă. Нимĕççем пирки пур япала та хакланчĕ, пурăнма хваттер те хулара çук тет. Анчах ялсем тăрăшнипе Австрий çыннисем хуларах юлнă. Ун пек çынсем, Çĕрпӳри хуçасем хăйсен илнĕ тыррине, тăварне, вăрттăн хуларан кăларса ют çĕре турттарнине сиссен те пĕлместпĕр: илтмен, курман, теççĕ.

Тата пасар вырăнне куçарас тесе комитетра тапратнă, вăл та пулман Çĕрпӳре. Манăн шухăшпа халĕ çав ĕçрен пуçне те нумай тăвас япаласем пур. Çуркунне нумайăшĕ ялти çынсем вăрçа ярас тырра кам патне турттарас тесе ыйтатчĕç, анчах вĕсене тыră кам патне турттармаллине

никам та каласа паракан пулмарӗ. Ку таранччен Курбатовпа Барашовпах вăрçă тыррине илсе тăраççӗ. Халăх çав хуçасене шанмасăр парас тырă та турттармаççӗ вӗсем патне. Çапла пурăнатпăр эпир Çӗрпӳ хулинче.

***"Ялти çын".***
***"Хыпар" хаçат, 15/, 1917-мӗш çул,***
***çӗртме уйăхӗн 27-мӗш кунӗ.***

## "ЧĂВАШ"

Чăнахах тахăш чăвашсем хăйсем чăваш юнӗнчен пулнă пулсан та "чăваш" тенӗшӗн пит хурланаççӗ, чăвашсене вăрçаççӗ те хăшчухне. Эпӗ хамăн кӗске ӗмӗртен курнисене сире калам-ха. Хӗлле кăнтăрла иртсен эпӗ пӗрре Хусанта арăмпа пыратăп. Ман умран икӗ вӗренекен арçын ачасем пыраççӗ, вӗсем умӗнче икӗ майра. Пырсан-пырсан сасартăк "чăвашленок" тенӗ çинче сасă умран килсе хăлхана çурсах ячӗ. Эпӗ мӗн пулчӗ-ши тесе малалла тинкерсе пăхрăм. Ман умран пыракан пӗр ачи тăп чарăнчӗ, пичӗ хăмăч пек хӗрелсе кайрӗ, çавăнтах шурă пир пек шуралса тăчӗ, унтан кăвакарчӗ. Хăй сиввӗн малалла пăхрӗ те юлташӗпе кунтан çаврăнса кайрӗ. Вӗсен ӗçӗ епле пуçланса кайнине эпӗ астăваймарăм, анчах чăваш чӗппи тенӗшӗн епле вăтаннипе, хурланнине, çилленнине пит лайăх астурăм. Çав ӗç халь те ман куç умӗнче тăрать. Халь те çапла чăваш тенӗшӗн хӗрелес-ши?

Нумай пулмасть хаçат тухсанах эпӗ пристансем патне хаçат сутма кайрăм. Çӳресен-çӳресен пӗр пăрахут çине çитсе кӗтӗм. Акă унта виçӗ çын чăвашла халап çаптараççӗ. Эпӗ чăвашла калаçнă сасă илтнине савăнтăм та вӗсен умне сиксенех ӳкрӗм. "Чăвашсем, чăвашла хаçат тухрӗ, илетӗр-и? " - терӗм. "Мӗн-мӗн" терӗ пӗри мана хирӗç вырăсла. Эпӗ тепӗр хут хамăн сăмахсене каларăм. Вăл татах вырăсла "пире чăвашла хаçат кирлӗ мар" терӗ. "Мӗншӗн?" терӗм эпӗ. "Чăваш чӗлхи чӗлхе те мар, чăвашран начар халăх тӗнчере çук"... Çапла темӗн те пӗр каласа чăвашсене вăрçса пӗтерчӗ. "Эсӗ ху чăваш пуçупа епле чăвашсене вăрçатăн?.." тесе аран каласа ӗлкӗртӗм. Вăл мана таçта шуйттан шăтăкне кайса кӗмелли сăмахсем каласа хучӗ те эпӗ "чăвашсем хушшинче те иудасем пур иккен" тесе хуйхăрса утрăм урăх çӗрелле. Халӗ те çавăн пек чăвашла вăрçакан чăвашсем тӗнчере пулӗç-ши, çук-ши, çавна пӗлӗç-ши, çук-ши, çавна пӗлес килет. Чăваша вăрçакан чăваш мӗнле этем пулмаллине хăвăрах шухăшласа илӗр! Вăл лайăх çырупа вӗреннӗ çын мар, хулара çӗтӗк-çатăк çапкаланса çӳрекен анчах.

Хăй вăл çуррине вырăсла, çуррине чăвашла калаçать, унăн çинче

тулчукри пиншак, уринче пушмак. Вăл ăçта служить тунине калама пĕлмелле мар.

Пыра киле пĕр чăваш та хăйĕн чăвашлăхне вăрçмĕ тесе ĕненес килет.

***Й.М.***

***Хыпар, 1917. Çĕртме уйăхĕн 8-мĕш кунĕ. 10 №.***

## ХĂШĔ ИРТСЕ КАЙНĂ

Пĕрре акăлчанпа (англичанин) пурнăç хакланса кайни çинчен сăмах тапратнă.

Пирĕн, терĕ акăлчанĕ, хака чакарма мĕн пурĕ 1387 Потребительски ушкăн пур.

Уу! Пире çитесси сирĕн инçе-ха, пирĕн 10900 ушкăн, - терĕ вырăс çынни лешне каласа пĕтерме чарсах:

"Халĕ пирĕн ушкăнсем сахалланса пыраççĕ, акă çакă 2 çул хушшинче 20 яхăн иксĕлнĕ", - терĕ акăлчанĕ.

Эх, хăвăр эпир вĕреннĕ халăх тетĕр, пирĕн чакма мар, çулне пиншер ÿссе пырать, - тесе пăрахрĕ вырăсĕ.

- Чăнах та пирĕн чакнă, мĕншĕн тесен вак ушкăнсем пĕрлешсе пысăкланчĕç, - терĕ каллех акăлчанĕ.

- Мм... Пирĕн пĕр-пĕринпе пĕрлешсен ĕç начар вара... Акă кăçал пĕрлешкелеççĕ сахăршăн... - терĕ вырăс çынни.

- Чăнахах пирĕн, акăлчансен, ушкăнсенче пайсем (членсем) нумай, вăтам шутласан 2075 çын пĕр ушкăнра, пур ушкăнсенче 2879 пин...

- Мм... Да, ну пирĕн те пур ушкăнсенче пĕр меллион çура яхăн пуçтарăнĕ...

- Англияра кашни ушкăн 571 тенк. оборот тăвать, пурĕ пĕрле 729 меллион тенкĕлĕх... - терĕ акăлчанĕ.

- Ну пирĕн - расссейскисем пурĕ пĕрле тăваççĕ пулĕ; пĕр 250 меллионлăх, унтан ытла мар, - терĕ вырăс ĕнсине хыçса.

- Вăл акă мĕншĕн, - терĕ акăлчанĕ, - пирĕн кашни член илсе хураççĕ, 276 тенк. ытла...

- Сирĕн тата пур-и эппин сассим илмелли? - терĕ çилленсе вырăсĕ. Ун пекки çук.

- То-то çапла çав, пирĕн япала сирте пĕри те çук! - тесе хучĕ вырăсĕ

***Земская неделя 37 №.***

***Кив-Ахпÿртри учитель М.Фадеев.***

***Хыпар. 1917. Юпа уйăхĕн 9-мĕш кунĕ.***

## АН КУЛТАРĂР!

Пирĕн хăш-хăш çĕрти чăвашсем хăйсем мĕн тунине чухласа илеймесĕр ытлашши васкаса çĕр тĕлĕшĕпе тавлашу, çапăçу кăлара пуçланă тесе Хусана хыпар килет. Чăвашсем, лайăхрах шухăшласа илĕр-ха? Эсир пĕр-пĕринпе пĕрлешес вăхăтра тавлашу хускататăр-и? Сирĕн тавлашăвăр (кам майлă) кама пулăшнипе пĕлеттĕр–и? Пĕлместĕр пулĕ çавă, тăвансем, пĕлсен апла тумастăрччĕ, мĕншĕн тесен эсир пĕр-пĕринпе тавлашни, турткалашни ĕлĕкхи патша майлă çынсене пулăшать. Вĕсем эсир тавлашнине курсан: "Пăхăр-ха çав чăвашсене, ирĕке тухрĕç те, пĕр-пĕринпе те пурăна пĕлмеççĕ, вĕсене тимĕр сăнчăрпа кăкарса тытнинчен ырри çук иккен тейĕç. Вĕсен патшасăр пуçне пурăна та пĕлмеççĕ, вĕсене патша кирлĕ тейĕç. Çавăнпа чăвашсем хăвăр ятăра хăвăрах ан сутăр. Кирек мĕнле ĕçе те сасартăках тусассăн пит лайăхах пулаймасть. Ытларах та çĕр уйăрасси пит йăвăр япала. Çавăнпа эсир çĕр уйăрма ан хыпаланăр. Патшалăх Пухуне йĕрипе кĕтсе тăрăр. Илмелли-памаллине кайран пурне те закон тăрăх илĕр те парăр.

***М.Филиппов.***
***"Хыпар". 1№, 1917-мĕш çул,***
***çу уйăхĕн 1-мĕш кунĕ.***

## ЧĂПТА ÇАПАКАНСЕМ

Йĕркеренех ялсенче
Лутра çурт та пĕчик пӳрт,
Çийĕ улăм, чӳрече
Вулакана ăшне кӳрт.

Унăн ăшне астăвăр:
Çутă та мар, шăшлă та.
Куçпа пăхса çаврăнăр:
Курăспала хăй чăпта.

Тăрать чăпта умĕнче
Шурса кайнă яш-ача,
Ăна хирĕç леш енче
Тăрать пĕчик хĕр-ача.

Алăк панче курăнса
Курăс чĕрет тепĕр хĕр.

Пур те ёçлет васкаса,
Хам пĕлместĕп, мĕншĕн-тĕр.

Хĕлĕн вăрăм çĕрĕнче,
Вĕсем тăнă çурçĕрте,
Кунне ура тăринче,
- Ĕçĕ ăнмасть нимĕн те.

Курăс тусанне çăтса
Кăкрисене лартаççĕ,
Аптранипе ывăнса
Хăйсем юрă юрлаççĕ.

"-Чуп, чуп, лашам, чуп лашам,
Çитес çĕре çит лашам,
Çитес çĕрте сăра пур,
Хĕпĕртетме сар хĕр пур.

Çап, çап, ачам, чăптуна,
Чăтса ирттер ыйхуна,
Хуйхă-суйхă çийĕнче
Иртет пирĕн çут тĕнче.

Атей-апай çылăхĕ
Çитрĕ пулĕ пирн çие,
Ырă çынсен ырлăхĕ
Пулман пирĕн телее.

Çап, Ентимен, стерепална,
Хытăрах ту чăптуна;
Яр, Натали, йăпуна,
Çын хушшине эс те кĕр.
Алăк панчи Кульуна,
Кулянмасăр курăс чĕр.

Пирĕн ĕмĕр, яш ĕмĕр.
Иртет чăпта умĕнче,
Пурнăç тытас терĕмĕр,
Çанпа курăс кутĕнче.

Эх, чуп, лашам, ан ўркен,
Çула тухсан çулна чав, -
Пушăм юлнă атейрен,
Сĕлĕ тесен - яр йыхрав.

Ĕçлĕр, ĕçлĕр, ачасем,
Каçăр часрах чăптине,
Пирĕншĕн карсак куклисем
Лартман халĕ кăмакине.

Ĕçлĕр, ĕçлĕр, ан чарнăр,
Каç пулсассăн тин канăр.
Апат пултăр умăрта,
Ĕçĕ пыртăр аларта.

Çапсан, çапсан майĕпе
Çитĕпĕр-ха çынсене,
Шупашкарта чăптипе
Илетĕп-ха укçине."

Пирĕн патри чăвашсем
Çапла чăпта çапаççĕ.
Çапла чăпта ачисем
Мĕскĕн юрă юрлаççĕ.

Чăпта хакне хушманран
Аптрать чăпта çапакан:
Кам вĕсене пулăшĕ,
Ăна пулĕ тупăшĕ.

**Н.В.Шупос-çынни.**
**Хыпар. 1917. Çĕртме уйăхĕн 23-мĕш кунĕ. 14№.**

## ВĂРÇĂ

Çĕртме 8-мĕшĕ. Хĕвел анăçĕнчипе Румын фронтĕнче пăшалран пĕрне-пĕри переççĕ.

Кавказри фронт. Эрзинджанран кăнтăрларах куртсем пирĕн салтаксене кунтан чакарнă, кайран вĕсене хăваласа кăларнă.

Англисемпе Хрантсуссен фрончĕ. Париж. 8-VI. Тăшман каç пĕтес умĕн пирĕн поситсене пит сапрĕ.

ПАРИЖ, 7-VI. Тăшман тупăран персе çĕмĕрнĕ вырăнтан пирĕн çине кĕме тытăнчĕ. Йўстениспа Шевре хушшинче тупăран переççĕ.

ГАВР, 7-VI. Çĕрле тăшман патрулĕ Диксмюдран кăнтăрлари пирĕн салтаксем çине пырса ўкнĕ. Пăшалран пенипе калле тарнă.

ЛОНДОН, 7-VI. Тăшман пирĕн çине виçĕ хут кĕнĕ хыççăн тăваттăмăшне кĕме пырса пурĕнче те кутăн чакрĕ.

ПАРИЖ, 8-VI. Ĕнер кермансем Вокоальонтан хĕвел тухăçнерех пирĕн çине кĕме хăтланчĕç. Анчах пирĕн салтаксем питĕ хытă çапăçнă пирки чакрĕç.

ИТАЛИСЕН ФРОНЧĔ. Ĕнер Азиаго ятлă ту çинче эпир тăшмансен тĕреклĕнлентернĕ çĕрне аванах сиен турăмăр. 52-мĕш дивизиян салтаксем Оригар ятлă вырăна туртса илнĕ, 936 çын тыткăна илнĕ.

Çак юлашки кунсенче пирĕн хĕвел анăçĕнчи фронтра тĕк тăрассинчен туха пуçларĕç. Пирĕн енчен те нимĕçсен енчен пĕчĕк ушкăнпа пĕр-пĕрин çине кĕме хăтланаççĕ.

Патшалăхăн вăта çĕрти кĕпĕрнесенчен ялан салтак ăсатнипе вăрçă патĕнче çын нумайланчĕ.

Пыра киле пирĕн салтаксем нимĕçсем çине кĕме тытăнчĕç тесе ĕмĕтленмелĕх пур.

**Хыпар, 1917 ç., çĕртме уйăхĕн 16-мĕш кунĕ. 12 №.**

## ПАТШАЛĂХРИ ЙĔРКЕСЕМ

### Çĕр ĕç министрĕ В.М.Чернов çĕр çинчен калани

Пĕтĕм Раççейри хресченсен депутачĕсен пухăвĕнче çĕр ĕç министрĕ Чернов çак иртнĕ кунсенче çĕр çинчен акă мĕн каланă:

Мана, социалистла министр, пĕр кунне эпĕ сирĕнпе калаçнăранпа çĕр йĕрки тăрăх мĕн туни çинчен каласа кăтартма ирĕк парăр. Хресченсем, "Патшалăх йĕркине кўме пуçтарăнмалла. Пуху пуçтарăниччен пирĕн çĕрпе мĕн тăвас пулать?"- тесе ыйтаççĕ. Вăхăтĕнче сутмалла мар, саклата пăрахмалла мар, тунипе туманни хресченсемшĕн те пĕр мар

Сут министрĕ Нотариуссем патне телеграмма парса çĕр тăрăх сутăилў тумалли хутсене çырса ан парăр терĕ. Эпĕ (çĕр министăрĕ) те çавăн пек саккун кăларас тесе вăхăтлăх Тўре-Шарана (Вр.Прав.) çырса патăм. Çавăнпа ĕнтĕ патшалăх йĕркине кўрекен Пуху пуçтарăниччен çĕре сутса илеймеççĕ", тесе каланă.

Кунтан малалла вара земельный комитетсем çинчен калама тытăннă

та, çавăнтах кĕпĕрнесенче, уессенче земельный комитетсене туса çитереймен пирки Главный Земельный Комитета халăх пуçтарăнса çитменнипе Главный Комитет те çĕр çинчен нимĕн те каласа татса пама пултарайманнине пĕлтернĕ.

"Çак çитес икĕ уйăхĕнче пĕтĕм Раççейĕпех çĕр ĕçлесе пурăнакан çынсене тума питĕ йывăр ĕçсене тăвас пулать. Хресченсене хăйсене мĕн кирли çинчен (хăйсем пĕлсе çитнипе) пурнăçа мĕнле çулпа ямаллине пĕлсе çитнине, пуçĕ-тăнĕпе çаварса илнине кăтартас пулать. Пĕтĕм Раççейре нихçан туман ĕç - вулăсри çемствăна членсене суйламалла пулать. Эпир министрсем - социалистсем çак ĕçе пысăка хуратпăр. Мĕншĕн тесен çакăнтан кайсан кашни вырăнтах хăйсене кирлĕ ĕçсене тума хăйсемех пултармалла тăваççĕ. Çакăнтан кайран çĕр комитетсене халăх хăй хушшинчен суйласа ярса тумалла пулĕ. Хресченсен çак çитес кунсенче çĕнĕ Раççейĕн çĕнĕрен тумалли ĕçĕсем мĕн чухлĕ пăхнине кăтартас пулать. Хамăр патшалăха çĕнĕрен туса лартас йĕркене хăйсен аллине илме пултарнине, питĕ кирлĕ вырăнсене хăйсем хушшинчен лайăх çынсене, çĕр ĕçлекен халăха мĕн кирлине пĕлекен, унăн кунăн-çĕрĕн пуçĕнчен тухман шухăшсене пĕлекен çынсене суйлама пултарнине кăтартас пулать. Патшалăх йĕркине кўрекен Пухура çĕр çинчен ĕç тума мĕн кирлĕ япаласене хатĕрлесе хума пултаракан çынна суйлама пултарнине кăтартас пулать.

Çĕр йĕрки тăрăх ĕç татма мĕн кирлине хатĕрлесе хурас ĕçе Вăхăтлăх Тўре-Шара хăй аллине илме пултараймасть. Сирĕн хăвăрăнах пĕрлешес пулать, ушкăнсем тăвас пулать, çĕр ĕçне мĕнле тумалли çинчен сирĕн хăвăрăнах каласа парас пулать. Патшалăхра мĕн пурри-çуккине, патшалăхри çĕр пуянлăхне çĕр ĕç тумалли (сельского-хозяйства) пуянлăхне хăвăрăнах хисеплесе (шутласа) пĕлес пулать.

Çĕр йĕрки тăрăх ĕç татма (земельная реформа) мĕн кирлине хатĕрлесе хурас ĕç хăвăр алăра кĕрет. Патшалăх йĕркине кўрекен Пуху сире çак ĕçе пĕтĕмпе туса парать.

Эсир, хресченсенчен тухнă ăслăрах çынсем, хресченсене ертсе пыракан çынсене кăтартма пултарасран, сирĕн сасса никам сассинчен ытла итленине кăтартма пултарсан, вара хресченсем сирĕн хыççăн анчах пырĕç, сиртен уйрăлса никампа та каймĕç. Анчах халăха ертсе пыма пултарнине сирĕн халь вулăс е çĕр комитетне суйланă чухне кăтартас пулать.

Çакна эсир халех кăтартма пултарсан, Патшалăх йĕркине кўрекен Пухăва та лайăх суйлама пултарнине пĕлтерĕр.

Эсир халь калаçатăр анчах, часах ĕç патне те çитмелле пулĕ.

Çĕре кама парасси çинчен, халăха мĕнле валеçесси çинчен çĕршĕн укçа тўлемелле-и, тўлемелле мар-и, çакăн çинчен те сире Тўре-Шара мар, çук. Çаксем çинчен хăвăрах Патшалăх йĕркине кўрекен Пухура каласа

парăр! Çавăнпа çаксем çинчен мĕн каламаллине хăвăрăнах малтан çĕр комитетсенче ĕç татас пулать.

Раççей халь тăшманпа вăрçать, ăна йывăр килчĕ, фронтра та, вăрçăран аякри (тыл) пурăнакансем те хытă тăрăшас пулать. Çĕр комитечĕсенче ĕçленĕ чухне те çынсене, хăш-хăш вырăнта пурăнакан çынсене анчах лайăх пултăр тесе тăрăшас пулать.

Тырăпа суту-илÿ тăвасси патшалăх аллинче анчах (хлебная монополия) пулмалла тунă чухне земствосен нумай тăрăшмалла пулать, çак ĕç лайăх пуласси вĕсенчен те килет.

Çĕре вăйпа туртса илес пулмасть, кашни йăлан е ушкăнăн хăй пĕлнĕ пек пĕччен тума юрамасть. Уйрăм тусан хресченсен пĕр-пĕрин çине çилленмеллине, пĕр-пĕринпе вăрçмалла пулĕ, пĕр-пĕрне ĕненми пулĕç, курайми пулĕç. Çĕр йĕркине çĕнĕрен тăвакан çынсен вĕсене пур çĕр ĕçлекен çынна та ырă сунмалла тăвас пулать.

Хăвăрах шухăшласа илĕр-ха: пĕр вырăнта çĕр нумай пулĕ, ун çумĕнчех сахал пулĕ. Çĕр нумай вырăнта пурăнакан çынсем çĕре туртса илсе хăйсен хушшинче анчах валеççсен, вĕсенчен туртса илме çĕр улпăчĕсенчен туртса илнинчен те йывăртарах пулĕ, мĕншĕн тесен çĕр улпăчĕсем сахалланнăччĕ, вĕсем нумайăн пулаççĕ.

Эпир Раççейре пурăнакан хресченсене çĕр пĕр тан валеçес тесе тăрăшатпăр. Анчах хресченсем халăх çĕре туртса илсе хăйсем хушшинче валеçсе хурсан, кайран танлаштарма йывăр пулать. Çакăнтан хăрас пулать.

Çĕре каллех туртса илес теекенсене эпĕ казаксен çĕр çинчен каласа парас тетĕп. Казаксем хушшинче çĕре халăх уйăрма, валеçме пулсан, хресченсемпе казаксем пĕр-пĕринпе вăрçса вилĕç.

Эсир паянхи кун çинчен анчах мар, ÿлĕм мĕн пулассине те шăхăшлăр. Раççейĕн паянхи кунсем çинчен анчах мар, Патшалăх йĕркине кÿрекен Пуху хыççăн килекен кунсем çинчен те шухăшлăр.

Нумайăшĕ çĕре укçасăр илмелле тусан, хуттора тухнă çынсене мĕн тăвас пулать тесе ыйтаççĕ. (...) Патшалăхра хуттора тухни миçе çынне тĕрĕс хисеплесе хуман, çавăнпа вĕсем нумай-и, сахал-и ун çинчен тĕрĕс калама пулмасть. Шыва каякан путма пуçланă çын пĕр хăма татăкки тупсан унпа çăлăнас тет те ытти путакан çынсенчен тарма тăрăшать. Хуттăрпа креппите тухнă çынсем те çавăн пекех лайăххрах çĕр пĕр татăк уйăрса илсе ыттисенчен уйăрăлса кайма тăрăшнă. Çакна саккун кăларакан кивĕ пуçлăхсем тунă. Йытăсене вăрçтарас тесен вĕсене пĕр шăмă пăрахса параççĕ, çавăн пекех ĕлĕкхи пуçлăхсем те хресченсен çĕр сахаллине пĕлсе хресченсене вăрçтарма хуттăра тухмалли саккун кăларса панă.

Çĕр ĕçне тунă чухне ĕнтĕ кăмăллă тăвас пулать, çĕр çине путакан çын хăма çине пăхнă пек пăхас пулмасть.

Çĕр Комитетсем туса вĕсенчен ырă курмалла тăвăр. Хăвăр хушшăртан çĕр комитетне çын суйланă чухне пĕтĕм халăха мĕн кирлине пĕлекен çынна, пур халăха та пĕр-пĕринпе килĕштерсе çĕр ĕçне тума пултаракан çынсене суйлăр!

Эпĕ эсир çакна тума пултаратăр тесе шухăшлатăп, эпĕ ĕненетĕп, тенĕ.

Чăвашсем, çак çĕр ĕç министрĕ Чернов каланă сăмахсене эсир пĕр хут мар, темиçе хутах вуласа тухăр, çĕр тăрăх калаçма тăрсан аса илĕр!

**Ш.Н.**

**Хыпар. 1917. Çĕртме уйăхĕн 16-мĕш кунĕ. 12 №.**

**"Ăс пани" рубрикăпа тухнă материал**

## ПУРНĂÇ ЙĔРКИСЕМ

**1917 çул, çĕртме уйăхĕн 7-мĕш кунĕ /пуçл. 14, 15, 16, 18, 19, 21 №№/**

### VI

Пысăк хуçасем пурте суту-илӳ туса, хапрăк тытса тăрасшăн тăрăшаççĕ. Услам (тупăш, париш) ăçтан кĕрет-ши вăл? Çавна шухăшласа пăхар-ха. Нумайăшĕ услама тавар йӳнĕ илсе хакла сутнинчен пулать теççĕ. Чăн та çапла-ши вăл? Акă пĕр хапрăк хуçи пир тĕртме вутпа çӳрекен машина (стан) илесшĕн. Вăл сутмашкăн 500 кунта ĕçлесе тунă çитсана илсе тухать, çитси 500 тенкĕ тăтăр. Вăл пасара илсе тухнипе çитса хакĕ хăй тĕллĕнех тăмĕ вĕт. Пасарта кунăн 500 тенкĕллĕх çитса. Илекенĕн 500 тенкĕ укçа, иккĕшĕн пĕрле 1000 тенкĕллĕх хак пур. Хапрăк хуçи хăй çитсине 500 тенкĕ вырăнне 600 тенкĕ сутсан та хăй пĕлĕт çинчен персе анас çук. Унăн 500 тенкĕллĕх тавар, илекенĕн 600 тенкĕ укçа, пĕрле 1100 тенкĕллĕх хак, сутсан хапрăк хуçин аллинче 600 тенкĕ укçа, илекенĕн 500 тенкĕллĕх çитса, пĕрле шутласан каллех 1100 тенкĕ кăна, анчах хапрăк хуçийĕн 100 т. ытларах. Хăй услам çакă пулса тăмарĕ-и? Çук, капла хăтланнипе нумаях услам (париш) илеймĕн. Пирĕн хуçа 500 тенкĕллĕх çитса 600 тенкĕ сутрĕ пулсан, çавăн пекех унтан хăйĕнчен те машина илнĕ чухне 500 тенкĕллĕх станран 600 тенкĕ илĕç. Хăй çитса сутса ытлашши илнĕ 100 т. машина илнĕ чухне хăй аллинчен каллах шурĕ. Кунтан таварпа тавар улăштарса илнинчен тупăш юлманни паллах. Анчах хуçа тупăш пулмасан хапрăка лартса та чăрманмĕччĕ. Тупăш пĕлĕт çинчен татăлса анмасть. Тупăш тавара тунă чухнех шутланса тăрать, хăй таварне сутнă чухне тин куçа курăнать. Апла пулсан хуçа валли тупăша таварне ĕçлекен алăсем тăваççĕ. Вăл акă епле пулать. Пĕр хуçа çитса хапрăк лартнă пултăр. Çуртне туса пĕтерсен маши-

насем, çĕр мамăкĕ илчĕ те ĕçлекенсем тытать. Ĕçлекенсем тара кĕрешсе хăйсен вăйне тавар вырăнне сутаççĕ. Кирек епле тавар хакĕ те таварне туса ирттернĕ вăхăт шучĕпе çӳрет. Анчах ĕçлемешкĕн вăл ытти тавар пек алăпа тытса каскаласси тумалла япала мар. Çын ĕçлемеллĕх вăй пултăр тесен çимелле, ĕçмелле, тумтир тăхăнмалла, çуртра пурăнмалла. Çаксем пурте пулччăр тесен ĕçлес пулать. Çавăнпа ĕçлекене вăйĕшĕн мĕн чухлĕ хак тӳллесси те пурăнăçра кирлĕ япаласене тупмашкăн мĕн чухлĕ ĕçлесси шучĕпе çӳрет. Анчах ĕçлекен вилсен, ун вырăнне каллех ĕçлекен çын пултăр тесен, ĕçлекене хăйне тăранса пурăнмаллăх та, çемйине тăрантармаллăх та, тӳлес пулать. Хуçа ĕçлекенсене укçаллă хăй валли ĕçлеттерет. Ĕçлекен хăйне хăй çемйине тăрантармаллăхран ытларах ĕçлеме пултарать. Лайăхрах пăхсан ĕçлекенсем икĕ тĕрлĕ ĕç тăваççĕ: пĕр 6 сехете яхăн хăйсене тăрантармашкăн ĕçлеççĕ, (кунсăр пуçне пурăнма та май çук), кунтан ытларах хушса ĕçлени хуçана пуйтарать. Ĕçлекенсем хăйсене тăранмаллăх кăна 6 сехет çеç ĕçлесен, хуçана нимĕн усă та пулмĕччĕ. Анчах хуçа вĕсене 12-шер сехет ĕçлеттерсе тăранса пурăнмаллăх кăна (6 сехетшĕн кăна) укçа тӳллесе тăрать, вара хуçишĕн 6 сехет ытлашши (укçасăр ĕçленĕ пек) ĕçлесе тăраççĕ. Хапрăк хуçи акă ĕнтĕ ăçтан тупăш курать. Хуçасен тупăшĕ виçĕ тĕрлĕ майпа ӳсме пултарать: 1) ĕçлекенсем нумаййинчен; 2) ĕç вăхăчĕ вăрăмминчен; 3) ĕçе ӳсĕмлĕ тунинчен килеççĕ. Акă калăпăр, хуçа çитса тĕртекенсене кунне 50 пус патăр. Ĕçлекен кунне 10 арш. çитса тĕртет, çитсине хуçи пасарта аршăнне 20 пуса сутать. 10 аршăна çапла 2 тенкĕ суттăр. Анчах мамăкшăн-мĕншĕн хуçа аршăн пуçне 10-шар пус тăкак тăвать. 10 аршăн пуçне 1 тенкĕ тăкак, ĕçлекенсене панă 50 пус, мĕн пурĕ хуçа тăкакĕ (расхучĕ) 1т.50 п., хăй çитсине 2 тенке сутать, çапла 10 аршăнтан хуçа 50 пус таса тупăш курать. Ĕçлекен хăйне тӳлекен хакшăн (50 пуса татмашкăн кăна) ĕçлес пулсан, çур кун кăна, 5 аршăн кăна ĕçлемелле пулĕччĕ. 5 аршăн 20-шер пусран 1 тенкĕ, хуçа тăкакĕ 10-шар пусран 5 аршăна 50 п., ĕçлекене 50 п., апла 1 т. тăкак туса пĕр тенкĕллĕх кăна тĕртсен нимсĕрех тăрса юлĕччĕ.

Çавăнпа хуçапа ĕçлекен пĕр-пĕрне хире-хирĕç пыраççĕ. Хуçи епле те пулин ĕç кун вăрăмрах, ĕç хакĕ йӳнĕрех пултăр тесе тăрăшать, ĕçлекен - кун кĕскерех, хакне ӳстересчĕ тесе тăрăшать.

Хуçа таварне хаклăраха сутса тупăшне ĕçлекенсене ытларах ĕçлеттерсе тăвать. Хуçа ĕçшĕн чун усрамаллăх кăна укçа тӳлет, анчах таварне чун усрассинчен нумай ытларах тутарать.

Çапла хуçа тупăшне ĕçлекен аллисем тăваççĕ. Ĕçлекенсем укçа е машинасем çук пирки пуян хуçа аллине пырса кĕреççĕ те, лешĕ вĕсене хытă

сăхать. Ĕçлекенсемшĕн хур пек туйăнсан та ним тума та çук: пĕтĕм ĕçе укçа кастарса çавăрса пырать, укçапа хапрăк лартаççĕ, машинасем илеççĕ, тавар валли япаласем илеççĕ, ĕçшĕн тӳлеççĕ, тавар яма вырăн тупаççĕ, ĕçне ӳсĕмлĕ тума тăрăшаççĕ. Çавăнпа мĕн пур тупăша та укçа хуçиех илет.

Кунтан пуçне тата çын ĕçне пĕр пӳрнепе те тĕртсе пăхмасăр çиекенсем те пур. Килте хăй спрайĕпе ĕçлекен ăстасем укçа çитмен пирки хулари хуçасене, е ялти кулаксене (çын нушипе пуйма юратакансене) пуç çапмалла пулаççĕ. Çапла хăш чухне вĕсем кивçенле ĕçлекелесе тупăш мар, сиен те час кураççĕ.

Çавăн пекех тата хресчен те Турă тунă çĕр-шыв пур çинче хăйсем аллине çавăрса илнĕ çĕр улпăтсене пăхăнса тĕртленсе пурăнаççĕ. Хресчен хăйне хăварнă çĕр çитмен пирки улпăт çĕрне тара илсе хăй лаши - сухипе, вăрлăхне акса, тислĕк тăкса ĕçлесе тăрать, улпăчĕ хăй ним тумасăрах е çĕр укçи илсе, е хресчен ĕçлесе тунă тырă пайне илсе выртать.

Çапла кирек хăш ĕçре те пурри çуккинех ĕмĕт, сăхать. Хăй тара тытса ĕçлеттерекен хуçа хăйшĕн кăна тăрăшать пулсан та, çапах ĕçе ӳсĕмлĕрех тума май шыраса тупса пырать, ĕçлекенсем ун панче пĕрле пысăк ĕçсем тума вĕренсе пыраççĕ. Хăйсем ним ĕçлемесĕрех хăйсем тĕллĕн пурăнакан тĕрлĕ ăстасен юнне сăхакан хуçасем, усламçăсем кăнтăрла çаратакансемпе пĕрех туйăнать.

Укçа кирек хăçан та çынна ĕçлеттерсе хуçине тупăш тăвать. Анчах хуçасем пĕр-пĕринчен ăмăртса йӳнĕрех сутса пĕтĕм тупăшах илеймеççĕ. Çавăн пекех ĕçлекен халăх та пĕтĕм ĕçшĕн усă кураймасть. Куланайран, тĕрлĕ хырăçмарăçран ĕçлекен хура халăха мĕн параççĕ? Çапла пухăнакан укçа пуринчен ытла пуçлăхсене пурăнма каять; ку укçан тепĕр пайĕ чи вăйлă, сывă çемьесене тăрантса пурăнас çĕртен салтака илсе кайнă çынсене тăрантса тумлантарса усрама каять. Пурлăхне тĕп пулнă çĕр улпучĕсемшĕн е выçă куçлă хуçасене пулăшса та нумай укçа пĕтет. Выçлăх çулсенче, пĕчĕк шкулсемпе пульнитсасене кăна çав укçан тĕпренчĕкĕсем ĕçлекен хура халăх патне каялла çитеççĕ, ыттисем пурте урăх тĕпсĕр çĕре путаççĕ. Ăрасна çĕр улпăчĕ е хуçа ĕçлекен хура халăха хăйсем валли йӳн хакпа пĕччен-пĕччен ĕçлеттерни çитмест, тата вĕсем пурте пĕр канашлă пулса пĕрле халăх юнне сăхаççĕ.

Пуян çынсен, аслă çынсен мĕн пур сарăлса пурăнасси те ĕçлекенсене йунĕ ĕçлеттерсе хăйсем валли тĕрлĕ таварсем тутарнинчен килет. Хальхи саманара укçа пулсан урлă выртана тăрăх çавăрмасăр хăяккăн вертсан та пурăнма пит аван пулать. Укçана панка хур та укçана çăвăрлать. Ăçтан çуралать вăл укçа? Чеерех çĕр улпучĕсем е хуçасем тăрăшнипех пулать. Çара аллăн ним тума та çук: çĕр те кирлĕ, машинасем туман таварсем, спрайсем те кирлĕ. Панкăран укçа кивçен илсе çын япалисене туянаççĕ те çынсене тара тытса тупăш кăларма тытăнаççĕ. Пурин те çапла хăтланма ăс çитеймест. Çавăн пек-

кисемшĕн укçине услама ямашкăн панкăсем кассăсем кăларнă. Панкăран укçа кивçен илсе тăранакансемшĕн те аван, ахаль выртса укçине панка хураканнине те усăллă: тупăшне çурмаран тăваççĕ; пĕрин укçи, теприн ăсĕ, тăрăшучăрмавĕ, ĕçлекенсен ĕçĕ.

Акă ĕнтĕ ĕçлекенсен çурăмĕ çинче миçе тĕрлĕ тавар пухакансем, халăха çиекенсем, ĕçе пĕтерсе илекенсем (подрядчик), хуçасем, çĕр улпучĕсем, саваt-хапрăк тытакансем, панкă хуçисем, укçа вĕççĕн пурăнакансем темĕн чухлĕн ларса тиенсе пурăнаççĕ. Пурте пĕрле вĕсем çынсене сӳсмен тăхăнтарса (çын ĕçленине çисе) пĕр канашлă çемье пулса тăраççĕ. Вĕсенчен пуçне тата темĕн чухлĕ ĕçре чунне хĕссе ĕçлесе пурăнакансем те пит нумай.

**Малалла тата пулать**

**Хыпар. 1917. Утă уйăхĕн 27-мĕш кунĕ. 23 №.**

## ÇĔНĔ ТӲРЕ-ШАРА

Питĕр, 23-VII. Министрсем ĕнтĕ ак çаксем: министăр-президент, çарпа тинĕс министăрĕ Керенский, çарсен министерствинче ĕç тăвакан Савинов, тинĕс министерствинче ĕç тăвакан Лебедев, министăр президент кирек ăçта кайса çӳренĕ чух ун вырăнне юлаканĕ Некрасов, укçа (финансы) министăр вăлах, укçа министерствинче ĕç тăваканни профессор Бернацкий, патшалăхри ĕçсен министăрĕ Авксентьев, ют патшалăх ĕçсен министăрĕ Терещенко, суту-илӳ министрĕ Прокопович, çĕр министрĕ Пешехонов, пуштăпа телеграф министрĕ Никитин, шкулсен министрĕ академик Ольденбург, суд министрĕ Зарудный, халăхăн сывлăхне пĕлсе тăракан министр - Ефремов, патшалăхри контролер - Кокошкин, çул министăрĕ - Юренев, святейший синодри обер-прокурор - Карташев.

## ТЫРĂ-ПУЛĂ ЕПЛИ

Пирĕн патшалăхра тырă пулă халĕ ак епле тăрать: Мускав, Тула, Смоленск, Орел, Оренбург, Хусан, Пермь, Екатеринослав, Псков, Вятка, Владимир, Волын, Подольск, Астрахань, Ĕпхӳ (Уфа), Томск, Тобольск, Енисей, Семипалатинск, Архангельск, Питер, Олонецк, Нижегород, Могилев кĕпĕрнисенче тата Кубан, Терск, Акмолинск облаçĕсенче тырă-пулă вăтам, Харьков, Тамбов, Киев, Курск, Херсон, Полтава, Самара, Витебск, Калуга, Рязань, Вологда, Минск, Лифляндия, Эстляндия, Воронеж кĕпĕрнисемпе Дон облаçĕнче тĕлĕ-тĕлĕпе вăтам, тĕлĕ-тĕлĕпе начарах.

Ярославпа Бессарабски кĕпĕрнесенче епли пит паллах мар.

Пенза, Саратов, Чернигов, Чĕмпĕр, Новгород кĕпĕрнисенче тырă начар.

**Хыпар.1917. Утă уйăхĕн 27-мĕш кунĕ. 23 №.**

## ХАЛЬХИ ВĂХĂТ

Тĕрлĕ халăхсем юн тăка пуçлани тăваттăмĕш çула кайрĕ. Виçĕ çул ĕлĕк пирĕн патшалăх нимĕçсене виç уйăхра çĕмĕрсе тăкма мел пулать тесе çăмăллăн шухăшласа вăрçă хускатрĕ. Виç уйăх мар, виç çултанпа ĕнтĕ халăх юнĕ çырма пек юхать, виç çултанпа пурне те пĕтерекен вилĕм тĕнче çинче вĕçсе çӳрет, виç çултанпа çынсем пĕрне-пĕри вĕлереççĕ, çурчĕсене, хуралтисене ишсе пĕтереççĕ, ачи-пăчисем тăлăха юлаççĕ, пур çынсем те хуйхăраççĕ. Вăрçăран хăрушă, тискер япала урăх çут тĕнчере çук! Анчах епле ăна пĕтермелле?

Патшалăх пуçĕнче тăраканни министăрсем вăйăри пек улшăнса тăраççĕ. Салтаксем пĕр вăрçмасăрах кутăн чакса килеççĕ. Патшалăхри çынсем пĕр-пĕринпе тавлашаççĕ (тĕрлĕ партисене: кадетсем, социал-демократсем, социал-революционерсем). Перелле те каплах пулсан, вăрçă час чарăнмĕ, татах та нумай çынсем пурнăçне пĕтерĕ, нумай çынсене хуйхă кӳрĕ - ку сăмахсене эпĕ сире чăвашсем пĕрлешсе ĕçленин сиенне кăтартса параççĕ тетĕп.

Вăрçă пĕтерес тесен пурте пĕрлешсе пит хытă ĕçлемелле, вĕт-шак шухăшсене таçтах утса ярса патшалăха çăлас тесе тăрăшма тытăнмалла. Çавăн чухне тин вăрçă пĕтĕ. Хальхи пек пулсан пирĕн патшалăх хăйне-хăй туласах халран кайĕ.

**Й - л М.**

**Хыпар, 1917. Утă уйăхĕн 27-мĕш кунĕ.**

## ЙЫВĂР ВĂХĂТ

Акă ĕнтĕ хальччен пулман ĕмĕтсĕр вăрçă тăваттăмĕш çул çинче тăрать. Вăл хăйĕн вăйлăлăхĕпе Раççейĕн ĕлĕкхи мулне йăлтах ĕмсе ячĕ. Миçе мильюн тăлăх-турат, мĕн чухлĕ алăсăр, урасăр, куççăр тата тем чухлĕ ытти тĕрлĕрен чирлĕ çынсем халăх хушшинче тултарчĕ ку вăрçă. Миçе мильюн çемье, пысăк хуласенче ĕçлесе пурăнакансем çăкăрсăр выçăллă-тутăллă ыран-паян ларас пек асапланса пурăнаççĕ. Миçе мильюн вăй питти пулнă çынсем тыткăнри выçăллă-асаплă пурнăçпа вилсе пĕтеççĕ. Мĕн чухлĕ пурнăç сивĕ аккупсенче ыран-паян вилессе кĕтсе пурăнать. Нумай пурăнăç асапланать, нумай пурăнăç вăхăтсăр сӳнет! Кама усă-ши ку вăрçăран?! Нимĕн те çитмест. Хура халăх йăнăшса макăрса анчах тăрать. Çакă йывăр пурăнăçа кура пирĕн хресченсенчен хăшĕ-хăшĕ час-часах çĕнĕ йĕркепе ирĕклĕхе айăпласа калаçаççĕ: "Ку çĕнĕ йĕрке ĕлĕкхинчен те усал, нимĕн те çитми пулчĕ!" - теççĕ. Çук, çитменни вăл çĕнĕ йĕркерен мар, вăрçăран çитмест. Вăрçă пирĕн патшалăха çĕнĕ йĕркеччĕнех вилĕм алăк умне илсе пырса тăратнă, ăна пире пулнă патшапа унăн уллучĕсем халăхран хăранипе анчах систересшĕнех пулмарĕç, анчах

пытаранми япала ишĕлсе анчĕ, халĕ пурне те куранать. Кивĕ пуранăçри Сухомлиновпа унăн юлташĕсем паян кунччене пире пăхса тăнă пулсан, нимĕçсене Питĕрпе Мускава та çитсе кĕме çăмăлтарах пулман пулĕччĕши, тен? Тата ĕлĕк 2-3 тенкĕ тăракан япала халĕ 10-12 тенкĕ тăрать пулсан, кивĕ йĕрке ку таранччен тăнă пулсассăн, çав япалах халĕ 20-30 тенкĕ çитетчĕ. Мĕншĕн тесен кивĕ Тӳре-Шарана, юрăхсăррине кура, ăна "вăрçă кивçене те" шанса, çак кунсенче никам та пĕр 10 тенкĕ те паракан пулас çукчĕ, вара пулнă патшасен сăнне хутсем çине çĕнĕрен çакса тултарасси анчах юлатчĕ. Çав хут укçасем нумайăн халĕ те пуранăçа хаклантарса ячĕç, укçи нимĕн выранне те мар. Çавăнпа çакă йывăр пуранăçшăн çĕнĕ йĕркене хурламалли çук. Çĕнĕ йĕрке пĕтерме мар, нумай пулăшрĕ пĕтесрен. Ахальтен калар: пĕр-пĕр вăрă-хурахсем ватса-çĕмĕрсе сывмарлантарнă çынна темĕн чухлĕ тутлă апатсем çитерсен те, вăл ниепле те час чĕрлеймест, тен, суранĕ йăвăр пулсан, вăл вилсех кайĕ те, вара тутлă апат панăшăн вилчĕ тесе калама май килет-и ку? Çук, пирĕн патшалăх та çавăн пекех. Вăрçă çаплах тăсăлсан, çуллен-çул начарлансах пырăпăр, кирек мĕн те хакĕсем хаклаланĕ, ăна пирĕн ирĕклĕх çĕнĕ пуранăç та ниепле те чараймĕ. Çĕнĕ йĕркене çавăнпа айăплама юрамасть, вăл пуян улпутсемпе хуçасен кăмăлне анчах каймасть, вĕсем ăна хирĕç пыраççĕ, вĕсен хыççăн каяс мар. Çĕнĕ йĕрке, "ирĕклĕх" пирĕн патшалăхра тин тымарланать-ха, унăн уссине курма пире вăйлă вăрçă чарать, килес кунсем, çак çĕнĕ йĕрке хура халăха ылтăнран та хаклă пулĕ. Анчах çак вăйлă вăрçа мĕнле чармалла-ши пирĕн? Хăш хресченсем калаççĕ: "Тырă парас мар, вара хăех чарăнать",- теççĕ. Çапла калакансем мĕнле тăнпа, мĕнле чунпа пуранаççĕ–ши вĕсем?! Чăн та, тырă памасан, вăрçă чарăнĕ вăл, анчах вăрçă вырăнне малашне мĕнле кунсем кĕтеççĕ ун чух?! Акă мĕнле кунсем килĕç: кирек ăçта та пулĕç нимĕç пуçлăхсем, вĕсем пирĕн ирĕклĕхе илес те урисемпе таптĕç, пирĕн вĕсен умне чĕркуçленсе лармалла пулĕ, çулсерен йывăр тӳлевсем хурĕ пирĕн çине, ку вăрçăпа тата мĕн чул алсăр–урасăр юлчĕçĕ, çавсене хĕрхенсе пулăшĕ–и вăл? Вара пĕтмелли кун килет вĕсен, ун чухне авал улпутсен аллинче чуралăхра пурăннинчен пĕртте кая пулмĕ. (...). 1917

Тăвансем! Редакцине çырусем çырсан та, статьясем çырсан та тархасшăн вулама лайăх çырса ярăр. Кашни кун пирĕн редакцине тем чӳхлĕ çыру килет. Эпир вĕсене пурне те вуласа пăхма тăрăшатпăр, анчах пит тирпейсĕр (пурте мар, нумайăшĕ) çырнипе тем чӳхлĕ вăхăт иртет. Çитменнине чаваланса ларсан та хăшне–пĕрне ăнланма йывăр е йăлтах ăнланма çук.

Çавăнпа редакцие кирек мĕн çырсан та тирпейлĕ çырма тархасласа ыйтать.

**Редакционная комиссия.**
**Хыпар. 1917. Утă уйăхĕн 27-мĕш кунĕ. 23 №.**

## ВУЛАКАНСЕНЕ ПĔЛМЕ

1. Суя ятпа е ятсăр янă хутсене "Хыпар" çине çапмаççĕ. Çаптарас тесен, çыраканăн хăйĕн тĕрĕс ятне те, адресне те хучĕпе пĕрле çырса ямалла.

2. "Хыпара" килнĕ хутсене редакция кирлĕ пулсан кĕскетме те, тӳрлетме те пултарать.

3. Çапма тиркенĕ хутсене редакция усрамасть.

4. Тирпейсĕр (вулама йывăр) çырнă хутсене те, çырусене те редакци пăхмасть.

5. Куçарса çыракансем ăçтан куçарнине кăтартăр.

**Хыпар. 1917. Çурла уйăхĕн 24-мĕш кунĕ. 30 №.**

Чăвашсем! "Хыпара" чăваш халăхĕ хушшинче сарма тăрăшăр! Чăвашсем, хăвăр хаçатăра пĕтерес мар тесен ăна укçан пулăшăр! Юлташсем, ялти паллă хыпарсене "Хыпар" валли çырса ярăр!

**Хыпар. 1917. Август уйăхĕн 28–мĕш кунĕ. 31 №.**

## ХУСАНТИ ЧĂВАШ САЛТАКĔСЕН УШКĂНĔ ЧĔННИ

**Чăвашсем - тăвансем!**
**Ыйхăран вăранăр!**
**Пĕрлешме тытăнăр!**

Патшалăхра пысăк ĕç пуçланчĕ. Малалли самана пур халăхăн та хăйĕн аллинче. Малалли самана ырă пулсан та, усал пулсан та хамăртан килет. Анчах пĕччен–иккĕн малалли саманана тума вăй çитмест. Çавăнпа тем тĕрлĕ халăхсем (хахулсем, поляксем, тутарсем т.ыт.), тем тĕрлĕ çынсем (пуян хуçасем, хапрăкра ĕçлекенсем т.ыт.), хăйсен ушкăнĕсем тăва пуçларĕç. Вĕсем пурте хăйсемшĕн тăрăшаççĕ. Пирĕн чăвашсен хутне кам кĕрĕ? Пирĕн ĕçе кам тăвĕ?

Çавăнпа Хусанта тăракан чăваш салтакĕсем хăйсен ушкăнĕ турĕç. Çак ушкăна патшалăхри ĕçсене вĕренсе халăха тăнлантарма тунă; чăваш халăхĕпе чăваш салтакĕсене хута кĕме тунă... Вара вăл ушкăн мар чăваш хушшинче те тăнлă, чухлакан салтаксене халăха вĕрентме ярĕ, тата ыттисене те тăвĕ.

Анчах çак ушкăна пурăнма, ĕçсене туса укçа та кирлĕ пулать. Çавăнпа чăвашсене пĕрлешме, тăна кĕме пулăшас теекенсем вăй çитнĕ таран "Хыпар" хаçат адресĕпе Хусанти чăваш салтаксен ушкăнĕ валли тесе (Казань, контора газеты "Хыпар", для чувашской военной организации) укçан ярăр. Хусанти чăваш салтакĕсем, хăйсен укçа çук пулсан та, ырă ĕçе пуçласа яма пĕр 150 çын хушшинче 60 т. 34 пус пухрĕç. Çавăнпа вĕсем

килте пурӑнакансен те кашнин чӑваш ӗҫне пулӑшма пӗр пус та, икӗ пус та пулин тупӑнӗ тесе вӗсене шанаҫҫӗ.

Хусанти чӑваш салтакӗсен ушкӑнӗ.

**Хыпар.1917. Август уйӑхӗн 31 кунӗ. 32 №.**

## "ХЫПАРА" ҪЫРУ ЯРАКАНСЕНЕ КАЛАНИ

1. Питӗ нумайӑшӗ пиртен хаҫатпа кӗнеке ыйтаҫҫӗ, анчах укҫине кайран ярӑпӑр, теҫҫӗ. Эпир апла кӗнеке-хаҫат яма пултараймастпӑр: сире шанмантан мар, икӗ хут ӗҫ тӑвасран. Пиртен кӗнеке-хаҫат пӗр ҫын мар, 4 пин ҫын ыйтаҫҫӗ; ҫавӑнпа пирӗн вӑхӑта хӗрхенӗр.

2. Кам курса паллашма пӗр нумӗр "Хыпар" ыйтакансен 14 пус (12 хаҫатшӑн, 2 пус пуштӑ укҫи) тӳлесе ямалла.

3. Алендеву. Ҫӗр ӗҫӗпе ҫӗн йӗркесем закон тухман. Ҫӗр ӗҫне тумаллипе Земельнӑй комитетра ыйтмалла.

4. Ҫырӑва вӗренес теекенсен чӑваш ачине. Каҫенни шкул тавраш эсӗ шухӑшланӑ пекки ҫук. Сана салтака илмеҫҫӗ пулсан, пур шкула кӗме те юрать. Анчах ыттисемпе пӗр тан иксам парас пулать. Йӑлтах касран усракан шкулӑ ҫук, пулӑшу паракан шкулсем пур. Вӗсем ҫинчен "Хыпарта" ҫырнӑччӗ.

5. Н.Карпову. Чӑвашӑн уйрӑм салтак пайӗсем ҫук.

6. Ермолаю Игнатьеву. Чӑвашла хаҫат "Хыпар" ӗҫлекен ҫитменнипе укҫа ҫитментен эрнере икӗ хут анчах тухать. Хаҫат уйӑхра та икӗ хут анчах ҫитрӗ пулсан, вӑл "Хыпарта" ӗҫлекенсен айӑпӗ мар, пуштӑра ӗҫлекенсен айӑпӗ: кунтан тӗрӗсех ярса паратпӑр.

**Хыпар. 1917. Август уйӑхӗн**
**28-мӗш кунӗ. 31 №.**

## ҪУТӐЛӐХА ШЫРАНИ

Хусан. Ҫурла 22. "Хыпар" кантурне кашни кун темӗн чухлӗ ҫыру тата ятарласа янӑ ҫынсем килеҫҫӗ: пурте чӑвашла кӗнеке-хаҫат шыраҫҫӗ. Паян пӗр салтак хӑйӗн укҫипе килсе 11 тенкӗ те 80 пус хӑйӗнчен тӳлесе юлташсем валли чӑвашла кӗнекесем илсе кайрӗ. Вӑл салтак Хусан кӗпӗр.., Ҫӗрпӳ у., Н.-Ковалин. В., с. Старо-Шигалей, Александр Андреев. Килессе вӑл перевязочный отрядран, 77 пех. дивизионран килнӗ. Ҫакӑн пек ҫынсене тӗл пулсан чун савӑнать.

"Хыпарсем" подборкӑра пичетленнӗ.

**"Хыпар". 1917. Ҫурла уйӑхӗн 28-мӗш кунӗ.**

## ЧӐВАШСЕМ ВӐРАНАҪҪӖ

Хусан. Ҫурла. 23. Етӗрне уесӗнчи Торай халӑх пухӑвӗ (Тораевское волостное собрание) чӑвашла хаҫат "Хыпарта" кӗнекесем кӑларма "Хыпарӑн" редакцине аллӑ (50) тенкӗ укҫа янӑ. Ҫакӑн пек ӗҫсем ҫинчен пӗлсен, чӑвашсем те ыйхӑран вӑранаҫҫӗ мӗн (иккен) тесе ӗненес килет.

**Хыпар. 1917. Ҫурла уйӑхӗн 28-мӗш кунӗ.**

## ХӖРАРӐМСЕМ ӖҪЛӖ ВЫРӐНТА

Питӗр. Хӗрарӑмсене ар ҫынпа пӗр тан патшалӑхри ӗҫлӗ вырӑнсене кӗме ирӗк панӑ. Анчах вара ӗҫӗ те ар ҫынсемпе пӗр тан пулать.

**Хыпар. 1917. Ҫурла уйӑхӗн 28-мӗш кунӗ.**

## ҪӐКӐР ҪИТМЕСТ

Мускав. Ҫур. 18. Тырӑ Мускава сахал турттарнӑран, Мускавра кунне ҫын пуҫне сакӑр ҫур кӗренке анчах пама пуҫланӑ.

**Хыпар. 1917. Ҫурла уйӑхӗн 28-мӗш кунӗ.**

## ҪӖНӖ ХЫПАР

Хамӑр чӑваш ҫыруҫи Иван Николаевич Юркин хӑй ҫырнӑ кӗнекисене станпа пуҫтарма тытӑнчӗ. Чи малтан вӑл вак кӗнекисене пуҫтарать иккен, унтан вара пысӑкраххисене те. Ялти ҫынсем унӑн кӗнекисене туянас тесен, хӑйсенӗн пупӗсем, ачасене вӗрентекен ҫынсем урлӑ, ҫырса илме пултараҫҫӗ... Ҫырса илес теекенсен пӗр илнӗ чухне нумайтарах ҫырса илме тӑрӑшас пулать, мӗншӗн тесен нумайтарах ҫырса илнӗ ҫемӗн пушта укҫи сахалтарах тӳленет. Пирӗн чӑвашӑн халӗ епле те пулсан тӑрӑшас пулать: пур чӑваш ялӗнче те, пур чӑваш килӗнче те вуламашкӑн ырӑ кӗнекесем нумайтарах пулччӑр. Чӑваш ҫынни кӗнекесем пулманлӑхпа вуламасӑр тӑнӑ пирки пит тӗттӗмленсе юлнӑ. Халӗ вӗр-ҫӗнӗ саманара вулама тытӑнас пулать. Кӗнекесем ҫырса илме укҫа шеллес пулмасть. Кӗнекесем илсе укҫа пӗтерни вӑл эрех илсе ӗҫсе пӗтерни мар; укҫа вырӑнне этеме ытларах ӑс кӗрет, ҫын вичкӗнленет. Юркин кӗнекисене ҫырса илес теекенсемшӗн унӑн адресне ак ҫапла: г. Симбирск, Ярморочная площадь, д. № 97. И.Н.Юркину.

Юркин чи малтан "Кулачӑ тӑраниччен ҫитерни" ятлӑ кӗнекене пуҫтарать. Кӗнеки час тухать, хакӗ унӑн 15 пус анчах пулмалла. Ҫав кӗнекине алӑпа ҫырнине вуласа пӑхнӑ ҫынсем "пит аван ҫырнӑ" тесе мухтаҫҫӗ. Юркин ятне чӑвашран пурте илтнӗ пулӗ, анчах вӑл епле ҫырнине вуласа пӑхнӑ ҫынсем пит сахал халӗ. Малашне акӑ, вуласа пӑхсан, вӑл епле ҫырнине пурсӑмӑр та пӗлсе тӑрӑпӑр.

Юркин кӗнекисем халиччен тухмасӑр тӑчӗҫ пуҫтарма укҫа ҫук пиркипе анчах, халӗ ӗнтӗ эпир илтрӗмӗр, пуян чӑвашсем, хамӑр чӑваша ҫырӑва вӗреннине юратакансем, Юркина кӗнекисене пуҫтарма укҫа панине. Юркин кӗнекисем часрах тухасса темӗн пек кӗтсе тӑратпӑр.

**Хула ҫынни.**

**Хыпар. 1917. Ҫӗртме уйӑхӗн 27-мӗш кунӗ. 15 №.**

## ХАҪАТА КИЛЕКЕН ҪЫРУСЕНЕ ХИРӖҪ КАЛАНИ

П.Максимову. Чӑваш халӑх Пухӑвӗ политическая автономия ыйтмалла турӗ.

77 дивизие. В.Крайнову. Ӳпкелеме ҫӑмӑл, ӗҫлеме йывӑр. Пирӗн хаҫатра ӗҫлес пулать, Пухусене пуҫтарас пулать, килекен чӑвашсене ӑнлантарас пулать, тата фронтра та вулама пирӗнех пымалла-и? Пире, чӑвашла, поляксемпе, хахулсемпе танлаштармалла мар. Вӗсен вӗреннӗ ҫынсем нумай, тата вӗсем пуян халӑх. Пирӗн пыма укҫи те ҫук, ҫынни те ҫук. Сӑмаха каличчен, шухӑшласа пӑхас пулать.

**Хыпар. 1917. Юпа уйӑхӗн 23-мӗш кунӗ. 45 №.**

## РЕДАКЦИЕ КИЛНӖ ҪЫРУ

Ку ҫырӑва тӑван редактор хӑвӑн хаҫатра вырнаҫтар-ха: эп ялтан пит усал хыпар илтӗм. Альбекеевское волостное правление (Тетюшкс. уезда) писӗрсем ман ҫырӑва илнӗ те уҫса вуланӑ. Эпӗ ҫӗнӗ йӗркепе Временное Правительство кирлӗ мар тесе, кивӗ патша енне пулӑр тесе ҫырнӑ пулать. Писӗрсем вара вуласа пӗтерсен каларӗҫ тет: " Ку ҫырӑва ҫынна кӑтартма юрамасть тесе", вара ҫуркаласа пӑрахрӗҫ тет. Ҫав сасӑ ман ҫинчен пӗтӗм вулӑса сарнӑ.

Ҫав писӗрсемех каларӗҫ тет: "Ӑна пӑшалпа ҫапса вӗлермелле", тесе. Ман аттесем пит хӑранӑ. Арӑм халь те йӗрет те. Кам ҫырнӑ-ши ҫав ҫырӑва? Мана ирӗклӗхшӗн тӑрӑшакан ҫынна тӗттӗм вӑйсем варалама тытӑннӑ. Эпӗ Питӗрте пӑлхавӑр пуҫлансанах тытӑнса ӗҫлеме пуҫларӑм. Эпӗ социал-демократический партире тӑратӑп. Тата эпӗ хресчен канашӗн депутачӗ пулса тӑратӑп.

Пирӗн чӑваш хушшинче ун пек усал халап кӑларма час пултараҫҫӗ. Пирӗн чӑваш ҫавӑн пеккине час шанать. Шухӑшласа пӑхӑр, чӑвашсем, кам кивӗ енне ҫаврасшӑн тӑрӑшать? Пирӗн чӑвашсем пире салтаксене ялти хура халӑхран уйӑрасшӑн тӑрӑшаҫҫӗ. Пачӑшкӑсем пире, салтаксене, курайми пулчӗҫ.

Халӑха пӑтратаҫҫӗ. Салтаксене ан итлӗр, вӗсем чиркӗве хупасшӑн,

теççĕ. Ăнланăр, кам сире ирĕк пачĕ, салтаксем мар-и? Пирĕн çул пĕрре кăна, тӳрĕ çул. Эпир унтан пăрăнмастпăр.

Пирĕн урапа шăл хушшинче патак чикекенсем пит нумай.

**Салтак С.Игнатьев.**
**Хыпар. 1917. Утă уйăхĕн 17-мĕш кунĕ. 20 №.**

## РЕДАКЦИНЕ КИЛЕКЕН ÇЫРУСЕНЕ ХИРĔÇ КАЛАНИ

Пирĕн редакцине кашни кун çыру нумай килет. Нумайăшĕ вĕсенчен хăйсем çырнине хаçат çине çаптарма хушаççĕ. Анчах эпир тем пек çаптарас тесен те, çаптарма пултараймăпăр, мĕншĕн тесен хăшне-пĕрне вырăсла, ăнланмалла мар çырса пĕтернĕ(вырăсла-чăвашла хутăш), хăшĕ-хăшĕ чăвашла пулсан та пит тирпейсĕр çырнă, вулама йĕрке те çук. Çавăнпа редакцие янă çырас теекенсем пурте чăвашла, тирпейлĕ, лайăх палăртса çырăр. Вырăсла çырнисене эпир çапмастпăр.

Унтан тата хăшĕ-пĕри редакцирен тĕрлĕ канаш ыйтаççĕ. Редакци вĕсене хирĕç вăй çитнĕ таран хаçат çинче канаш çырса пырĕ.

Кам ăрасна çыру илес тесен, 20 пуслăх марка çыру ăшне чиксе ярăр.

## ШУПАШКАР ПУРНĂÇĔ

Сĕнтĕрвăрринче (Мариинский Посад) июлĕн 8-мĕш кунĕнче Общественной Безопасности текен Комитетăн пуху пулчĕ. Çав пухура Комиссара Воскресенской вулăсри студента Марк Алексеевич Алексеева суйларĕç. Комиссарăн помощникĕ Алымкаси вулăсри Духовная Семинарияран вĕренсе тухнă Никанор Петрович Петрова суйларĕç. Кĕсем иккĕш те чăваш. Тата çак пуху Исполнительный Комитета членсем ак çак çынсене суйларĕç: Р.С.Мясников - чăваш, С.Н.Федоров - чăваш, Уткин - вырăс, И.О.Закамский - чăваш, Р.Н.Никитин - çармăс. Унтан вара Волостное Земствона выборы хатĕрлеме уесре пĕр комиссия турĕç, унта Андрей Иванович Тюмерова, Павел Ефимович Анчунова суйларĕç, 2-шĕ те чăвашсем.

Хусанти кĕпĕрнери Общественной Безопасности тиекен Комитета Ковалеский вырăспа Тогаш вулăсĕнчи чăваша А.П.Лбова суйларĕç. Малалла хула уес варринче пултăр тесе хулана Сĕнтĕрвăррине куçарас тесе Временное Правительство умĕнче хлопотать тумалла турĕç.

А.Лбов юлташа. Сирĕн стихотворенине çаптарма пултараймастпăр, мĕншĕн тесен ăна юрă майлă çырсан аван мар.

Çавнах "прозăпа" çырса ярсан пулĕччĕ.

Ятман-Уссине: "Мĕкĕте" çапăннă, ыттисене çапăнтараймастпăр.

Тарас Абруковпа хаçат яратпăр.

Иван Кузьмина "Патшапа - и патшасăр-и пурăнатпăр" ятлă статьяна урăх çын куçарнă. "Вăхăтра тумалли ĕçсем" юлашкине ярсан çаптарăр.

## ХЫПАРА УКҪА ПАРСА ПУЛĂШАКАНСЕМ

Кам миҫе тенкĕ, пус янă, списокĕ пур.
Грайворонски полкран "Хыпара" укҫа яракансен списокĕ те пур.
Учительсен институтне вĕренме илни ҫинчен пĕлтерӳ пур.
Чăвашла мĕнле кĕнекесем тухнине пĕлтерни пур.

## ВĂХĂТСĂР ВИЛЕС КИЛМЕННИ

Ҫуркунне ҫур шыв вăхăтĕнче пĕр чăваш арăмĕпе пĕр тутар арăмĕн шыв урлă каҫмалла пулнă. Каҫима начартан шыв урлă каҫма пит хăрушă пулнă. Тутар арăмĕ хăй каҫма хăраса малтан чăваш арăмне каҫтарса ярасшăн. Вăл ăнсăртран шыва кайсан, эпĕ ун хыҫҫăн каҫмăттăм, тесе шухăшлать. Чăваш арăмĕ те тутар арăмĕ хăраса каҫмантан, малтан хăй каҫма шикленет... Ку ҫапла каҫма хăранăран, тутар арăмĕ:

- Мĕншĕн каҫмастăн?.. Каҫ ĕнтĕ, - тет.

Ку та ăна хăй хăраса каҫмантан:

- Малтан эсĕ каҫ! - тет.

Тутар арăмĕ каҫма шикленсе, чеелĕхĕпе епле те пулин улталаса малтан чăваш арăмне каҫтарса ярасшăн.

- Манăн та упăшкам ҫамрăк, эпĕ шыва кайса вилсен, вăл хуйхăрса йĕрĕ, - тет.

Чăваш арăмĕ те ăна хирĕҫ кулса:

- Эсĕ ăнсăртран шыва кайса вилсен, санăн упăшку, ҫамрăкскер, тата улт-ҫичĕ тапхăр та авланма пултарать. Эпĕ шыва кайса вилсен, манăн упăшкам хăйне юрăхлине тупаймасăр авланмасăр тертленсе пурăнĕ, эпĕ ăна шеллесе малтан каҫасшăн мар, - тет.

**Ив. Юркин.**
**Хыпар. 1917. Ҫĕртме уйăхĕн 27-мĕш кунĕ. 15 №.**

## ТĔРĔССИНЕ ҪЫРАР!

Тавтапуҫ Турра, тăрăшакан ҫынсене. Халĕ ĕнтĕ пирĕн чăваш халăхĕ те хăй нушине, хăй шухăшне хаҫат ҫине ҫаптарса, пĕтĕм тĕнчене пĕлтерсе пурнăҫне аванлатма пултарать. Пур енĕпе те ирĕккĕн сӳтсе явса каласан тĕрĕс сăмахăн вĕҫне тухма майĕ пур. Анчах пĕр-ик сехет калаҫакан ҫыннăн виҫ-тăват сăмахне кăна уйăрса илсен, ăна та пуян итлекен хăйĕн шухăшĕпе, хăйĕн кăмăлĕпе урăх енне пăрса ярса улăштарсан урăх ҫынсем умĕнче темĕнле тӳрĕ ҫынна та айăплама пултарĕ. Эпир, чăваш ҫыннисем, "Хыпар" хаҫатне пиҫнĕ ҫырлана кĕтнĕ пек кĕтсе тăратпăр. "Хыпарăн" 7-мĕш нумерте пирĕн ҫавна тăван Никанор Павăлĕ хăйĕн суясăр тенĕ

сăмахĕпе, тулашĕнчен хĕрелнĕ, шалтан симĕс пиçеймен çырла хыптарнă пек ман çинчен суйса кăтартрĕ.

Темиçе çĕр çын хушшинче пирĕн прихутра ун пек Павăл, тен, вун иккĕ те тупăнĕ, вĕсем пурте ман çинчен мĕн каланине итлесе çӳрес кăмăлăм çук, пурте хаçат çине мĕн çырассине хирĕç тавăрса çырма мар, тем малашĕн мĕн çырнине вуласа тухма та вăхăтăм пулмĕ. Анчах çапах та малтанхи Павăла сума суса чăваш "Хыпарĕ" тĕрĕс сăмахшăн пуриншĕн те пĕр евĕрлĕ ирĕклĕ хаçат пулĕ-ха тесе, ан ятлăр-ха, тăвансем эпĕ тепĕр ластăк хут - сăмах çырса ярам.

Эпĕ учительрен пупа тухни тăваттăмĕш çул çеç, паянхи кунччен епле çын пулнине, эпĕ ăçта пулнине мана куркаланă, пĕлкеленĕ çынсем каламасан эпĕ хама мухтани нумаях мар, тата килĕшес те çук. Мухтавне шырамасан та тĕнче умĕнче суйса кăтартакан сăмах тавăрса тĕрĕссине каламасăр чăтаймастăп. Эпĕ священнике те хамăр халăхшăн пĕр тумлам та пулсан усă кӳрес кăмăлпа тухсаттăм. Анчах хальхи саманара пуп сăмахĕ хăлха патĕнче çил шăхăрнă пек кăна иртсе каять пулмалла. Пупсен 300 çултанпа пулнă айăпсене халĕ вырăнта тăракан пупсем çине тиеме пăхаççĕ. Тата час-часах куллен куракан çын сăмахĕ тĕрĕс, ырă пулсан та, ялан йăлăхтарнипе нимех те мар пек, шанмалла та мар пек пулĕ. Аякран (инçетрен) вĕçсе килнĕ çĕнĕ кайăксем юрласа парсан итлеме те кăмăллăрах пек. Çавăнпа ман шухăшпа халăхшăн чăнласах тăрăшакан, тӳрĕ кăмăллă ораторсем килсе калани питĕ усăллă. Акă, çу уйăхĕн 9-мĕш кунĕнче пирĕн яла Б.Исланкин килсе шкул пӳртĕнче çĕн самана çинчен пит лайăх каласа пачĕ. Вырăс та, чăваш та питĕ хавасланса, тав туса итлесе ларчĕç. Анчах çав хутранах ялсенче ним парчи йĕркисене ăнланайман, пиçеймен ораторсем те сиксе тухса, халăх кăмăлне кăна каясшăн тăрăшса паттăр сăмахсем каласа пăтратса яраççĕ. Вĕсен 1905-мĕш çулсенче амăш сĕчĕ те тути-çăварĕнчен типеймен, хальхи çĕнĕ самана та пĕтĕм чĕри витĕр тухайман, хăйсем çапах çӳлерех хăпараççĕ те, ак çапла сăмахсем каласа кăшкăраççĕ. "Эй, ирĕке тухнă халăхсем! Халĕ ĕнтĕ ирĕк, кирек мĕн тусан та чару çук. Малашне пурнăç пит çăмăл пулĕ, ним куланайĕ те, укçа пуçтару та пулмĕ, ачăрсене пĕр пус укçа тăкмасăрах кирек епле шкулта та вĕрентмелле йĕрке тухĕ, тĕнчери пур тупрана, вăрмана, çĕр-шыва, чукун çулсене, хапрăк-савăтсене пурне те халăх тавăра хуçа. Пупсем, тĕрлĕ шалу çисе тăракан чинлă çынсем пĕр хăйсемшĕн кăна пурăнаççĕ" - тата урăх тĕрлĕ те çавăн пек сăмахсене каласан, ĕлĕк тĕттĕмре пурăннипе ăнлансах илеймен çынсем вара алă çупса мухтаççĕ. "Ак ку ача маттăр, ай ораттор!" теççĕ. Тĕрĕссипе каласа ăнлантарма тытăнсан "Ку сăмаха эсĕ ĕлĕкхи майлă каласан, санăн креппит тунă е илнĕ ят çĕр пур, эсĕ статри пришим!" теççĕ. Çак тĕлĕшренех хаçат çине çыракан Павел тус та сăрă хакĕ йӳнелнĕрен мана

хуратса сăрлама хура сăрне питех хĕрхенмен пулмалла. Тин хаçат çине пуçлакан çынсен ун пек йăнăш калани пулать. "Акă, пăхар-ха, эпĕ епле çынсене хирĕç халăх умĕнче сăмахпа витерейместен те, епле хаçатпа çаптаратăп!", тенĕ пек туйăнать. Çыра-çыра вĕренĕпĕр-ха, тăвансем! Тĕрĕс çула çапах тухăпăр, анчах хамăрăн кăмăл таса пултăр. Эпĕ кăна тĕрĕс шухăшлатăп, ыттисем пурте йăнăш шухăшлаççĕ теме çук. Тата юлашкинчен пуриншĕн те чĕрем хушшинче тӳрех калам тăван - чăваш халăхĕ. Никанор Павăлĕ сăмахĕнче те ман тĕлĕшрен тĕрĕс шухăш та пур, çавăнпа эпĕ ăна мĕншĕн кĕретех суятăн тесе сут умне чĕнместĕп. Акă мĕншĕн. Христос тĕнне чăнахах тĕрĕс тытса тăракан çыннăн пуринчен ытла Турра, иккĕмĕшĕ халăха, виççĕмĕшĕ харкам хăйне тин юрамалла. Каçарсамăр мана, тăвансем, - эпĕ чи малтан хама, хам çемьене юрататарах пурăнтăм, унтан ытти çынсене, кайран тин Турра. Хам пурнăçăма тинкерсе пăхатăп та, чăнах та ĕçĕм-халăм çапла пек туйăнать. Кам та пулин çак енĕпе айăпсăрри пур, вăл айăплине пĕтĕм кăмăлтан хапăл тăватăп.

**Çĕнĕ Пăрăнтăк пачăшки М.Данилов**
**Хыпар. 1917. Çĕртме уйăхĕн**
**20-мĕш кунĕ. 13 №.**

## ЧĂВАШ ПУРНĂÇĔ

***Чĕнни***

Эй, тăвансем, хура халăхсем! Çак нумаях пулмасть иртсе кайнă кунсенче Раççейре нумай çĕрте çынсем килте тунă эреке ĕçсе ӳсĕрĕлсе çапкаланса çӳреме пуçларĕç. Çак ĕç хуласенче те, ялсенче те сисĕнме пуçларĕ. Ӳсĕр çынсем позитсисенче (фронтра), хапрăксенче, чугун çулсем çинче курăнма пуçларĕç. Вĕсене кура пирĕн Шупашкар уесĕнчен те ĕçме пуçларĕç. Уесри хăш-хăш ялсенче килсеренех пек эрек тума пуçларĕç. Çак ялсенче эреке уесри пур ялта сарăлма пуçларĕ. Çак эреке Шупашкара та çитрĕ, Атăл леш енчи ялсенче те курăнма пуçларĕ. Эреке ĕçсе ӳсĕр пулса çӳреме пуçларĕ. Çак эреке пире йăвăр инкеке кӳртесси те сисĕнмерĕ. Нумайăшĕсене килте тунă эрекпе эпĕ хам укçапа илсе ĕçетĕп пулсан, унтан мĕн сăтăр пултăр? Эрекпе туса сутса укçа лайăх тупатăн пулсан, çынсене мĕн ĕç, тесе шухăшлаççĕ.

Эй, хура халăх, çакăн пек шухăшлама юрамасть. Эреке ĕçсе ӳсĕрĕлсе çӳрени вăл пĕтĕм халăхшăн усал япалине хăвăрах пĕлетĕр. Çак ĕç эреке ĕçекеншĕн анчах мар, эреке тăваканшăн та, эреке сутаканшăн та анчах мар, çак ĕç пĕтĕм халăхшăн усал япала.

Çыннăн алли е ури урăх çĕрте вырăн пулсан, çав суран пĕтĕм çан-çурăма сывмарлантарса ярать, пĕр çĕрте ыратни пур çĕрте те сисĕнтерет. Кил чиккинче кам та пулин сывă мар пулсан, çав килти çынсем пурте хуйха

каяççĕ. Хăш хăшĕсем эреке ĕçни те çакăн пекех пур çынна та усала вĕрентет, усал чире ертнĕ пек ертет те вара ĕçекенсене анчах мар, урăх çынсен сывлăхне те пăсать. Эй, хура халăх! Килте тунă эреке сире питĕ пысăк сăтăр тунине пĕлместĕр-им? Килте тунă эреке пирĕн ӳте пăсакан, вĕлерме пултаракан япала "яд" пур, çавăнпа вăл пирĕн шăмшакка, ӳт-тире пĕтерет (куç патне пырса куç вăйне пĕтерет). Эреке ĕçсе ӳсĕрĕлсен час-часах пĕр-пĕринпе вăрçаççĕ, хурах пусаççĕ, вут та кăларса яраççĕ тата ку инкексĕр урăх инкек те нумай.

Халь пирĕн Раççейре пăлхавлă вăхăтне хăвăр та пĕлетĕр. Халь Раççейре пурăнакан халăхсем хăйсен пурнăçне тата Патшалăх пурнăçне çĕнĕ йĕркепе тăваççĕ. Раççейри кивелсе çĕрсе пĕтнĕ йĕркесене кăларса пăрахаççĕ, çĕнĕ йĕркесемпе улăштараççĕ. Халь кивĕ учрежденийĕсене пăрахса çĕнĕрен урăх йĕркесем тунине хăвăрах куратăр. Пур çĕрте те Комитетсем, Советсем тăваççĕ, пур вырăнтан пĕр çĕре пуçтарăнса канаш тăваççĕ, ушкăнсем пĕрлешеççĕ "союз" тăваççĕ. Нумаях тăмĕç. Патшалăх йĕркине кӳме пуçтарăнакан Пухува суйлама пуçлĕç. Çав Пухура ирĕклĕ Раççей çыннисем хăйсен пурнăçне малашне мĕнле пуласси çинчен те ĕç татĕç. Çав Пухура Раççей çĕрĕн хуçи - вырăс халăх хăватлă, тĕрĕс сăмахне калĕ. Эреке ĕçсе ӳсĕрĕлсе пурăнсан, эпир хамăра тума кирлĕ ĕçе тума пултарăпăр-ши? Килте тунă эрексем ĕçсе пурăнсан, Комитетсене, Советсене тата урăх вырăнсене те хамăра кирлĕ çынсене суйлама пултарăпăр-ши? Эпир хамăр пуçа спирт ĕçсе çавăрса ярсан, хамăр шухăшсене килте тунă эреке айне тусан çав Патшалăх йĕркине кӳме пуçтарăнакан Пухува хамăра мĕн кирли çинчен каласа пама пултаракан пирĕн тивĕçлĕхшĕн (право), ирĕкшĕн хытă тăракан çынна суйласа яма пултарăпăр-ши?

Эй, хура халăх! Хăвăра хăвăр, хăвăр ачăрсене, ачăрсен ачисене ырă сунатăр пулсан, çак усал йăлана пăрахăр, пирĕн халь эреке ĕçесси çинчен мар, çук, хамăрăн пурнăçа çĕнетсе ăна ирĕклĕ, тĕрĕс, ăслă пурăнăç тăвас тесе шухăшлас пулать. Çак лайăх, çĕнĕ пурнăçа тума пирĕн ӳсĕр пуçпа мар, ĕçсе ӳсĕрĕлсе çапкаланса çӳресе сăтăр туса мар, çук, çаксене пурнăçра хамăр çĕр-шыв умĕнче, тата ытти халăхсем умĕнче ответ (хисеп) памалла, пулассине пĕлсе тăрса кĕтсе илес пулать, пирĕн çĕнĕ пурнăçа тума эреке ĕçсе çавăрса янă пуçсемпе мар, таса шухăшлă пуçсемпе тытăнас пулать.

Эй, хура халăх! Пирĕн çак эреке ĕçсе ĕсĕрĕлес йăлана пăрахас пулать. Пăрахмасан, çак нумай тăрăшса тупнă ирĕке, хамăр телее, канлĕ пурнăçа анчах мар, хамăр ачасен телейĕпе ырлăхне те пĕтерĕпĕр. Ĕсĕрĕлсе çӳренĕ пирки халь туртса илнĕ ирĕке аларан кăларса ярсан, пирĕн ачасем пире мĕн калĕç? Вĕсем пиртен йĕрĕнсе: акă пирĕн аттесем, пăлхавпа вăрçăн йăвăр кунĕсенче эрекшĕн Раççей ирĕкне сутнă, - тейĕç те пирĕн таса мар ĕçсене кăтартса пире "ирĕке сутакансем" тесе ят парĕç.

Эй, хура халăх! Иккĕмĕш Микулайпа унăн тарçисем халăх эрекешĕн ирĕке сутма пултарнине сиснĕ те нумай çĕрте халăха эреке ĕçтерсе халăха ĕсĕртме тытăннă, мĕншĕн тесен пăтранчăк шывра пулă тытма лайăххине вĕсем пĕлеççĕ. Çак эреке ĕçсе ĕсĕрĕлсе çӳрес йăла пĕтĕм Раççейпех салансан, халăха пăлхантарса яма пултарĕчĕç те вара Иккĕмĕш Микулая тата патшана лартĕччĕç те усăллăн хĕпĕртесе савăнĕтчĕç. Çавăнпа çак йывăр кунсенче кам эреке ĕçет, вăл пăлхав ("амута") хатĕрлет, хамăр çĕр-шывăн тăшманĕ пулать.

Çакна лайăх астăвăр. Раççей ирĕкне ан сутăр! Эреке тăвакансене те, эреке сутакансене те пурне те чарăр. Эреке ĕçекенсене пурне те пĕр хăрамасăр "хамăр çĕр-шыва сутаканни, ирĕкĕн тăшманĕ" тесе калăр.

Нумайăшĕ пирĕн ĕçлемен кунсенче мĕн тăвас вăхăта, ăçта хурас теççĕ. Тăвансем! Вăхăта ăçта хурас, ĕç çук кунсенче мĕн тăвас тесе шухăшламалли те çук. Халь пирĕн Раççейре пире йăвăр ĕç тунине хăвăрах пĕлетĕр. Вырăс халăх шухăшĕ пурнăçа мĕнле çĕнетесси çинче тăрать. Эпир те ирĕке тухнă çынсем, пирĕн те çавăн çинченех шухăшлас пулать. Пур халăх ĕçленĕ чухне пирĕн те ăйăхра тăрса юлма юрамасть.

Анчах çак ĕçе тума эпир вĕренменнипе, иккĕмĕш Микулай тăрăшни пирки эпир çак ĕçсем çинчен пĕлмесĕр тăрса юлнине хăвăрах пĕлетĕр. Пирĕн халь пĕлмелли нумай, нумай вĕренес пулать.

Çавăнпа хăвăр ĕçсем çинчен нумайтарах шухăшлас пулать, халăх пуçтарăнсан унта хăвăра мĕн кирли, хăвăрăн мĕнле нушасем пурри çинчен пуплес пулать.

Эсир учительсем, учительнитсăсем тата урăх вĕреннĕ çынсем хăйсем мĕн пупленине итлĕр, вĕсенчен ыйтăр; хаçатпа кĕнекесем вулама тăрăшăр. Акă сирĕн валли ĕç сиксе те тухрĕ. Ĕç çук чухне мĕн тумалли тупăнчĕ.

Эй, тăвансем, хура халăхсем. Эсир ирĕке тухрăр. Ирĕклĕ Патшалăхра пурăнатăр. Çак ирĕке эсир хăвăр тивĕçлине кăтартăр. Эсир страшниксемпе вĕсен нукайккисемсĕр пурăнма пултарнине палăртăр. "Ку çынсем ирĕклĕ халăх, вĕсем ирĕкре пурăнма вĕреннĕ" тесе каламалла тăвăр. Халь пире килте тунă эреке ĕçни мар, халăх пĕрлешни, пĕрлешсе тăрăшни кирлĕ. Çакна кирек хăçан та астуса тăрăр та килте тунă эреке хăвăр хушăртан хăваласа кăларса ярăр!

Эй, хура халăх, эреке тухса кайтăр, пĕттĕр, ирĕклĕ сывă пурнăç патнелле малалла кайăпăр тейĕр!

Шупашкар уесĕн милитси пуçлăхĕ.

**С.Н.Роднов**

**"Хыпар". 1917. Çĕртме уйăхĕн 13-мĕш кунĕ. 11 №.**

# ТАНТӐША

(А.Васильева)

Тантӑш! Халӑх нушийӗ
Пире пӗр ҫӗре турӗ!
Ҫӗр ҫын йӑтми ҫӗклеме
Хамӑр ҫамрӑк хул ҫине
Йӑвантарса хутӑмӑр.
Малтанах "Чӑтаймаспӑр"
Пуль тесе шухӑш кӗчӗ.
Анчах чӑваш халӑхне
Калама ҫук юратни
Пире вӑй парса тӑчӗ!
Кунӗн-ҫӗрӗн чупрӑмӑр
Канассине пӗлмесӗр.
Ҫапах турӑ пулӑшӗ
Тесе пусараттӑмӑр
Хамӑр ҫуннӑ чунсене!
Ыр ҫынсен чӗрине
Алӑксене шаккаса
"Пулӑшӑр пире" тесе
Йӑлӑнмалла та пулчӗ!
Чӑнах нумай ыр ҫынсем,
Пире пулӑшакансем
Хӑйсен сассине пачӗҫ,
Пире пулӑшу ячӗҫ.
Юлашкинчен тӑрӑшса,
Нумай асап хыҫӗнчен,
Йӳнеҫтернӗ хыҫҫӑн -
"Хыпар" ятлӑ хаҫата
Ура ҫине тӑратса
Чӑвашсене патӑмӑр!
Ҫакӑ чӑваш ҫыннисем
Ӑна кӗтнӗ курӑнать;
"Хыпар" сасне илтсенех
Пирӗн патра мӗскӗнсем
Вӗҫсӗр киле пуҫларӗҫ.
Хӑйсем савӑнса кайнӑ,
Куҫӗ-пуҫӗ ҫуталса
Хӗвел пек йӑлтӑртатса

Хавасланса тăраççĕ!
"Хыпар" тинех тухрĕ-им?
Тесе аран калаççĕ.
Калама пултараймаççĕ!
Хăйсем пире тав туса
Пĕтереймеç "спаçипе!
Сире ыр çынсем!" тесе,
"Турă сире пулăштăр"
Тесе анчах тăраççĕ.
Хăшсем "чăваш Мункунĕ"
Тинех çитрĕ тиеççĕ!
Тата урăх сăмах та
Пире пуçармаллисем
Чăваш ачаш çыннисем
Кăларĕçĕ, кăнтарчĕç!
Суха хыççăн çӳресе
Алăрсене хытарса
Ĕçлекен харсăр çынсем
Пире çапла пусарса
Каланăшăн эпĕ те
Мĕнпур çамрăк чĕререн
Тайла пуçăма тайлап,
Нумай çула кун сунап!
Хура халăх хыçĕсен
Чăваш вĕреннĕ ачисем
Пирĕн пата килмешкĕн
Тытăнчĕç юлашкинчен!
Вĕсем хресченсем пек мар
Урăх куçпа пăхмашкăн
Пирĕн çине тытăнчĕç.
Сăнаса, шăтарас пек
"Эпир камне пĕлесшĕн
Пирĕн çине пăхайрĕç!
Таса мар шухăшсем те
Эпир çамрăкне курса,
Тата начарне пăхса
Нумайăшĕн куççенче
Пире хирĕç шухăшсем
Тапранни те палăрчĕ!
Хăшсем тата "ĕççене

Шанчăклă çын аллине
Памалла" тесе пире
Калакансем те пулчĕç.
Вăл мĕне пĕлтернине
Эпĕ тавçăрса илтĕм,
Ăна эпĕ сăнарăм.
Малашне мĕн пулĕ-ха
Тесе вăрттăн шухăша
Тарăн чуна пытартăм.
Нумай пулмасть Хусана
Вĕт халăхсен Пухăвĕ
Пулса иртсе каяйрĕ.
Чăваш вĕреннĕ çыннисем
Унта нумай килнĕччĕ!
Чи малтанах çав çынсем
"Хыпар" çинчен калаçма
Халап хускатса ячĕç.
Виçĕ кунччен çав халап
Пĕр чарăнмасăр пычĕ.
Нумай унта калаçрĕç?
Пирĕн "Хыпар" хаçатне
Хурлакансем те пулчĕç.
Пуринчен те ытларах
Пачăшкăсем пире хирĕç
Питĕ хыттăн тăрайрĕç.
"Пĕр хура халăх çинчен
Анчах мар эсир çырăр,
Пачăшкă çинчен те çырăр",
Тесе пире каларĕç.
Тата тепĕр тĕрлисем
Ак çапла та каларĕç.
"Çĕре епле тӳрлетсе
Ĕçлемелли çинчен те
"Хыпарта" çырас пулать!"
Тесе каласа хучĕç.
Нумай япала çинчен
Пире çырма хушрĕç.
Пурне те çавна илтсен
Манăн йăлтах ăс кайрĕ.
Вара эпĕ вĕсене

Ватрăм сăмах каларăм:
"Тăвансем: апла пулсан,
Пурин çинчен те çырсан
Пирĕн хаçат ни пăтă,
Ни яшка пулса тăрĕ,
Пĕрне те тĕпплипелех
Эпир хамăр хаçатра
Çыраймăпăр терĕм.
Эсир каланисене
Çырма питĕ кирлине
Эпĕ хам та пĕлетĕп,
Анчах хăшĕ кирлĕрех
Çавна çырсан аванрах
Пулмĕ-ши, ырă çынсем?
Пире халь кирлĕреххи
Патшалăхăн пухуне
Халăха хатĕрлемелли,
Патшалăх йĕрки мĕнле
Улшăнассисем çинчен,
Чăваш халăх пурнăçне
Епле тӳрлетес çинчен
Çавăн çинчен халь пирĕн
Çырас пулать", терĕм эп.
Анчах çапах çав çынсем
Тем чуль уççăн каласа
Парсассăн та хăйсеннех
Вĕççĕр çаптарса тăчĕç.
Виç кун çапла тавлашса
Вăхăта ирттертĕмĕр.
Иккĕмĕш кун çĕнтерчĕç
Пире вĕсем кăшкăрса.
"Эсир хаçат кăларма
Пултарайман ачасем"
Тесе пиртен кулайрĕç.
Тантăш, ун чух иксĕмĕр
Мĕнле пуçпа çĕр хута
Хаçат Швецари витĕр
Тавăннине иксĕмĕр

Анчах эпир пӗлетпӗр.
Чӗрӗллех хура ҫӗре
Чавса пытарнӑ пулсан
Пире ун чух ҫӑмӑлрах
Пулӗ тесе шутлатӑп.
"Ҫӗр чӑтма ҫук илемлӗ,
Ҫурхи сывлӑш уҫӑ-ҫке!
Ҫӳлти ҫутӑ ҫӑлтӑрсем
Йӑлтӑртатса пӑхаҫҫӗ;
Йывӑҫсем те ҫулҫине
Аран йӑтса лараҫҫӗ;
Пӗр сас-чӗвӗ илтӗнмест,
Ӑшӑ ҫил вӑшт ҫеҫ вӗрет,
Вӗрет те пирӗн хуйха
Тарӑн шухӑша кайнӑ
Пит-куҫсене ачашлать,
"Мӗншӗн ытла, ачасем,
Хуйхӑратӑр, шанчӑка,
Пӗтӗм шанчӑк ӗмӗтӗн
Вӑйлӑ ҫунатне татса?
Пӑхӑр халӗ, ак эпир
Епле шӑппӑн калаҫса,
Хавасланса ларатпӑр.
Вӑхӑтлӑха манар-ха,
Хӑвӑр тарӑн хуйхӑра,
Пирӗнпеле савӑнса
Паянхи кун тапратнӑ
Суранӑра тӳрлетӗр".
Тесе каланӑ пекех
Мана туйӗнчӗҫ вӗсем.
Чӑштӑр-чӑштӑр силленсе,
Чӗлтӗр-чӗлтӗр чӗтренсе,
Шӗпӗлтетсе калаҫса
Кӑштӑртатса илейрӗҫ
Ҫу уйӑхӗн ҫулҫисем,
Ачашпа ӳснӗскерсем!
Ҫӗр чӑтма ҫук илемлӗ,
Ҫурхи сывлӑш уҫӑ-ҫке!
Анчах пирӗн чунсенче
Хуйхӑ кастарса ҫӳрет,

Çут çанталăк илемне
Илемсĕрĕн кăтартать!
Виççĕмĕш кун та пулчĕ -
Хĕвел çуталса тухрĕ.
Кун каç майне сулăнчĕ,
Пирĕн пуху пухăнчĕ.
Хайхи çынсен куçĕсем,
Хăшĕн-хăшĕн тутисем
Мăшкăллас пек тăраççĕ.
Каллех хаçат халапне
Эпир тапратса ярса
Калаçма тытăнтăмăр,
Пирĕн май нумай пулса
Тин çияла тухрăмăр,
Çавна курсан пачăшкăсем
Урисемпе тарăхса
Тапăртатма тытăнчĕç.
Тапăртатни вĕсене
Ним чухлĕ пулăшмарĕ,
Комисси суйларăмăр -
Чăнлăх çиеле тухрĕ!
Ах, тантăш, мĕн курнине
Пурне те халь асăнса
Чĕрене ыраттарса
Юнлантарасран хăрап.
Ытти асаплăхсене
Ху та эсĕ пĕлетĕн;
Эс çав асап хушшинче
Чире кайма тытăнсан,
Ху сывлăхна тўрлетме
Çуралнă çĕрне кайрăн!
Унта та эсĕ çапах
Ахаль пурăнас темерĕн;
"Чăваш ушкăн Çĕрпўре
Уçрăн унта кайсанах.
Хусанта чухнех санăн
Чĕрў Çĕрпў çынсемшĕн
Хуйхăрса çункалатчĕ!
Эсĕ ялан калаттăн:
"Çĕрпў уес пĕтĕмпех

Чăваш çыннипе тулнă,
Апла пулсан та çапах
Унти хулара чăваш
Пуç пулакан пĕри çук!
Патша йĕрки чухне пек
Унта хура халăха
Курайман пуян çынсем,
Нумай çĕрлĕ улпутсем,
Пуçлăх пулса тăраççĕ!
Намăс пире, чăваша,
Çĕрпӳ чăвашĕсене!"
Тесе эс тарăхаттăн!
Халь ĕнтĕ эсĕ ĕçле,
Ху шухăшна вырăна
Тăрăш часрах кĕртмешкĕн.
"Хыпар" сасси нихçан та
Сана хамăр кунта чух
Пулăшмасăр хăвармĕ!
Итлĕр, Çĕрпӳ çыннисем,
Çав ăслă çын сăмахне!
Ăна итлесе тусан
Сирĕншĕн ырă кунсем
Часах çитĕç васкаса,
Çутă çинчен каласа.
Усал çынсем аллинчен
Эсир вара хăтăлăр,
Шупашкар çыннисенчен
Эсир каях та юлмăр!

**А.Милли.**
**Хыпар. 1917. Çĕртме уйăхĕн 5-мĕш кунĕ. 9 №.**

## ХАÇАТ ÇИНЧЕН

Ĕлĕк чăвашла хаçат çук чухне ак çапла сăмахсем илтме пулаччĕ. "Иван пичче, эсĕ çырăва аван пĕлетĕн-çке, мĕншĕн хаçат илместĕн?", тесен.

"Эй, Матви илĕттĕм те, вĕтĕ, анчах вырăсла хаçата ăнланса пĕтерейместĕп çав, чăвашла хаçат пулсассăн, тем хак парса та илĕттĕмччĕ ", - теччĕ вара вăл. Халь чăвашла хаçат тухрĕ ĕнтĕ, анчах çав Иван пиччесенчен хаçат нумайăшĕ илеççĕ-ши?

Çук, вĕсенчен хаçат илекенни нумай мар, ытлашши те сахал тиеп эпĕ.

Халь эпĕ каланă сăмахсем пит тĕрĕсне эсир ак çакăнтан курăр. Эпĕ

хам Чистай уесӗнчи ҫын, ҫавӑнпа ман уесре хаҫат илсе тӑракан нумайи тесе пӗрре кӗнеке ҫине пӑхайрӑм. Манӑн хурлӑха, пӗр манӑн хурлӑха кӑна та мар, пӗтӗм Чистай уесӗнче пурӑнакан чӑвашсен хурлӑхне, мӗн пурӗ эпӗ вун виҫӗ ҫын анчах тупрӑм. Хӑш-хӑш вулӑсра виҫшер, хӑшӗнче икшерпе пӗрер ҫын илеҫҫӗ, хӑш та пӗр вулӑсра пӗрре те ҫук. Ҫӗнӗ этем тӳ вулӑсӗнчи хамӑр вулӑсра икӗ ялта пӗрер хаҫат илеҫҫӗ. Вӑл вулӑсра 15 ялта чӑвашсем пурӑнаҫҫӗ, хӑш-хӑш ялсенче 1500 ҫына яхӑн чӑваш пурӑнать.

Икӗ хаҫатпа вӗсене мӗн тумаллӑх пур?

Вӑл 15 яллӑ чӑваш вулӑсне сахалтан ик ҫӗр хаҫат кирлӗ. Пӗтӗм Чистай уесне 1300 хаҫат кирлӗ, мӗншӗн тесен унта мӗн пурӗ 65000 ҫын чӑваш пурӑнать.

Апла вара 50 ҫынпа пӗр хаҫат пулать. Ман шухӑшпа килӗренех хаҫат илмелле те вӗт, анчах чӑваша пӗлмесӗр хытӑ пулни пӗтерет, ҫавӑнпа 50 ҫын та пулсан пӗр хаҫат илччӗр, тетӗн. Пӗччен хаҫат илме укҫа нумай кирлӗ тесен, иккӗн-виҫҫӗн пӗрлешсе илӗр.

Тархасшӑн, тӑвансем, ыйхӑран вӑранӑр! Халь ҫывӑрмалли вӑхӑт мар, апла ҫӳлти патшалӑха курмасӑрах юлӑр. Хӑвӑра мӗн кирлине, хӑвӑр хуйхӑрӑр! Вырӑссем хыҫҫӑн пыни пире ӗнтӗ мите!

Пур ҫӗрти чӑвашсемпе те пӗрлешсе ӗҫлес тесен "Хыпар" хаҫата илӗр! "Хыпар" пӗтӗм чӑваш халӑхне мӗн кирлине каласа парӗ, мӗн пур чӑваша ҫыпӑҫтарса тӑрӗ.

**Кив Савраш ҫынни И.М.**
**Хыпар. 1917. Ҫӗртме уйӑхӗн 5-мӗш кунӗ. 9 №.**

## "ХЫПАР" САССИ

Хусан хули хушшинчен
Ҫамрӑк сасӑ илтӗнчӗ.
Тухрӗ ӗнтӗ чӑвашсен
"Хыпар" ятлӑ хаҫачӗ.

Ҫапла "Хыпар" сас парать,
Вуламашкӑн ҫын шырать.
Вӑй кӗмешкӗн ачана
Хӗрхенес мар укҫана.

Тӗрлӗ юмах чӑвашра
Туять таҫтан хӑратма.
Пулманнине хулара
Пулнӑ теҫҫӗ ял-ялра.

Тухман ăссăр юмаха
Сарас марччĕ чăвашра.
Тухнă "Хыпар" хаçата
Ыйтăр ĕнтĕ ялалла.

Чăвашсене пĕлтерме,
Юмахсене пĕлтерме
"Хыпар" хаçачĕ тухать,
Чăвашсене ăс парать.

Ялти сăмах хӳресĕр,
Хӳресĕр те тĕллесĕр,
Чĕлхе пирĕн шăмăсăр,
Шăмăсăр, чарăнчăксăр.

Ĕç çук пулнă вăхăтра
Çăл куç кутĕнче урамра
Нумай чăваш халаплать,
Йĕркесĕрех шут тăвать.

Распутина тамăкран
Тарнă теççĕ ăшăран,
Чăваш хаçат "Хыпара"
Тухрĕ теççĕ хупмалла.

Сашă ятлă майрана
Татах лартать патшана,
Теççĕ сава Кĕркури,
Чăнни çавăнта мĕн пур-и?

Çĕрпӳпеле Шупашкар
Пырса ларнă юнашар
Тесе тухнă юмах пур.
Ку юмаха шута хур!

Çĕрпӳ çех мар, Етĕрне
Пирĕнпеле пĕрлешнĕ.
Чĕмпĕр хули пĕрлешме
Ячĕ ĕнтĕ çыннине.

Ытти çĕрти чăвашсем
Ярас тесе хыпарсем,
Пĕрлешесшĕн пирĕнпе
Чăвашсене вĕрентме.

Вулăр чăваш "Хыпарне",
Курăр хăвăр ыррине!
"Хыпар" сире çул уçĕ,
Пултăр çавăнпа вăл пуçĕ!

Пире пĕртак вăй пама
Укçа ярăр Хусана.
Эпир сире "Хыпара"
Ҫарас тетпĕр васкатса.

Ҫырчĕ кăна Кĕркури,
Распутин мар, Ельчĕкри.

**"Хыпар". 1917 ç. Ҫу уйăхĕн 7. 2 №.**

## РЕДАКЦИЯ КОНТОРĔН СĂМАХĔ

Хăш-хăш подписчиксем: мĕншĕн эсир хаçат ямастăр тесе пире ўпкелесе хутсем çырса яраççĕ. Ҫавăнпа редакцийĕн конторĕ юратнă подписчиксене калать: "пур подписчиксем патне те ярсах тăнă; пуштă урлă укçа янисем патне укçа çитиччен, тухнă номерсене пурне те пĕрле, укçа пирĕн пата çитсенех ярса тăнă. Мĕншĕн ĕнтĕ хаçатсем çитмен? Ун çинчен хыпарăн конторĕ ним калама та пултараймасть".

Пирĕн пата килсе нумайăшĕ вырăс хаçачĕсем те час çитмеççĕ, хăшĕхăшĕ пуçĕпех çухалаççĕ. Чăнах ун пек пулсан вара пуштара пăтранса çўреççĕ. Ҫавăнпала, ырă çынсем, эсир пире ан ўпкелĕр, эпир хаçата кашни номерах сирĕн пата яма тăрăшатпăр.

Халĕ эпир икшер номер пĕрле яратпăр, эсир уншăн та пирĕн çине çилленетĕр пулмалла. Ак мĕншĕн вăл пулать: - пирĕн адрессем алăпа çырса вăхăт нумай иртет. Малалла çаптарнă адрессем хатĕр пулсан хаçат çапăнса тухсанах пыма пуçлать.

Ырă çынсем! Кĕтĕр редакцине йĕркене кĕртиччен, уншăн эпир тăрăшатпăр.

**Редакция конторĕ.**
**Хыпар, 1917. Утă уйăхĕн 1-мĕш кунĕ. 16 №.**

## “ХЫПАРА” ÇЫРАКАНСЕНЕ КАЛАНИ

1. Николай Петрова. Хаçата “наложенный платежпа” яма май килмест: 1) апла тусан пире валли ĕçĕ пит нумай пулать тата 2) сана та хаçатăн кашни нумĕрĕ, 12 пус вырăнне, 30 пус патне ӳкет.

2. Н А.Герасимова. Хаçата укçа иличчен яма май килмест: пире темиçе хут ĕç тăвать.

3. Пур юлташсене. Нумайăшĕ пирĕн хаçатăн атрĕсне пĕлеççĕ курăнать те, анчах хакне пĕлмеççĕ. Çавăнпа, юлташсем, хаçатăн атрĕсне пĕрпĕрне пĕлтернĕ чухне, хаçатăн хакне те пĕлтерĕр.

4. Кĕнекепе сутă тăвакансене. “Хыпар" хăй кăларнă кĕнекесене кĕнекепе сутă тăвакансене нумайтарах илнĕ чухне тенкĕрен 15 пус (15%) катса парать.

**Хыпар. 1917 ç. Юпа 4, 40 №.**

## ЧĂВАШ ХАÇАЧĔ

Пĕрре çуллахи хĕвеллĕ кун Хусанта крепостьри “Дворецра” чăваш салтакĕсен пухăвĕ пулать тенине илтрĕм те, эпĕ унта кайса курас терĕм. Вăхăт кăнтăрла тĕлнелле. Кĕретĕп крепосте. Хĕвел хĕртсе пăхать... Çав вăхăтрах манăн умран икĕ чăваш салтакĕ ерипен пуплесе пынине куратăп. Пĕри сухаллăскер, тепри çамрăкрахскер. Çамрăкки сылтăм аллине “Хыпар” хаçатне тытнă та хуллен варкăштарса пырать тата çав вăхăтрах хаçатне çĕклерĕ те, сухалли еннелле пăхса, ак çапла кала пуçларĕ: “Эх, мĕскĕн чăвашĕ! Вуламаллăх хаçачĕ çук, çакă пĕр 'Хыпар” пур ĕнтĕ, вăл та пулин эрнере иккех тухать, ахаль те вуламалăх çук кунта, пĕчĕкçĕ”-, тет, тата: “Вырăспа тутарсене пăх–ха, мĕнле кашни кун тухакан пысăк хаçатсем пур вĕсен, тата хăйсен урăхла çырăвĕсем, пирĕн чăвашсенĕн саспаллисем те вырăслах”,- терĕ. Çак сăмахсем малтан мана та хурланмалла пек туйăнчĕç, анчах пирĕн саспаллисем те вырăсла тенĕшĕн мар, хаçат пĕчĕкçĕ, вуламаллăх çук тенĕшĕн. Кайран шутларăм та: “Ку çын пĕлмесĕр калаçать”,- терĕм. Пирĕн чăвашсен çырăвĕ вырăсла саспаллисем евĕрлĕрен ăна ниепле те хурлама çук. Мĕншĕн тесен ун пек çыру пĕрре анчах мар, Хĕвел анăç енчи патшалăхсенче тĕрлĕ халăхсем пурте “латинский” çырупа çыраççĕ, эпир, Раççейра пурăнакансем, вырăсла çыру евĕрлĕ çырнăшăн пире те никам та хурлаймĕ. Анчах чăваш хаçачĕ пĕчĕкçи, вăл вулама сахаллишĕн никам та мар, пĕтĕм чăваш халăхĕн пĕлес пулать: пирĕн “Хыпар” хаçачĕ вăйланасси те, пĕтсе ларасси те хамăр çинчех. “Чăвашла хаçат сахал, начар”, - тесе калакансем урăх та пулĕç тетĕп эпĕ, çавăнпа калатăп : чăвашла хаçат вăйлăлантăр тесен, пирĕн хамăрăнах пулăшмалла ăна, никам çине шанма та çук. Ку чухне пур ĕç те, пур

япала та хаклă пирки хаçат кăларма та пит йывăр, ун çинчен "Хыпарăн" 39 № лайăх кăтартнă... Пирĕн чăвашсен хамăрăн типографи çук пирки пĕр нумĕр хаçат çапмах миçе çĕр тенкĕ кирлĕ унта. Типография хамăрăн илес тесен, нумай пин тенкĕсем кирлĕ пулаççĕ. Çавăнпа пĕтĕм чăваш халăхĕ харпăр хăйшĕн тăрăшасчĕ часрах. Малашне ĕнтĕ вырăнĕпе çав чăвашран вулăс земствисем те, кооперативсем те пулаççĕ. Çавсен пуринĕн те пуринчен манмасăр хăйсен хаçатне пулăшма тăрăшасчĕ. "Хыпар" хаçатне чăваш хушшинче лайăхрах сарасчĕ, ăна пур çĕрте те илччĕрччĕ, вара хаçат çуллен-çул вăйлăлансах пырĕ. Эпир "Хыпара" илмесен, вăл начарланса тухми те пулĕ. Халĕ пирĕн нумай ялсенче чăвашла хаçат тухнине те пĕлеççĕ, те пĕлмеççĕ. "Хыпар" татăкне те тупаяс çук. Чăвашсем апла илмесессĕн, пирĕн пĕртен-пĕр "Хыпар" та часрах куçран çухалĕ. Епле йывăç пахчинчи çамрăк çимĕç йăвăç çине пăхмасассăн вăл ӳкмест те, çав вăхăтрах хăрса ларма та пултарать, ăна пăхсах, шăварсах тăрсан, вăл часах çитĕнсе хăватланса каять те усăллă çимĕç кӳме пуçлать, пирĕн "Хыпар" та чăвашсем хушшинче ку вăхăтра анчах шăтса тухнă çамрăк йывăç евĕрлĕ-ха, ăна вăй иличчен пулăшмалла, кайран вăлах, вăйлансан, пĕтĕм чăваш халăхне çутăлтарса, пысăк усă кӳре пуçлĕ. Çавна ан манăр, чăвашсем, пулăшăр "Хыпара"!

**1917.**

Хыпарăн 13-мĕш нумерĕнче "Ирĕклĕх кивçен хутне илĕр" тенĕ статьяра хаçата çаптараканни икĕ çĕрте манăн çырăва урăхлатса йăнăш тунă Вăл вырăнсене тӳрлетсе вуламалла.

"Хăвăрах пĕлетĕр: банкăран пĕр çулталăка 90 тенкĕ илтĕм тесе алă пусатăр", тенĕ вырăнне: "хăвăрах пĕлетĕр: банкаран пĕр çулталăка 90 тенкĕ илсессĕн, 100 тенкĕ илтĕм тесе алă пусатăр", тесе вулас пулать.

Тепĕр çĕрте: "Эсир... 425 тенкĕ парсан - 1000 тенкĕ тăракан хут парать", тенĕ. Кăна капла вулас пулать: "Эсир 425 тенкĕ парсан - хысна 500 тенкĕ, 850 тенкĕ парсан - 1000 тенкĕ тăракан хут парать" темелле.

**Кăлкай П.**

**Хыпар, 1917. Утă уйăхĕн 1-мĕш кунĕ. 16 №.**

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИ

Пĕрре эпĕ çемлянкăра чăваш салтакĕпе вырăс салтакĕ чăваш чĕлхи çинчен калаçнине итлесе лартăм. Вырăс салтак Яшша ятлă, чăвашĕ Петĕр ятлă. Вĕсем вырăсла шавласа ларчĕç. Эпĕ сире вĕсен сăмахне чăвашла куçарса парам.

Яшша. Петĕр, эсĕ калатăн: пирĕн хамăрăн чăваш хаçачĕ пур, тетĕн;

кала-ха мана, мĕнле çыраççĕ ăна: вырăсла-и, чăвашла-и?

Петĕр. Мĕскер калаçатăн вара эсĕ( Хамăр хаçата чăвашла çырмасăр... Мĕн нушаран ăна вырăсла çырччăр!

Яшша. Чăваш чĕлхине хаçат çине ӳкерме пӳлтараймаççĕ пулĕ, тетĕп эпĕ.

Петĕр. Мĕншĕн?

Яшша. Сирĕн чĕлхĕр ытла начар тенине илтсеттĕм эпĕ: вăл илемсĕр, сăмах енчен юрлă чĕлхе тенине, сирĕн чĕлхĕрпе пĕр-пĕр япала çинчен авантарах кӳрсе каласа кăтартас пулсан, аптăраса пĕтмелле тенине; тата-ăспа пĕлмелли япаласем çинчен калаçас-тăвас пулсассăн, чăвашла каласа пама май çук пирки, вырăсла калас пулать тенине илтнĕччĕ эпĕ.

Петĕр. Аха! Апла мĕн! Тин тăна кĕтĕм эпĕ... Тавах сана капла каласа ăнлантарнăшăн...

Яшша. Сана чăваш чĕлхи çинчен вырăссем каласа кăтартнă пулĕ. Апла пулсан санăн сăмахусем мана питех тĕлĕнтермеççĕ. Мана ак мĕскер ытла тĕлĕнтерет. Пирĕн ялта пĕр чăваш ачиех, второклассннăй шкулта вĕренсе тухнăскер, хамăр тăван чĕлхене хурлать. "Чăваш чĕлхи пит начар чĕлхе, вăл кĕлĕмçĕ (ыйткалакан) чĕлхи" тет çак чăваш ачи. Юлташĕсемпе вăл вырăсла анчах калаçать, вĕсем патне çыру твраш çырса ярас пулсан, вырăсла анчах çырать; чăваш чĕлхинчен вутран хăранă пек хăрать. Тата калам сана, ун йышши çын вăл анчах мар, урăххисем те тупăнаççĕ. Мĕншĕн вĕсем хăвăр чĕлхере хурлаççĕ вара? Çавна чăнах та, тĕлĕнмелле ĕç ку.

Петĕр. Аптрамалла, Яшша. Сана хирĕç эпĕ ак çак сăмаха анчах тупса калама пултаратăп. Ун йышши çынсем хамăр чĕлхене питех те начар пĕлеççĕ пулĕ, тетĕп. Çавăнпа вĕсем чĕлхе илемне те курма пултараймаççĕ, вăл çыпăçуллă чĕлхе иккенне те сисеймеççĕ пулĕ тетĕп. Çитменнине тата, вĕсем ялти шкултан пысăкрах шкулсенче вĕреннĕ вăхăтра кунĕн-çĕрĕн вырăс чĕлхи çинче ларнă, вырăсла кĕнеке анчах вуланă, юлташĕсемпе яланах, лешсем чăваш пулсан та, вырăсла анчах калаçнă. Çапла пĕр-ик çул пурăнса ирттерсен, ку чăваш ачисем ялтах вырăса тухса каяççĕ.

Пĕрмаях вырăс ачисем чăвашран та, чăваш чĕлхинчен те кулнăран тата чăваш пурнăçĕ çинчен вырăсла çырнă кĕнекесем çинче те чăваша хурлани çинчен вуласа пăхкаласан, хайхискерсем, чăваш чĕлхине начар пĕлекен япаласем, чăваш чĕлхи чăнах та начар чĕлхе пулĕ тесе шухăшлама вĕренеççĕ. Кайран, пурăна-киле, ку чăваш ачисем хăйсемех те хамăр чĕлхене хурлама хăюлăх тупаççĕ. Ун пек ачасене эпĕ часчасах калаттăм:

"Тăвансем, чăваш чĕлхи çинчен вĕренĕр, ăна тăрри-тымарĕпех пĕлсе çитерме тăрăшăр. Вара хамăр тăван чĕлхене, темиçе çĕр çул пурăнакан ватă чĕлхе хурлама мар, юратма вĕренĕр" теттĕмччĕ.

Яшша. Петĕр, эсĕ ытла та хитре "килĕшӳллĕ" калаçатăн. Санăн сăмаху тăрăх чăваш чĕлхи те аван, пуян чĕлхе тенĕ пек тухать. Эпĕ хам чăвашла пĕлменнипе пĕрех, "çуккур" теме те "çӳçӳ" теме анчах пĕлетĕп. Çавăнпа эпĕ сирĕн чĕлхĕре мухтама та, хурлама та пултараймастăп.

Петĕр. Эй, Яшша, ăслă çын кирек кам та çапла сан пек каламалла. Чăваша ытларах та хурлакансем, тата чăваш çинчен кĕнеке çыракан вырăссем те пурĕ те тенĕ пекех чăваш çинчен нимĕн пĕлменпе танах вĕт. Вĕсем чăвашла сан пек "Çуккур", "Çӳçӳ" теме анчах пĕлсессĕн те, чăваш чĕлхине хурлама пăхаççĕ.

Пирĕн чăваш чĕлхи, мухтанмасăр калатăп сана, Яшша, сирĕн ялти калаçакан çынсем калаçакан чĕлхерен нимĕн енчен те кая тăмасть. Çавăнпа эпир хамăр хаçата "Хыпара" пит килĕшӳллĕ-илемлĕ каласа çырма пултаратпăр та.

"Хыпара" чăвашсем пит юратса вулаççĕ, пуштăран пуштă чун пек кĕтсе тăраççĕ. "Хыпарта" тăраниччен вуланă чăваша курни çук-ха эпĕ.

**Тевентер.**

**Хыпар, 1917. Октябрь уйăхĕн 12-мĕш кунĕ. 42 №.**

## "ХЫПАРА" ÇЫРАКАН САЛТАКСЕНЕ КАЛАНИ

Вăрçăра тăракан чăваш салтаксем пиртен "чăвашла кĕнеке-хаçат илме çын уйăрса (суйласа) яма юрать-и?" тесе ыйтаççĕ. Юрать. Ăна ак çапла тумалла. Ротный комитета заявление парас пулать - пĕр салтака чăвашла кĕнеке - хаçат валли илме яма ирĕк парăр тесе, вара ротный комитет эсир ыйтнине полковой комитета ярать. Полковой комитет полковник урлă корпус командирĕ патне ярать. Унта ирĕк парсан, вара кĕнеке-хаçат илме хăвăр хушăртан пĕр çын яма юрать. Унашкал кунта пĕр 3-4 салтак вăрçă патĕнченех килсе кайрĕç.

**Ред.**

**Хыпар, 1917 ç. Çурла 31, 32 №.**

## " ХЫПАР" ИЛСЕ ТĂРАКАНСЕНЕ

Çак "Хыпара" халиччен илсе тăракансене юлашки номер ятратпăр. Малашне çĕнĕ çултан укçа тӳленисене анчах ярăпăр. Çавăнпа иртнĕ çула "Хыпар" илсе тăракансене, килес çул та илесех тесен, "Хыпа-

рăн" малтанхи питĕнче кăтартнă хак çине пăхса - частарах укçа яма тăрăшăр.

**Редактор.**

**Хыпар, 1918 ç. Кăрлач 1. 59 №.**

## ПУЛĂШĂР "ХЫПАРА"

Юлташсем - гласныйсем! Çуркуннерен вара Хусан хулинче ырă çынсем тăрăшнипе "Хыпар" ятлă чăвашла хаçат тухма пуçларĕ. Пирĕн патшалăхра мильюн ытла чăваш пурăнать, анчах "Хыпар" илекенсем пурĕ те виçĕ пин çынна яхăн çех. Малалла та "Хыпар" илекен çапла кăна пулсан, пирĕн хаçатăмăр хупăнса та ларма пултарĕ, вара эпир "Хыпарăн" ырă сассине те илтейменĕпĕр.

Чăвашсем-тăвансем! Çаплах хупăнма ирĕк парăпăр-ши... Çук... шанас килмест апла пулассине.

Юлташсем! Кам, чăваш халăхне ырă сунать, кам ăна хĕрхенсе тĕттĕмрен çутта кăларма тăрăшать, - тытăнар вăй çитнĕ таран, "Хыпара" пулăшма.

Çак уйăхсенче пур вулăсра та Земский собранисем, уессенче те уес земский собранисем пулмалла, çав собранисенче эсир, гласныйсем тăрăшăр, "Хыпар" валли пулăшу илме. Вулăсра тĕрлĕ халăх пулсан, чăвашла хаçата пулăшма кӳнмесен, эсир чăваш гласныйсем ăрсана чăвашсем çине раскладка туса ярăр. Кама тивмен 10-15 пус укçа.

Паян 5-мĕш ноябрьте пирĕн Вулăс Земский собранийĕ пĕр саспа "Хыпара" пулăшма çитес çул валли 300 т. памалла турĕ, чăваш пурăнакан вулăссенче пуринчен те çакăн пек кăна пулăшу пулсан та 30-40 пин тенкĕ укçа пухăнĕччĕ, хаçатăмăр вара кунсерен тухĕччĕ.

Пирĕн çак сасса, ырă çынсем, чăваш хушшинче сарма тăрăшар.

**Ĕпхӳ /Уфа/ губернин, Белебей уесĕнче, Хушалка вулăсĕн Земский гласныйсем: Трофим Гурьев, Н.Алексеев.**

**Хыпар. 1917 çул. 50 №.**

## "ХЫПАРĂН" УКÇА-ТЕНКИ
### *УКÇА КИЛНИ*

Чăвашла хаçат туха пуçланăранпа "Хыпар" валли çак укçасене илнĕ:

| | |
|---|---|
| Хаçат уйăхпа илекенсенчен - | 12512 т. 9 п. |
| "Хыпар" ваккăн сутнипе - | 1035 т. 46 п. |
| Хусан кĕпĕрни Земства хаçат | |

| | |
|---|---|
| кăларма панă - | 12000 т. |
| Тĕрлĕ çынсем пулăшса пани - | 4250 т. 27 п. |
| "Хыпар" та систерсе çаптаракансене - | 252 т. 40 п. |
| "Хыпар" кăларнă кĕнекесене сутса - | 895 т. 61 п. |
| Атрĕс улăштарнăшăн - | 1 т. 90 п. |
| **Мĕн пурĕ -** | 31305 т. 01 п |

## *УКÇА КАЙНИ*

| | |
|---|---|
| Хаçат валли хут - | 6040 т. илнĕ |
| Хаçат çапăннăшăн - | 7216 т. 18 п. |
| Хаçат янăшăн пуштă - | 2217 т. 08 п. |
| Тĕрлĕ хаçатсем илсе - | 15 т. 70 п. |
| Кирлĕ япаласем илсе - | 285 т. 45 п. |
| Хаçат турттарса - | 111 т. 66 п. |
| Тĕрлĕ вак расхутпа - | 355 т. 80 п. |
| Хаçат панче ĕçлекенсене - | 3249 т.52 п. |
| Икĕ петерик вут илнĕ - | 500 т. |
| Хваттер укçи - | 259 т.45 п. |
| **Мĕн пурĕ -** | 20350 т.96 п. |

## *ПИРĔН ПАРĂМ*

Хаçат çапнăшăн - 505 т. тӳлемен

Ĕçлекенсене - 503 т.33 п.

Хаçат турттарса килсе, турттарса кайнăшăн - 10 т.

**Мĕн пурĕ -** 1018 т.33 п.

Пур килнĕ укçаран расхутпа парăма кăларсан авăн уйăхĕнчен юпа уйăхне 9935 т. 72 п.

**Хыпар. 1917 çул. Авăн 28. 39 №.**

## ПАХА ЮЛТАШСЕМ

"Хыпарăн" 50-мĕш нумĕрне малтанхи сăмаххинчен пуçласа юлашки сăмаххи таринех вуласа тухрăм та питех савăнтăм. Çак нумĕр (сире суса-мухтаса каламастăп) 1) чĕлхе-çăвар ăнăçу енчен те 2) çырнă сăмаххисен тăнĕ-пуçĕ енчен те тата 3) вăл нумерте мĕн çырнă пекки пĕр чунлă тухнăран та пур енчен те ку нумĕр калама çук аван тухнă.

Эпир авалтанпа патшалăха, патшалăхри пĕр тĕрлĕ халăхран нациран мала хума вĕреннĕччĕ. Çавăнпа эпир, чăваш ĕçне тытăннă чухне, яланах малтан: ку ĕç пĕтĕм Раççее киревсĕр пулмĕ-ши? тесе шутлат-

тăмăр. "Хыпарăн" ку таранчченхи нумĕрсенче те çапла шухăшлани палăрчĕ.

"Хыпарăн" çак 50-мĕш нумерĕнче: Чăваш халăхĕ Раççейшĕн мар, чи малтан хăйĕншĕн пурăннине, чăваш ĕçне тытăннă чухне, чи малтан: вăл ĕç чăваша усăллине, чăваша малалла куçарма пултарассине пăхас пулать.

Икĕ пин çул ĕлĕк: этеме праçникшĕн (шăматкуншăн) туман, праçнике этемшĕн тунă тенĕ.

Чĕлхе-çăварĕ енчен "Хыпар" мĕн чухлĕ малалла кайнине эпĕ шарламастăп та.

Ун çинчен чĕлхе-çăварăн чунне манран авантарах сисекенсем калаччăр. Анчах эпĕ те çак нумĕре вулама çăмăллине, вуланă чух чун савăннине каламасăр чăтаймастăп.

Хăш статйи те пĕлтерни авантараххине те каламастăп, мĕншĕн тесен пурте аван, пурте чăваш халăхне усă кўрессине çирĕп астăваççĕ...

"Хыпарта" ĕçлекене пурне те чунтан-вартан саватăп. Малашне те "Хыпар" çакнашкалах сисекен, тытăçуллă алрах юлсан, чăваша, калаçма çук, пысăк усă кўме пултарать. Вара вăл чăваша вăратĕ. Вара вăл чăваша хăйне халăх вырăнне хума вĕрентĕ. Вара вăл чăвашсене Раççейри малти халăхсемпе танлашма çул кăтартса парĕ.

Çавăнпа, юлташсем,- çав тери пысăк, чăваша усăллă ĕçе малашне те туса тăма сире турă вăй патăр!

**С.Николаев**

**Хыпар. 1917 çул. Раштавăн 5-мĕшĕ, 53 №.**

## ХАМĂР ХАЛĂХ

Пĕр миллион ытла чăвашран çурри ытла Хусан кĕпĕрнинче пурăнать. 1911 çулта Хусан кĕпĕрнинче 613,769 чăваш пулнă, ытти кĕпĕрнесенче 384,920 чăваш пулнă. Чăваш 262 вулăсра, 2129 ялта пурăннă. 1862 çулта Хусан кĕпĕрнинче чăваш 333,065 çын пулнă. Раççейре чăвашран нумайтарах халăхсем: вырăс - 63 миллион, хохол (малоросс) - 25 мил., поляк - 9 мил., белорус - 6 мил., тутар - 4 мил., каркас - 4 мил., нимĕç - 2 мил., пушкăрт, латыш, литовцы, армян, молдаван, мордва, эсты, сарты кусем пур те пĕрер миллион ытла. Ытти халăхсем миллиона çитеймеççĕ, чăваш чухлĕ çук.

Чăвашсем эпир Хусанпа Чĕмпĕр кĕпĕрнисенче йышлăн пурăнатпăр пулсан та, чăваш ĕçне кирлĕ таран туса çитерейместпĕр. Чăваша ăслă, вăйлă пулма ятарласа пулăшаймастпăр, Етĕрнепе Чикме уессенче кашни вулăсра чăваш ялĕ 60-80 çитет.

Кашни вулăса "Хыпар" 80 мар, 20 нумер килмест. Мĕншĕн çавă?

Эпĕ вĕрентекенсене курса: - "Хыпар" илетĕр-и? - тесе ыйтсан: - Хам илейместĕп; ялта пур, - çавна вулатăп, - теççĕ.

Аякра, инçетре пурăнакан чăвашсем пиртен ытла "Хыпар" юратаççĕ. Ун çинчен илтсенех илме тăрăшаççĕ. "Хыпарăн" 48 № çине ун çинчен Семен Марков çырнă.

Халĕ хаçат ятпа илеççĕ. Кредитное товарищество, общество потребителей хаçат илет. Вĕсем пурĕ те "Хыпара" нихăшĕнчен малтан илччĕр.

Вĕреннĕ чăвашсем чăваш хушшинчи сăмаха "Хыпар çуртне" пĕлтерччĕр. Пĕр-пĕринпе чăвашла калаçма та, хире-хирĕç чăвашла çыру яма та ан именччĕр. Тутар тутара тумтиртен паллать. Эпир чăваш тумтирне пăрахнă та, чăваша, сăмахсенчен анчах паллама пултаратпăр. Пĕрпĕрне палламасан, пĕрлешме те пултараймастпăр.

Пĕрлешни пире нимрен ытла халех кирлĕ. "Хыпар" çинчен Силич пĕрлешме (№ 49,51) хытă чĕнет. Эпĕ ăна августăн 8 кунĕнче хам та хытă сăнарăм. Чиркӳ Пухăвне суйланă чух, эпир 28 чăваш анчах пултăмăр. Икĕ çын вырăнне пĕр çын анчах суйларăр ("Хыпар" 29 №). Пирĕн чăвашсен, Силич ("Хыпарăн" 51 №) каланă пек, таса ушкăнсем тăвас пулать. Чиркӳ ĕçĕпе пурăнакансем, товариществосем, уйрăм ушкăнсем туччăр. Ушкăнсем пĕрлешсе, пĕтĕм Чăваш ушкăнĕ тăвăпăр. Малашне чиркĕве, земствăна, шкулсене вĕреннĕ чăваш кирлĕ. Ушкăнсем пулсан, - вĕреннĕ шанчăклă чăвашсене часах тупăпăр. Халĕ земствăра та, шкулсенче те, прихотсенче те чăваш сахал. Халĕ чăвашла лайăх пĕлекен те пирĕн хушăра сахал.

**І.Юркки.**
**Хыпар, 1917 çул. 55 №.**

## ТĂВАНСЕМ - ЧĂВАШСЕМ!

"Хыпарăн" çак 50-мĕш нумĕр çинче юлашки хут Учредительски Собрани çинчен çыратпăр.

Паян тата тепĕр хут, юлашки хут пĕтĕм Хусан кĕпĕрнинче чăваша: пĕрремĕш нумĕршĕн сас пама чунтан-вартан чĕнетпĕр!

Хусан кĕпĕрнинчи Чăвашсем эпир каланине хăлхана та чикмерĕç пулсан, малашнехи чăваш ăрăвĕ пире ан ӳпкелетĕр. Эпир, - Чăваш ĕçне çĕклес тесе, мĕн вăй çитнине турăмăр, пирĕн чун таса!

**"Хыпар" редакцийĕ.**
**Чăваш халăх ушкăнĕн правленийĕ.**
**Хусанти чăваш салтак ушкăнĕ.**
**Чăваш Социалист-Революционерсен комитечĕ.**

## ЧĂВАШЛА ХАÇАТ «ХЫПАР» 1918 ÇУЛТА ЭРНЕРЕ ИКĔ ХУТ ТУХАТЬ

| | 12ух. | 11ух. | 10ух. | 9ух. | 8ух. | 7ух. | 6ух. | 2ух. |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Киле çитерсе памалла | 15т.50п. | 14-75 | 13-90 | 10-95 | 10-90 | 9-75 | 8-50 | 3-40 |
| Киле ямалла мар | 13т.50п. | 12-30 | 11-70 | 10-75 | 9-20 | 8-15 | 7-15 | 2-90 |

**Хыпар. 1918 çул. 60 №.**

## ТĂВАНСЕМ!

"Хыпара" чăваш халăхĕ хушшинче сарма тăрăшăр.

Чăвашсем, хăвăр хаçатăра пĕтерес мар тесен, ăна укçан пулăшăр.

Юлташсем, хăвăр патăрти паллă хыпарсене "Хыпар" валли кĕскен çырса ярăр!

"Хыпар" 1918 çулта эрнере икĕ хут тухать. Хакĕ çапла пулать:

1 уйăха 1т. 80п., 2 уй. 3т.40п., 3 уй. 4т.70п., 4 уй. 6т., 5 уй. 7т.25п., 6 уй. 8т.50п., 7 уй. 9т.75п., 8 уй. 10т.90п., 9 уй. 11т.95п., 10 уй. 13т.90п., 11 уй. 14т.75п., 12 уй. 15т.50п.

1. Суя ятпа е ятсăр янă, хутсене "Хыпар" çине çапмаççĕ. Çаптарас тесен çыраканăн хăйне тĕрĕс ятпа та, атрĕспе те хучĕпе пĕрле çырса ямалла.

2. "Хыпара" килнĕ хутсене редакция кирлĕ пулсан, кĕскетме те, тӳрлетме те пултарать.

3. Çапма тиркенĕ хутсене редакция усрамасть.

4. Тирпейсĕр (вулама йывăр) çырнă хутсене те, çырусене те редакция пăхмасть.

5. Куçарса çыракансене ăçтан куçарнине кăтартмалла.

**Хыпар, 1917 çул. Кăрлач 5. 60 №.**

## ХАЛĂХА ВĔРЕНТСЕ ĂСА КӲРТЕССИ ÇИНЧЕН ШКУЛ ĔÇĔ

1) Кĕçĕн шкулсем: а) вăл миçе тĕрлĕ пулмалли (пуçламĕш шкул, малалли шкул); б) шкулсенче мĕнле вĕрентесси çинчен; мĕнле чĕлхепе вĕрентесси çинчен, япаласем çинчен; в) шкулсенче кам пăхасси çинчен.

2) Пысăк шкулсем: а) кĕçĕн шкулсенче вĕрентекенсем кăларакан шкул (уч.семинария, курсы), б) пур япаласем çинчен те пĕлтерекен шкулсем (гимназия, реальное уч.ыт.те); в) шкулсенче хамăр чĕлхепе лайăх пĕлсе калаçма-çырма вĕрентесси çинчен, ĕлĕкхи чăваш халăх пурнăçĕ çинчен,

чăваш халăхĕ йăли-йĕрки çинчен, чăваш пурăнакан çĕр-шыв çинчен.

3) Тĕрлĕ ăс-тăна вĕрентекен шкулсем: (тимĕрçĕ, каскалама, атă çĕлеме, ал ĕç тума, пир-авăр тĕртме, пахча-çимĕçĕ тума, çĕр ĕçлеме вĕрентекен шкулсем).

Шкулта вĕрентнинчен пуçне халăха тата мĕнле майпа вĕрентсе ăса кӳртесси çинчен.

Вырсарни кун вĕрентмелли шкулсем çинчен, каçсерен вĕрентмелли классем çинчен. Хĕлле йĕресене вăхăтра вĕрентмелли курссем çинчен, халăх çурчĕ çинчен, библиотекăна уçса унта халăха вуласа кăтартасси çинчен.

## КĔНЕКЕ ÇАПАССИ ÇИНЧЕН

Шкулсенче вĕрентмелли кĕнекесем çинчен, вĕреннĕ чухне кирлĕ япаласем çинчен, çулталăкĕпе тухакан япаласем (хаçат-журнал) урăх тĕрлĕ кĕнекесем çинчен.

Атăл таврашĕнче пурăнакан тĕрлĕ халăхăн Хусанти Пухувне пынă чăвашсем хăйсен пухуне уйрăм Чĕмпĕрте пуçтарăнмалла турĕç. Çав пухăва ак камсем каймалла: земство ĕçне тăвакансем, вулăсри комитетсем, ялти банка ĕçне тăвакансем, халăх лавкки ĕçне тăвакансем, чăваш салтак ушкăнĕнче тăракан çынсем, тата чăваш халăхне юратса вĕсене ăса вĕрентме тăрăшакан пур çын та пухăва каяс пулать. Çак каланă тĕрлĕ-тĕрлĕ ĕç туса тăракан çынсем хăйсен хушшинчен пĕрер çын суйласа çав пухува ярас пулать. Пухăвĕ чăваш шкулĕнче пулать. Килекенсене пурăнма хваттир укçасăрах янта пулĕ. Пыракансене хăйсемпе пĕрле чей, сахăр, çимелли япаласем илсе пыма хушаççĕ, мĕншĕн тесен самана улшăнса пырать, тен, вăл вăхăтра Чĕмпĕрте çимелли тупма çăмăлах пулмĕ.

Вăл пуху çинчен тата мĕн те пулсан тĕплĕнрех пĕлес тесен, Чĕмпĕрте чăваш шкулĕнче Организационное бюро пур, çавăнтан ыйтăр. Тата çак пуçтарăнса пуху усăллăрах ĕçлетĕр тесе çав бюро чăвашăн вĕреннĕ çыннисене, чăваша çутта кăларас тесе тăрăшакан çынсене пурне те пикенсе пĕрле ĕçлеме чĕнет.

**Пуху пуçтаракан Бюро.**
**Хыпар. 1917 çул. 12 №.**

## ЧĂВАШ ÇЫННИНЕ МĔН КИРЛИ ÇИНЧЕН!

"Хыпарăн" тăваттăмĕш нумерĕнче Ширнавой йăхĕ хресченсене пуринчен ытла прихут кирлĕ тесе çырать, çавăнпа эп те ун çинчен пĕртак кăна çырас тетĕп. Анчах прихут кирлĕ мар тесе урăх япала кирлĕ тесе каламастăп. Ширнавой йăхĕ каланă пек прихут пире пит кирлĕ, анчах унтан ытларах пуринчен те ытларах пирĕн чăвашсене пĕрлешесси кирлĕ, пĕрлешсе хамăра мĕн кирлине пĕлекен пулсан, эпир лайăх прихут тума та пĕлĕпĕр, ытти мĕн кирлине те тăвăпăр, çавна вĕренес тесен пирĕн нумайрах чăваш хаçачĕ вулас пулать. "Хыпарăн" пĕр нумерне те пуçĕсенчен пуçласа вĕçне çитичченех вулас пу-

лать, пӗр нумерне те, пӗр статйине те сиктерсе хӑварас пулмасть, унтан "Хыпар" хаҫачӗ куллен тухтӑр тесе ыйтас пулать, куллен кӑларма кӑларакан е вӑйӗ ҫитмесен, е мӗн те пулсан чарать пулсан, ӑна пулӑшас пулать. Унтан тата "Хыпара" илме укҫана шеллес пулмасть, тӑван-хурӑнташа та, кӳршӗ-арӑма та, туса-йыша та "Хыпар" хаҫачӗ илер те ҫавна кӑна вулар, вырӑс хаҫатне ан вулӑр тесе ӑс парас пулать. Хамӑрантан кирек камӑн та чӑваш хаҫатне кӑна вулас пулать. "Эпӗ вырӑсла ӑста, вырӑс хаҫатне те ӑнланатӑп, мана мӗне кирлӗ чӑваш хаҫачӗ" тесе калас пулмасть. Ҫак "Хыпар" хыҫҫӑн кӑна кайсан, ун сӑмахне итлесен, эпир час пӗрлешӗпӗр, пӗр ӑслӑ, пӗр шухӑшлӑ пулӑпӑр - пӗр аслӑ пӗрлешсе ҫитсен, хамӑра мӗн кирлине те пӗлекен пулӑпӑр, кирлӗ пек тума пултаракан та пулӑпӑр. Епле пӗрлешмеллине пире "Хыпар" вӗрентнӗ, анчах хамӑрӑн тӑрӑшас пулать. Каҫарӑр мана, эпӗ хам ухмах ӑсӑмпа пире мӗн кирли ҫинчен калас теп. Пире "Хыпартан" пуҫне тата кирли - шкул пур. Пире вырӑс шкулӗ кирлӗ мар, чӑн-чӑн чӑваш шкулӗ кирлӗ. Ҫав шкулсен хушшинче пире кирлӗ таран пӗчӗккӗ те, вӑт ҫӗрти те, пысӑкки те (высшее учебное заведение) хӗрарӑм вӗренмелли те, ар ҫын вӗренмелли те пултӑрччӗ. Ҫав пысӑкки тухтӑр (лекер) шкулне пулинччӗ, мӗншӗн тесен пирӗн чӑваш ҫынни чиста пурӑнмасть - чиста пурӑнман пирки пурин те тенӗ пекех куҫӗ суккӑрах пулман та пӑсӑк (трахомала) пулать, вырӑс тухтӑрсем вӗсене тӳрлетес тесе тӑрӑшмаҫҫӗ. "Чӑваш куҫӗ тӳрленмес, вӗсем эрнере пӗрре анчах пит ҫӑваҫҫӗ, вӗсене панӑ имҫама кӑна каять" теҫҫӗ. Тухтӑрсем чӑвашран пулсан пире епле пурӑнмаллине вӗрентеччӗҫ, куҫ пӑсӑлсан та, ытти чир пулсан та пире тӳрлетме тӑрӑшатчӗҫ. Пирӗн кунта Кукар кӳль (Чистай уесӗ) пульницинче пӗрре чӑваш тухтӑр Ефремов пурӑнчӗ, унтан лайӑххрахне чӑвашсем халь те асӑнса пӗтереймеҫҫӗ. Ӑна кураймасӑр "политический преступник" тесе становойсем тыттарса ячӗҫ, ҫавӑнтан вара вӑл пирӗн пата каймалла ҫавӑраймарӗ. Ӑна мӗн пурӗ чӑвашсене юратнӑшӑн кӑна кураймарӗҫ, урӑх вӑл нимӗскер усал ӗҫ те туман. Чӑваш шкулсенче вӗренсе тухнӑ ҫынсем хӑйсем те вырӑс пулас тесе тӑрӑшмӗччӗҫ. Чӑвашах пулса пурӑнас тиеччӗҫ. Халӗ пирӗн вӗреннӗ ҫынсем хӑйсем чӑвашран тӑрӑшаҫҫӗ пулсан та, хӑйсен пек вӗреннӗ ҫын чӑвашран тупайман пирки арӑмсене майра илеҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсен ачисем вырӑсах пулаҫҫӗ те чӑвашсенчен вырӑссемпе пӗрле кулса кӑна ҫӳреҫҫӗ, вӗсене шеллемеҫҫӗ - вӗрентмеҫҫӗ.

Пур вӗреннӗ чӑваш ачисем те вырӑса тухман пулсан - пирӗн халӗ ӗнтӗ вӗреннӗ чӑваш пит нумай пулӗччӗ, вырӑссем те ҫавсене пула чӑвашран кулма та пӑрахнӑ пулӗччӗҫ.

**Илкача Микулайӗ.**
**Хыпар. 1917 ҫ. Ҫӗртме 27. 14 №.**

## ЭЙ ТӐВАН ЧӐВАШСЕМ!

Халӗ пирӗн те хамӑр чӗлхепе хаҫат туха пуҫларӗ. Анчах хаҫат ҫаптарма укҫа пит нумай кирлӗ; пирӗн укҫа питӗ сахал. Павел Тимофеевич

Селиванов пулăшман пулсан, халĕ те эпир чăвашла хаçат кăларайман пулăттăмăрчĕ. Ăна уншăн пĕтĕм чăваш халăхĕн пит тав тумалла.

Чăваш çыннисем! Хăвăрăн хаçатăр ялан тухтăр тесен, хăвăр "Хыпара" пурте илме тăрăшăр! Чăвашсем! Çут тĕнчере мĕн пулнине пĕлсе килсен, хăвăр "Хыпара" илĕр!

"Хыпар" пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн ырă, тĕрĕс, шанчăклă юлташ пулĕ.

**М. Филиппов**

## ТĂВАТ ТЕНКĔ ТӲЛЕНИСЕНЕ ПĔЛТЕРНИ

Малтанах хаçат кăларас тесе шухăшланă вăхăтра, эпир хаçат хакне йӳнĕрех хунăччĕ. Çулталăка 4 тенкĕ тăрать пулĕ тесе шухăшланăччĕ. Анчах хальхи пур япала та хаклă саманара (вăхăтра) ниепле те 4 тенкĕпе çулталăкшăн хаçат илсе тăма çук! Хучĕ те хаклă, ĕçлеме те, хулара хаçатшăн ĕçлесе пурăнакансене тӳлеме те, типография ĕçĕ те - пурте хаклă. Тата пирĕн "Хыпар" эрнере икĕ хут тухать; ĕлĕкхи "Хыпар" эрнере анчах тухнă, çавăнпа унăн хакĕ те йӳнĕрех (3 тенкĕ) пулнă: вăл вăхăтра пурте халиччен тăват-пилĕк хут йӳнĕрех пулнă. Çавăнпа пире çулталăкшăн 4 т. тӳленĕ çынсене хаçат ытла хаклă тесе ан ӳпкелешĕрех тетпĕр. Сире те (тăват тенкĕ тӳленисене) эпир хаçат ярăпăр, анчах çулталăкшăн мар, 5 уйăх çурăшăн; кам нумайтарах вăхăта илес тет, вĕсен тата 2 тенкĕ тӳлес пулать. Вăл вара 8 уйăхшăн пулать. 6 уйăхĕпех илес тесен çав тăват тенкĕ тӳленисен 50 пус тӳлемелле.

---

Пирĕн хаçат ĕçне пысăк укçа парса пулăшакансене тав туни. Пирĕн патшалăхра халĕ питĕ тĕлĕнмелле ĕçсем пулса тăраççĕ. Пурте патшалăхри ĕçсем çинчен пĕлесшĕн. Тем пек хаçат тухассине кĕтсе çунса тăраççĕ. Анчах пур япала та кăçал питĕ хаклă. Хаçат кăларма та кăчуне питĕ йывăр. Çавăнпа ку таранччен хаçат кăларма пулмарĕ. Ырă, ăслă çынсем пирĕн чăваш хушшинче те пур. Хаçат халăха кирлине кура, çемçе кăмăллă çынсем пире çак ĕçре пулăшрĕç.

Ку хаçата кăларакан ушкăн çав çынсене чунтан тав тăвать, вĕсене ырă сунать, ячĕсене çак хаçат çине çаптарать. Акă вĕсем:

Сергей Алекс. Игнатьев 200 тенкĕ.

Павел Тимоф. Селиванов 50 т.

Егор Степанов. Байталов 50 т.

Петр Дормид. Селиванов 25 тенкĕ.

Т.П.Прохоров тăрăшнипе - Чебоксарское Земск. Собрание 356 тенкĕ те 28 пус.

Пурин ятне те ку номертех çырма вырăн çук; çавăнпа ыттисен ячĕсене малалли номерсенче çаптарăпăр.

Хура халăх! Сан çине шанса тăратпăр. Çакă кунта асăннă çынсем пек пурсăр та пире пулăшма тăрăшăр!

Эсир ҫӗклесен, хаҫат чарӑнмасӑрах тухса тӑрӗ, эсир пӑрахсан эпир аптрӑпӑр. Ҫавна ан манӑр!

**Кӑлкан Павӑлӗ.**
**Хыпар, 1917 ç., 1 №.**

## ЧӐВАШСЕМ!

"Хыпара" чӑваш халӑхӗ хушшинче сарма тӑрӑшӑр!

Чӑвашсем, хӑвӑр хаҫатӑра пӗтерес мар тесен ӑна укҫан пулӑшӑр!

Юлташсем, ялти паллӑ хыпарсене "Хыпар" валли ҫырса ярӑр!

1 Суя ятпа е ятсӑр янӑ хутсене "Хыпар" ҫине ҫапмаҫҫӗ. Ҫаптарас тесен, ҫыраканӑн хӑйӗн тӗрӗс ятне те, атрӗсне те хучӗпе пӗрле ҫырса ямалла.

2. "Хыпара" килнӗ хутсене редакция кирлӗ пулсан кӗскетме те, тӳрлетме те пултарать.

3. Ҫапма тиркенӗ хутсене редакция усрамасть.

4. Тирпейсӗр (вулама йывӑр) ҫырнӑ хутсене те, ҫырусене те редакция пӑхмасть.

5. Куҫарса ҫыракансен ӑҫтан куҫарнине кӑтартмалла.

**Хыпар, 1917 ç. Ҫурла 31. 32 №.**

## ЧӖЛХЕ ҪИНЧЕН

Тӗрлӗ халӑхсен, тӗрлӗ ӑста ҫынсем пулаҫҫӗ. Вӗсенчен пуринчен чыслисем - чӗлхе ӑстисем, сӑра ӑстисем, чӗлхе ӑстиҫем питӗ ӑслӑ, е хитре ҫыпӑҫуллӑ сӑмахлӑ кӗнекесем ҫырса хӑвараҫҫӗ. Юрӑ ӑстисем тӗрлӗ аван, чӗрене витекен, сӑвӑ паллисемпе ҫырнӑ сӑвӑсем хӑвараҫҫӗ. Сӑрӑ ӑстисем хыҫҫӑн куҫа савӑнтаракан тӗлӗнтерекен сӑрӑпа пир ҫине, е ытти япала ҫине ӳкернӗ тӗрлӗ илемлӗ япаласем юлаҫҫӗ.

Вырӑсла вӗсене "писатели, поэты, композиторы, художники" теҫҫӗ.

Ҫав чӗлхе ӑстисем ҫырнӑ кӗнекесем тӑрӑх халӑхӑн ӑсӗ палӑрать. Ҫавӑнпа пур халӑхсем те ҫавӑн пек хӑйсен ӑстисене питӗ чыслаҫҫӗ. Вӗсене станпа ҫаптарнӑ кӗнекисене тӗрлӗ ҫӗре сараҫҫӗ. Кашни халӑха чӗлхе ӑстисем питерек нумай усӑ кӳреҫҫӗ. Вӗсен ӑслӑ, виттӗр сӑмахӗсемпе ҫырнӑ кӗнекисене вуласа ҫынсем ӑса та вӗренеҫҫӗ, чӗлхе хӑватне те сисеҫҫӗ. Чӗлхи те ҫав кӗнекесем пирки илемленсе, чаплӑланса, пуйса пырать!

Чӑнах та халӗ Пӳлех Турӑ пӳрнӗ тӑрӑх чӑваш чӗлхи ӳсес вӑхӑт ҫитрӗ ӗнтӗ.

Патшалӑх йӗрки улшӑниччченех чӑваш чӗлхин илемӗ курӑна пуҫланнӑччӗ. Чӑваш чӗлхи начар, чухӑн тенӗ чухне, чӑвашсем хӑйсен чӗлхине хӑйсем хурласа, ним вырӑна хумасӑр, ӑна мана пуҫланӑ чухне, вырӑс Н.И.Ашмаринпа Н.В.Никольский чӑваш чӗлхине йӗри-тавра тӗпӗйӗрӗпе вӗренсе, ун илемне сиссе тӑнӑ. Чӑваш чӗлхипе тӗплӗ шухӑшлама юрамасть тенӗ чухне, мӗн калас тиекен шухӑшсене калама сӑмах ҫитмест тенӗ ҫӗртех пӗр чӑваш ачи К.В.Иванов "Нарспи" ятлӑ халап ҫырса хунӑ. Ҫав халапа аванрах вуласан чӑвашсем тек лараймаҫҫӗ - хуска-

лаççĕ, кулаççĕ, пĕççисене шарт! çапаççĕ. Хăш-пĕрисем вырăнĕ-вырăнĕпех куççулĕ те тăкаççĕ, чĕлĕмçĕсем нумайăшĕ чĕлĕмĕсене манса, çăварĕсене карса итлесе лараççĕ. Çавна вуланă чух чăваш чĕлхине илемне пурте сисеççĕ, ун хыççăн чăваш чĕлхине хурлама чарăнмаççĕ.

Вырăс чĕлхи те ĕлĕк начар хисепре çӳренĕ, А С.Пушкин ятлă чĕлхе ăсти хăйсен çыпăçуллă сăмахлă хитре кĕнекисем кăлара пуçласан тин вырăссем хăйсен чĕлхин илемне чухласа илнĕ. Пирĕн чăваш чĕлхин илемне те çапла Пушкин пек, К.Иванов пире кăтартса хăварнă.

Хăварнă тетĕн, мĕншĕн тесен пирĕн чĕлхе ăсти виçĕм çул пуш уйăхра (март) пирĕн тĕнчене хăварчĕ. Халĕ вăл хăйĕн çуралнă Слак-Пуç ялăн масарĕ çинче выртать. Пĕр кун эпĕ, çавăнта кайсан, ăна пытарнă вырăна куртăм, ăна йĕри-тавра решеткеле йăвăç картапа çавăрнă, хĕресне те, решеткине те шурă сăрпа сăрланă. Çавна курсан питĕ хурлантăм, макăрас патне çитрĕм. Пирĕн сăмах ăсти, чĕлхе паттăрĕ! Мĕншĕн эсĕ çамрăклах вилтĕн! Мĕншĕн эсĕ вăхăтсăрах пире пăрахса кайрăн. К.Иванов Слак-Пуç ятлă ялта Пелепей уесĕнче 1890-çулсенче çуралнă. Унăн ашшĕ çĕр ĕçлекен хресчен Василий Николаевич Иванов ятлă. Вĕреннĕ К Иванов Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче, анчах унтан вĕренсе тухайман.

И.Я.Яковлев ăна хăй патне илсе вырăсларан чăвашла кĕнекесем куçарма хушнă. Çапла вăл чăваш шкулĕнче куçарса пурăннă. Çавăнтах вăл чире кайса килне тавăрăнса вилнĕ.

Вăл хăйĕн кĕске пурнăçĕнче мĕн пур вăйĕпе чăваш халăхĕшĕн ĕçлесе пурăннă. Ун хыççăн станпа çаптарнă çырăвĕсем юлнă. Вĕсене Чĕмпĕр шкулĕнчен сутăн илме пулать. Пĕр кĕнеки вырăсла “Сказки и предания чуваш” ятлă. Çав кĕнекере вăл çырнисем: "Икĕ хĕр", “Тимĕр тылă”, “Тăлăх арăм”, “Нарспи” пулаççĕ. Тата вăл вырăсларан чăвашла Лермонтов çырнă стихотворенисене куçарнă. Вĕсене вырăсла (“Песня про Царя Ив. Васильевича, молодого опричника и удалого Калашникова" и др.ст. Лермонтова) теекене вырнаçтарнă. Мĕн-мĕн К.Иванов шкулсем валли куçарнине эпĕ лайăх пĕлейместĕп, ăна пĕлекенсем çырса пире пĕлтерессе тесе ĕмĕтленетĕп. К Иванов вилсен халиччен пĕр чăваш та ун çинчен çырса, хаçата çаптарса чăваш халăхне систермерĕ. Вăл маншăн хурлăхлăрах пек туйăнать. Çавăнпа эпĕ хам пĕлнĕ пек çакна çырас терĕм.

Ытти халăхсем пек пирĕн те чăвашсен хамăрăн чĕлхе ăстине чысласчĕ.

Пĕтĕм чăваш халăхне К.Иванов çинчен авантарах пĕлтерсе унăн ячĕпе нумайрах 4-5 пине яхăн тăп укçа пуçтарасчĕ. Çав укçаран тухакан усламне (200-250 тенкĕ) кашни çул тăватă-пилĕк пая уйăрса, 100 тенкĕлĕх, 50 тенкĕлĕх, 25 пин тенкĕлĕх парне тăвасчĕ.

Чăваш халăх çыннисем! Эпĕ çырнине хирĕç хăвăр мĕн шухăшланине “Хыпара” çырăр.

**Т.Туринке.**
**Хыпар, 1917 ç., 50 /№**

# ÇЫРУ

Эпĕ çырнă çырăва çапмăр-ши хăвăр "Хыпара"? Эпĕ хамăр чĕлхепе çырнă хаçата вуланипе савăнса çыраççĕ тетĕп. Анчах эпĕ кунта "Хыпара" пĕччен вулани нимĕн усси те çук пек туйăнать. Эпĕ, кунта чăвашсем пулсан, вĕсене пĕр çĕре пуçтарса мĕн вăйăм çитнĕ таран кала-кала параттăмччĕ. "Хыпар" çине пире усăллă çырнă аслă сăмахсем питĕ нумай. Çавăнпа манăн чунăм питĕ ыратать, "Хыпар" пурте пĕлмеççĕ пулĕ тетĕп.

Эпир патшалăхри йышлă халăх мар. Çавăнпа эпир халĕ, çак вăйлă вăрçă тухнипе, пушшех тĕрлĕ çĕре саланса пĕтрĕмĕр. Пирĕн чăвашсем хăшĕ-хăшĕ чăваш хаçатне вулама мар, хăй çуралса пĕчĕкрен калаçса ӳснĕ чĕлхипе калаçса кураймасть. Эпĕ хам та килтен уйрăлса кайни тăватă çул çине кайрĕ ĕнтĕ. Нумай çĕршывсене çитсе куртăм. Хăш чухне чăвашсене курсан та питĕ кăмăл хуçăлать: вырăссен умĕнче, хăйсем чăваш пулсан та, хамăр чĕлхепе калаçма те хăраççĕ, те вăтанаççĕ, вĕсенчен "ма эсир чăвашла калаçмастăр" тесе ыйтсассăн: "вырăссем кулаççĕ" теççĕ. Вара ирĕксĕр чун ыратнă енне ӳпкелешсе "мĕншĕн эпир ытла та халăхран кая юлнă–ши?" тесе шухăшлатăп. Кунта темиçе тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан халăхсем те пур. Анчах ытти халăхсем (латышсем, эстонецсем тата белоруссем) пурте пĕр канашлă пулса, тĕрлĕ полкăра пурăнакан тăвансене пĕр çĕре пуçтарса хăйсем расна полка пулса, хăйсен чĕлхипе калаçса, пиртен нумайтарах пĕлсе пурăнаççĕ.

Мĕншĕн пирĕн чăваш халăхĕ çапла пĕр çĕре пуçтарăнма пултараймасть-ши?

Эпир те пурте пĕр çĕре пуçтарăнсан, пирĕн сас та: пĕр çĕрте калани пысăккăн туйăнĕччĕ. Тата: нумайтарах вĕреннĕ тăвансен, çак йывăр вăхăтра пирĕн мĕне пĕлме кирлине кам пĕлменнине кала-кала паратчĕç.

Кунта каласа паракансем нумай та, анчах вĕсем калани пирĕн чăваш хăлхине сахал кĕрет. Пирĕн ку йывăр вăхăтра пĕлмелли питĕ нумай, анчах эпир кунта чӳречесĕр пӳртре ларнăпа пĕрех: ним çутă та курмастпăр.

Пирĕн чăваш халăхне малашне çутта тухса вăйланса пытăрччĕ тесе тăрăшакан çынсем, ытти халăхсем пек чăвашсене пĕр çĕре пуçтарма та ан мантăрччĕç. Пĕр çĕре пуçтарăнсан, пире малалла кайма та çăмăлтарах пулĕччĕ.

Эпир те, халĕ хамăрăн ăрасна полксем пулнă пулсан, ытти халăхсен полкисенчен кая юлас çук пек туйăнать. Халĕ вĕреннĕ çынсем чăваш хушшинче те чылай ĕнтĕ...

Шухăшласа пăхсан пит чун ыратать: эпир капла саланса пурăннипе, калах тĕттĕмрех юлас пек туйăнать, анчах эпĕ шухăшланă пек ан пултăрччĕ. Чăваш халăхне çутта кăларас теекенсен çынсен пуçĕнчи ăсĕсем пысăка пултарĕччĕç.

Халĕ "Хыпар" çинче те чăвашсем ытти халăхсем пек пĕр çĕре пуçтарăнса канаш тунисем нумай çырăнаççĕ. Çакна кура, чăвашсемшĕн тăрă-

шакан çынсене пурне те чунтан питĕ пысăк салам яратăп.

Чăвашшăн тăрăшакан юлташсем, сирĕн "Хыпар" çинчи ятăрсем ĕмĕрлĕхе пытăрччĕç.

Эсир тăрăшнисем те хăрама ан кайтăрччĕç.

Д.Армия 15 Сиб. стр. полка к-да сл. связи Трифон Хонюков.

Çак çырăва вуласан акă мĕн хытă парать, нумайăшĕ салтаксем халĕ те "Хыпар" хаçат пуррине пĕлмеççĕ иккен. Çавăнпа вĕсем чăвашсем пĕрлешме пуçланинчен те сисеймеççĕ. Çавăнпа вĕсем тепĕр чухне, пур чăвашпа пĕрле хĕпĕртес вăхăтра, кӳренсе пурăнаççĕ...

Çавăнпа сире, "Хыпар" вулакан тăванăмăрсем, каллех калатпăр: хăвăр пĕлнĕ салтаксем патне чăвашла хаçат пуррине пĕлтерсе ярăр, "Хыпарăн" атресĕпе хакне те пĕлтерĕр.

**Редакция.**

**Хыпар. 1917 ç. Раштавăн 18-мĕшĕ. 56 №.**

## ЮРАТНĂ РЕДАКЦИЯ!

Сирĕн савнă хаçатра çак çыру валли вырăн тупăнмĕ-ши?

Соц.-революционер партийĕн Хусанти чăваш ушкăнĕ пĕлтерни.

1. Пирĕн ушкăна кĕнĕ, юратнă юлташсем! Кашни уйăха 50 пус яма (тӳлеме) ан манăр. Член укçине тӳлеме те шанчăклă пулмарăр пулсан, епле вара сире ытти ĕçре шанас? Партие шут тултарма, ята кӳртме анчах (кăна) çырăнмаççĕ; унта пĕр-пĕрне шанса, пĕр-пĕрне юратса, алран-алла тытăнса мĕн вăй çитнĕ таран халăхшăн ĕç... кĕреççĕ. Çавăнпа, тантăшсем, хăвăр тăвас ĕçе ан манăр, паян тăвас ĕçе ырана ан хăварăр!

**Чăваш с.-р.-сен комитечĕ.**

## ОБЪЯВЛЕНИЕ

Хусанти Учительский институтa кĕрес теекенсем: Çак институтa учительский семинарисенчен, церковно-учительский школран, реальный училищăран, гимназисенчен, педагогические курссенчен тата çакăн майлă урăх школсенчен тухнисене те илеççĕ. Учительре 2 çулран кая мар тăнисене кăмăлларах илеççĕ. Пĕчĕкрех шкулран тухнисем семинаринче вĕреннине экзамен парас пулать.

Экзамен авăн уйхĕнче 11 числоччен пулать. Прошени 10-чен пама юрать. Кăçал институтра 30 стипенди пур. Çав стипенди валли Хусан Земстви Управĕ 8000 тенкĕ укçа парать. Чăваш вĕрентекенсем, институтa кĕме пултараканнисем кĕме тăрăшăр. Йышăнма хĕрарăмсене те йышăнаççĕ. Ар çынпа хĕрарăм пĕрле вĕренмелле пулать. Май пур çĕрте çакланма, сĕкĕнсе кĕме тăрăшăр. Мĕн чухлĕ чăвашран пысăкрах вĕреннĕ çынсем нумайтарах пулĕç, çавăн чухлĕ чăваш халăхĕ вăйлăрах пулĕ.

Чăвашсем валли 10 стипенди пулать.

**Хыпар. 1917 ç. Çурлан 28. 31 №.**

# ТУПМАЛЛИ

Чăваш публицистикипе журналистики аталанăвĕн çул-йĕрĕ.... 3

Чăваш публицистикин малтанхи тĕслĕхĕсем ........................ 85

1906-1907 çулсенчи «Хыпар» публицистики ........................104

1917-1918 çулсенчи «Хыпар» ........................................................ 137

*Учебное издание*

ДАНИЛОВ АНАТОЛИЙ ПОРФИРЬЕВИЧ
ТЕНЮШЕВ ИВАН ЯКОВЛЕВИЧ

**ЭТАПЫ РАЗВИТИЯ
ЧУВАШСКОЙ ПУБЛИЦИСТИКИ И ЖУРНАЛИСТИКИ**

**Учебное пособие**

Редактор О. М. Садовникова
Корректор Е. В. Васильева
Дизайн-верстка Е. Е. Фоминой
Технический редактор А. А. Данилов

Подписано в печать 1. 07. 04. Формат 60x84/16. Бумага газетная. Печать офсетная. Гарнитура Times New Roman Cyr. Усл. печ. л. 13,3. Уч.-изд. л. 15,4
Тираж 500 экз. Заказ № 395.

Издательство Чувашского университета
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15

200